62-318 8711

ТĂВАН АТĂЛ

6

1962

ЧӐВАШ ИСКУССТВИН КЕРМЕНӖ

Сирӗн умра — Шупашкарти чи илемлӗ ҫуртсенчен пӗри. Виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ ҫакӑнта Чӑвашсен К. В. Иванов ячӗпе хисепленекен музыкӑпа драмӑ академи театрӗ ӗҫлет. Кашни каҫ ҫак искусствӑ керменне 700—800 ҫын пухӑнать,— вӗсем унта драмӑллӑ спектакльсем пӑхаҫҫӗ, оперӑсем итлеҫҫӗ...

Революциччен чӑвашсен театр пулман, вӑл Аслӑ Октябрь тивлечӗпе ҫуралса ӳснӗ. Хӗрӗх пилӗк ҫул каялла драмкружокран пуҫланса кайнӑскер, чӑваш театрӗ ҫултан ҫул ӳссе, аталанса пынӑ, хальхи вӑхӑтра вӑл Российӑ Федерацийӗнчи чи лайӑх театрсемпе пӗр ретре тӑрать.

Икӗ ҫул каялла вӑл драмӑ театрӗнчен музыкӑпа драмӑ театрӗ пулса тӑчӗ. Ҫавна май чӑвашсен оперӑ искусстви ӑнӑҫлӑн аталанма тытӑнчӗ. Икӗ ҫул хушшинче эпир хамӑрӑн театрӑн сцени ҫинче «Шывармань», «Евгений Онегин», «Чапай» оперӑсем куртӑмӑр. «Чапай» оперӑна Мускава илсе кайса Кремльти театрта та кӑтартма май килчӗ. Нумай пулмасть театр ҫӗнӗ оперӑ — «Хамӑр ял» кӑтартрӗ. Ӑна А. Алга либретти тӑрӑх Ф. Васильев композитор ҫырнӑ.

Кунпа пӗрлех, театр ҫӗнӗрен ҫӗнӗ драмӑллӑ спектакльсем хатӗрлет, коммунизм тӑвакан хастар ҫынсен сӑнарӗсемпе вӗсен паттӑр ӗҫӗсене кӑтартма тӑрӑшать.

В. Исаев фотоӳкерчӗкӗ.

8711

ТĂВАН АТĂЛ

Чăваш писателĕсен Союзĕ
икĕ уйăхра пĕрре
кăларакан альманах

6

1962
НОЯБРЬ–ДЕКАБРЬ

Чăваш АССР
Кĕнеке Издательстви
Шупашкар

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
3 I 1963 г.
№ 382

ТУПМАЛЛИ

Искусствă халăхăн пулмалла (умстатья) . . . 3
Влас Паймен. Хула çулĕ — Ял çулĕ (калав) . . . 5
Алексей Воробьев. Сакăр йĕрке — пĕр тĕрке (сăвă) . . . 11
Куçма Турхан. Çĕр суранĕ (роман, малалли) . . . 12
Иван Малгай. Сăвă . . . 34
Николай Теветкел. Икĕ сăвă . . . 35
Юрий Збанацкий. Çĕнĕ Кун Аки (роман сыпăкĕ) . . . 36
Леонид Агаков. Салтак ачисем (повеç сыпăкĕсем) . . . 48
А. Лиров. 45 çул чăваш сцени çинче . . . 67
Н. Григорьев. Д. Н. Мамин-Сибиряк . . . 72
А. Горшков. 1936 çулта вулăр (статья) . . . 73
Г. Хлебников Чăваш романĕн çулĕ (статья) . . . 79
М. Юрьев. Чечек çыххинче чечекĕ ытларах кирлĕ (статья) . . . 92

РОДНАЯ ВОЛГА

Альманах

6(99) книга

На чувашском языке

Редактор Л. Я. АГАКОВ

Редколлегия: А. Е. Алга, М. Я. Сироткин, И. С. Максимов-Кошкинский, И. Н. Вашки (отв. секретарь), И. Н. Никифоров, К. С. Турхан, С. А. Шавлы.

НТ 02629. Сдано в набор 12-XI-1962 г. Подписано к печати 25-XII-1962 г. Бумага 64×108 1/16. Объем 9,84 п. л., 11,37 уч.-изд. лис. Заказ № 2579. Тираж 5700 экз. Цена 30 коп.

Типография № 1 Министерство культуры Чувашской АССР г. Чебоксары ул. Володарского, д. 5.

ИСКУССТВĂ ХАЛĂХĂН ПУЛМАЛЛА

Коммунистсен партийĕ совет художествă интеллигенцийĕн творчествăлла ĕçĕшĕн ялан тăрăшать, ăна пĕрмай пулăшса тăрать. Ку ĕнтĕ социализмла реализм искусствин пысăк пĕлтерĕшне, вăл халăхăн коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче паллă вырăн йышăннине яр-уççăн кăтартса парать.

Пирĕн художествăллă культура Октябрьти социализмлă аслă революцин, çĕнĕ пурнăç тăвакан коммунизм идеологийĕн ялавĕ айĕнче аталанса пырать, вăл миллионшар çынсемшĕн оптимизм, савăнăç, хастарлăх çăлкуçĕ пулма тивĕç.

«Х а л ă х п у р н ă ç ĕ п е ç и р ĕ п ç ы х ă н с а т ă н и, с о ц и а л и з м л ă п у р н ă ç ă н п у я н л ă х ĕ п е н у м а й т ĕ р л ĕ е н ĕ с е н е т ĕ р ĕ с, п ы с ă к ă с т а л ă х п а к ă т а р т с а п а н и, ç ĕ н н и н е, ч ă н - ч ă н к о м м у н и з м л ă п у р н ă ç а х а в х а л а н с а, и л е м л ĕ н с ă н л а с а п а н и о б щ е с т в ă н а м а л а л л а к а й м а ч а р а к а н ч ă р м а в с е н е п у р н е т е п и т л е н и» литературăпа искусствă аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕ пулса тăрать,— тесе кăтартса панă КПСС XXII съезчĕ йышăннă Программăра. Литературăпа искусствă аталанăвĕн ыйтăвĕсем, халăх массисене эстетикăллă воспитани парас ыйтусем — идеологи ĕçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсем пулса тăраççĕ, çавăнпа та вĕсене, В. И. Ленин вĕрентнĕ пек, ялан куç умĕнче тытас пулать.

Коммунистсен ленинла партийĕ, литературăпа искусствăна халăхшăн ĕçлес çулпа, коммунизмăн аслă идеалĕсем майлă аталантарса пырса, талантлă писательсен, искусствă деятелĕсен чаплă та пултаруллă кадрĕсене пăхса ӳстерчĕ, художествăллă творчествăна нихçан пулман хăвăтпа чечекленсе çĕкленме условисем туса пачĕ. Сталина ытлашши пысăка хурас йăлан йывăр сиенĕсене çине тăрса, ленинла тĕрĕслĕхпе, ăслăн та çирĕп пĕтерсе пырса, парти талантăн хăйне евĕр илемне, художникăн хăйне уйрăм творчествине палăрма чарса тăнă чăрмавсене пурне те пĕтерчĕ. Çакна КПСС XX съезчĕ хыççăнхи çулсенче çырнă нумай-нумай çĕнĕ произведенисем, партин çĕнĕ Программин идейисемпе хавхаланса çырнă произведенисем, уйрăм çынна пысăка хунă вăхăтра мĕн-мĕн пулни çинчен хăюллăн та çивĕч калакан, совет халăхĕн аслă пултаруллă ĕçне сăнласа паракан произведенисем ĕнентерӳллĕ кăтартса параççĕ.

Уйрăм çынна ытлашши пысăка хурас йăла литературăпа искусствă аталанăвне пӳлсе тăнă; çав йăлан пысăк сиенĕсене пĕтерни ленинла принципсен — идейăлăх, халăхлăх, реализм принципĕсен, художник ĕçĕ халăх пурнăçĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăрас принципăн хăватлă вăйне кăтартса парать. Н. С. Хрущевăн «Литературăпа искусствă халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăмалла» тата «Литературăпа искусствăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсем патне» ятлă паллă произведенийĕсем çав принципсене ку чухнехи условисенче малалла аталантарса çирĕплетеççĕ. Çав произведенисенче творчествă работникĕсен чи кирлĕ задачисем çинчен, вĕсен обществăри пысăк тивĕçĕ çинчен, коммунизм тăвас ĕçри, ĕç çыннисене коммунистла воспитани парас ĕçри вырăнĕпе ролĕ çинчен питĕ лайăх та уçăмлă каласа панă.

Мускаври художниксен произведенийĕсен выставкине хакласа, Н. С. Хрущев çапла каларĕ: «К и р е к м ĕ н л е в ы с т а в к ă р и п е к е х, к у н т а л а й ă х ĕ ç с е м т е, в ă т а м ĕ ç с е м т е, я п ă х ĕ ç с е м т е п у р. В ы с т а в к ă й ĕ р к е л е к е н с е м ч ы л а й ç ĕ р т е, а х ă р т н е х, н а ч а р т а ю р ă х с ă р п р о и з в е д е н и с е н е х ӳ т ĕ л е к е н с е н с ă м а х ĕ н ч е н и р т е й м е н п у л а с, л и б е р а л и з м п а к и л ĕ ш с е т ă н ă. А н ч а х у н п е к п о л и т и к ă С о в е т С о ю з ĕ н ч и с о ц и а л и з м л а р е а л и з м и с к у с с т в и н е м а л а л л а ç ĕ к л е н м е п у л ă ш а с ç у к. И с к у с с т в ă н а е р т с е п ы р а с ĕ ç р е и д е й ă л л ă ç и р ĕ п л ĕ х п е п р и н ц и п л ă х, у ç ă м л ă х, т ĕ р ĕ с л ĕ х к и р л ĕ; п и р ĕ н и с к у с с т в ă а т а л а н ă в ĕ н — к о м м у н и з м т ă в а к а н х а л ă х и с к у с с т в и н а т а л а н ă в ĕ н т ĕ п ç у л - й ĕ р ĕ н ч е н к и р е к м ĕ н л е с у л ă н н и п е т е, к и р е к м ĕ н л е п ă р ă н н и п е т е к и л ĕ ш н и п у л м а л л а м а р».

Искусствăри тĕрĕс политикă вăл—партилĕхĕн, коммунистла идейăлăхăн ленинла политики. Шă-

пах çавăн пек политикăн çирĕп никĕсĕ çинче социализмла реализмăн аслă искусстви ÿссе тĕрекленчĕ, ку политикăн нимле çемçешкелĕх те, пурне те каçаракан либераллăх та, çĕрĕк сентименталлă маниловщинă та çук.

Шăпах çакна манаççĕ ĕнтĕ, илемлĕхĕн çĕнĕ çăнарĕсене хăюллăн шыранçи туса, хăюллă новаторсем пуланçи пулса, пирĕн реализмла искусствăн мухтавлă традицийĕсенчен пăрăнса каякан художниксем. Чăн-чăн çĕнĕлĕх ялан художествăллă творчествăн унччченхи опытĕнчен çуралнă, çав опытăн мĕн пур лайăх, прогрессивлă енĕсене малалла аталантарнă, çĕнĕ пусăма çĕкленĕ. Чăн-чăн çĕнĕлĕх нацин художествăллă культурин малта пыракан традицийĕсене анархистла пăрахăçланипе ниепле те килĕшме пултараймасть. Суя новаторсем, пурнăçран, халăх кĕрешĕвĕпе ĕçĕнчен пăрăнса, хĕвеланăçĕнчи «модă» хыççăн ним шухăшламасăр каяççĕ, буржуалла тĕнчен мораль енчен пăсăк, формализмла искусствине мĕскĕнле пăхăнса ĕçлеççĕ, буржуалла тĕнче искусстви вăл пирĕн пурнăçшăн, пирĕн эстетикăллă идеалсемшĕн, пирĕн илемлĕх аталанăвĕшĕн пĕтĕмпех ют.

Социализмла реализм искусствин иртнĕ вăхăтран юлнă аслă художествăллă пуянлăх пур, вăл пирĕн çĕршывра социализм тунă мухтавлă çулсенче, коммунизм обществи анлăн туса пынă çулсенче питĕ пысăк опыт пухнă. Çак искусствă хăйĕн хупăлчипе хупăнса лармасть, вăл паянхи тĕнче культурин лайăх, прогрессивлă, чăннипех ырă енĕсене пурне те илсе тăрать, вăл хăйĕн пурнăçĕпе, хăйĕн содержанийĕпе чăннипех интернационаллă искусствă. Ку вăл ăна малалла аталантарма, чечекленсе çĕкленме хăват парать.

Социализмла искусствă, пирĕн халăх абстракционизма татăклăнах сивлеççĕ; анчах хăш-пĕр çынсем, абстракционизмăн куçкĕрет реакциллĕ, халăха хирĕçле пĕлтерĕшне курма шутламасăр, сасартăк ун хыççăн кайма пикеннĕ. Социализмла искусствă çавăн пекех уйрăм музыкантсем музыкă çыркалакан ниме тăман буржуалла музыкантсем хыççăн ним уямасăр кайнине те татăклăн сивлет, çав музыкантсем пĕтĕм совет музыкине кĕрлекен-шавлакан джаз евĕр туса хума та хатĕр. Хыççăн кайни, ют модăсем илни вăл — художествăллă творчествă мар. Чăн-чăн художник ют сасăпа юрламасть.

Литературăпа искусствăн хăш-пĕр деятелĕсен пултарулăхĕнче тĕрĕс мар туртăмсем палăрни творчествă организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса парать. Çав организацисем, пĕр-пĕр явление хак памалла пулсан, хăш чухне çирĕп требованисем лартмаççĕ, либерализмпа килĕшеççĕ, творчествăн чи кирлĕ ыйтăвĕсене принциплă, çивĕч сÿтсе явасран пăрăнаççĕ. Литературăпа искусствăн талантлă, пурăнма пултаракан вăйĕсене пурне те социализмла реализм принципĕсен, коммунизмăн аслă идеалĕсен никĕсĕ çинче пĕтĕçтересси вăл — мĕн пур творчествă союзĕсен задачи. Çак пысăк та ырă задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре партипе комсомол организацийĕсем, пирĕн совет общественноçĕ, пичет, радио, телевидени пысăк вырăнта тăраççĕ. Вĕсен искусствăра малта пыраканнине, талантлине пурне те пулăшса тăмалла, литературă деятелĕсемпе халăх пурнăçĕ, коммунизм строительствин практики хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пымалла, идейăсăрлăха хирĕç, пирĕн искусствă аталанăвĕн — коммунизм тăвакан халăх искусствин аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕнчен кирек мĕнле пăрăнса, сулăнса кайнине хирĕç ним килĕшмесĕр кĕрешмелле.

В. И. Ленин сăмахĕсем пирĕн творчествă работникĕсене хавхалантаракан халал пулса тăмалла: «Искусствă халăхăн пулмалла. Унăн ĕç çынни массисен чи анлă сийĕсенче хăйĕн тарăн тымарĕсене ямалла. Вăл çав массăсем ăнланакан, вĕсем юратакан искусствă пулмалла».

Ленин халалĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Коммунистсен партийĕ, пирĕн искусствă чечекленсе çĕклентĕр тесе, коммунизмшăн пыракан кĕрешÿре искусствă рольне ÿстерес тесе, куллен тăрăшать.

(«Правда» хаçатăн 1962 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнчи умстатйинчен.)

Влас ПАЙМЕН

Хула çулĕ—Ял çулĕ

Калав

ЁЛЕК-АВАЛ çак çул пирĕншĕн Хула çулĕ пулнă. Хула çыннисемшĕн вăл мĕн ятлă пулнă-ши? Ун пирки эпĕ халĕ тин, хуларан яла кайма тухсан, шухăшласа илтĕм. Халĕ вăл пирĕншĕн Ял çулĕ пулса тăчĕ.

Инçе çула каякан автобус çине ларма çăмăл мар. Машинă умне сурăх кĕтĕвĕ пек кĕпĕрлентĕмĕр. Пĕрне-пĕри ларма чăрмантарса çуйăхрăмăр, шавларăмăр. Кайран пур пĕрех пурте лăплантăмăр, чиперех вырнаçрăмăр. Тахăшĕ номерленĕ билетпах вырăнсăр юлнă. Вăл та лăпланчĕ-ха: чăматанĕ çине вырнаçрĕ. Ак тамаша! Халĕ пирĕн машинă умĕнче тата тепĕр ушкăн халăх кĕпĕрленчĕ. Кусем çул тăршшĕпех ура çинче тăрса пыма килĕшекеннисем иккен,— çывăх ялсене каяканнисем. Вĕсене автобус станцинче билет сутмаççĕ, шофер хăй сутать. Халь ĕнтĕ чăматансем те чăрмантараççĕ,— хăть пуç тăрне çыхса хур, хăть пăрахса хăвар. Тăвăр. Пăчă. Кансĕр. Çапах та ларнисем те, ура çинчисем те шăп, тăп. Автобус çине лекейменнисем çеç çухăйса юлчĕç.

Машинăмăр тикĕт сĕрмен, шултăрканă кăрман пек тайкаланса, чăрăклатса аран тапранчĕ. Пассажирсем çăмăллăн сывласа илчĕç. Пĕрне-пĕри кӳрентеркеленине манчĕç пуль: йăл кулкаласа илеççĕ, паллаша пуçларĕç. Пурте кăмăллă çынсем пекех. Манпа юнашар лараканнишĕн те автобусĕ кăрман пек туйăнать иккен. Вăл чăн сăмаха шӳт туса каланă пек хуравларĕ:

— Хамăн вăрçăченхи шлепкене хурса тавлашма пултаратăп: ку сĕрмен кăрман пире Типçырмана та илсе çитерейместь!

Шоферĕ хăйĕн çаврашкине алăран ямасăрах пирĕн еннелле çаврăнса пăхрĕ. Хăй патвар çын, сарăскер. Вырăс çынни пулсан та, пушкăрт сăнлăрах. Хир енчисем пулас. Вăл сасăпах кăмăллăн кулса ячĕ, юлташпа чăнахах тавлашнă пек пулса калаçрĕ:

— Сехет те хĕрĕх минутран, графикран çирĕм минут маларах, вырăна çитмесен, шофер правине манран туртса илме пултаратăр!..

Çав хушăра эпир хула картинчен тухкаларăмăр. Хулине курмасăрах юлтăм. Тăван ялта эпĕ çур ĕмĕр пулман. Хулине курманни те çирĕм çул ытла. Ача чухне унран пуçне маншăн тĕнчере те урăх хула çукчĕ. Унăн ятне те пĕлместĕмĕр. Поэт каларĕшле:

> Названья даже не имел.
> Он был один,
> Был просто город.

Ĕлĕк вăл пирĕншĕн уезд хули пулнă. Халь район центрĕ çеç. Çавах вăл та хĕрĕх çул хушшинче пысăк хула пекех тăвата хут ӳснĕ, теççĕ.

Автобус пире хĕвелтухăçнелле илсе каять, хир енчи пысăк яла, Шарлык ялне çитерет. Шарлыкран тăван ялăм 15 километрта. Анчах çав кĕске çул мана вăрăм çултан та ытларах хăратса тăрать. Хам пурăнакан хуларан Шарлыка çитме ним те мар: 5 сехет чугун çулĕпе каятăн, 2 сехет — автобуспа. Еçĕ те пĕтнĕ. Шарлыкран тăван яла çитме хĕн. Унта машинăсем ăнсăртран кăна çӳреççĕ. Çул çинче кĕтсе лар-ха! Хăш-пĕр чух кунĕпех кĕтсе илейместĕн...

Самар шывĕ урлă кĕперпе каçнă хыççăн чăнкă çул тăвалла хăпарать. Урал сăртлăхĕ çакăнтах тăсăлса çитет çав. Утаман тăвĕ çине хăпарса çитсен, çулĕ пур пĕрех анаталла ан-

масть. Кунта ҫатма пек тикĕс уй пуҫланать. Ҫулĕ те Шарлыка ҫитичченех тип-тикĕс. Икĕ ту хушшипе хăпарса ҫитсе пыратпăр. Айлăмра пуҫланнă юманлăх пĕтсе пырать. Ак сайра тĕмĕсем, уйрăм йывăҫсем ҫеҫ курăнкалапуҫларĕҫ. Кĕҫех Утаман ту тăрринчи чул юпа патне те ҫитетпĕр пуль. Юпи халĕ те ларать-ши? Эпир ача чух, ай, тĕлĕнтерчĕ те вăл пире. Тахҫан пулса иртни аса киле пуҫларĕ. Ҫакăнта ĕнтĕ хĕрĕх ҫул каярах, эпир икĕ ҫамрăк ача, нумайччен анаталла пăхса, тĕлĕнсе тăтăмăр... Хальччен курман тавралăх куҫ умне тухса тăчĕ. Айлăмра пысăк юхан шыв явăнкаласа симĕсĕн-кăвакăн курăнса выртать. Самар шывĕ теççĕ. Юхан шывăн сылтăм ҫыранĕ ем-ешĕл. Шыв леш енче вара — хула тени. Уйрăм ҫуртсем палăрсах каймаççĕ. Анчах труках куҫ умне тухса тăнă пилĕк чиркӳ, хула варринчи ҫӳлĕ хĕрлĕ хӳме, хулапа станцă хушшинчи утă капанĕ пек сарăлса ларакан элеватор — куҫа тăрăнаççĕ вара. Ҫакă ĕнтĕ хула...

Хула! Эпир ăна мĕн пĕчĕкрен курма ĕмĕтленсе пурăннă, халь ҫул тăршшĕпех ун ҫинчен калаҫса килнĕ. Манпа юнашар ман пекех урине ҫăпата сырнă чăваш ачи ҫăварне карса тăрать. Иван Осокин, тăлăх ача, кĕтӳҫ ачи. Тĕлĕнсе савăнса пăхса тăратпăр. Чĕре хăранă пек пулса сăрăлтатса илет. Мĕнле йышăнĕши пире хула? Эпир, вĕренес тесе, ҫутта тухас тесе, ҫуранах инҫе ҫула танккана. Таҫта, ҫак чул ҫуртсем хушшинче, совпартшкул та пур ĕнтĕ. Пире комсомол ҫавăнта вĕренме путевкă панă.

Ҫакăнтах темшĕн сасартăк автобус станцийĕ аса килчĕ. Эпир унтан хăпса кайнă хыҫҫăн ҫур сехет те иртмен-ха... Э, йĕрĕх! Манран маларах автобус ҫине ларнă ҫын — паллакан ҫын пек туйăнса юлчĕ. Кам-ши? Ун чух ятарласа пăхма, паллама вăхăт пулмарĕ. Автобусран юлас марччĕ тесе тарăхнипе ҫыннине мансах кайнă. Халь труках аса килчĕ те, шалт тĕлĕнтерчĕ. Ара, вăл ман ача чухнехи тусăм, халь отставкăна тухнă полковник Иван Антонович Осокин пулмарĕ-ши?!

...Виҫ-тăватă ҫул каярах вăл отставкăна тухса хамăр облаҫ хулине таврăннă. Укҫаллă ҫын хваттер парасса кĕтсе тăмасăрах хула хĕрринче пӳрт туяннă. Ун пирки мана ялтан ҫырса пĕлтерчĕҫ. Адресне те пĕлтернĕччĕ. Адресĕ тĕрĕсех пулман иккен. Вара эпĕ, тусăма шыраса тупасах тесе, хăрах енлĕ урам тăршшĕпех ҫынсенчен ыйтса тухас терĕм. Урамне мар, номерне анчах арпаштарнă пуль тетĕп. Пĕр тĕлте тахăшĕ кивĕ пӳртне ҫĕнетме тытăннă. Пĕр ҫын урамрах, урине кирзă атă тăхăннăскер, пĕрене каскалать. Унран та ыйтса пăхас... Анчах ҫынни пуҫланă сăмаха вĕҫлеме те памарĕ. Пуртине каскана тĕрĕнтерчĕ те ман ҫине урлă-пирлĕ пăхса илчĕ. Унăн тарпа лӳшкенĕ ҫӳҫ пайăркисем мунчала пек пулнă. Хăй халь кăна мунчаран тухнă этем пек тарпа пиҫсе хĕремесленсе кайнă. Чĕре калт турĕ. Ҫанăсăр кĕпе таран ҫарамасланнă ҫын мана ятпа чĕнсех, тута вĕҫĕпе кулкаласа калаҫа пуҫларĕ:

— Ан тĕлĕн, ачам,— терĕ вăл малалла.— Эпĕ сана кĕтсех тăраттăм. Мана та ялтан ҫырса пĕлтерчĕҫ. Анчах эпĕ хам сана шырама, куратăн, ерҫейместĕп. Ĕҫчен ҫын пулса кайрăм-ха. «Кам ĕҫлемест—ҫав ҫăкăр та ҫимест!» Астăватăн-и? Каласса эпир буржуйсене те ĕҫлеттерме тăрăшнă чух тар ĕҫĕ пирки каланă-ха. Эпĕ те ав, ахалех ҫăкăр ҫисе выртиччен, пӳрте хам вăйпах ҫĕнетес терĕм.

Ҫав Иван кăна, пĕрне-пĕри вăтăр ҫул курман пулсан та, ĕнер ҫеҫ курнă ҫын пек сăмах пуҫлама пултарать. Ҫавах та эпир пĕрнепĕри ыталарăмăр, чуп тăвам пекки те турăмăр.

Кил картинчех, пӳрт сулхăнĕнче чей ĕҫме ларсан, ыйтас терĕм:

— Эсĕ, комакадеми пĕтернĕ ҫын, Совет ҫарĕнче ҫирĕм ҫул ытла пысăк ĕҫре пулнă ҫын, тепĕр каласан, укҫаллă ҫын,— эсĕ мĕн тӳрĕпе ятарласах тар юхтаратăн-ха?

— Зов предков!— терĕ те тусăм, ихĕлтетсе кулса ячĕ.

Ҫавăнтах лăпланчĕ, кулмасăр хуравларĕ:

— Джек Лондон калани тĕрĕс мар вăл. Йытă та, кăркка та этем ҫумĕнче пурăнса вăрмана е ҫеҫен хире тарма тăрăшмасть. Кашкăрне вара — тарать теççĕ. Ҫук, вăл та, этем ăна юратса ӳстерсен, ниҫта та тармасть. Ҫынран ютшăнсан, кайăк мар — этемми те тискерленет. Ун чух вара вăл авалхи йăласем еннелле туртăнма та пултарать. Асту-ха, ман хамăн ĕмĕрне те тăхăнмалли япаларан пуҫне нимле харпăрлăх пулман. Халь акă пӳрт хуҫи пултăм. Ҫав япала, харпăрлăх хуҫи туйăмĕ, мана ĕҫлеттерет пуль.

— Юриех аташса ан калаҫ-ха,— терĕм эпĕ,— ку сан харпăрлăх туйăмĕнчен ытларах пултарулăх туйăмĕ мар-и?

Ҫавах та Иван тем кăмăлсăртарах калаҫни, такама — те хăйне, те ҫынна — тарăхса тăрăхлама пăхни сисĕнчĕ.

Малашне вара курмассеренех авалхи тусăм пăсăлса пыни уççăнах палăрчĕ. Харпăрлăх кăмăлĕ пирки мар. Ку енчен Иван Осокин пăсăлас ҫук. Анчах пурнăҫ йĕрки тахăш енчен ăна килĕшми пулнă пек туйăнчĕ. «Халь эпир, сахал вĕреннисем, кирлĕ мар

ӗнтӗ»,— терӗ вӑл хӑй отставкӑна тухни ҫинчен калаҫнӑ чух.

Пӳрчӗпе айкашнӑ вӑхӑтра Иван Антонович хӑйне хӑй усӑ кӑмӑллӑ ҫын пекех тыткаларӗ. Шӳт туса та, чӑннипе те вӑл платник ӗҫне тума пӗлнипе мухтанатчӗ: «Ак ӑҫта талант ҫухалса пурӑнать иккен»,— тесе ихӗлтетсе илетчӗ. Каярах ӑна услап пурнӑҫ питех йӑлӑхтарса ҫитере пуҫларӗ курӑнать. Ҫӑкӑршӑн ӗҫе кӗме нуши ҫук унӑн. Пысӑк пенси илсе пурӑнать. Анчах ӗҫе кӗрес тесе нумай тӑрӑшса пӑхнӑ вӑл. Ҫавӑн чух паларчӗ вара специальноҫсӑр ӗҫ шырама йывӑрри. Пӗр-пӗр базӑна, склада вырнаҫма, снабжени агентӗнче ҫӳреме кӑмӑл туртмасть. Стадион начальникӗ пулса ӗҫлеме те сӗнсе пӑхрӗҫ. Мӑшкӑл. Хальччен чунпа тарӑхса курман ҫын тарӑха пуҫланӑ вара.

Ҫемьери пурнӑҫӗ те Ивана ӑнӑҫлӑх парайман. Унӑн мӑшӑрӗ, Матрена Ивановна, упӑшкипе пӗр ҫулхирех пулин те, хӑйне хӑй ҫамрӑклатма тӑрӑшать. Тӑван хулана таврӑнса, пӳрт туянса пӗр вырӑнта тӑванӗсен ҫывӑхӗнче пурӑнма пуҫланӑранпа унӑн ӗмӗчӗ тулнӑ. Нумай вӗренмен, производствӑра ӗҫлесе курман хӗрарӑмӑн культури те пӗр тӗрлӗрех пулнӑ: гардероб тулли тум пултӑр, Таллинранах илсе килнӗ сервант кӗленчи витӗр хитре сервиз курӑнса лартӑр. Хуплашкисем ҫине ылтӑн-кӗмӗлпе ҫырнӑ кӗнекесем те хваттер илемне пӑсмаҫҫӗ. Тата эрнере икӗ хут театра кайса курсан, шӑп культурӑллӑ ҫын пулатӑн вара. Матрена Ивановна мещенле ҫемьере ӳснӗ. Ҫавӑн пирки Иван халь тин шухӑшла пуҫланӑ. Ачисем ӳссе ситӗннӗ, ҫунат хушса, тӗрлӗ еннелле вӗҫсе кайнӑ. Матрена Ивановна кулленех аккӑшӗсем-йӑмӑкӗсем патӗнче кун ирттерет. Иван Антонович кунӗ-кунӗпе килте тӑр-пӗчченех. Йӑпанмалӑх мӑнукӗсем те ҫук. Ним тума аптранипе вӑл малтан кӑвак сӑрпа сӑрланӑ хапхана тепӗр хут симӗс сӑрпа сӑрласа лартнӑ.

Ҫакӑн пек ҫынна тыткӑна илес тесе кӗтсе тӑракан йӗрӗхӗ те пур ҫав. Эпӗ тусӑм патне кайса ҫӳрекелеттӗм. Иван хӑй мана хаваслансах кӗтсе илетчӗ. Анчах юлашки вӑхӑтра унта ҫӳреме кӑмӑл туртми пулчӗ. Майри курӑнмасть. Сӗтел синче ҫимӗҫӗ те сукпа пӗрех: хура ҫӑкӑрпа тӑварлӑ хӑяр кӑна. Ҫуттипе хӗрли вара ытлашшипех. Эпӗ пырса кӗнӗ ҫӗре тусӑм пӗчченех сӗтел хушшинче ҫуйӑхса е тӗлӗрсе ларнине те курма тиврӗ.

Ун пек чух вара Иванӗ — Иван та мар. Хӑнине сӑйлама манмасть, хӑни камне хӑшпӗр чух мансах каять. Кампа калаҫни мӗне кирлӗ! Пур пӗрех вӑл хӑйӗн ҫинчен кӑна юмахлать. Ӗлӗк Иван мухтанса калаҫнине асӑрхаманччӗ. Халь мухтанакан пулнӑ. Кашни пымассерен вӑл мана пӗр истори каласа парать. Иван Осокин дивизири парткомиссин председателӗ пулнӑ-мӗн. Вара вӑл пӗр офицера «вилӗмрен ҫӑлнӑ» пулать. Офицерне пӗр айӑпшӑн партирен кӑлармалла тунӑ. Осокин, ырӑ сисӗмлӗ ҫын, комисси членӗсене ҫав юлташа партире хӑварма ӳкӗтленӗ. Леш вара вилӗмрен чӗрӗлнӗ ҫын пекех Осокинне тав тунӑ. Кашни курнӑҫмассеренех Иванран эп итлекен калав сав савах: сюжечӗ улшӑнмасть. Анчах геройӗн званийӗ улшӑна пуҫларӗ. Малтан вӑл майорччӗ, кайран полковник, унтан генерал пулса тӑчӗ. Тата маршал ан пултӑрччӗ тесе, эпӗ вара Иван патне сӳреми пултӑм. Савӑн хыҫҫӑн Ивана курманни пӗрик сул иртрӗ...

Эпӗ сав Иван еврӗлӗ сынна лайӑхрах курас тесе саврӑнса пӑхкаларӑм. Ура синче тӑракан пассажирсем чӑрмантарассӗ. Ҫав вӑхӑтра чӑрӑклатса пыракан машинӑмӑр труках чарӑнса ларчӗ.

Пирӗн ытлашши кулянма пӗлмен шофер машинӑ айне кӗрсе выртрӗ. Унтан ура ҫине тӑрса пусне хыскаларӗ те пире: «Тухса усӑлӑр кӑшт, пӑчӑхрӑр пуль. Икӗ сехет иртиччен машинӑ кӗрлесе каймасан вара тинех шофер правине кӑларса паратӑп»,— терӗ. Ман шлепкеллӗ кӳршӗ савӑнсах кайрӗ. Чӑнахах эпир Типсырмана та ситеймерӗмӗр.

Пассажирсем хушшинче кутӑн сынсем тупӑнмарӗс. Иккӗшӗ шоферпа пӗрле машинӑ айне кӗрсе выртрӗҫ. Леш, шлепкелли, ҫул ҫине кӑшт маларах тухса тӑчӗ. Вӑл кашни хирӗс килекен машинӑна чарса шоферпа тем пирки каласать... Ыттисем хамӑр шофера усӑ кӑмӑлпа тӑрӑхлакаларӗс, автобазине вирлӗ сӑмахсемпех ятларӗс. Пурте машинӑ синчен ансан — тӗлӗнсех кайрӑмӑр. Сакӑн чухлӗ халӑх пӗчӗк машинӑ ӑшне епле шӑнӑснӑ-ши?! Паллах, машинине кунсерен ытлашши йӑвӑрлатса вӑхӑтсӑр киветнӗ. Ҫавӑнпа чӑрӑклатать тев ӑл, мӗскӗн.

Эпир ту сине хӑпарса ситсе чул юпаран кӑшт кӑна иртсе кайнӑ иккен. Эпӗ малти вырӑнта лараканскер, чи малтан тухрӑм. Пуринчен кайран тухаканни Иван Антонович пулчӗ иккен. Пӗрне-пӗри алӑ парса, кӗтмен сӗртен тӗл пулнӑшӑн тӗлӗнкелерӗмӗр те иксӗмӗр канашламасӑрах чул юпа еннелле уттартӑмӑр.

Утаман тӑвӗ тӑрринчен айлӑмалла, хула еннелле, иксӗмӗр пӑхса тӑратпӑр. 37 ҫул каялла та сапла пӑхса тӑрсаттӑмӑр. Халь хула сӑн-сӑпачӗ нумай улшӑннӑ. Чиркӳсен вырӑнӗ те юлман. Хӗрлӗ хӳми те, утӑ капанӗ еврӗлӗ элеваторӗ те уйрӑм палармаҫҫӗ. Ӗлӗк хулапа

станцă хушши 4 километрччĕ. Халь хули станцăран та иртсе кайнă. Самар шывĕн икĕ çыране те ем-ешел. Çавах хула варринчи ешел лаптăк уйрăммăнах курăнать. Хула сачĕ. Эпир, комсомолецсем, хывнă парк вăл. Унччен хула урамĕсенче пĕр теме те усместчĕ, халь лутрарах çуртсем пачах курăнми пулнă. Иванпа иксĕмерен пулни-иртнине, аса илес тесен, çак вырăнтан лайăхраххине шыраса та тупаймăн.

Нихçан каласманнине калаçрăмăр вара. Вăхăче çителекле. Лешсем машина айĕнчех мĕшĕлтетеççĕ-ха. Эпир калаçнă май перре уткаласа çӳретпĕр, тепре çул херринчи чулсем çине ларса канатпăр. Юлашкинчен шав Иван калаçрĕ, эпĕ итлесе лартăм. Сисетеп, унăн ăш-чикĕ вĕркесе çитнĕ. Çавăнпа та веçĕмсĕр калаçасшăн, çывăх çын уменче хăйĕн чунне тавăрса хурасшăн. Хăй каласа панă тăрăх, унăн юлашки вăхăтри пурнăçĕ çапла пулнă иккен.

Иван ĕçнĕçемĕн ĕçнĕ: пĕччен те, кӳршĕпе те, ăнсăртран килсе керекен çынпа та, арăмĕн тăванĕсемпе те. Пурăна киле хайхи полковник, ӳсĕр пуçпа килтен тухса кайса, хула тăрăх тĕнче касса çӳреме пуçланă. Çапла вара пĕррехинче милицине пырса лекнĕ, унта та кăшт çуйăхнă. Кайран коммунистсен пухăвĕнче хăйне выговор панă чух Осокин çылăхĕсене пытарман, тунса калаçман. «Ĕçсĕр, халăхран татăлса пурăнатăп»,— тенĕ райкомра та. Райком секретарĕ ăна вара шăматкун хăй патне ĕç пирки калаçма пыма хушнă.

Анчах Иван Антонович шăматкун райкома кайман. Шăп çав кун ирхине ăна пĕр чăваш хĕрарăмĕ шыраса тупнă. Хамăр ялсем мар, кӳршĕ ялсем. Ивана кăшт хурăнташ та пулать хăй. Сĕтел хушшинче сăйланкаласа чăвашла калаçса ларнă хушăра хĕрарăмĕ, Иван ялта вăтăр çула яхăн пулманнине пĕлсен, ятласах тăкнă. Иван уншăн кӳренмен, кăмăллăн кулса итлесе ларнă. Çав хĕрарăм сăмахне итлесе, яла кайса курас шухăш тытнă. Мăшăрĕ яла кайса çӳреме килĕшмен. Вара Иван пĕчченех тухса кайнă.

Тăван яла вăл хĕрӳ вăхăтра, çынсем хирте ĕçленĕ чух пырса çитнĕ. Вăтăр çул хушши килсе çӳремен çынна ялта паллакансем те сахал. Çамрăкраххисем вуçех пĕлмеççĕ. Çывăхрах тăванĕсенчен те инкĕшĕпе мăнаккăшĕ кăна юлнă. Ялта та ăнăçлăх тупайманнипе пĕр эрне пурăннă хыççăн Иван хулана таврăнас шухăш тытнă. Çав вăхăтра партин çĕнĕ Программин проекчĕ яла та пырса çитнĕ. Программă проектне вуласа тухнă хыççăн Осокин тарăн шухăша кайнă. Çакна та аса илнĕ: вăл, 37 çул каярах, совпартшкулта вĕреннĕ чух, пĕррехинче губком лекторĕнчен: «Эпир хамăр ĕмерте социализма кĕтсе илейĕпĕр-и?»— тесе ыйтнă. Лекторĕ те ытлашши пĕлекен марксист пулман курăнать. Ун шухăшĕпе НЭП тени пĕр 40—50 çула пымалла-мĕн... Акă ĕнтĕ 40 çулĕ те иртмен-ха — коммунизм патне те çите пуçларăмăр.

Çак чаплă та хĕрӳ вăхăтра чăн пирвайхи комсомолецсенчен пĕри, партире 1927 çултанпа тăракан çын, идеологи тĕлĕшĕнчен вăйлă ĕçлеме пултаракан коммунист, пенси илмелĕх те ватăлман çын, аслă ĕçрен, халăх пурнăçĕнчен пăраннă та çынсене чăрмантарса çӳрет, халăха, çĕршыва ним усă памасăр пурăнать, коммунизм тăвас ĕçе нихăш енчен те пырса хутшăнма пĕлмест...

Мĕн тăвас? Хулара каллех вырăнлă ĕç тупаймăп. «Ялтах юлас мар-и? Ватă мар-çке, чирлĕ çын та мар». Çакнашкал шухăшсемпе тарăхкаласа, Осокин тата тепĕр эрне пурăннă ялта. Çав хушăра тахăшин пуçне лайăх шухăш пырса кенĕ. Хăнана колхозниксен пухăвне, çĕнĕ Программă проектне сутсе явнă çĕре хистесех чентернĕ. Ватăраххисем эпир, Осокинпа ĕлĕк яла килсен, яланах доклад туса панине астăваççĕ курăнать. Пухура Осокинне халĕ те лайăхах калаçтарнă, терлĕ ыйтусем парса аптратнă. Хăшĕ тата, шут тунă пек пулса, ăна коммунизм тума яла таврăнма чĕннĕ. Тепри çамрăксене Осокин пек паллă çынсенчен, ватăрах коммунистсенчен пример илсе ĕçлеме чĕннĕ. Мĕскен Иван пĕр тарăхнă, пĕр намăсланнă, пĕр савăннă.

Татах ялтан хăпса каяйман Иван Антонович. Халь ĕнтĕ вăл колхоз ĕçне тимлĕнрех сăнама тытăннă.

Кĕçех колхозри коммунистсен отчетпа суйлав пухăвĕ пулнă. Осокина та пухăва хутшăнтарнă. Интересленсе ларма кăна килмен вăл кунта. Колхоз тунă ĕçсенчен хăшĕ савăнтарнă ăна, хăшĕ тата ытлашши те кулянтарнă. Хĕрарăмсем мĕн калаçнине те итлекеленĕ вăл, хăй куçĕпе те куркаланă. Куçĕ унăн çавах та — хресчен куçĕ. Колхозне пысăклатнă хыççăн ĕлĕкрех аванах ĕçлекен пуçлăхсем начара туха пуçланă. Парторгĕ хăй агроном, уй-хир ĕçне аванах ертсе пырать, выльăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пĕртте хутшăнмасть темелле. Председателĕ çав вăхăтра базăсем, фермăсем туса лартас шутпа, кӳршĕри районсене кайса, тĕрлĕ материалсем шыраса çӳрет. Уй-хире, бригадăсене çитсе курма та вăхăт çук. Колхозникĕсем хăйсем те аташа пуçланă. Кунта кăвакал ĕрчетме питĕ лайăх. Юхан шывĕ яла ункăласах илнĕ. Çывăхрах хăмăшлă кӳлĕ те пур. Анчах кăвакал пирки шухăшлакан çук. Темшĕн пурте хур усрама-

ӗрчетме тытӑннӑ. Ялта хур кӗтӗвӗ пилӗк пинрен те иртсе кайнӑ пуль. Хурӗсемпе чӗпписем кӑшт аталаннӑ хыҫҫӑнах шывран тухса тӑвалла, хирелле туртӑнаҫҫӗ, акнӑ анасем ҫине кӗрсе тустарма тытӑнаҫҫӗ. Колхоз председателӗ, ним тума аптраса, хурӗсене пӑшал персе хӑратма хушнӑ...

Иван Антонович отчет хыҫҫӑн парторгне те, колхоз председательне те вырӑнлӑ та тӗрӗс ыйтусемпе тӑнтан янӑ, кайран пренире тухса калаҫнӑ. Пуху иртнерме кунта райком секретарӗ хӑй килнӗ. Вӑл ҫак тӗпчевҫӗ ҫине интересленсе пӑхса ларнӑ. Пуху хыҫҫӑн вара вӗсем иккӗшӗ нумайччен калаҫнӑ. Осокин хӑй пирки пӗтӗмпех тӗрӗссине пӗлтернӗ. Вара юлашкинчен райком секретарӗ Ивана ҫапла каланӑ:

— Санӑн хулара ӗҫ шырама кирлӗ мар. Кил пирӗн пата, пурӑнмаллах куҫса кил. Хӑш колхоз кӑмӑла каять, ҫавӑнта сана председателе сӗнӗпӗр. Куратӑн, лайӑх руководительсем ялта сахалрах-ха.

Иван, хӑй те кунталла куҫас пирки шухӑшлама пуҫланӑскер, ҫак сӑмахсене илтсен, савӑнсах кайнӑ. Анчах труках пуҫлӑх пулма килӗшмен вӑл, малтан ахаль колхозник пулса ӗҫлесе курас тенӗ...

Эпӗ Иваншӑн савӑнса ун сӑмахӗсене итлесе лартӑм. Чӑнахах та, вӑл, пӗр вӑхӑтра йӗртен тухса ӳкнӗскер, халь йӗре кӗме пултаратех, терӗм.

— Ҫапла ӗнтӗ,— терӗ Иван юлашкинчен,— ӗлӗк хулана илсе каякан ҫул, пирӗншӗн вӗренӳ ҫулӗ пулнӑскер, маншӑн халь Ял ҫулӗ пулса тӑчӗ, ҫӗнӗ пурнӑҫ еннелле илсе каякан ҫул пулчӗ. Эпӗ халь пурӑнмаллах яла кайма тухнӑ ҫын.

— Хайхи, «зов предков» тинех пулчӗ пуль ку?— шӳт туса астутартӑм эпӗ.

Иван ӗлӗкхи пекех савӑккӑн кулса ячӗ.

— Ҫук, ун пек каласан, «предков» мар, «потомков» пулать пуль.

— Анчах ҫӗнӗ ҫӗре куҫса каякан ҫын пек курӑнмарӑн-ха эс. Япалусем те пӗр чӑматан кӑна. Матрена Ивановна куҫасшӑн мар-им?

— Чӑматанӗнче те ял хуҫалӑх литературинчен пуҫне ним те ҫук. Матрена Ивановна пит пӑлханса юлчӗ-ха. Япалисене тиесе килме машинӑ хӑть хӑҫан парӑпӑр, терӗҫ. «Унччен шухӑшласа пӑх,— терӗм майрана.— Кӑмӑлу пулмасан, тӑванусенчен, хулари пурнӑҫран хӑпаймасан, юл, пенси илсе пурӑнӑн. Эп лере пенсисӗр те выҫӑ вилмӗп».

— Кӑшт макӑркалӗ те пур пӗрех килӗшӗ,— малалла кулкаласа калаҫать Иван.—Тата эпӗ ӑна кӑшт йӑпатрӑм, улталарӑм пулать. Пӳрте сутсан, ҫав укҫапа пӗр-пӗр «Волга» туянӑпӑр та эрнере темиҫе хут хулана кайса килме, театра ҫӳреме те пултаратпӑр, терӗм. Куҫтӑр кӑна. Кунта кӑвакал ӗрчетме вӗрентӗп эпӗ ӑна. Машинӑ пирки те манса кайӗ.

«Манса кайӗ-ши? Ку шухӑшпа эсӗ майруна мар, хӑвна ху ҫеҫ йӑпататӑн пуль»,— терӗм ӑшӑмра, анчах сасӑпа ним те каламарӑм. Чул юпа тавра ҫӳресе ывӑнса та ҫитрӗмӗр. Машини ҫавах кӗрлемест-ха. Сасартӑк Иван Антонович манран хыпӑнса ӳксех ыйтрӗ:

— Эс унта кам патне кӗрсе чарӑнас тетӗн? Санӑн унта Павел Романӑчран ҫывӑхрах хурӑнташ та юлман пуль?

Ҫапла тем пӑшӑрханса ыйтни мана кӑшт тӗлӗнтерчӗ.

— Тӗрӗс каларӑн,— терӗм эпӗ,— унран ҫывӑхраххи ҫук. Вӑл тӑван пичче вырӑнне ӗнтӗ, мӑнакка ывӑлӗ. Ҫав чӗннипе яла ҫитсе курма шутларӑм.

Тусӑм вара сылтӑм аллине ман хулпуҫҫи ҫине хучӗ те темшӗн пӑшӑлтатса калаҫа пуҫларӗ:

— Ахальтен интересленместӗп-ха. Ан тӗлӗн. Павӑлран эпӗ пӗр сӑмах ыйтса пӗлесшӗн. Те калӗ, те каламӗ... Тата хӑй те пӗлмест пуль. Апла пулсан, ыйтни те ырӑ мар-тӑр. Сан урлӑ калаҫмалла пулӗ, тен... Акӑ мӗн ман ӑша ҫунтарать. Эпӗ, тен, пӗр-пӗр урӑх колхоза куҫӑттӑм, анчах пӗр сӑлтав пур. Эсӗ Укҫине ятлӑ хӗре астӑватӑн пуль? Вӑл, эпир ялтан тухса кайсан, Павӑл арӑмӗ пулса, ҫамрӑклах вилсе кайнӑ. Унӑн Павӑлпа пӗрлешиччен ҫуралнӑ хӗрӗ пурӑнать. Верук ятлӑ. Халь вӑл вӑтӑр ҫиччӗре. Курсан тӗлӗнсех кайӑн. Маншӑн амӑшне курнӑ пекех туйӑнчӗ. Каснӑ-лартнӑ — Укҫине. Мана вӑл пит кӑмӑллӑн йышӑнчӗ. Эпӗ те ӑна тӑван хӗре юратнӑ пекех юратса пӑрахрӑм...

— Э, э, Иван, асту!— шӳт тукаласа сӑмах хушрӑм эпӗ.—Вӑл вӑтӑр ҫиччӗре, эсӗ аллӑран нумаях иртмен. Матрена Ивановна хуларах юлӗ тесе ӗмӗтленместӗн-и?!

Иван ҫиленсе пӑрахрӗ. Ҫамкаран шаккасах каларӗ:

— Путсӗр ҫын эс, ача. Ухмах! Унӑн виҫӗ ачи, упӑшки пур. Упӑшки ман пек ват супнӑ мар, хитре ҫын, механизатор. Тепре каласан...

Анчах «тепре каласан» мӗн пулассине итлесе пулмарӗ. Пирӗн машинӑ кӗрлесе те мӗкӗрсе ячӗ. Вырӑнлӑ пассажирсем кӗрсе ларнӑ та иккен. Ура ҫинче тӑраканнисем ҫеҫ пире кӗтеҫҫӗ. Вӗсем сахалланнӑ. Типҫырмана ҫитиччен каяканнисем тахҫанах суран танкканӑ. Халь вӗсем килте чей ӗҫсе ларасҫӗ пуль. Иван ҫамрӑк ҫын пекех чупрӗ машинӑ еннелле. Эпӗ те ун хыҫҫӑнваскарӑм.

Шарлыкра халь ӗнтӗ машинӑ шыраса 'ан-

трамалла пулмарĕ. Иван мана автобус чарăнна тĕлте хăварчĕ те хăй райкома кĕрсе тухас терĕ. Çур сехет те иртмерĕ, эпир райком машини çине ларса яла вĕçтертĕмĕр. Пире Климов юлташ хăй ăсатса ячĕ. «Хăй» тенĕренех чухлатăр пуль: райкомăн пĕрремĕш секретарĕ çав. Вăл мана та яла ĕçлеме килет тесе хапăл тунăччĕ, колхозĕсемпе мухтанма тытăнчĕ. Анчах «эпĕ журналист»,— тенине илтсенех, аллине сулчĕ. Журналистран усă курайман, терĕ пулать.

* * *

Çапла вара çул тепĕр вĕçне эпир чиперех çитрĕмĕр. Тĕрĕссипе каласан, калавĕ те вĕçне çитрĕ. Анчах, тен, вулакан та ман пекех Иван мĕн каласа çитерменнине пĕлесшĕн пулĕ. Тепри тата Матрена Ивановна пирки те: «вăл яла упăшки хыççăн кайнă-ши, кайман-ши?» тесе тарăхĕ. Каласа парасах пуль.

Иванăн тепĕр шухăшне эпĕ вăл мана каласа памасăрах, ăнсăртран пĕлтĕм. Пĕррехинче эпĕ Павăл пичче пӳртĕнче хаçат вуласа лараттăм. Хуçи сад пахчинче тем ĕмĕлтететчĕ. Ун патне Иван Антонович пырса тăчĕ. Унтан вĕсем иккĕшĕ те пӳрт çумне пырса сак çине ларчĕç. Мана те асăрхамарĕç, те манран асăрханма шухăшламан та вĕсем. Иккĕш те сасăпа каласма пуçларĕç.

Павел Андреевич манран икĕ çул кăна аслă пулсан та, эпĕ ăна чăваш йăлипе Павăл пичче тесе чĕнетĕп. Çын çине яланах темле ытлашши кăмăллăн, йăл кулса пăхать вăл: çиленсе е йывăр шухăша кайса пăхнине нихçан та курман ăна, кăмăлне хытарса калаçнине те илтмен. Эпир пĕрле ӳснĕ, анчах пурăнасса уйрăм пурăннă, пĕрне-пĕри сахал курнă. Тен, çавăнпа та-и унăн сăнĕ улшăнма пултарнине курман эпĕ. Халь куртăмах.

— Эсĕ кăна, Павел Романович,— терĕ Иванĕ,— мана пĕр сăмах, маншăн пит хаклă сăмах калама пултаран. Эсĕ те пĕлмесен, ним те тăваяс çук вара. Малтан эсĕ Укçинепе çӳрекелерĕн. Кайран эпир Укçинепе пĕрнепĕри юратнăччĕ, мăшăрланма та шут тытнăччĕ. Эпĕ ăна хампа пĕрле хулана вĕренме илсе каясшăнччĕ. Ашшĕ ямарĕ. Кайран, эпĕ кайсан, вара эсир унпа пĕрлешнĕ. Анчах саншăн та унпа пурăнма ăраскал пулман. Халь ĕнтĕ кала-ха, тархасшăн, Укçине хĕрĕн ашшĕ кам пулать?

Çак сăмахсене илтсен, Павăл пичче сăнран йăлтах улшăнчĕ. Ку çын кулма пĕлет тесе те каламăн. Ивана куçран пăхса, чĕтрекен сасăпа çапла ответ пачĕ вăл (эпĕ тĕлĕнсе итлесе лартăм):

— Эсĕ чăнахах пĕлместĕн-и вара? Тахçанах пĕлетĕн пуль тесе. Верукăн тăван ашшĕ эсĕ пулатăн, эпĕ ăна пăхса ӳстерекенни кăна. Укçине вилес умĕн каласа хăварчĕ. Ун пирки Верука, ăна ӳстерсе качча париччен, калама хушмарĕ. Эсĕ яла килсе çӳреми пулсан вара, пĕлменни те лайăх тесе, хальччен те каламарăм.

Иван ним те чĕнмерĕ. Павăл пичче, кăшт ларсан, куçне шăлкаласах хушса хучĕ:

— Çапла пулчĕ çав. Эсĕ пĕр хĕрарăм çуралнăшăн айăплă, эпĕ тепри, унăн амăшĕ вăхăтсăр вилнĕшĕн айăплă. Ман ачана çуратаймасăр вилсе кайрĕ вăл. Ачине çăлкаларĕç, анчах эрне те пурăнмарĕ, мĕскĕн... Арçын ачаччĕ. Верукăн пĕр тăванĕсем никам та çук.

Хайхи Иванăм ман ялта, çĕнĕ пурнăç пуçласа яма хăйĕн тăван хĕрĕпе мăнукĕсем патне килчĕ пулать. Матрена Ивановна пĕлсен, пушшех кунта килесшĕн пулмĕ, тесе шухăшларăм айван пуçăмпа. Пӳрт çумĕнче урăх калаçни илтĕнмерĕ.

...Эпĕ хулана таврăннă хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Пĕррехинче хула хĕрринчи хăрах енлĕ урама кайса курас, терĕм. Симĕс хапха умĕнче пысăк машинă тăрать. Кил картине кĕтĕм. Алăксем пурте уçă. Япаласем тĕрлĕ çĕрте купаланса выртаççĕ. Матрена Ивановна мана палламарĕ пулас. Вăл тулăн-шалăн хашкаса чупкалать. Пĕр-пĕр япалине тытса лăскать те аллисене лаштăр усать. Хăй пĕр çилленсе, пĕр макăрса кăшкăркалать:

— Мĕн çитмерĕ-ха ухмаха! Мĕн çитмерĕ! Тата мĕн кирлĕ, калăр-ха, тархасшăн!..

Мĕн çитменнине хамах пĕлетĕп ĕнтĕ, анчах Матрена Ивановнăна каласа ăнлантараймăн. Çук, кăвакал хуçалăхĕпе йăпатаймăн ку хĕрарăма, терĕм ăшăмра. Мана паллайман хĕрарăмпа калаçни те пулмарĕ. Çав вăхăтра Матрена Ивановнăн тăванĕсем ушкăнĕпе килсе çитрĕç. Вĕсем хушшинче те: «Мĕн çитмен-ха ухмаха!» — тени илтĕнчĕ. Эпĕ вара шăппăн тухса кайрăм. Иванĕ хăй килмен иккен. Машинăпа килнĕ ял çыннисем магазина чупнă пулĕ — курăнмарĕç. Урам вĕçне çитсен, симĕс хапха çине юлашки хут çаврăнса пăхрăм. Хĕрарăмне çиленес те, шеллес те килмерĕ. Анчах тусăм çак хăй сăрланă симĕс хапхаран хăпнăшăн тата тепĕр хут савăнса илтĕм.

Алексей ВОРОБЬЕВ

САКĂР ЙĔРКЕ—ПĔР ТĔРКЕ

Тĕлĕнсе çаплах эп пĕтермен,
Илĕртет ялан мана çĕнни.
Ĕмĕрĕм, иртмен-и эс! Иртмен,
Ĕмĕтпе пĕр шутлă эс чĕнни.
Эс çула чĕнетĕн васкавар.
Хатĕр эпĕ. Вăхăт, алăк уç.
Çул çине нимех те кирлĕ мар —
Куракан чĕре те чунлă куç.

2

Хир кăкри çул тăршшипе уçах.
Сывламашкăн ирĕк ирхине.
Ик енче — шут çитейми пучах,
Кармашса кураймăн вĕç-хĕрне.
Шухăш вĕçрĕ, кăмăла уçса
Юрра ятăм савăнăç пуртан —
Сын телейĕ пучах пек тулса
Тĕшше ларнăн туйăнать паян.

3

Ĕненми пăхатăн темшĕн эс
Кўренсе шывланнă куçупа.
Мĕн тесе, савни, ўпкелешес!
Çурхи кун сăмахĕ, чăн тупа,
Халь те пирĕн çирĕп, ху пĕлен.
Çирĕпрех вăл пулĕ кĕр енне.
Кăваках та çўçĕм, ан ĕнен.
Ĕненсем çап-çамрăк чĕрене.

4

Кур: ларать вăрман патши — юман.
Чăвашла чăп лартнă çĕлĕкне.
Çиле хирĕç сывласа ярсан
Туй вара сак улăп çўлĕшне.
Ку тавралăх вăрманпа пуян.
Çыннисем ун мĕншĕн кĕреш мар!
Сывлăхне илнех пуль юмантан —
Халлĕ, çирĕп, чăтăмлă, патвар.

5

Шăтса тухнă тейĕн пĕр кăкран:
Пуç кăларнă тулă çумĕнче
Кармащать епле хура мăян,
Хăй кăна курасшăн çут тĕнче.
Вăркăнтар ăна çул хĕррине!
Пĕр канаш пур манăн, асăрхан:
Усалпа пĕрле эс ыррине
Кăкласа ан ывăт, çумлакан.

6

Кĕмĕле шутларăн хуратма,
Хăрăмпа эс сăтăртăн темччен.
Тăрăшни сан кайрĕ харама —
Çутăрах вăл пулчĕ хальхиччен.
Ман пирки саратăн-и элек —
Вараламăн, чунăм ман таса.
Сăтăрса çутатнă кĕмĕл пек
Ĕçĕмре вăл тăтăр ялтраса.

7

«Кил-çуртне тултан курса кăна
Хуçинне пĕлеймĕн кăмăлне...»
Ачаран эп хывнă ăс-тăна
Иккĕленмĕш çак сăмахсене.
Тантăшсем, чăн туслăхăн тĕнчи
Алăкне яри халь уçнăран,
Пĕлтĕм эп — ыр çыннăн чўречи
Хĕвеле савса пăхать куçран.

8

Улăп теççĕ,— эп ăна курман.
Улăпран хăватлă та хастар
Çывăх тантăш, паттăр тус пур ман,—
Пурнăç шутлă, пĕве çитнĕ ар.
Çунатла сарсассăн хулпуççи
Эс тўрех пĕлетĕн вăл камне.—
Совет çынĕ, çут тĕнче хуçи,
Вăл йăтса тăрать Çĕр чăмăрне.

9

Нихăçан асран кайми сăнар:
Шăрăх кун, вут хыпнă аслă хир.
Тĕтĕмпе чыхланнă чалăш вар.
Туратне лăш уснă çамрăк хыр.
Ман пата шуса килен сестра.
Ун сасси: «Пурнан, хăрушă мар...»
Сăнлăх çак пурнать ялан асра.
Вăл — çĕршыв сăнарĕ, çут сăнар.

10

Гурзуфра çўретĕп тĕлĕнсе.
Çырана ўксессĕн хум çилхи
Пушкин йĕррине сăрт тĕлĕнче
Эп пăхса тăратăп куç илми.
Унăн йĕрĕ мар, тен! Пур пĕрех
Пусăма çак шухăш савăрать:
Пушкин, сан поэзири йĕре
Ман курасчĕ хамăн сăвăра.

11

Йăлăмра, юманлăх хўттинче,
Ўссе ларнă пĕр çинçе çўçе.
Вăй виссе курман вăл çил çинче,
Чухлаймасть-ха пылакпа йўççе.
Вĕрентет çапах та хăй ăса:
— Эй, юман, эп тупрăм лайăх мел.—
Пурăнар-и кăчкă кăларса,
Мĕн тумашкăн кирлĕ çав... йĕкел!

12

Çурăлать пахча тулли папка.
Урамра кĕрлет çурхи шыв-шур.
— Сывă-и, чипер хĕр! Уç хапха,
Висĕ çул упранă сăмах пур.
...Ак хуплать картус шур тутăра.
Çил вĕрсе иртет лăпка-лăпка.
Пĕл, вĕсем чуптунă хушăра
Усрĕ куç тата мисе папка!

13

Кушăрханă алă, лаш кайса,
Саппунпа ан витĕн, ан имен.
Эс çĕр хут, пин хут та эс таса
Çут черкке хĕстернĕ пўрнерен.
Эс ĕçпе пĕр шутлă, пĕр тăван.
Уямастăн эс çăвне-хĕлне —
Тĕнчене пĕр çĕнетсе тăран,
Таптаратăн пурнăç чĕрине.

Куçма ТУРХАН

Çĕр суранĕ

Роман[1]

САККĂРМĔШ СЫПĂК

I

Алпас çăварĕ, Ахрат сикки, Эсрел кӳлли, Тамăк çырми... Ăçта кăна тĕл пулма çук-ши çынсем çакăн пек хăрушă ят парса тултарнă тип варсене! Çăпан-юхан этем сăн-питне пăснă евĕр, миçе ял илемне пăсмаççĕ-ши вĕсем чăваш çĕршывĕнче? Тата чăваш çĕршывĕнче кăна-ши?

Пĕр-пĕр хӳтĕ вырăнта — вăрман хĕрринче е çырма пусĕнче — чипер çеç ял ларать. Тӳрĕ урамсем, черепицă, калай е улăм витнĕ тирпейлĕ çуртсем, урам икĕ айккипе — йăмра та тирек йывăççисем. Ял варринче, пĕтĕм халăх иртсе çӳренĕ çĕрте,— шкул, вĕр-çĕнĕ клуб, больницă. Çавăнтах... çавăнтах Тамăк çырми. Кунта пурăнакансене юри мăшкăлланă пек, вăл шăп ял варрипе иртет, ăна темиçе пая çурса ваклать. Ял вара, кăмакаран тухнăтухман вартанса пĕтнĕ пӳремеч евĕр, татăкăн-кĕсĕкĕн сапаланса выртать. Пĕр урамран тепĕр урама тухас пулсан, çынсен таçта çити çаврăнса каймалла, кĕпер хума май çук сарлака тип çырма урлă каçмалла.

Тамăк çырмин е Алпас çăварĕн çыранĕсем аякранах чуна шиклентерсе тăраççĕ. Выльăх тесен, выльăх та хăрать вĕсен çывăхне пыма. Ку çырансем çав тери ултавлă: пăхма йĕритавра ешĕл çерем пек, анчах патне çитетĕн те, çав тӳрем вырăн лаштăр! çеç ишĕлсе анать. Çырма вĕçĕ — унăн тăранма пĕлмен пырĕ вара вун икĕ пуçлă аçтаха евĕрлех — çулсерен малалла та малалла шăвать, ял çерем- не утăм хыççăн утăм хăй айне туса пырать. Хăш-пĕр çĕрте тĕшмĕше ĕненекен ватăсенчен çапла каланине илтме пулать: çырма ял вĕçне ишĕлсе çитсен, тĕнче пĕтет, теççĕ.

Хĕрлĕ Çыр ялĕн Тамăк çырмийĕ ытти пиншер Тамăк çырминчен усал та, ырă та мар темелле. Тен, вăл пăртак пуçтахрах çеç пулма пултарать, мĕншĕн тесен, хăйне никам тытса чарма пултарайманнине кура, тӳрех колхоз правленийĕ еннелле çул тытнă. Пайпике юмăç карчăкĕн мунча пек пӳрчĕ тĕлне çитнĕ ĕнтĕ вăл, ку чалăшнă çуртăн чӳречисем ял çинелле мар, кил хуçи карчăкĕн киревсĕр ĕçĕсенчен вăтаннă евĕр, тип вар тĕпнелле пăхаççĕ.

Вунă-вун пилĕк çул каялла Хĕрлĕ Çыр Тамăк çырмийĕ тепĕр пĕчĕк тип варпа пĕрлешсе тăратчĕ. Халь вăл йăлтах питĕрĕннĕ, вашмăк вырăн кăштах юлнă пулин те, ун çийĕнче курăк ешерет, ик енĕпе темĕн чухлĕ çамрăк йывăç кашласа ларать. Ялта ку вырăна Шевле çырми теççĕ. Çав канăççăр этем тăрăшнипе питĕрчĕç Турчка кассинчи çынсем вăл синкерлĕ тип вара. Малтан çырма ик айккине те çатан карта тытса тухнăччĕ, выльăх таврашне кĕртместчĕç. Халь, çырма тĕпĕ юшкăнпа тулса, çеремленсе кайнăран тата лартнă пек йывăçсем чылай пысăкланнăран, картине сӳтсе тăкнă, Шевле çырми улăх-çаран пекех сарăлса выртать. Каççерен, кĕтӳ антарсан, унта тĕрлĕ выльăх мĕн хуçисем пырса хăвалаласа кайиччен çерем чĕпĕтет.

Шевле старик Яштайкин ăна çак тип вара питĕрнĕшĕн ырланине темиçе хут та илтнĕ. Унашкал калаçăва пĕрре те юратмасть Архип Лукич. Халĕ вăл колхоз председательне Шевле кассинелле мар, Тамăк çырми патнелле

[1] Малалли. Пуçламăшĕ 3—5-мĕш номерсенче.

сĕтĕрчĕ. Вĕсем, майĕпен утса, чăнкă çыран хĕррине çитсе тăчĕç.

— Пĕлтĕр çак тĕлте пĕр ача çырмана анса кайнăччĕ,— терĕ Шевле, аллинчи кĕреçипе тип вар тĕпнелле кăтартса.

— Вилмен-и?

— Вилмен, анчах виçĕ уйăх вырăнпах выртрĕ. Ĕмĕрлĕхе уксах пулса юлчĕ.

— Ун пек те пулкалать иккен?

— Пулкалать. Теплере пĕрре пăру анса каять вара. Ытти вырăх ўкнине курман, пăрусем чикеленсе анаççĕ тепĕр чух.

— Вĕсене мĕнле кăларатăр?

— Çаплах, ара. Çырма тăрăх йăтса каятпăр та вырăх масарне пытаратпăр.

— Пит тарăн çав,— лăпкăн каларĕ Яштайкин.— Кунта ĕнсене хуçмалăх пур.

— Мĕн каласси ĕнтĕ, Аристарх Петрович! Çакăнта шыв тултарас пулсан, ачасем пӳ ярса пӳ çитерес çук. Пулă, пулă мĕн чул пулмалла тата! Тытса пĕтерейменĕн.

— Шыв тултарас пулсан тетĕн? Анчах шывĕ тăмасть-çке кунта, йăлтах çĕмĕрсе туха каять.

Шевле ун сăмахĕсене илтмĕш пулчĕ.

— Эс шăршла-ха, Аристарх Петрович, мĕнле ырă шăршă кунта!— сăмсипе нăш-нăш тутарчĕ вăл.

Яштайкин ун çине пăхса кулса çеç илчĕ.

— Эрĕм шăрши çапать çав сăмсана! Ырă ĕнтĕ...

— Эс лайăххах шăршла, председатель.

— Ну, тăм шăрши пур тата. Урăх нимĕн те туймастăп.

—Апла сан сăмсу витĕр мар. Акăш-макăш тутлă шăрш пур кунта.

— Мĕн шăрши-ха вăл?

— Пан улми шăрши.

— Исĕм çырли шăрши кĕмест-и сана?

— Вăт эс ĕненместĕн, Аристарх Петрович. Эп пан улми шăршине лайăххах туятăп.

— Э-э, ку халап çеç, Архип Лукич. Ав май пур çĕрте, хăвăр касра, питĕрнĕ эс çырма юппине. Кăна тултарма май çук. Ку вăл Египетри пирамидăсене тунинчен те йывăртарах ĕç пулнă пулĕччĕ. Пĕтĕм район халăхне пуçтарсан та, ĕçĕ çулталăка çитет. Çапла-и?

— Мĕн, эс ăна кĕреçепе тăпра сапса тултарасшăн-им?— терĕ Шевле.

— Урăхла мĕнле пултăр? Ну, пĕр-ик бульдозер парĕç пире. Миçе пин ĕç кунĕ пĕтермелле уншăн, пĕлетни?

— Пĕлместĕп, шутламан. Миçе пин йывăç лартмаллине шутласа хунă. Ăна калама пултаратăп. Этем алли сĕртĕнсен, çут çанталăк вăл хăйĕн суранне хăех сиплет. Пирĕн ăна пăртак пулăшмалла çеç.

— Çук, Архип Лукич, кунта пăртакпа май килмест. Вăхăчĕ çитмен курăнать-ха, ун çинчен калаçма иртерех. Унтан кирлĕрех ĕçсем пур. Тепĕр тесен — ĕçле, тытăнса пăх, ларт хăвăн йывăççусене.

— Эс мĕн тăватăн, председатель?

— Эп мĕн тăвасси паллă — тыр-пул ўстеретĕп. Юхăннă колхоза çĕклеме мана вăйлă тыр-пул кирлĕ.

— Ку сан ĕç мар апла?

— Ну, ман ĕç мар тесех каламăпăр... Çапах та уншăн хыпса çунас кăмăл та пысăках мар манăн. Ăна пытарса тăмастăп.

— Эс пирĕн колхоз çĕрĕнче çырма-çатрапа тип вар миçе процент пулнине пĕлетĕн-и?

— Процентпах пĕлместĕп, анчах нумай пулма тивĕç.

— Пĕлместĕн пулсан, тĕплĕрех калас-и?

— Кала.

— Вун пилĕк процент! Илтетĕн-и, вун пилĕк процент!— хыттăн кăшкăрчĕ Шевле.— Гектарпа шутласан, вăл тăват çĕр гектара яхăн пулать!

— Илтетĕп,— терĕ Яштайкин малтанхи пекех лăпкăн.— Анчах эсĕ ан тулаш, Архип Лукич. Эпир пĕчĕк ачасем мар, кăшкăрмасăр та калаçма пултаратпăр.

— Çук, эп ун çинчен тулашмасăр калаçма пултараймастăп, Аристарх Петрович. Эсир— тĕрлĕ руководительсем, агрономсем, председательсем — ăнланманни тĕлĕнтерет мана. Мĕн чухлĕ çĕр сая кайса выртать иккен те, вăл сирĕншĕн нимĕн те мар.

— Пирĕншĕн лайăх çĕр те çителĕклĕ. Унтан та чипер тыр-пул туса илейместпĕр-ха ку таранччен. Вун пилĕк процент... Тупнă эс хăвна валли сехĕрленмелли япала, Архип Лукич! Çырма-çатра вĕт вăл, çав вун пилĕк процент, юрăхсăр çĕр. Атя, калаçас та мар ун çинчен...

Кăна илтсен, Шевле тутисем хыттăнах чĕтренсе илчĕç. Кăмăлĕ хуçăлнипе старикĕн куçĕсем те шывланчĕç пулас — вăл Яштайкин çине пăхмасăр тепĕр еннелле çаврăнса тăчĕ.

Архип Лукич мĕн тери кўреннине Яштайкин та лайăххах асăрхарĕ, анчах вăл старик хăйне алла илессе, унтан председателе хыттăн ятлама пуçласса кĕтрĕ.

Çук, Шевле хăй кўреннине нимпе те палăртмарĕ. Майĕпен ўсĕркелесе, вăл аллинчи кĕреçине вырăнтан вырăна куçаркаларĕ, çавăнтах, ĕççĕр аптранă çын евĕр, кĕреçе çивĕчĕшĕпе ура айĕнчи пĕлтĕрхи хыт-хурана туракалама пикенчĕ. Старикĕн председателе сăмах чĕнесси килмерĕ. Вăрçма та шутламарĕ вăл Аристарх Петровичпа. Çыннăн çак Тамăк çырмине курнă хыççăн та чунĕ ыратмасть пулсан, унпа мĕн çинчен пуплесси пур? Никам ăнланмасан та, Яштайкинăн ăнланмаллаччĕ ĕнтĕ Хĕр-

лӗ Ҫыр нушине, Архип Лукичӑн чунӗпе чӗрине те ӑнланмаллаччӗ. Вӑл, ав, темле вырӑнсӑр сӑмахсем каласа пӗтерчӗ. Эппин, Яштайкин ҫак тип ҫырмана пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те тӑвасшӑн мар, ку ӗҫе вӑл пулас ӑрусем валли хӑварасшӑн. Председатель (вӑл юратнӑ председатель!) ҫапла ал сулать пулсан, ыттисенчен мӗн кӗтмелли пур! Кирек мӗн каласан та, ӑслӑ ҫын-ҫке Яштайкин, ӑна-кӑна тавҫӑрма тивӗҫ. Анчах ҫук, Шевле чунне ӑнланмарӗ. Вӑл та, ытти нумай ҫын пекех, ҫутҫанталӑк илемне куҫпа ҫеҫ савса пурӑнать иккен, ҫав илеме ӳстерессишӗн хӑйӗн вӑйне пӑртак та пулин пама та шел ӑна, ҫак Тамӑк ҫырмине пӗтерессине те урӑх ҫын ӗҫӗ тесе шутлать.

«Ха, пирӗн ӗҫсене мӗнле валеҫрӗ вӑл!— терӗ Шевле хӑй тӗллӗн.— Манӑн Тамӑк ҫырмине пӗтермелле иккен, йывӑҫсем лартмалла. Вӑл пур — вӑйлӑ тыр-пул ҫеҫ ӳстерет. Сӑмахне тупрӗ тата — Египет ӗҫӗ! Айван, кӗреҫепе тултарасшӑн ҫак тарӑн вара!»

Старик нимӗн те шарламаннине кура, Яштайкин кулянса илчӗ: ахалех ҫилентерчӗ вӑл старике сӑмаха тӳррӗн каласа. Пӑртак юптарса, шӳт туса калаҫма та пулатчӗ. Вӑл ун кӑмӑлне ҫемҫетесшӗн пулчӗ.

— Эсӗ ӗнтӗ халь сад ҫынни мар-ҫке, Архип Лукич, звено пуҫлӑхӗ. Апла пулсан, пирӗн Тамӑк ҫырми пирки тавлашма та кирлӗ мар,— терӗ.

— Эп чунпа яланах сад ҫынни!— татса каларӗ Шевле старик.— Звено пуҫлӑхӗ пулатӑп-и, бригадир-и, агроном-и е ахаль колхозник — чунпа эпӗ яланах сад ҫынни! Асту, Аристарх Петрович, эп тавлашма, кӑшкӑрашма ӑста мар, анчах эпир паян санпа иксӗмӗр харкашрӑмӑр тесе шутла. Питӗ хытӑ харкашрӑмӑр тесе шутла!

Яштайкин ӑна ним тавӑрса калама аптраса тӑчӗ.

2

Шевле старик ҫапла шутлать: ҫын вӑл нумай вӗреннӗ-и, нумай вӗренмен-и, пултаруллӑ-и, пултаруллӑ мар-и, ӗҫре ӑста-и, ӑста мар-и,— чи малтан кахал ан пултӑр. Кахал ҫынран вутран хӑранӑ пек хӑрать Архип Лукич. Ҫавӑнпа механизациленӗ звенона хӑй лайӑх пӗлсе тӑракан ӗҫчен этемсене кӗртме тӑрӑшрӗ. Чи ӗҫчен этемсем ялта камсем пулчӑр? Варукпа Албутов арӑмӗ Сухви ӗнтӗ. Вӗсем колхоз ӗҫӗнче мӗн тери хастар пулнине пӗтӗм ял курса тӑрать. Хӑйсем ҫӑмӑллӑнах килӗшмерӗҫ-ха вӗсем звенора ӗҫлеме. Шевле старикӗн иккӗшӗн патне те темиҫе хутчен ҫитмелле пулчӗ.

— Шанчӑклӑ мар вӑл, кукурузӑ, Архип Лукич,—турткалашрӗҫ хӗрарӑмсем.—Икӗ ҫул хушши ҫӗр сая ятӑмӑр ав, пайти пӗр пуслӑх та тухмарӗ. Намӑс курни пулӗ ҫав. Эпир тӑрӑшни харама кайӗ...

Шевле вӗсене темле те ӳкӗтлесе пӑхрӗ. Лайӑх вӑрлӑх акса хӑваратпӑр, ҫара алӑпа мар, кӗреҫепе мар, тракторпа та культиваторпа ӗҫлетпӗр тесе йӑпатрӗ. Юлашкинчен Володьӑпа пӗрле кайрӗ хӗрарӑмсем патне. Мӗн тӑвас тетӗн, лешсен вара ирӗксӗрех килӗшмелле пулчӗ.

— Пирӗнсӗр пуҫне тата кама илетӗн-ха звенона, Архип Лукич?—терӗҫ хӗрарӑмсем.

— Урӑх пире никам та кирлӗ мар,— ӑнлантарчӗ Шевле.— Пӗр каччӑ, икӗ хӗр тата пӗр старик...

— Хӗрӗсем эпир пулатпӑр-и ӗнтӗ?

— Эсир ҫав, камсем пулччӑр тата? Эсирха темле хӗртен те ирттеретӗр!

— Вара урӑх никама та илместӗн-и звенона?

— Тек никам та кирлӗ мар, хӗрсем. Тӑваттӑн та ӗлкӗретпӗр. Председатель шантарса каларӗ, машинсене сире ыйтнӑ-ыйтман паратпӑр, терӗ.

— Ҫапах та ҫӗрӗ ытла нумай, Архип Лукич,— терӗ Албутов арӑмӗ.— 95 гектара пӗр тракторпа культиваци туса пӗтерейместӗн.

— Пӗтеретпӗр, хӗрсем, пӗтеретпӗр. Каччи питӗ маттур пирӗн. Юри шыраса тупрӑм сире валли, ҫерем уҫнӑ ҫӗртен чӗнсе илтӗм.

— Ну. кайран пире ан вӑрҫ вара, Архип Лукич. Эс ват ҫын, тӗплӗ шутласа пӑх. Ҫиччӗ виҫ те пӗрре кас.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Володьӑпа Шевле правление кайрӗҫ те унта звено пирки тата тепре калаҫса пӑхрӗҫ.

— Хӗрарӑмсем тӗрӗс калаҫҫӗ, асатте, пӗр механизатор сахал сире,— сӑмах хушрӗ Никодим вӗсене чылайччен пӗр чӗнмесӗр итлесе ларнӑ хыҫҫӑн.

— Мӗнле пек, Иварбеев?— терӗ Яштайкин.— Пӗччен йывӑр пулать-и сана? Е эс кичем пуласран ҫеҫ ыйтатӑн-и?

— Кичемми мур тӗпне вӑл,— хуравларӗ тракторист.— Мана вӑл шиклентермест. Эпӗ пӗччен ӗлкӗреймесрен ҫеҫ хӑратӑп.

— Алтай таврашӗнче кукурузӑ ӳстерсе курнӑ-и ҫак эсӗ?

— Ҫук, курман. Унта эпир тулӑ акса тунӑ. Кукурузӑ маншӑн ҫӗнӗ ӗҫ-ха.

— Апла юлташ памаллах пуль сана. Ҫавӑн пек пысӑк ӗҫе тытӑнтӑмӑр пулсан, пӗр ҫын пирки турткалашса тӑмӑпӑр ӗнтӗ.

— Паратӑн пуль, председатель. 95 гектар вӑл пӗчӗк ҫӗр мар. Тепӗр тесен, эп путса ларсан, мана туртса кӑлараканни те кирлӗ.

— Ну, эппин, эс каланӑ пек пултӑр,— терӗ Яштайкин.— Тепӗр механизатор шыраса пӑхӑпӑр. Анчах ҫук-ҫке вӗсем, ӑҫтан тупса парас ӗнтӗ сире? Шоферсем пур, трактористсем ҫук.

— Эпир хамӑрах тупатпӑр,—терӗ Шевле.— Володьӑ хӑех пӗлет пулӗ-ха. Ҫапла-и, Иварбеев?

— Шырасан, тупӑнать те пуль,— вӑрттӑн кулса илчӗ Володьӑ.

Звенона пухса ҫитерсен унти ҫынсем юр каясса кӗтмесӗр ӗҫе тытӑнчӗҫ. Звено пуҫлӑхӗ Шевле вӗсене ҫав тери чӑрмавлӑ япала тупса пачӗ: икӗ каччӑпа икӗ «хӗр» Архип Лукич ертсе пынипе ҫырма хӗрринче кунӗн-ҫӗрӗн торф ҫунтарчӗҫ. Ялан тӗтӗм айӗнче ӗҫлекен Варукпа Сухви тата вӗсене пулӑшакан икӗ каччӑ кӑмрӑк тӑвакансем пек хуп-хура пулса тӑчӗҫ. Кашни иртен-ҫӳрен вӗсен ӗҫӗнчен хӑй пӗлнӗ пек тӑрӑхлама пӑхрӗ.

— Ухмаха ернӗ-тӗр вӑл, Шевле старик. Торфа мӗн тума ҫунтармалла-ха ӑна? Вӑл ҫӗре ахалех ҫемҫетет,— терӗҫ хӑш-пӗрисем, хӑйсем тӗлӗннине пытармасӑр.

— Председателе кайса каламалла. Чартӑр вӑл йӳтенӗ старике ҫапла аташма. Халӑх пурлӑхне сая яма ан патӑр. Ун пек вӑл акана тухиччен мӗн пур торфа ҫунтарса пӗтерет.

Ӑна-кӑна ӑнланакансем звено ӗҫне савӑнса пӑхса тӑчӗҫ, Архип Лукичпа ун ҫыннисене мухтама тӑрӑшрӗҫ.

— Э-э, кусем пуш сӑмах ҫапаканскерсем мар. Куратри, мӗнле ӗҫлеҫҫӗ! Вучахӗнчен тӗтӗм тухать, хӑйсенчен пӑс тухать.

— Шевле старик вӑл ӗлӗк хӑй агроном пулнӑ. Мӗн тумаллине лайӑх пӗлет! Ӑна вӗрентме пултаракан ҫын ҫуралман-ха пирӗн ялта!

— Ӗҫченсен звени ку, ак мӗскер. Кунашкал ӗҫлесен, вӗсем кукурузӑ мар, темскер ӳстерсе парӗҫ!

Тахӑшӗ торф тӑприне ҫунтарса тӑкни мӗнле усӑ панине кӗнекерен вуласа пӗлнӗ, хӑйӗн ҫывӑхӗнчи ҫынсене ун пирки ӑнлантарса памаваскать.

— Торфа ҫунтарса тӑкни йӳҫӗ тӑпрашӑн ҫав тери сиплӗ вӑл, юлташсем. Унта извеҫ, фосфор тата калипе магни нумай — 15—30 процент таран. Ҫав япаласем тулӑ тухӑҫне 25 процент ӳстереҫҫӗ, кукурузӑ вара, торф кӗлӗ сапсан, 4—5 хут вӑйлӑрах пулать.

— Чим-ха, ара эсӗ профессор пекех калаҫатӑн!— йӗкӗлтет ӑна тепри.— Пӗлсех пуплетӗн курӑнать. Сана клубри викторинӑ вӑхӑтӗнче ҫак ыйту ҫакланман пулӗ те?

— Саншӑн ку пур пӗрех мар-и? Эс ав пулман та унта, викторинӑран тарса ҫӳренӗ. Ҫавӑнпа ним чухламасӑр шӑл йӗрсе тӑратӑн.

— Ну, чухланипе чухламаннине ӑна кӗркунне курӑпӑр. Эс ытлашши ан вӗрент. Малтан сан Шевлӳ пирӗн тӑмлӑ ҫӗр ҫинче кукурузӑ ӳстерсе кӑтарттӑр. Кӗнеки ҫӗтӗлнӗ йӑлтах, ӑна тата темле звено тума ирӗк параҫҫӗ.

— Санӑн хӑвӑн кӗнекӳ ҫӗтӗлнӗ! Тасал часрах кунтан! Итлессӗм килмест сан путсӗр сӑмахусене!

Тен, тепӗр чухне ҫакнашкал сӑмахсем Архип Лукич хӑлхине те пырса кӗреҫҫӗ пуль, анчах унӑн ӗҫсӗр ҫынсен тавлашӑвне тӑнлама вӑхӑт ҫук. Унӑн васкамалла. Урамсенче ав пур ҫӗрте те ҫурхи шыв кӗрлесе юхать, вӗсен нимӗн те хатӗр мар-ха. Мӗн каласси пур, ытларах шутларӗ ҫав старик хӗлле механизациленӗ звено тӑвассипе тӑвас марри ҫинчен. Звенона кӑшт маларах йӗркелемеллеччӗ, вӑрлӑхпа торф кӗлне, парафинпа гексахлорана, гербицидпа семазина, машинсемпе ӗҫ хатӗрӗсене маларах хатӗрлесе хумаллаччӗ. Юрать, Яштайкинпа Туймедова пулӑшаҫҫӗ-ха тата, Никодим та чунтан хыпӑнса ҫӳрет аслашшӗ ӗҫӗшӗн. Кун пек пулсан, ҫур акинче намӑс курас ҫук-ха вӗсем. Кулакан култӑр, ҫын ҫӑварӗ хапха мар, ӑна пырса хупса лартма ҫук. Тен, тӑрӑшса ӗҫлесен, ҫанталӑкӗ чипер тӑрсан, ял мӑшкӑлӗ пулмӗҫ-ха вӗсем кӗркунне. Халь ӗҫлемелле, тар юхтарса торф ҫунтармалла.

Ҫуркунне ҫывхарнӑ майӑн старике пӗр япала ҫеҫ канӑҫ памасть: вӑл кӑҫал тем тесен те Новосиле кайса килесшӗнччӗ. Пулмасть ӗнтӗ унта каясси. Орел облаҫӗнчи Новосиль хулинче тип варсемпе ҫырма-ҫатрасене тӗпчекен, вӗсемпе кӗрешекен станци пур. Тахҫантанпах шут туса хунӑ Шевле ҫав тӗлӗнмелле станцие ҫитсе куратӑп тесе. Ав кӑҫал та лекеймест унта.

Каҫсерен Архип Лукич патне ялан Петр Иванч Албутов пырса ларать. Шевле сӗннипе ӑна колхоз правленийӗ чирпе аптранӑ Трахвин мучи вырӑнне сад ӑсти туса хунӑ. Халиччен хӑйӗн пахчинче ҫеҫ пӗчӗк сад туса курнӑскер, Албутов нумай япалана ӑнланаймасть-ха, ҫавӑнпа май килнӗ чух пурин ҫинчен те Архип Лукичран ыйтса пӗлме тӑрӑшать. Улма-ҫырла ҫинчен ҫырнӑ литературӑ та ҫукрах иккен хӑйӗн, Шевле библиотекинчен кунсеренех кӗнекесем йӑтать.

Хутран-ситрен тавлашкаласа та илеҫҫӗ вӗсем. Шевле ҫӗнӗ сад ӑстипе пӗрле кӑҫал урамсене ҫимӗҫ паракан йывӑҫсем лартса хӑварасшӑн, Тамӑк ҫырми айккине йӑмрасем лартса тухасшӑн, Албутова ку питех кӑсӑклантармасть.

— Манӑн чӑрмавӗ садра та мӑй таранах пулать-ха, Архип Лукич,— тет вӑл.— Эс ан васка-ха, тархасшӑн. Кӑҫаллӑха садра чипер

ĕçлесен те тем пекчĕ. Тамăк çырми вăл таçта тарас çук.

— Тĕрĕс мар калаçатăн, тĕрĕс мар калаçатăн,— майĕпен хăтăрать Шевле.— Тамăк çырми çулсерен сарăлса, тарăнланса пырать. Тек кĕтме юрамасть, Петр Иванч. Халăхпа тухмалла та тĕмиçе пин йывăç лартса хăвармалла, тĕпне хăваран çатансем тытмалла. Унтан кĕркунне пĕве пĕвелемелле. Эпир иксĕмĕр пуçламасан, кам пуçласа ятăр ĕнтĕ çак ĕçе? Пĕлетĕп, йывăр пулать сана кăçал пĕррелĕхе, анчах эс хăвăн саду çинчен çеç ан шутла, пĕтĕм ял çинчен шутла. Эс пулăшмасан, шкул директорĕпе Никодим пулăшмасан, кам пулăштăр ĕнтĕ мана? Халь эс сад ăсти, колхоз председателĕ мар, ку ĕçрен пăрăнаймастăн. Тата çакна ан ман, Петр Иванч: çуркунне тытăнмасан, кĕркунне йывăр пулать пире. Кĕркунне пĕтĕм халăхпа пĕве пĕвелеме тухатпăр. Эп шкул директорĕпе калаçса татăлнă. Вăл ачасемпе çуркунне лартма пуçлатпăр тет. Эс, сад çынни пулса, вĕсене йывăççисене тупса пар. Куратăн, ман вăхăт çук, кукурузă пĕтĕм тинкене кăларать...

— Ну, тупса патăн та эс ман валли инкек!— пуçне хыçать Албутов.— Каççерен çывăрайми те пултăм ĕнтĕ. Тем тума килĕшрĕм пулать тата...

— Ырă вырăн тупса патăм сана, калама çук хăтлă вырăн. Ак кĕркунне сада пысăклататпăр, çав юнашарти тип çырма хĕррине йăлтах пан улми йывăççи лартатпăр. Тамăк çырмине çăварлăхлатпăр та унта чаплă кӳлĕ тăватпăр. Ватăлăх кунра çав кӳлĕ хĕрринче пулă тытса çеç ларатăн.

— Эс калăн-çке, сан фантази вăйлă пулакан, Архип Лукич! Анчах ĕмĕр кĕскерех мар-и пире ун пеккине тума? Нумаях юлмарĕ-çке пирĕн пурăнасси. Ватăлатпăр пулас...

— Çапах та пирĕн ĕмĕрте тумалли ĕç вăл, эпир иксĕмĕр тумалли япала. Эпĕ çак Тамăк çырмине çап-çутă кӳлĕ туса хумасăр вилесшĕн мар, нимпе те вилесшĕн мар.

Тĕлĕнмелле Шевле старикрен! Тамăк çырмипе аташни çитмест-ха, Албутовăн тата тем тĕрлĕ чечексем лартса ӳстермелле иккен. Вăл хулана кайсан, ăна чечек вăррисем ытларах илме хушать.

— Ĕнтĕ ман садра çав пули-пулми чечексемпе аппаланса ларас-и?—пĕççине шарт çапать сад ăсти.— Ăна мĕн ĕнтĕ, сутма лартса ӳстеретпĕр-и, Архип Лукич?

— Эккей, сутасшăн-и, ара, илемшĕн, илемшĕн ӳстермелле!—çине тăрать Шевле.— Этем тени илеме юратать. Çынсем ĕлĕк те чӳрече умне те, пахчана та çимĕç паракан йывăç çеç мар, чечек те лартнă. Мĕнле ăнланмастăр эсир çавна? Мĕнле вăл сире ялан укçа кăна кирлĕ? Этем хырăмшăн кăна пурăнмасть, Петр Иванч...

— Ара, паллă ĕнтĕ, кĕркунне Яштайкин манран укçа ыйтать. Пĕркунах каласа хучĕ, асту, Петр Иванч, сад пысăк тупăш панă пултăр, терĕ.

— Ĕçлесен, тупăшĕ те пулать, пурте пулать. Çапах та эс чечек те ӳстер. Тем тĕрлĕ чечек лартса тултар.— Шевле сĕтел сунтăхне уçать те унтан кивелсе кайнă шкатулкă туртса кăларать.— Ак эпĕ кăçал хам пахчара розăсемпе пионсем çеç мар, хир чечекĕсемпе вăрман чечекĕсем те ӳстересшĕн. Çаксене мĕн вăрлăхĕсем тетĕн? Вăрманти, уйри чечексен вăрлăхĕсем. Унта утмăл турат, пыршăль курăкĕ — ландыш, шăнкăрав курăкĕ, кăвакарчăн куçĕ — вырăсла незабудкă теççĕ, çеçпĕл, ыйхă курăкĕ, çил курăкĕ, салтак тӳми...

— Çавсене чăнах акас тетни вара, Архип Лукич?— тĕлĕнет Албутов.

— Акас тетĕп пулмасăр! Эх, Петр Иванч, Петр Иванч! Эпир санпа иксĕмĕр çав чечексемпе выляса ӳснĕ-çке. Вĕсем таçта кайсан та хамăр тăван кĕтесе аса илтереççĕ. Манма юрать-и вара вĕсене, тăванăм? Çеçке сарчăр, куçа сисе, савăнтарса ларччăр. Вĕсем маншăн георгинсенчен пĕрре те кая мар.

Албутов сăн-питрен пăртак чĕрĕлнĕ пек пулать, ĕнтĕ вăл Шевле старик çине темле урăх куççемпе, юратуллăн пăхать, анчах манăн та ӳстересчĕ вĕсене, тесе каламасть-ха. Шиклĕрех çав ун пек сăмах персе яма! Çапах та колхоз пахчинче те, унăн килти пахчинче те чечексем пулаççĕ, куна вăл лайăх пĕлет.

...Урамсем юртан тасалнăччĕ ĕнтĕ, ку таврари сăртсенчен юхса аннă çурхи шыв, Тамăк çырми тĕпĕпе кĕрлесе иртсе, Çавалпа Атăла çитнĕччĕ, пӳртсен умне, хӳмесен айккине тата лапсăркка йăмрасен айне чепчем курăкĕ тапса тухнăччĕ, çав савăк кунсенчен пĕринче ĕçрен кăштах пушаннă Шевле старик пахчара Никодим туса хатĕрленĕ йăрансене тĕрĕслекелесе çӳретчĕ. Халиччен вĕсем ку йăрансене иккĕн чакалатчĕç, иккĕн акса хăваратчĕç, кăçал мăнукĕн пĕччене тăрмашма лекрĕ. Вăхăчĕ унăн та хĕсĕкрех пулчĕ курăнать, çапах та вăл ĕçне тĕплĕ тунă — йăрансем тикĕс те çип çапнă пек тӳрĕ. Кишĕрпе хăяр шăтман-ха, суханĕ ав сăмсаланма та тытăннă. Сада кайăксем иленнĕ ĕнтĕ, пӳрт тăрринчи шăнкăрч йăви умĕнче те шăнкăрч, çунатне çапса, шăхăркаласа, савăнăçлă юррине ĕнерет. Этемшĕн пулсан, питех пуян мар ун кĕвви, хăйĕншĕн çав тери чаплăн туйăнать пулĕ çав.

Шевле старик йăрансем хушшинче çӳресе йăлăхрĕ те карта çумне пырса сĕвенчĕ, урамалла пăхрĕ. Инçетре те мар икĕ ача çамрăк

йăмра патне чикмек тăратнă та çурăлса анма пуçланă турата çыхма хăтланаççĕ. Архип Лукич чăтса тăраймарĕ, карта урлă кăштăртатса каçса, вĕсен çывăхне пырса тăчĕ. Сăмах чĕнчĕ.

— Мĕнле, çыхма пулать-и, ачасем?

— Пулать те, ытла йывăр-çке вăл, усăнса анать,— терĕ пĕр ачи.

— Тĕпĕнчен явса çыхсан, усăнмасть.

— Вăл хăрмасть-и, мучи?

— Хăрмасть, хăрмасть. Эсир унта нўрлĕ çĕр хурăр, çиелтен кипке таткипе чĕркĕр. Унсăрăн вăл типсе каять.

— Юрĕ, мучи.

Шевле вĕсене тек кансĕрлеме шутламарĕ, ăшра вĕсене ырласа илсе, урам тăрăх çырма еннелле утрĕ. Кунĕ телейлĕ пулчĕ пулмалла Архип Лукичăн — витĕрех мар куçĕсемпе Тамăк çырми леш еннелле тинкерсе пăхрĕ те вăл, ăна больницă çывăхĕнче хĕрарăмсем йывăç лартнă пек туйăнса кайрĕ. «Чим, çитсе курас,— терĕ старик.— Улталамаççĕ-и ман куççем? Мĕнле ырă çынсем тупăннă вара унта? Чăнахах йывăç лартаççĕ-и е кам та пулин çул юсама тухнă-ши?»

Аякран каçса çырма леш енне çаврăнса çитсен, Архип Лукич кĕреçепе ĕçлекенсем хушшинче Николай Иванович врач пуррине курчĕ те ун патне васкарĕ.

— Мана хăвăн эртелне илмесне, Николай Иванович, ытлашши кĕреçе çук-и сан унта?— терĕ вăл, ăна сывлăх сунса.

— Вăт çавăнпа аптратпăр çав, хамăра та кĕреçе çитмест,— тавăрчĕ врач.— Унсăрăн халăха тата ытларах илсе тухасшăнччĕ.

— Нумай лартасшăн-и вара йывăçне?

— Пилĕк çĕр тĕп илсе килтĕмĕр. Больницă умне икĕ рет лартасшăн, унтан çак çырма юппипе тытăçса пăхасшăн. Куратăр-и, тўрех больницă еннелле тапăнса килет, мур тĕпне кайса кĕресшĕ!

— Тĕрĕс шухăш тытнă, Николай Иванч. Халех чармалла ăна. Темиçе пуслă эсрел евĕр, юпленe-юпленe тапăнать Тамăк çырми пирĕн яла. Ик çул каялла кăна-ха çак юппи çукчĕ унăн, халь ав мĕн чухлĕ ишĕлсе кĕнĕ.

— Усал çырма ку сирĕн.

— Усал, усал. Çырминчен ытла халăхĕ усал. Вăл мĕнле алхаснине пурте курса тăраççĕ, пĕри те: атьăр пўлетпĕр ун çулне, атьăр чаратпăр эсреле, тесе каламасть.

— Çавăн пекех-ши вара?

— Çавăн пекех, Николай Иванч.

— Ман шутпа, кунта халăхĕ айăплă мар, Архип Лукич, пуçлăхсем айăплă. Пуçлăхсем курсан та курмăш пулаççĕ.

— Ку та тĕрĕс. Такам килсе пулăшасса кĕтеççĕ, хам та пĕлместĕп. Хĕрлĕ Çырти Тамăк çырмине пĕтересси пирки ятарласа постановлени тухать теççĕ-ши? Пĕркун Яштайкинне юри тенĕ пекех çыран хĕррине илсе килсе кăтартрăм. Чунĕ кăшт та пулин хускалтăр тенĕччĕ.

— Вăл мĕн терĕ?

— Мĕн тетĕр? Манăн унпа кĕрешме вăхăт çук, колхоза юсас тесен, манăн вăйлă тырпулшăн кĕрешмелле, терĕ.

— Ку ун ĕçĕ мар апла?

— Çапла пулса тухать.

— Вăт çав пĕтерет те пире. Яла илемлетессине, çак çĕрĕк вырăна чĕртессине такам ĕçĕ тесе шутлатпăр. Ял ўчĕ çинче темле хăрушă суран пек çăварне карса тăрать Тамăк çырми. Кун каçиччен пин хут чўрече патне пыратăн, пин хут ăна куратăн. Çитменнине, шăп больницă умĕнчен иртет тата вăл...

Николай Иванч каласа пĕтерейменрĕ, хапха патне урапапа чирлĕ çынна турттарса пынине асăрхаса, старикпе сывпуллашмасăрах унталла чупрĕ.

Кăшт аякка кайсан çеç:

— Юрĕ, тепĕр чухне калаçăпăр ун çинчен!— тесе кăшкăрчĕ.

«Калаçăпăр,— терĕ хăйĕн ăшĕнче Шевле, пĕтĕм чунтан савăнса.— Калаçăпăр çеç мар, пĕрле ĕçлĕпĕр санпа! Халĕ ĕнтĕ эпĕ пĕччен мар. Маншăн çутçанталăк ырлăхне ăнланакан тепĕр çын тупăнчĕ. Çамрăк-ха тата хăй. Ку пултармалла, ку, çине тăрсан, нумай ырă ĕç хускатса ямалла».

Тепĕр самантран ĕнтĕ Шевле йывăç лартакан сестрасен ушкăнĕнче пулчĕ. Унăн çак вăхăтра алсем хăпарса тухиччен, пилĕк ыратма пуçличчен ĕçлес килсе кайрĕ.

— Хĕрсем, калăр, сиртен кам ывăннă?— терĕ вăл.— Кама пулăшмалла? Кам кĕреçе парать мана?

— Çук, çук, никам та ывăнман, кĕреçе тыттармастпăр сана! Хамăр та черет тăрса чаватпăр ав!— çуйхаçрĕç хĕрсем.— Ытла ĕçлесех тесен, эс йывăçне лартаканни пул, Архип Лукич! Эпир мĕнле лартмаллине пĕлсех каймастпăр.

— Ну, эппин, лартаканни пулам,— килĕшрĕ вĕсемпе старик.— Анчах эсир хăвăртан чи хитрине мана пулăшма уйăрса парăр. Хăшĕ хитререх-ха сиртен?

Хĕрсем каллех кĕрлесе кайрĕç.

— Ху суйласа ил, Архип Лукич! Сан шутпа, хăшĕ чипертерех пек?

— Пирĕн пурте хитре, начаррисем çук!

— Хăвăн Никодиму валли çураçма та пултаратăн пирĕн хĕрсене!

Шевле сăнанă пек пулса йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ.

— Чӑнах та чипер иккен пирӗн ял хӗрӗсем,— терӗ вӑл.— Кур-ха, мӗнле маттуррисене пуҫтарнӑ Николай Иванч больницӑна!

— Пире Николай Иванч пуҫтарман, эпир кунта вӑл ӗҫлеме тытӑниччен килсе кӗнӗ,— терӗ пӗри.

— Ав мӗнле иккен. Апла каҫарӑр. Ҫапах хӑшӗ пулӑшать-ха мана? Эп йывӑҫне лартнӑ чухне шӑтӑка тӑпра тултараканни кам пулать?

— Эпӗ!— терӗ пӗр ҫамрӑк хӗрачи, кӑшт маларах тухса.— Анчах манӑн кӗреҫе ҫук...

Хӗрсем шавласа ун сӑмахне пӳлсе лартрӗҫ.

— Э-э, вӑл пирӗн сестра мар, Архип Лукич! Кунта ӑнсӑртран килсе тухнӑ!

— Чее вӑл, пиртен кӗреҫе туртса илесшӗн!

— Ҫук, эс урӑххине суйла, мучи!

Шевле хӑйпе ӗҫлеме килӗшнӗ яштака пӳллӗ, сап-сарӑ ҫӳҫлӗ хӗрачана пӗр-икӗ хутчен те куҫ хыврӗ, апла пулин те ӑна ҫийӗнчех палласа илеймерӗ-ха. Кам хӗрӗ пулчӗ ку? Ҫавӑнтах вӑл хӗлле Михала арӑмӗ Натюҫ патне Кӗтерук пирки каласма кайнине аса илчӗ. Натюҫ килӗнче курнӑччӗ-ҫке ӑна. Кӗтерук йӑмӑкӗ ку, Наташӑ. Старик вӑл больницӑра ӗҫлемест тенине илтрӗ-ха, ҫапах та хӗрача кӑмӑлне татма шутламарӗ.

— Атя, пулӑш, Наташӑ. Сан ятна тӗрӗс каларӑм-и?

— Тӗрӗс.

— Эппин, ӗҫлесе пӑхар иксӗмӗр. Мӗнле, намӑс курмӑпӑр-и?

— Ҫук, намӑс курмастпӑр, Архип Лукич, чиперех ӗҫлетпӗр.— Наташӑ хӑйпе юнашар тӑракан хӗрачаран вӑйпа тенӗ пекех кӗреҫе туртса илчӗ.— Больницӑ умӗ тесе, вӗсен ҫеҫ йывӑҫ лартмалла-и? Пире те кӑшт пай тивтӗр. Ҫапла-и, Архип Лукич?

— Тӗрӗс, тӗрӗс, Наташӑ. Ну, сӑмах вакланипе ҫитӗ, тытӑнар, эппин. Унсӑрӑн Николай Иванч мана ӗҫлекен ҫынсене кансӗрлесе ҫӳретӗн тесе вӑрҫма пултарать.

Наташӑ хӗрсем ҫине мӑнаҫлӑн пӑхса илсе вырӑнтан хускалчӗ те кӗреҫине хулпуҫҫи ҫине ҫӗклесе хучӗ, сарлака та илемлӗ утӑмсемпе сестрасем малтан алтнӑ шӑтӑксем еннелле утса кайрӗ. Ун хыҫҫӑн, кӑшт каярах юлса, Шевле старик йӑпӑртатса пычӗ.

3

Ял ҫине каҫ ӗнтрӗкӗ аннӑ. Тин сарӑлса ҫитнӗ йӑмра ҫулҫисем ӑшӑ ҫилпе хускали-хускалми вылянкаласа тӑраҫҫӗ. Хӗвел вӑрман хыҫне пытаннӑ пулин те, вӗсем ҫиелтен ҫу сӗрнӗ евӗр ҫуттӑн курӑнаҫҫӗ.

Шкул умӗнчи ҫерем ҫинче ҫамрӑксем волейболла выляҫҫӗ. Чылай аякран пӑхса тӑракан Никодима пӳске тӳнк! те тӳнк! туни ҫеҫ илтӗнет. Тата йышлӑ ҫынсем хушшинче ҫакна курать каччӑ: Элтюккапа Володьӑ, яланхи пекех, юнашар тӑрса выляҫҫӗ. Хӗрача пӳскене Володьӑ пуҫ тӑрринелле ывӑтса парать, лешӗ, ҫӳле сиксе, ӑна сеткӑ леш еннелле хыттӑн ҫапса антарать. Тӗрӗссипе каласан, Никодим куна курмасть, чунӗпе ҫеҫ сисет. Яланах ҫапла выляҫҫӗ-ҫке ара хӗрпе каччӑ! Кукурузӑ акса пӗтернӗренпе каҫсерен уйрӑлма та пӗлмеҫҫӗ вӗсем.

Халӗ агроном Элтюккана пӗр ырӑ ӗҫшӗн ҫеҫ тав тӑвать. Клуб пуҫлӑхӗ ӑна ҫуркунне лайӑх викторинӑ ирттерсе пачӗ. Халӑх нумай пуҫтарӑннӑччӗ вӑл каҫхине. Ҫынсем, ним турткалашмасӑр-тумасӑр, пӗрин хыҫҫӑн тепри сӗтел патне тухрӗҫ, хӑйсене лекнӗ билетсем тӑрӑх лайӑх ответсем пачӗҫ. Икӗ уйӑх консультаци ирттерни тата Элтюкка кашни вечертах викторинӑ пирки асӑрхаттарса тӑни пулӑшрӗ пулмалла ҫав.

Ыттишӗн мӗншӗн тав тӑвас унӑн хӗрачана? Кӑмӑлне хытарчӗ вӑл Никодим тӗлӗшӗнчен, чунне урӑх каччӑна уҫса пачӗ. Юрату вӑл ҫул хӗрринче ӳсекен чечек мар, ӑна утса пынӑ чух пӗшкӗнсе татса илеймӗн. Ҫӳреччӗрех, тет Никодим, манӑн халь савнипе йӑпанма вӑхӑтӑм та ҫук. Ҫав тери йывӑр ҫул пулать кӑҫал уншӑн, ав мӗн чухлӗ ҫӗнӗ ӗҫ пуҫларӗҫ вӗсем колхозра! Механизациленӗ звено турӗҫ, ял ҫумӗнчи усӑсӑр выртакан ҫарана сухаласа пӑрахрӗҫ, Тамӑк сырмине чарас тесе, ялӗпе эрне ытла ӗҫлерӗҫ. Йывӑҫ кӑна мӗн чухлӗ лартса хӑвармарӗҫ пулӗ! Чӑнах, тӑрӑшасса ун аслашшӗ, Шевле старик, ытларах тӑрӑшрӗ ҫаксемшӗн, анчах Никодимпа ытти ҫамрӑксем сахал вӑй хучӗҫ-и вара? Яштайкинпа Мархва сахал тӑрӑшрӗҫ-и?

Яштайкин тенӗрен, Никодим унпа виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ этемле каласма пултараймасть. Аслашшӗ те ӑна сасартӑк юратми пулчӗ. Пӗркунах илтнӗччӗ агроном, питӗ ӳпкелешсе каласрӗ старик председатель пирки.

Хальхинче чӑнах та тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерчӗ вара Аристарх Петрович. Темиҫе кун каялла кӑна-ха вӑл пӗр хаҫатра «Малалла» колхоз ҫинчен пысӑках мар корреспонденци пичетлесе кӑларчӗ. Унта Яштайкин пирӗн колхоз кӑҫал гектартан 18 центнер ыраш, 20 центнер тулӑ илессишӗн кӗрешет, эпир гектар пуҫне 100 тоннӑ силослӑх кукурузӑ туса илме ӗмӗтленетпӗр, тесе ҫырнӑ. Аслашшӗ вӑл хаҫата киле илсе таврӑнчӗ те: «Ме, вуласа савӑн»,— тесе, мӑнукне ывӑтса пачӗ. Хушса хучӗ тата: «Сан Яштайкину обязательствӑсемпе мухтанса чапа тухасшӑн»,— терӗ.

Сан Яштайкину тенинченех туйрӗ Нико-

дим, килĕшмен ăна председателĕн хаçатра пичетленсе тухнă заметки. Агроном кăмăлне те каймарĕ вăл: председатель колхоз обязательствисене йăлтах ўстерсе çырнă.

— Ку мĕне пĕлтерет, Аристарх Петрович? Эпир кăçал ун чухлĕ тыр-пул туса илме пулманччĕ-çке?— терĕ Никодим тепĕр кунне Яштайкина.

— Обязательствăсем пурнăç шунă май улшăнма та пултараççĕ,— сиввĕн тавăрчĕ Яштайкин.— Хĕлле пуху ирттернĕ чух пурне те шута илмен эпир. Çавăнпа эпĕ юри кăшт ўстерсе çыртăм. Лукьяненкăна та çаплах ларăм райкомра.

— Ман шутпа, хĕлле пурне те шута илтĕмĕр пек. Питĕ тĕплĕ сўтсе яврăмăр пухура...

— Ну, эп ўстертĕм. Мĕн каласшăн эсĕ мана? Эп председатель-и, председатель мар-и?

— Председатель пирĕн обязательствăсене халăхпа каласса татăлмасăр улăштарма пултараймасть!— яланхи пекех тўррĕн каларĕ ку таранччен вĕсен калаçăвне хутшăнмасăр тăнă Мархва.

— Тен, апла манăн колхоз ячĕпе калаçма, хаçата статьясем çырма та правă çуккă пулĕ?

— Çыр, анчах тĕрĕссине çыр. Суя цифрă никама та кирлĕ мар. Пирĕн ĕçе кĕркунне пурĕ пĕрех мĕнле обязательствă илни тăрăх хакламаççĕ, мĕнле тыр-пул çитĕнтернĕ тăрăх хаклаççĕ.

— Ах тур йывăр сирĕнпе ĕçлеме! Тепĕр ик çул ĕçлесен, эсир мана çисех яратăр, ман çамрăк арăм валли нимĕн те хăвармастăр!— шўт тăвасшăн пулчĕ председатель.— Хам кин тесен, кин те ялан тапăнать-çке, тупата!

— Ху кўрентеретĕн те, ирĕксĕрех тапăнăн!— терĕ Мархва.

— Мĕнпе кўрентертĕм-ха сана?

— Пирĕн ятпа хаçата суйса çыртăн. Ăна урăхла мĕн теççĕ?

— Çанталăк чипер тăрсан, илетпĕр çавăн чухлĕ тырă! Курăр акă. Ун чухне мухтăр та-ха: председатель малтанах пĕлсе тăнă, тейĕр. Тавлашар-и, Марфа Осиповна, тыр-пул тухăçлăхĕ пирки?

— Атя, тавлашар.

— Эп калап, ман цифрăсем тĕрĕс, тетĕп. Çавăн чухлĕ тыр-пул туса илетпĕр кăçал.

— Эп калап, тĕрĕс мар, тетĕп! Ун чухлĕ тырă тухмасть пирĕн.

— Кўр аллуна.

— Ме, ара.

— Никодим Федорович, эс арбитр пулатăн. Уйăр пирĕн алăсене.

Агроном вырăнтан та хускалмарĕ, «пăрахăр пĕчĕк ачасем пек хăтланма, ку вăл пĕрре те шăл йĕрмелли япала мар» тесе, чўрече патне пăрăнса кайрĕ.

— Ав агроном та эп тўрре тухасран хăрать!— кулса илчĕ председатель.

Çавăн хыççăн Никодим Яштайкина курсан та курмăш пулать, ĕç пур çинчех ун пўлĕмне кĕмесĕр тăрать. Паян та, председатель хăйне чĕнтерсен, йĕркеллĕ пуплемерĕ унпа, ячĕшĕн пĕр-ик сăмах тавăрса каларĕ те пўлĕмрен часрах тухса кайма васкарĕ.

Шкул умĕнче çав-çавах волейболла выляççĕ. Çитсе курмалла-и унта? Çук, чун туртмасть. Каяс мар, тет Никодим. Кайсан та Элтюккапа тĕл пулса чуна тепĕр хут ыраттарни çеç.

Каччă майĕпен килнелле çул тытать. Анчах каçĕ ытла лайăх, киле нимпе те кĕрес килмест. Пахчасен çумĕпе иртсе пынă май сăмсана çĕмĕрт шăрши хăватлăн киле-киле çапать, çамрăк йăмрасем хушшинче хăвна такам кĕтсе тăнăн туйăнать. Кĕтсе тăраканах çук пуль Никодимăн, анчах хыçалтан такам хăваласа килет ав. Арçын пулас, урисене хыттăн пусать. Çук, арçын мар, тĕттĕмре хĕрарăм тутăрĕ вĕлтлетет.

— Те Никодим Федорович пулчĕ ку?— тет паллакан сасă.

— Çавă-ха. Эс ăçта кайма тухнă, Марфа Осиповна?

— Наряд парса таврăнатăп. Сан аслаçу вĕçĕмсĕр аммиак селитри ыйтать. Ыран ирех машинă ярас терĕмĕр.

— Кирлĕччĕ çав ун пек им-çам,— тет каччă. Вăл, хĕрарăм бригадир çулне пўлесшĕн пулнă пек, ун умне чарăнса тăрать.— Анчах эсĕ таçта урăх çĕрелле утатăн-ха, тăванăм, килнелле çул тытмастăн. Аташса каймарăн-и, бригадир?

— Аташман-çке,— ăшшăн тавăрать Мархва.— Мантăн-и вара, ман çурт ку урамра-çке, шăп ял вĕçĕнче?

— Чăнах та, эп ăна маннă! Пурăнма та куçрăн-и ĕнтĕ?

— Куçрăм çав.

— Кур-ха, мĕнле хăвăрт ĕçлетĕн эсĕ!

Мархва тĕттĕмре çемçен, хĕрарăмла пăртак кăкăрпа кулса çеç илет.

— Çук-ха, куçман,— тет вăл.— Уçăлмалла кайса курас терĕм, çавăнпа утатăп мар-и...

— Çитсе кил, çитсе кил,— тет Никодим, ун çулне пўлме пăрахса.

— Эс мана ăсатас теместĕн-и?

— Тем тумалла çав, хам та пĕлместĕп...

Мархва, ашкăннă пек пулса, ăна хул хушшинчен çатăртаттарса тытать.

— Атя, атя. Унсăрăн эпĕ киле çитеймесрен хăратăп. Çĕмĕрт шăршипе йăлтах ўсĕрĕлтĕм те, пуç çаврăнакан пулчĕ. Çакăнтах йăванса

кайма хатĕр. Тыт ĕнтĕ, каччă, ăсат тăлăх арăма!

Вĕсем, алла-аллăн тытăнса, хутран-ситрен каялла е айккинелле сыхланулăн пăхкаласа илсе, ял вĕçнелле утаççĕ. Пўрт умĕнче, шапшур турпас купаланса выртакан çĕрте, чарăнса тăраççĕ.

— Эп сиссе те юлаймарăм, хăш вăхăтра хăпартрăн эсĕ ку пурана, Марфа Осиповна?

— Ниме турăм-çке. Ху килмерĕн те нимене.

— Çук, эс мана чĕнмен.

— Чĕннĕ! Асласунтан ыйт.

— Тупата туршăн, суятăн!

— Эс ун чух хулана кайнăччĕ. Икĕ кун таçта сухалса çўрерĕн. Мантăн-и çавна?

— Çавăн чухне ирттернĕ-и вара эсĕ?

— Шăп çавăн чухне.

— Тăррине кам тăрласа пачĕ тата?

— Часрах пултăр тесе, «шабашниксене» ĕçлеттертĕм. Анчах пит нумай тăкак турăм вĕсемпе. Çыхланмалла марччĕ çĕр çăтмансемпе, кăштах тăхтамаллаччĕ. Ну, кĕрсе куратпăр-и?

— Кăтарт, эппин, хăвăн керменне.

Хăма татăкĕсемпе пĕрене сыпăкĕсем урлă каçкаласа, Никодимпа Мархва алăк умне пырса тухаççĕ.

— Анчах хăпарма картлашкасем çук вăра,— тет кил хуçи именчĕклĕ сасăпа.— Мĕнле хăпаратпăр ĕнтĕ, каччă?

— Качакасем пек, кăптăр-каптăр хăпарса каятпăр. Халех...

Вăл Мархвана икĕ аллипе хăвăрттăн çĕклесе илет те «Хăлăпран ярса тыт!»— тесе кăшкăрать. Мархва алăка уçать, пўрте кĕрсе тăрса, каччăна çўлелле сĕтĕрсе хăпартать.

Тĕттĕмре урай хăмисем чĕриклетни илтĕнет.

— Ай, сухăр шăрши кĕрет-çке!— нăш-нăш! шăршлать Никодим.

— Лампă çутас мар-и?—кулать Мархва.

— Кирлĕ мар, унсăрăнах лайăх!— тет каччă, тĕттĕмре ăна хăйĕн ытамне илсе.

— Çутасчĕ те-ха, лампи çук. Нимĕн те илсе килмен-ха эп леш килтен.

— Çывăркалатни кунта?

— Икĕ каç çывăрса куртăм ĕнтĕ.

— Мана мĕншĕн чĕнмерĕн?

— Ак кĕçĕр чĕнтĕм.

— Чăнласах-и?

— Чăнласах, ара. Ну, пилĕк минутлăха, эппин...

— Эп ирччен каймасан?

— Хăвалатăп.

— Хăваласан та каймасан?

— Каятăн. Эс йĕркеллĕ çын. Ун пек сĕмсĕр арçын мар.— Мархва ун патне тенкел вырăнне каска пуканĕ илсе пырать.— Ак лар. Майĕпентерех калаç, çынсем илтсен, тем калĕç тата...

— Хăратăн çапах та?

— Хăратăп, тăванăм.— Мархва хăюсăррăн Никодим хыçне пырса тăрать. Каччă картусне хывса илсе хăйĕн пуçне тăхăнать, ик аллипе те ун çўçне ачашшăн тăрмалама тапратать.— Тĕп сак айĕнче шăши пур, шăшин хăлхи пур...

— Шăшийĕ ереймен пулĕ-ха.

— Тен, ернĕ те. Эп илтрĕм ĕнтĕ, Хĕлимун кўршĕ Матĕрнене каласа хунă, тет, эс унта пирĕн Мархвана сыхлакала, тенĕ тет.

— Эх, усал!— хыттăнах калать Никодим, ура çине сиксе тăрса.— Кунта та хăй хуçа пуласшăн апла?

Мархва, чарăн эсĕ тенĕ пек, ал лаппипе ун çăварне хупласшăн пулать. Никодим ун пек тума памасть, йăрăс пўллĕ хĕрарăм бригадира, пасăрхи пек пилĕкрен аяларах тытса, йăтса илет те ăна аларан вĕçертмесĕр пўрт тавра çўреме пуçлать. Мархва кăштах тапаçланма хăтланать, ăна çўçрен лăскать, çав вăхăтрах хăй вара каччăна питĕнчен вĕçĕмсĕр чуптăвать.

Юлашкинчен вĕсем çĕнĕ пўртĕн пĕр кĕтессине пырса çапăнаççĕ. Никодим вĕриленсе кайнă Мархвана майĕпен урайне хурать, хăй, ун çумне вырнаçса ларса, кил хуçин тутăрсăр юлнă пуçне чĕркуççи çинелле туртса илет.

— Çук, Никодим, ун пек мар,— тет Мархва.— Кăшт тăхта. Ман унта тепĕр кĕтесре минтерпе кив кĕрĕк пур. Халех илсе килетĕп...

Ирхине вĕсем вăраннă вăхăтра хĕвелтухăçĕнче шурăмпуç шевли чылаях вăйлăн палăрма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Юнашарти килсенче автансем шарлатса авăтатчĕç. Никодим пахча хыçĕпе киле чупса тавранчĕ те майĕпен çеç хыçалти кĕçĕн алăка шаккарĕ. Амăшĕ ку хушăра ĕне сунă пулас, çийĕнчех чупса пырса уçса та кĕртрĕ.

— Ай, нумай çўрен, ывăлăм!— терĕ вăл, аван мар ун пек тенĕ евĕр, пуçне сулкаласа.— Çывăрмасăр мĕнле ĕçе каятăн ĕнтĕ? Ай, нумай çўретĕн.

— Ытларах çўрерĕм çав кĕçĕр,— терĕ Никодим, амăшĕ çине пăхма хăяймасăр.

ТĂХХĂРМĔШ СЫПĂК

I

Тем пек хўтлĕх шырасан та, Шевле чĕреслетсе çăвакан çумăртан çăлăнма пултараймарĕ. Лаштра юман пăхма лапсăркка пек, анчах çумăр ун çулçисем хушшипе те вăйлă анать,

урана çĕре пусма çук — йĕри-тавра шыв кӳ-ленсе тăрать.

Старик мĕн пур вăйне пухса çывăхри тип çырмана чупрĕ, унти çĕр ишĕлнĕрен пулнă пĕр шăтăка кĕрсе ларчĕ. Анчах кунта та ларма май çук — çӳлтен ун çине тăмлă шыв хĕп-хĕрлĕн юхса тăрать.

Аслатиллĕ çумăр мĕнле хăвăрт килсе тухнă, çавăн пекех хăвăрт иртсе кайрĕ. Шевле, лачкам шыв пулнăскер, шăтăкран тухса çырма хĕрринелле тапаçланса хăпарчĕ. Тип варта, айĕн-çийĕн çаврăнса, юшкăн юхать, шыв мар — юшкăн. Тĕсрен темлерех вăл, те хĕрлĕ, те хура, тӳрех татса калама та йывăр. Йăрансем те пурте шывпа тулнă, ку шыв, çуркуннехи пек, анаталла — çырманалла капланса анать.

Пăртак тăрсан Шевле патне пысăках мар çăка айĕнче пулнă Варукпа Сухви пырса çитрĕç.

— Мĕнле, эсир тип-типех пуль, йăмăк-сем?— терĕ Шевле, вĕсене хăй мĕн таран йĕпеннине кăтартма тăрăшса.

— Тем тесен те, пирĕн кĕпесем тăрăх тăмлă шыв юхмасть ĕнтĕ!— терĕ Сухви.— Ахалех пымарăн эс çăка айне. Ав, кив сăхман та çăлчĕ пире пăртак.

— Тепринче плащ пекки илсе килĕр, кун пек юрамасть,— вĕрентсе каларĕ Архип Лукич.— Кун пек шăнса пăсăлма та пулать... Халь мĕн тăватпăр ĕнтĕ,— ĕçлетпĕр-и е кайса типĕнетпĕр-и?

— Ĕçлетпĕр, ĕçлетпĕр! Киле кайса вăхăта сая ярса çӳреместпĕр!— харăссăн тавăрчĕç хĕрарăмсем.

— Вут хурса та типĕнместпĕр-и?

— Ан тĕлĕнтер, Архип Лукич! Халь мĕн, кĕркунне-и? Ĕçленĕ хушăра наччас типĕнетпĕр.

— Шăнтăн пулсан, эс ху вут хурса ăшăн, Архип Лукич!

Шевле вĕсене хăйĕн йĕпе кĕсйисене çат! çат! çапса кăтартрĕ.

— Туртмастăп-çке эпĕ. Шăрпăк та чиксе тухман. Сирĕн пулсан кăна...

— Ав кам çине шанса килнĕ эсĕ!— тăрăх-ласшăн пулчĕ Варук.— Мĕнле бригадир эсĕ, табак та туртмастăн пулсассăн? Вĕренес пулать, Архип Лукич.

— Вĕренме кая юлтăм пек туйăнать.

Пылчăк çăрса кукурузă йăранĕсем хушшине кĕнĕ май хĕрарăмсем Шевле пурнăçĕнче тахçан ĕлĕк пулса иртнĕ пăтăрмахла ĕçе аса илчĕç.

— Астăватни, Архип Лукич,— терĕ Сухви,— эс пĕрре çакăн пек вăйлă çумăр вăхăтĕнче пусна Кунтăк тăхăнса лартнăччĕ?

— Астăватăп-çке,— турткаланса тăмасăрах йышăнчĕ Шевле.— Пулнăччĕ ун пек мыскара. Эс курнă-и вара ăна, Сухви?

— Курнă çав. Эп ун чух Петĕре тин çеç каччă килнĕччĕ. Упăшкана апат çитерме хире тухрăм та, çумăр чашлаттарма пуçларĕ. Эпир Петĕрпе хуплă урапа айĕнче ларатпăр, апат çиетпĕр. Петĕр мана кăт-кăт! тĕкет, курха, Лукка Эрхипĕ мĕн хăтланать, тет. Эп пăхрăм та ахăлтатса кулса ятăм — эсĕ лаша хырăмĕ айне пĕшкĕннĕ те пусна Кунтăк тăхăнса лара паратăн. Упăшка калать: эс хуллентерех, тет, илтсен тем шутлама пултарать, тет.

— «Тем шутлама пултарать!» Çавăнпа ят кăлартăр-и ялта? Пурте Кунтăк Эрхипĕ теме пуçларĕç. Халĕ те Лукошкин хушаматпа çӳретĕп! Пĕлмен, апла эсир айăплă пулнă иккен-ха уншăн!

— Çук, сăмахне ăна урăххисем кăларнă. Ака вăхăчĕ-çке, хирте халăх пит нумайччĕ ун чухне. Ман Петĕр те, эпĕ те никама та шарламан.

— Шарламан, тет. Килĕрен киле çӳрерĕн пулĕ-ха, сахалтан та вунă çынна шахвăртса кăтартрăн пуль.!

— Ун пекех мар та ĕнтĕ. Килте сĕтел хушшинче асăнса кулса илтĕмĕр çав.

— Ну, апла пулсан, тавăрап-ха сана уншăн. Ак тăпра типсе çитичченех кукурузă тăваткăлĕсене тӳрлеттереп.

Типĕ çĕр çумăр шывне хăвăрттăн çăтать, çапах та йăран хушшипе çӳреме кансĕр. Урана çемçе тăпра çыпçăнать, ăна виç-тăват утăм каймассерен силлесе е хырса тăкма тивет.

— Паян ĕçлесси пулмасть, ман савнисем,— татса каларĕ юлашкинчен звено пуçлăхĕ.— Ахалех илсе килтĕм сире. Кун пек эпир йăрансене çĕмĕрсе çеç çӳретпĕр.

— Çавăн пек туйăнать çав,— терĕ Варук инке те.—Кайса типĕнер пĕреххутчен. Ун вырăнне ыран пикенерех ĕçлĕпĕр. Çапла-и, Сухви?

— Кахалсем яланах çапла тăваççĕ,— кулчĕ Сухви.—Паянхи ĕçе ырана, ыранхи ĕçе тепĕр куна хăвараççĕ. Юрĕ, эсир те çапла тăвăр.

— Эсĕ юлатни вара, Сухви?

— Юлатăп çав. Эсир курăнми пулсан, сирĕн йĕрпе часрах яла чупатăп.

— Ĕçченсем çапла тăваççĕ çав,— кулăпах тавăрчĕ ăна Варук.—Наянсем курăнми пулсанах, вĕсен йĕрĕпе килелле йăртлатаççĕ.

Никодим çумăр хыççăн хиртен пĕр-пĕччен таврăнчĕ. Çумăр вăхăтне вăл ял çумĕнчи вăрманта чăрăшсен айĕнче кĕтсе ирттерчĕ. Тăваллă та шултра çумăра курса, савăнса тăмарĕ вăл унта, айлăмри вырăнсенче каллех нимĕн те хăвармасть ĕнтĕ тесе, чунтан сехĕрленсе тăчĕ. Кăшт уяртнă пек пулнине курсан,

тӳрех ял тепӗр енне, Киремет варӗ текен тип ҫырма айлӑмне чупрӗ. Ҫуллахи илемлӗ туфлийӗ йӑлтах вараланса пӗтнине, паян ирхине ҫеҫ якатса тӑхӑннӑ шӑлаварӗ тӑп-тӑр пылчӑк пулнине, киле таврӑнсан амӑшӗ ҫаксемшӗн ӑна хытӑ вӑрҫассине пачах пӑхмарӗ вӑл. Туфлипе шӑлавара хӗрхенсе пымалли вӑхӑт-и халь! Лере унта лартнӑ пек пахча ҫимӗҫне те, ҫӗр улмине те юхтарса кайма пултарнӑ. Маннӑ-и вара Никодим, вӑл айлӑмра ҫӗр улмине пӗлтӗр те иккӗмӗш хут лартнӑччӗ!,

Вӑл шутлани тӳрре килчӗ—Киремет варӗ хӗрринче тӗрӗс йӑран сахал юлнӑ. Ҫук, йӑран хушшисене кӑна ҫурса тухман шыв (ун пек ҫеҫ пулнӑ пулсан, инкекне тӳсме пулатчӗ-ха ӑна!), тин лартнӑ ҫӗр улмине те ҫиеле кӑларнӑ, ӑна витсе тӑракан тулӑх тӑпрана юхтарса кайнӑ. Йӑрансем, вӗсене тәкам ҫуласа тухнӑ евӗр, ҫинҫелсе, мӗскӗнленсе юлнӑ.

«Эх, Мархва!— терӗ вара Никодим, ҫырма хӗрринчен ҫӳлелле, ял вӗҫӗнчи ҫӗнӗ пӳрт еннелле кармашса пӑхса.—Ирхине кунта килсе тухсан, хытӑ ылханатӑн ӗнтӗ эсӗ паянхи аслатиллӗ ҫумӑра! Ылхан, ылхан. Вӑл пире усӑ кӳнинчен ытларах сиен кӳрет.Яланах ҫавӑн пек-ҫке вӑйлӑ ҫумӑр вӑхӑтӗнче: эрни-эрнипе кӗтетӗн ӑна, ку ҫумӑр типнӗ тӑпрана нӳр парасса, шывсӑр антӑхнӑ мӗн пур калчана, мӗн пур ӳсен-тӑрана чипер кӑна шӑварасса ӗмӗтленетӗн, вӑл сана, ак, эппин, туян тенӗ пек, юри мӑшкӑл туса хӑварать, пӗтӗмпе ишет, аркатать. Каллех тепӗр хут лартма тивет, Мархва, хӑвӑн ҫӗр улмине».

Ун шучӗпе, бригадирӑн ҫак участока ҫумӑр хыҫҫӑн хӑйӗн те ҫийӗнчех анса курмаллаччӗ ӗнтӗ. Кӗтрӗ те вӑл ӑна кунта, анчах Мархван вӑхӑт тупӑнмарӗ пулмалла. Е вӑл ыран ирех анса пӑхап терӗ-ши?

Киле ҫитсен Никодим хӑйӗн хуйхине аслашшӗне каласа пачӗ. Аслашшӗ вара ӑна хӗрхенес вырӑнне вӑрҫса ҫеҫ тӑкрӗ.

— Ҫав кирлӗ-ха сире, тӑрлавсӑр этемсене!— терӗ вӑл.—Мӗн чул каларӑм, Киремет айлӑмӗнче ҫӗр улмине ҫырмана тӑрӑх сухаласа лартӑр, терӗм. Итлемерӗр мана. Ак халь сире аслатиллӗ ҫумӑр тӑн парса та илчӗ. Пӗлтӗрхи пек, тепӗр хут лартатӑр пулӗ? Е ҫу каҫиччен ахаль выртать-и ӗнтӗ ҫырма хӗрри?

— Лартма тивет, асатте. Урӑх мӗн акӑн унта халь?

— Мӗнле, каллех урлӑ сухалаттарас тетӗн-и-ха?

— Ҫук, асатте, хальхинче хам йӑнӑша тӳрлететӗп. Тӑрӑх сухалатпӑр. Эс хушнӑ пек лартса пӑхатпӑр ҫӗр улмине.

— Ҫӗр улмине ҫеҫ мар, сӗвек вырӑнта мӗн пур ҫимӗҫе ҫапла лартмалла. Миҫе хутчен калана сире?— вӗрентрӗ Шевле старик.— Пӗрремӗш хут юхтарса каять-и унта тырпулпа пахча ҫимӗҫне? Кашни ҫул тенӗ пекех ҫавнашкал. Темскерех мар-ҫке, темиҫе гектара ҫӗнӗрен те лартма пулать, теҫҫӗ те, ялан тӑрӑхла сухаласҫӗ, ялан тӑрӑхла сухаласҫӗ.

— Юрӗ, ан вӑрҫ, асатте,— терӗ Никодим.— Ӑнлантӑм. Халех кайса калатӑп Мархвана, эс калана пек ларттӑр.—Ҫавӑнтах хӑй кукурузӑ уйӗ пирки те пӗлесшӗн пулчӗ.—Сан участокна нимӗн чухлӗ те сиен кӳмен-и, асатте?

— Шӗкӗр турра, хальхинче вӑл мана хӗрхенчӗ!— хуравларӗ Шевле.—Анчах эпӗ те хӑратӑп-ха: ҫине-ҫине ҫапла ҫумӑр ҫусан, тӑпра пирчесе кайма пултарать. Вара пирӗн темиҫе хутчен культиваци тумалла пулать.

— Тӑваткӑлсене пӑсса хӑварман апла?

— Ҫук, вӗсене тивмен.

Никодим тумтирне улӑштарса тӑхӑнчӗ те крыльца ҫине тухрӗ, нумайччен ӑҫталла ҫул тытас-ши ӗнтӗ тесе шухӑша кайса тӑчӗ. Мархва патне ҫитсе килмеллине пӗлет-ха вӑл. Анчах унта каҫарах юлса кайсан, майлӑ пулмалла пек. Тен, каллех ҫӗнӗ пӳртре ҫӗр каҫать-ха хӗрарӑм бригадир. Тӗп килне тем тесен те пырса кӗмест Никодим. Хӗлимунпа ун арӑмӗнчен аван мар. Тата ик ача пур-ҫке Мархван. Ҫавӑн ҫинчен мӗнле манса кайнӑ-ха ӗнер каҫхине каччӑ? Мӗн патне илсе ҫитерет ӑна ҫакнашкал каҫхи юрату? Тата хӑй те пӗлмест Никодим, чӑн-чӑн юратӑвах-ши ку?

«Мана пурнӑҫ пачах тепӗр ҫырана пырса ҫапрӗ пулмалла,— шутларӗ агроном.—Унӑн упӑшки пур, вӑл паян-ыран яла килсе тухма пултарать. Хӑй пӗччен ҫурт лартрӗ пулин те, Мархва ӑна ҫур ҫӗр тӗлӗнче килсе ҫитсен, ҫур ҫӗр тӗлӗнче йышӑнать. Вӑл — ун ачисен тӑван ашшӗ. Вӑл арҫынна Мархва ӗмӗр пӗрле пурӑнатӑп тесе сӑмах панӑ. Чӑнах, пурнӑҫ мана пачах тепӗр ҫырана пырса ҫапрӗ пулмалла. Нумайлӑха-ши ӗнтӗ ку е виҫ кунлӑха кӑна-ши?»

Правлени ҫурчӗ еннелле утнӑ май вӑл хӑйне кӗҫӗр Мархва куҫӗ умне курӑнмастӑпах тесе ӗнентерме тӑрӑшрӗ. Чӗлхи вӗҫӗнче те ҫав сӑмахах пулчӗ унӑн, Никодим, пӗчӗк ача пек: «Каймастӑп, каймастӑп, каймастӑп»,— тесе мӑкӑртатрӗ. Анчах хӑй лайӑх пӗлсе тӑчӗ ӗнтӗ: ҫитетех вӑл кӗҫӗр, ҫур ҫӗр тӗлӗнче те пулин, ҫутӑлас умӗн те пулин ҫитет ҫав илӗртӳллӗ хӗрарӑм бригадир патне. Ӗҫ пуррипе мар, урӑх сӑлтава пула ҫитет. Чун-чӗре туртӑмӗ илсе каять ӑна ял вӗҫӗнчи туса пӗтермен ҫӗнӗ пӳрте.

2

Элтюкка халиччен пӗр ҫынна ҫеҫ кӗтме пӗлместчӗ. Кулатчӗ вӑл ялан пӗр каччӑ ҫинчен ҫеҫ пакӑлтатакан, пӗр каччӑшӑн ҫеҫ типсе, куйхӑрса пурӑнакан, вечерсенче пӗр каччӑпа ҫеҫ ташлакан хӗрачасенчен.

— Эпӗ акӑ ун пек мар,— тетчӗ вӑл.—Эп такампа та ташлама пултаратӑп. Маншӑн пурте пӗрех. Кӗвӗҫӳ туйӑмӗ те нимӗн чухлӗ те ҫуккӑ манӑн. Хам каччӑна урӑх хӗрсемпе ҫӳреме нихҫан та чарас ҫук эпӗ.

Кӗтерук унран тӑрӑхлама ҫеҫ пӑхатчӗ.

— Сан уру ҫине ӗне пусман-ха, эс чӑннипе юратса курман,— тетчӗ.—Кайран нумай кусҫуль тӑкӑн-ха акӑ, хӑвӑн ухмах упӑшкуна нумай йӗрлесе ҫӳрӗн. Ман пекех ялан пӗр ҫын ҫинчен сӳпӗлтетекен пулӑн...

— Ҫук, нихҫан та ун пек айван этем пулмастӑп. Эп сирӗн пек чӳпӗк мар. Савни тесе, сирӗн пек ун умӗнче ирӗлсе каймастӑп. Тен, качча та тухмастӑп-ха виличчен!— паттӑррӑн тавӑратчӗ Элтюкка.

Ун пек чухне Кӗтерук йӗкӗлтесе ялан пӗр юрӑ юрлатчӗ:

Мухтанать ман тантӑш, мухтанать,
Ӗмӗрте каччӑ тупмастӑп, тет.
Кӑшт тӑхтар-ха, ҫиттӗр ҫуркунне,
Тӗл пулать вӑл хӑйӗн савнине.

Мухтанать ман тантӑш, мухтанать,
Ӗмӗрте качча тухмастӑп, тет.
Кӑшт тӑхтар-ха, ҫиттӗр ҫуркунне,
Туйӗнче ташлатпӑр ун чухне.

Ак ӗнтӗ Элтюккашӑн ҫуркунне ҫитрӗ пулмалла. Ҫурхи хӗвел пекех ҫиҫет халь хӗрача Володьӑна курсассӑн. Курман чухне тунсӑхлать уншӑн, кӗтет ӑна. Ялан савниййӗ ҫинчен шутланӑран-тӑр, питрен те самай туртӑнчӗ клуб пуҫлӑхӗ, пысӑк кӑвак куҫӗсем ҫын ҫине йӗкӗлтесе те кулса мар, тӗмсӗлсе, тарӑннӑн пӑхакан пулчӗҫ. Клубра е урамра хӗрача пӗрмай пӗр этеме шырать — Володьӑна. Хӑех сисрӗ пулмалла Элтюкка: ялан пӗр ҫын ҫинчен шутласси, ялан пӗр ҫынна кӗтесси телей иккен вӑл.

Володьӑ ӗҫрен кашни кун тенӗ пекех кая юлса пушанать. Ӗҫ хыҫҫӑн каллех тӳрех урама тухма ҫук, апат ҫиме киле — Вӑрманкаса хӑпарса анмалла.

Паян Володьӑ пачах килмерӗ. Те ҫӗр хута ӗҫлеттерет ӗнтӗ ӑна Шевле старик, те трактористӑн килӗнче инкек пулнӑ. Ыран тӗл пулма пултараймаҫҫӗ вӗсем — ирхине ирех клуб пуҫлӑхӗ Мархва бригадипе пӗрле Ҫавал тӑрӑхне утӑ ҫулма тухса каять.

Бригадӑ тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман гараж патне пуҫтарӑнчӗ. Шоферсем хӑйсен машинисене ҫерем ҫине кӑларса тӑратнӑ. Хӗрсем машинӑ ҫине ҫавасем, кӗреплесем, апат пӗҫермелли хурансемпе каструльсем тиеҫҫӗ, утта лашапа сӗтӗрттерсе турттарма вӗрен нумай хураҫҫӗ. Элтюкка пӗр ҫыхӑ кӗнеке илнӗ, ӑна вырнаҫтарасшӑн пулса Мархвапа вӑрҫса тӑрать.

— Ан ухмахлан, Элтюкка!— кӑшкӑрашать бригадир.—Мӗн кӗнеки кирлӗ пултӑр унта, утӑ ҫулнӑ ҫӗрте? Кунӗпе ӗҫлетпӗр те шӑналӑк карса тунӑ хӳшше кӗрсе ик-виҫ сехет ҫывӑратпӑр. Ним тума та вӑхӑт пулмасть. Кӗнекене ӑна килте те клубра вуласҫӗ, утӑ ҫулнӑ ҫӗрте мар.

— Ҫумӑр ҫӑва пуҫласан мӗн тӑватӑр?— тет клуб пуҫлӑхӗ.—Икӗ кун е виҫӗ кун тӑршшӗпе ҫумӑр ҫусан?

Капла калани бригадира ҫилентермеллипех ҫилентерсе пӑрахать. Вӑл ӗнтӗ тарӑхсах вӑрҫма тытӑнать:

— Эсӗ чипер калаҫ манпа, Элтюкка! Унсӑрӑн сана илсе те каймастӑп. Эпӗ икӗ кун ҫумӑр ҫутӑр тесе заявкӑ парса хуман. Ку пӗрре. Тата ҫумӑр ҫума пуҫласан та улӑхра кӗнеке вуласа лармастпӑр, пулла каятпӑр!

Ҫапах та вӑл юлашкинчен клуб пуҫлӑхне кӗнекисене илме чармарӗ.

— Эп туртмастӑп, машинӑ туртать, хурсам, эппин,— терӗ.

Кӗнеке ҫыххи ҫине хӑпарса ларнӑ хыҫҫӑн Элтюкка, амӑшӗ парса янӑ хутаҫа салтса, васкаса ирхи апат тукаларӗ, хӑй ҫав хушӑра вӗҫӗмсӗр Володьӑна кӗтрӗ. «Килет-и вӑл мана ӑсатма, килмест-и? Темиҫе кун каяллах каласа хунӑччӗ-ҫке эпӗ ӑна хам утӑ ҫулма каясси ҫинчен. Тен, вӗсен ялӗнчи бригадӑ та пырать-ха Ҫавал тӑрӑхне. Ытла тархасласа ыйтсан, Шевле ӑна пӗр-ик кунлӑха яма та пултарать. Ма килмест-ха вӑл? Хӗвел те хӗрелсе тухрӗ ав, вӑл ҫав-ҫавах ҫук».

Ҫав вӑхӑтра ӑна такам ҫивӗтрен туртрӗ. Хӗрача хӑвӑрттӑн ҫаврӑнса пӑхрӗ те хӑйӗн хыҫӗнче ӗҫ тумӗ тӑхӑннӑ Володьӑ тӑнине курчӗ.

— Эс те пыратни, Володьӑ?

— Пырас тетӗп, илсе каятни?

— Тархасшӑн, ара. Ав Туймедовӑна кала. Ӑна утӑ капанӗ купалама арҫынсем ытларах кирлӗ.

— Ҫук ҫав, манӑн кунта ӗҫ нумай,— хӑлхаран пӑшӑлтатрӗ каччӑ.—Кукурузӑна ҫум курӑкӗ пусса илнӗ, культиваци тумалла.

— Эппин, темиҫе кунтан каччӑсемпе юри пырӑр пирӗн пата. Улӑхра вӑййӑ иртеретпӗр. Юрать-и?— йӑлӑнчӗ Элтюкка.

— Тен, пырӑпӑр та. Эсир купӑс илнӗ-и?

— Илнӗ, паллах. Купӑссӑр утӑ ҫулма каяҫҫӗ-и?

Вӗсен калаҫасси те ҫавӑ анчах пулчӗ. Ларма хатӗрленсе кабинӑ алӑкне уҫнӑ Мархва кузовра Володьӑ тӑнине асӑрхарӗ те:

— Асатакансем машинӑ ҫинчен анма пултараҫҫӗ. Ну, кайрӑмӑр! — тесе кӑшкӑрчӗ. Володьӑ сиксе аннӑ-анман машинӑ тапранса та кайрӗ.

...Ҫулма пуҫличчен малтан ҫамрӑксем, нихҫан Ҫавал курман пек, шыв хӗррине карталанса анчӗҫ.

— Ай, хитре-ҫке кунта, хӗрсем, пӑхса тӑранмалла мар!— савӑнӑҫлӑн ҫухӑрса ячӗ пӗри, хӑва хушшипе шыв патнех пырса тӑрса.— Килӗр-ха, килӗр, пулӑ ишсе ҫӳрет, ав ҫиелтех пулӑ ишсе ҫӳрет!

— Тыт часрах, мӗн пӑхса тӑратӑн?— терӗ тепри.—Кӳр тутруна, хам ӑсса кӑларса парам.

— Ай, эс, Наташӑ, ҫын укҫипе тына илесшӗн-иҫ! Чим-ха, эп сана шыва тӗртсе ярам, кил-ха кунтарах.

Вӗсем пӗр-пӗрне алӑсенчен ярса илчӗҫ, тӗрткелешме тытӑнчӗҫ, кӗреше-кӗреше, иккӗшӗ те урисенчи туфлисемпех шыва кӗрсе кайрӗҫ.

— И-и, кунта тарӑн та мар!— терӗ Наташӑ, йӗпе туфлийӗсене ҫерем ҫинелле ывӑтса.— Ишсе кӑтартас-и сире, хӗрсем?

— Иш, иш!— терӗҫ лешсем ушкӑнпа.— Ҫапла кӗпепех ишсе каҫ-ха Ҫавал урлӑ!

— Каҫаймасть тетре?

— Каҫаймастӑн, паллах!

— Хӑравҫӑ эсӗ, Наташӑ!

— Ну, апла курӑр!—терӗ Наташӑ.—Хӑваласа ҫитӗр мана!

Вӑл ик аллипе те хӑлаҫланса илчӗ те пӗтӗм кӗлеткипе малалла туртӑнчӗ, урисемпе хыттӑн шӑмпӑртаттарса, ҫыран леш еннелле ҫӑмӑллӑн ишсе кайрӗ. Унта ҫитеспе хӗрсен ушкӑнӗ ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ, пӳрнисене вылятса, шыва путнӑ пек туса кӑтартрӗ, унтан пӳ ячӗ.

Тепӗр ҫур минутран вӑл ҫыран хӗррине чӑмса тухрӗ, тем кӑшкӑрашса, ҫулман ҫаран тӑрӑх чупрӗ.

— Мархва аппа! Мархва аппа!— кӑшкӑрчӗ хӑй.—Пуҫ кӑшӑлӗ туса каҫас-и сан валли? Тӑхта, халех хитре пуҫ кӑшӑлӗ тӑватӑп!

— Часрах каялла каҫнӑ пултӑр!— чӑмӑрӗпе юнарӗ ӑна бригадир.—Кур-ха, мӗнле чарусӑр хӗрача вӑл! Салтӑнмасӑр-тумасӑр шыва кӗрсе кайнӑ. Кам пур сан пек ухмах ҫын ҫут тӗнчере?—Ыттисемшӗн, ҫыран ку енне тӑракансемшӗн, вара пачах урӑхла каласа хучӗ:— Эх, ма хам пӑртак ҫамрӑкрах мар-ши? Ӑна хӑваласа ишсе кайнӑ пулӑттӑм,— терӗ.

Кӑштах ҫапла ҫуйӑхкаланӑ хыҫҫӑн бригадӑри ҫынсем, ҫавасене машинсем ҫинчен антарса, вӗсене аврисем ҫине майлаштарса лартса, ӗҫе тытӑнчӗҫ. Арҫынсем пӗр машинӑ ҫинчен сенокосилкӑ антарчӗҫ, ӑна ӗҫе ячӗҫ. Улӑхра паккус хыҫҫӑн паккус утӑ ӳкме тапратрӗ. Малтанлӑха никам та кӗрепле тытмарӗ-ха, пурте ҫавапа ҫеҫ ӗҫлерӗҫ.

Мархва Натащӑна аташма та шӑл йӗрме ҫеҫ ӑста тесе шутланӑччӗ, вӑл ӗҫре те маттур иккен, йӗпеннӗ кӗпине хывса вӗр-ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑннӑ та хӗрсен ушкӑнӗнче савипе чи малта хашлаттарса пырать. Унпа юнашар Элтюкка ҫулать. Клуб пуҫлӑхӗ темерӗн, вӑл та пӗтӗм вӑйпа сулӑнтарать ҫавине, ӗмӗрне утӑ ҫулса ӳснӗ тейӗн ҫав.

Бригадир хӑй ҫава таврашӑ тытмарӗ-ха. Тем ҫинчен калаҫса татӑлма вӑл ҫывӑхри яла кайса килчӗ, икӗ хӗрарӑма апат пӗҫерме уйӑрчӗ, шоферсене машинӑсемпе пурне те киле ячӗ. Пӗр шоферне каласа хучӗ: «Тата виҫӗ кунтан пурин валли те ҫимелли турттарса кил»,— терӗ. Ун хыҫҫӑн Мархва хӑй те ҫулакансен ретне тӑчӗ.

— Ну, мӗн чӗмсӗр ӗҫлетӗн, Элтюкка!— кӑшкӑрчӗ вӑл пурте илтмелле.— Пуҫласа яр пӗр-пӗр юрӑ! Эпир сана пулӑшакансем пулӑпӑр!

— Юрӑ юрланӑ чух ҫӑвара вӑрӑм туна кӗрсе тулать!— шӳт тума пӑхрӗ клуб пуҫлӑхӗ.— Эп пӗр виҫҫӗшне ҫӑтса ятӑм ӗнтӗ. Хырӑм тӑрансах кайрӗ...

— Ҫапла ҫав, ку вӑл сана клубра кӗнеке парса ларасси мар. Кунта вӑрӑм туна ҫыртать. Наташӑ, мӗнле, сана та ҫыртать-и вӑрӑм туна?

— Мана-и? Ҫук, ҫыртмасть,— терӗ лешӗ.— Эп пӗве кӗмен-ха, мана вӑрӑм тунасем те, каччӑсем те хӗр вырӑнне хумаҫҫӗ. Юрласа парас-и, эппин, пӗр юрӑ?

— Юрла, юрла!— терӗҫ хӗрачасем темиҫӗн.

— Ирхине ҫур сехет ытларах ҫыврататӑр-и вара мана?

— Ҫыврататӑпӑр, ҫыврататӑпӑр!

Наташӑ тек калаҫса тӑмарӗ, хӑйӗн уҫӑ сассипе юрласа та ячӗ:

Ан хумхан, ҫӑкалӑх,
Ан хумхан, сирень.
Халь ӑҫта-ши, тусӑм,
Эс иртсе ҫӳрен.

Сад пахчи ем-ешӗл,
Туллиех ҫеҫке.
Сан сӑнна унта эп
Тӗл пулмастӑп-ҫке.

Ун ҫумне тата пӗр-ик сасӑ хутшӑнчӗ, анчах ушкӑнпа юрласси пулмарӗ: халӑх ытла сапаланса ӗҫлет. Наташӑпа Элтюкка юрлани ҫеҫ чылайччен илтӗнсе тӑчӗ.

— Ҫитӗ, ӗҫ хыҫҫӑн юрлама хӑварӑр,— терӗ

Мархва.—Халь алӑри ҫавана лайӑххах юрлаттарӑр. Ав кӑнтӑрла ҫитет, эпир хамӑра вӑртса канмалӑх утӑ ҫулайман...

Касхине, вӗсем апат ҫисе тӑраннӑ ҫӗре, улӑха кӳршӗ ял ҫамрӑкӗсем йышлӑн кӗпӗрленсе анчӗҫ. Вӗсен хушшинче хӑш-пӗр хӗрсен паллакан каччисем те курӑнкаларӗҫ: ара, кашни ҫул ҫапла тӗл пулаҫҫӗ-ҫке утӑ ҫулма килсен пӗр-пӗринпе!

Хӳшӗсемпе юнашар, утта ҫулса пуҫтарнӑ вырӑнта, тем сарлакӑш вӑйӑ карталанса тӑчӗ. Пӗр хушӑ вӑйӑ юррисем юрларӗҫ, унтан Элтюкка хайӗн купӑсне илсе тухрӗ. Вӑл кӳршӗ ял каччисенчен: «Сиртен кам купӑс калама пӗлет?»— тесе ыйтса тӑмарӗ, вӑйӑ варрине такам чемоданӗ ҫине вырнаҫса ларса, ташӑ кӗвви калама пуҫларӗ. Мархва хӗр-купӑсҫӑ ҫине ӑмсанса пӑхрӗ. Пултарать те вӗсен клуб пуҫлӑхӗ! Ун пеккине темиҫе районӗпе шырасан та тупас ҫук. Кур-ха, мӗнле шӑрантарать вӑл купӑсне! Анчах хӑҫанччен калаттараҫҫӗ ӗнтӗ ӑна каччӑсем? Мӗн вӑйӑ пӗтиччен-и? «Ывӑнтӑн пуль, ырӑ хӗрача, кӳр-ха, эп каласа пӑхам» текен каччӑ пӗрре те тупӑнмасть-ши? Ҫук, тупӑнчӗ. Ак пӗр ҫӳлӗ каччӑ ун умне пырса тӑчӗ те пиҫиххине тӳрлеткелерӗ, Элтюккана вальс ташлама сӗнчӗ. Элтюкка аллинчи купӑса вӑл хайӗн юлташне тыттарчӗ. Ӑна сӑмахпа хавхалантарса илчӗ тата:

— Ну-кӑ, Кольӑ, янрат-ха пӗрре. Асту, Хӗрлӗ Ҫыр мӑшкӑлӗ ан пул! — терӗ.

Каччисем хыҫҫӑн ташша ку ятти хӗрсем те хутшӑнчӗҫ. Вӑйӑ хӗрсе кайрӗ. Ватӑраххисем, курса тӑранса, хӳшӗсене саланса пӗтрӗҫ ӗнтӗ, улӑхра куҫ курми тӗттӗм пулса ҫитрӗ, ҫамрӑксем хайсен ташши-юррине ҫав-ҫавах пӑрахмарӗҫ-ха. Пӗлеҫҫӗ вӗсем, ҫывӑрма та вӑхӑт сахал юлать, анчах икӗ ялпа савӑшма та питӗ лайӑх-ҫке.

Мархвана каччӑсем хӗр вырӑнне йышӑнчӗҫ пулмалла, ӑна пӗрин хыҫҫӑн тепри ташлама сӗтӗрчӗҫ. Темиҫе ташӑ ташласа пачӗ бригадир, унтан вара пачах тухми пулчӗ. Кӑшт пӑхса тӑнӑ хыҫҫӑн вӑл никама систермесӗр ушкӑнран уйрӑлчӗ те, йӗпе курӑк ҫийӗн майӗпен утса, Савал хӗррине анчӗ. Шыва кӗрес тесе-ши, пӗшкӗнсе шыв ӑшшипе ӑшӑ мӗррине тӗрӗслерӗ, аллине ҫурӗ, майлӑ вырӑн тупса, пӗр вӑхӑт хушши шухӑша кайса ларчӗ. Темшӗн Никодим аса килчӗ ӑна, вара куҫ умне ачисем тухса тӑчӗҫ. Кунта килесшӗн пулса, куҫҫульпех макӑрса пӗтрӗҫ-ҫке иккӗш те, апӑршасем! Мархва вӗсене нихҫан ҫапманнине чӗн пиҫиххипе ҫапкаларӗ. Ку ытлашши пулчӗ ӗнтӗ, паллах, анчах вӗсене чарусӑра кӑларма та юрамасть. Илсе килнӗ пулсан, шӑналӑк айӗнче сивӗ ҫӗр ҫинче ҫывӑратчӗҫ-ши? Айвансем, терӗ Мархва, хӳшӗре вӗсем валли тӳшек пур тесе шутлаҫҫӗ пуль!

Бригадир тӗттӗмре хайӗн кӑнтӑрлах сарса хунӑ вырӑнне хыпашласа тупрӗ. Натащӑ ӑна тата тӳрлетнӗ пулас, кивӗ кӗрӗк айӗнче утӑ ытларах пек туйӑнать. Анчах хӗрача хӑй ҫук. Хӳшӗ ҫывӑхӗнче пӗр хӗрача каччӑпа ларатчӗ, ҫавӑ пуль-ха. Чӑнах ҫавӑ, ав калаҫни те илтӗнет.

— Ан тыт!— тет Натащӑ куштан сасӑпа.— Эп ун пек сӗмсӗр каччӑсене юратмастӑп.

— Ну, юрӗ, тек тивместӗп,— тет каччи.

— Кай, теҫҫӗ!— илтӗнет тепӗр хут.—Эс каятни, каймасни паян?

— Каймастӑп! Ҫутӑличчен ҫывӑрма памастӑп сана.

— Аха, каймастӑн апла? Ак эп сана халех мыскара кӑтартатӑп!

Натащӑ хыттӑнах ахӑрса кулма тытӑнчӗ, ун хыҫҫӑн ҫерем ҫине темле япала лачлатса ӳкрӗ. Хӗрача васкаса хӳшшелле чупса килчӗ.

— Мӗн тӑватӑн эс унта, Натащӑ?— терӗ Мархва.

— Пӗр ачана сӳсмен тӑхӑнтартрӑм!

— Кӗрсе ҫывӑр, мӗн аташса ҫӳретӗн?

— Ҫывӑратӑп ӗнтӗ, Марфа Осиповна. Ак шыв ӗҫетӗп те выртса ҫывратӑп...

Тепӗр минутран Натащӑ бригадир ҫумне йӑпшӑнса кӗрсе выртрӗ.

— Ма сӳсмен тӑхӑнтартрӑн-ха эс ӑна, Натащӑ?— тӗпчерӗ Мархва.—Мӗн усал турӗ вӑл сана?

— Нимӗн те туман, ара. Ҫыпҫӑнчӗ те, сӑпса пек, нимпе те каймасть. Сӳсмен тӑхӑнтартрӑм та, чуптара пачӗ!

— Ну, юрӗ. Тек ан калаҫ. Ыйӑх килет.

Натащӑ ӑна хирӗҫ нимӗн те чӗнмерӗ. Ытакланӑ пек туса аллине Мархва ҫине хучӗ те ҫавӑнтах тутлӑ ыйӑхпа ҫывӑрса кайрӗ.

Ирхине вӗсем сывлӑм типессе те кӗтмерӗҫ, хӗвел тухнӑ-тухман ӗҫе пикенчӗҫ. Хӑш-пӗрисене, ҫутӑлас умӗн ҫеҫ хайсен савнийӗсенчен уйрӑлнӑ хӗрсемпе каччӑсене, вырӑн ҫинчен тӑрса алла ҫава тытма питӗ йывӑр пулчӗ пулмалла, вӗсем сӗнк пулма та тин ҫеҫ ӗлкӗрнӗччӗ, анчах мӗн тӑвас тетӗн, кун пек ҫӗрте ун ҫинчен ҫынна каламаҫҫӗ. Савни тупма тӑрӑш, пур пулсан, унпа ҫӗрӗпе калаҫ, анчах утӑ ҫулнӑ ҫӗрте ҫынпа тан ӗҫле. Ҫурӑм тарличчен ӗҫлесен, ыйӑх иртсе каять вӑл. Хыҫалта: «Таптатӑп! Ҫул пар!»— тесе кӑшкӑраҫҫӗ пулсан, ыйӑх ҫинчен шутлаймӑн вара.

Паян бригадӑра ӗҫ ӗнерхинчен кал-калрах пыратчӗ. Вӗсем ирех тем пысӑкӑш лаптӑка ҫулса пӑрахрӗҫ. Кӑнтӑрла умӗн вара хӗвел сасартӑк пӗлӗт хыҫне пытанчӗ, Ҫӗрпӳ тӗлӗнче аслати кӗмсӗртетме пуҫларӗ.

— Кунта ан килтӗрех вӑл ҫумӑр!— терӗ Мархва.—Вара пӗтрӗмӗр пуҫ, атьсем. Ҫумӑр

çума тытăнсан цыгансем пек хӳшĕре пурăнасси çеç юлать...

Элтюкка ăна хăйĕн ĕнерхи сăмахĕсене аса илтерчĕ.

— Эс, çумăр çусан, пулла каятпăр терĕн-иç? Пирĕн тем пысăкăш шӳпке тытса курас килет-ха, пулă шӳрпи çисе пăхас килет,— терĕ.

— Сире мĕскер?— вăрçам пек турĕ бригадир.—Сирĕншĕн пулсан, ик айкки те тăвайкки! Эрнере çулса пĕтеретпĕр-и утта, ик эрнере-и, çĕрет-и вăл çумăр айĕнче, сĕрмест-и — сирĕншĕн пурĕ пĕрех. Ахаль те вăйă пур кунта, эсир уйăхĕпех пурăнма та килĕшмелле. Çапла-и?

— Эпĕ хам ик уйăх та пурăнмалла!— йĕкĕлтенĕ пек сăмах тĕртрĕ Наташă.

— Çав ĕнерхи каччăшăн-и?— çийĕнчен йĕплерĕ ăна Мархва.

— Уншăн мар. Чуна ирĕк кунта. Пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм илем — сан умăнта. Каччине ăна, кирлĕ пулсан, урăх та тупма пулать.

— Туптарăп эп сана! Ак паянах киле хăвалаласа яратăп.

— Хăвалаймастăн. Мана утă çулма кайма Аристарх Петрович хăй хушнă.

— Эп кунта Аристарх Петровича пăхăнмастăп.

— Çук, пăхăнатăн!— тавлашрĕ Наташă.

— Ан чĕн!— терĕ бригадир.—Унсăрăн çитсенех аннӳне каласа паратăп. Сан хĕрачу çав тери чарусăр, тетĕп. Ав çынсем мĕчле ĕçлеççĕ, пĕр сăмах та чĕнмеççĕ. Эсĕ, пушăлла авăракан арман пек, ялан палкатăн. Çитĕннĕ хĕр пек пул пăртак. Ав Элтюкка аппунтан вĕрен хăвна тыткалама.

— Юрĕ, тек чĕнместĕп,— терĕ Наташă.

Элтюкка паян чăнах та питех калаçасшăн мар. Сăнран та кăшт салхуллăрах вăл. Паян уншăн яра кун инкекпе пуçланчĕ-çке. Ирхине ирех хĕрача чĕпĕ кăларакан кайăк кăвакалне çавапа касса пăрахрĕ. Чиперех çулса пыратчĕ Элтюкка хăйĕн касăлăкне. Çынсенчен мала та кайманччĕ, кая та юлманччĕ. Сасартăк çава вĕçĕ темле çемçе япалана çакланчĕ. Хăйĕн умне курăк ăшне пĕшкĕнсе пăхрĕ те хĕрача, унта кайăк кăвакал лăпăстатса выртнине курах кайрĕ. Мĕскĕн кайăк, вĕçсе каясшăн пулнă пек, ялан çӳлелле сикет. Анчах вĕçсе кайма май çук ĕнтĕ — хăрах çунатне çава касса татнă.

Инкек пулнă вырăна халăх нумай пуçтарăнчĕ. Элтюкка çунатсăр юлнă кайăка хăйĕн явлăкĕпе туртса çыхрĕ, ăна утăран тунă йăвана майлаштарса лартрĕ. Пăртак тăрсан кайăк кăвакал хĕрсем ачашланă хушăрах вилсе кайрĕ.

Кайăк кăвакалĕн тин çеç сăхнă тăвата çамарта пулнă иккен, вĕсене Элтюккапа Наташă, чĕпписене те пулин вилме памастпăр тесе, хăйсен хӳшшине илсе кайса хучĕç.

Çумăр пĕлĕчĕсем пуç тăрринех çитрĕç ĕнтĕ. Çывăхрах çиçĕм çиçсе илчĕ, аçа çапрĕ. Унтан улăх, хăйне такам вутпа ăшаланă евĕр, хуллен çеç чăштăртатма пикенчĕ. Утă çулакансем сисрĕç — çумăр вĕсем патнех çывхарнă, тепĕр минутран, тепĕр çур минутран вĕсем шалкам çумăр айне пулаççĕ. Çавасем пур пĕрех сулăнаççĕ-ха, чăн-чăн çумăр касси килсе çапмасăр никам та хăйĕн ĕç вырăнне пăрахса тарма шутламасть.

Ĕнтĕ çава аври йĕп-йĕпе пулнă, кĕпе-тумтир тăрăх шыв юхать, хĕрсем тин, çари! çухăрса, çависене çӳлелле тăратса, хӳшĕсем патнелле чупаççĕ. Вĕсен хыççăн Мархва Туймедова мăнаçлăн утса пырать. Вăл çухăрашмасть те, чупмасть те. Ăна ун пек тума юрамасть, мĕншĕн тесен, вăл — бригадир.

3

Виççĕмĕш кунне утă çулакансем патне ялтан машинă персе çитрĕ. Шофер, Мархва каласа янă пекех, çимелли тиесе килнĕ иккен. Ыттисене кĕвĕçтерсе, вăл темиçе хĕрпе каччăна çырусем те пачĕ, никамран та çыру кĕтменнисене вара çĕнĕ хаçатсем валеçрĕ.

— Эп халь ялта клуб пуçлăхĕ вырăнĕнче,— терĕ вăл Элтюккана.—Ме сана та хаçат. Пурнăçран йăлтах юлтăн пулĕ-ха, юлашки хыпарсене пĕлместĕн пулĕ.—Унтан вăл хушса хучĕ:—Ырантан тепĕр кун яла театр пымалла. Илтнĕ-и эс ун çинчен?— терĕ.

— Ан тĕлĕнтер, Витьă!— хавасланса ӳкрĕ Элтюкка.—Пĕлтерӳ çапрăр-и эсир унта?

— Çапман,— терĕ каччă.—Халапсин сана хăй килтĕр тесе каласа ячĕ. Пыратни манпа?

— Паян пымастăп. Эп ыран каç кӳлĕм пырсан та ĕлкĕретĕп. Эс Кĕтерукпа Никодим Федоровича каласа хур: тăвата ялĕнче те пĕлтерӳсем çапса тухчăр. Асту, калама ан ман вара.

Витьă текенни ăна лăх-лăх кулса çеç тавăрчĕ:

— Кĕтсе тăр, çыраççĕ сан валли пĕлтерӳсем Кĕтерукпа Никодим Федорович! Вĕсем ыран ирхине хăйсем те утă çулма килме хатĕрленеççĕ.

— Чăнах те?

— Чăнах пулмасăр!

— Апла ху пулăш, Витьă. Çăл мана пĕрре лĕхе. Володьăна кала: Вăрманкасра пĕлтерӳ çаптăр. Юрать-и?

— Юрать,— куç хĕсрĕ Витьă.— Пайта пулать-и мана куншăн?

— Пулать, пулать!— терĕ Элтюкка.

— Хăвăн процентна пар мана, вара çăлатăп.

— Мĕнле процента?

— Ара, утă çулнăшăн сире процент тиветçке,— ăнлантарчĕ Витьă.— Утă уйăрса параççĕ кашнине. Вăт санăнне эпĕ тиесе каятăп вара.

— Илех. Мана кирлĕ мар вăл,— терĕ хĕрача.

Тепĕр кунне Витьă Çавал тăрăхне тепре пырса кайрĕ. Хальхинче вăл Кĕтерукпа Саваттие тата Никодим Федоровича лартса килчĕ.

— Халапсин вăрçать сана, Элтюкка,— терĕ вăл клуб пуçлăхне.—Театрсăр пуçне унта тата темле культбригадă пымалла, тет.

— Вăт, каçхине килсе илетĕн,— курнăçланасшăн пулчĕ хĕрача.

— Аçу машинă памасан?

— Мĕнле вăл ашшĕ хăйĕн хĕрĕшĕн машинă памасăр тăтăр? Парать. Тата агроном та таврăнать пулĕ-ха кĕçĕр. Вăл, паллах, улăхра çĕр выртмасть.

Витьă çавăнтах Мархвапа калаçса тăракан Никодим Федорович патне чупса кайрĕ.

— Ман кĕтес-и е каçхине тепре килес-и?— терĕ вăл.

— Килетĕн пуль, Витьă. Яла таврăнакансем тата та пулаççĕ паян. Элтюкка пырать ав. Саваттипе Кĕтерук та пыраççĕ.

— Эс, çĕнĕ çын, паянах тарасшăн-и?—хыттăнах ыйтрĕ Мархва аякра мар çава майлаштарса тăракан Кĕтерукран.

— Эс ямасан каймастăп,— терĕ лешĕ.— Анчах ĕç нумай ман унта. Эпир халь фермă çывăхĕнчи клевера çулатпăр.

— Кирек мĕн ту. Анчах пĕлсе тăр: паянах каятăн пулсан, упăшкупа иксĕре пĕр ĕç кунĕ те памастăп. Неччу кунта катаччи чупса çӳреме . Килнĕ-тĕк, ĕçлес пулать.

— Э-э, ан пар,— арăмĕшĕн тавăрчĕ Саватти.— Эпир ĕç кунĕшĕн килмен.

— Мĕн, çырла татма килес терĕнем апла?— тăрăхларĕ бригадир.

— Ак Кĕтерукран ыйт,— вăтаннă пек пулчĕ Саватти.—Çавă темшĕн сĕтĕрсе килчĕ мана. Эп фермăра пĕчĕк çын. Начальниксем мĕн хушаççĕ, çавна тăватăп.

Элтюкка Саваттие ирех çапла асăрхаттарса хучĕ: Кĕтерук паян кунĕпе санпа мар, манпа ĕçлет, терĕ.

— Çитет сана ялан ун мĕлки пулса çӳреме. Сенокосилкăпа ĕçле . ав. Арçынсем патне капан купалама кай.

— Тархасшăн, ара,— хаваслансах килĕшрĕ унпа çамрăк упăшка.—Маншăн пулсан, кунĕпе пăшăлтатăр. Анчах Саваттие ан çийĕр. Эпĕ мана çимелĕх пурăнман-ха унпа.

Аппăшĕ Элтюккапа юнашар тăрса ĕçлеме тытăннăшăн Наташă та чунтан савăнчĕ. Ĕнтĕ вĕсем виççĕн ăмăртса пăхаççĕ. Куртăр Кĕтерук — унăн йăмăкĕ аппăшĕпе тан утă çулма пултарать. Килте чухне вăл ăна ялан ача вырăнне хуратчĕ-ха, кашни сăмахрах айван тесе ятлатчĕ.

Наташă ăшра аппăшĕпе Элтюккаран кĕвĕçсе те илчĕ: пулаççĕ те туслă хĕр-тантăшсем, нимĕн те пытармаççĕ пĕр-пĕринчен, ăçта та пулин тĕл пулсан, калаçса тăранаймаççĕ вара. Ма Наташăн çукка-ши çавăн пек хĕр-тантăш? Вăл та ăна тăван йăмăкне юратнă пек юратнă пулĕччĕ. Вăййа пĕрле тухнă пулĕччĕç вĕсем, клуба пĕрле çӳренĕ пулĕччĕç. Ак икĕ кун хушшинче Элтюккапа самаях туслашрĕ Наташă. Анчах Элтюкка унпа пĕр тантăш мар-çке.

Мархва бригадир каçхине киле таврăнакансене машинă патне çитичченех ăсатса ячĕ.

— Кусене тав тумастăп,— терĕ вăл, Кĕтерукпа Саватти тата Никодим çине кăтартса.— Кусем, ман шутпа, уçăлса çӳреме çеç тухнă. Сана питĕ пысăк спасипă, Элтюкка. Иккĕмĕш çул куратăп ĕнтĕ сана утă çулнă çĕрте. Клубра кăна мар, колхоз ĕçĕнче те вут пек маттур эсĕ, йăмăкăм. Ну, театрне эпир çитиччен ялтан кăларса ан яр вара. Вĕсем пирĕн пата сайра килсе çӳреççĕ. Тем пек курса юлас килет.

— Куратпăр. Эп вĕсене тем тесен те тытса чаратăп,— шантарса каларĕ клуб пуçлăхĕ.

Ун пек калама кирлĕ пулман иккен. Улталарĕ вăл Туймедова Мархвана. Ыттисене те улталарĕ. Чăнах та, айăпĕ кунта Элтюккăра мар. Анчах ку пурĕ пĕрех мар-и?

Никодим Шевлепе пĕрле колхоз правленине пырса кĕрсен, Элтюкка парторганизаци секретарĕнчен çакна пĕлчĕ: артистсем Хĕрлĕ Çыртан ĕнерех каялла тухса кайнă, ялти халăха пĕр спектакль те кăтартман. Тĕрĕссипе, вĕсем Хĕрлĕ Çыра кĕмен те. Темиçе кун маларах колхоз правленине театр администраторĕ килнĕ пулнă. Вăл Аристарх Петровича икĕ спектакльшĕн договор тума сĕннĕ. Яштайкин килĕшмен. Администратора, утă çулнă, çум çумланă вăхăтра спектакльсем лартса кансĕрлесе çӳретĕр тесе, вăрçса тăкнă. Администраторĕ хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен маттур этем пулнă курăнать, вăл колхоз председательне намăслантарма тытăннă, çав хушăрах райком секретарĕ патне шăнкăртаттарассипе хăратнă. Яштайкин вара урăхла майпа хăтăлма шутланă.

— Райкома шăнкăртаттарма кирлĕ мар,— йăпатнă вăл театр çыннине.—Пĕр спектакльшĕн договор тăватпăр, бухгалтери сире укçа куçарса парать. Анчах эсир пирĕн яла кĕместĕр, хăвăр маршрутăрпа тӳрех малалла каятăр. Ăнланатăр-и мана?

— Мĕн ăнланмалла марри пултăр унта!—

тенӗ администратор.—Хӑвӑр кӑмӑлӑр, ара. Эпир ирӗксӗр спектакль кӑтартмастпӑр. Анчах астӑвӑр, договор тӑрӑх укҫине сутпах шыраса илетпӗр вара. Кутӑнланасси-тӑвасси ан пултӑр...

— Укҫашӑн ан пӑшӑрханӑр,— тенӗ Яштайкин.—Ӑна шӑнкӑртах куҫарса паратпӑр. Пирӗншӗн укҫа шел мар, вӑхӑт хаклӑ. Ӑнланатӑр-и?

Элтюкка Халапсин каласа кӑтартнине ӗненчӗ те, ӗненмерӗ те. Ҫакнашкал киревсӗр ӗҫ те пулма пултарать-и вӗсен колхозӗнче? Ун ашшӗ сынсене (вӑл шутра Элтюккана та!) ҫавӑн пек улталассинчен те именсе тӑмасть-и?

— Эс, бухгалтер, мӗнле килӗшрӗн ун пек хута алӑ пусма?— тарӑхса ыйтрӗ клуб пуҫлӑхӗ.

— Эпӗ мӗн... эпӗ нимех те мар. Манран килет-и ун пек япала?— мӑкӑртатрӗ Халапсин.—Председатель каласан, ман тӑвасах пулать. Ия, тӑвасах пулать. Колхозра вӑл хуҫа, эпир санпа питӗ пӗчӗк сынсем, тӑванӑм. Ия, пӗчӗк сынсем...

Тепӗр минутран Элтюкка, председатель пӳлӗмне вӑркӑнса кӗрсе, ашшӗ сӗтелӗ умӗнче чарӑнса тӑчӗ.

— Эс артиссене ма хӑваласа ятӑн, атте?— терӗ вӑл, ӑна кӑмӑлсӑррӑн сывлӑх сунса.

— Ӗҫ вӑхӑчӗ халь, ҫавӑнпа!— хуравларӗ ашшӗ, хӑйӗн умӗнчи хутсем ҫинчен куҫне илмесӗр.—Эс спектакль курасшӑнччӗ-и, хӗрӗм?

— Ан йӗкӗлтесе тӑр!— ҫийӗнчех касса татрӗ Элтюкка.—Эп мар, сынсем курасшӑнччӗ. Тӑватӑ ял халӑхӗ!

— Халӑх халь ӗҫре, Элтюкка. Пурте утӑ ҫулаҫҫӗ, ҫум ҫумлаҫҫӗ, кирпӗч ҫапаҫҫӗ. Пӗр бригадӑ вӑрманта курӑс кӑларать. Никам та килте лармасть халӗ...

— Ну, вара ӗҫленӗ хушӑра сынсем спектакль курнӑ пулсан, тӗнче пӗтетчӗ-им?

— Пӗтместчӗ пулӗ те, вӑхӑт питӗ кару халь. Спектакльне ӑна хӗлле те нумай куратпӑр.

— Артиссем чӑрмантарасран хӑрарӑн апла?

— Ҫавӑнтан хӑрарӑм, хӗрӗм, ҫавӑнтан хӑрарӑм. Укҫи — мур тӗпне, аллӑ-утмӑл тенкӗ шыва кайтӑр. Пурлӑха ҫӑлса хӑвармалла халь пирӗн. Ӗҫлемелле. Ан ятла ӗнтӗ, сана кӳрентертӗм пулмалла та-ха...

— Тӗрӗс мар тӑватӑн, атте. Ҫав тери тӗрӗс мар тӑватӑн! Мана мар, халӑха кӳрентертӗн эс. Ан ҫилен, атте, эп ҫакна каласшӑн: сана ак пурте лайӑх председатель тесе шутлаҫҫӗ, анчах, ман шутпа, эс халӑх чунне ӑнланмастӑн.

Ку сӑмахсене илтсен Аристарх Петрович хӑйӗн тенкелӗ ҫинче яшт! ҫӗҫ тӳрленсе ларчӗ.

— Шутласах каларӑн-и, хӗрӗм, куна? Мӗнле персе яма пӗлтӗн-ха ҫавнашкал сӑмаха?— терӗ вӑл.

— Мӗн, тӗрӗс мар-им?

— Ыйтса тӑрать-ха тата. Эх, айван та эсир, ҫамрӑксем. Кам мӗншӗн тӑрӑшнине пӗлместӗр, хак пама, ҫын ӗҫне ырлама е хурлама вара питӗ ӑста.

— Ҫавӑн пекех айван-ши эпир, атте?— хирӗҫлесшӗн пулчӗ Элтюкка.—Тен, хӑш-пӗр япалана чухлакан пулнӑ та пуль? Тен, хӑшпӗр чухне сирӗн ӗҫӗре те, ватӑраххисен ӗҫне, тӗрӗс хаклама хал ҫитеретпӗр пуль?

— Ҫук, нумай япалана ӑнланмастӑн-ха эс, хӗрӗм. Сана ав спектакль кирлӗ пулнӑ, эп ҫӗр сывӑрмасӑр урӑххи ҫинчен шухӑшлатӑп. Ҫур тыррине ҫум курӑкӗ пусса илнӗ, ҫӗр улмине ҫум курӑкӗ пусса илнӗ. Пӗтӗм халӑх ӗҫре халь. Спектакль шухӑшӗ-и пирӗн? Тырпула ҫӑлса хӑвармалла. Тыр-пул пулсан, пурте пулать, ӑнлан ҫавна, Элтюкка. Ҫын тулӑх пурӑнма тытӑнсан кӗнеке те ытларах вулать, юрӑ та юрлать, сан клубна та ытларах ҫӳрет, урӑхла каласан, ун культури те ӳсет...

— Эпӗ ӑна ҫав тери лайӑх пӗлетӗп.

— Пӗлетӗн пулсан, мӗншӗн ҫав спектакльсемпе аташасшӑн апла эс халь? Ма чӑрмантарасшӑн пире, халӑха ма ӗҫрен уйӑрасшӑн?

— Эх, атте!— терӗ Элтюкка, ун ҫине темле хӗрхенекен куҫсемпе пӑхса.—Эс ӗнтӗ халӑха ҫӗр хурчӗ тесе шутлатӑн. Тӑрӑшать, мекӗрленет вӑл, пӗр чӗлӗ ҫӑкӑршӑн такӑнса ӳкес пек ӗҫлет. Ӑна ӗнтӗ тырӑсӑр пуҫне нимӗн те кирлӗ мар. Тӗрӗс-и ку, эс ҫапла шутлани, атте? Халӑх ун пекех айван-ши вара? Кала-ха тӳррипе, паян кӑнтӑрла е кӗҫӗр ҫӗрле ҫывӑрма выртас умӗн спектакль курнӑ пулсан е концерт итленӗ пулсан, ыран халӑх начартарах ӗҫлетчӗ-и сан шутупа?

— Калама йывӑр,—терӗ председатель, тавлашма ҫитет тенӗ пек, вуламалли хучӗсене каллех хӑйӗн умнерех илсе хурса.—Ну, спектакль тесе, ӗҫрен пӗр-ик сехет малтан килетчӗҫ ӗнтӗ. Ӑна пытармалли ҫук. Тен, ирхине те кӑшт каярах юлса тухатчӗҫ-ха. Пӗр сӑмахпа каласан, чӑрмав ҫеҫ вӑл, сан спектаклю. Асту, хӗрӗм, эп хамӑр колхоза юсаса малти рете кӑларма сӑмах панӑ. Ҫак тӗллеве пурнӑҫа кӗртес тесе, эпӗ нимӗн умӗнче те чарӑнса тӑмӑп. Мана колхоза ҫӗклеме тырӑ кирлӗ, укҫа кирлӗ!— Ҫавӑнтах вӑл Элтюкка кӑмӑлне пӑртак та пулин ҫавӑрасшӑн пулчӗ курӑнать, темле йӑпӑлтатакан сасӑпа пачах урӑхла каласма пикенчӗ.—Юрӗ, хӗрӗм, ан ҫилен. Хальхинче артиссене яла кӗртменни тӗрӗс пулчӗ тесе шутла. Ан вӑрҫ мана, эп урӑхла тума

пултарайман. Хӗлле ак — тархасшӑн, эрнере пӗрре килччӗр пирӗн пата. Кашнинчех йышӑнатпӑр. Юрать-и?

Элтюкка каллех пуҫне ҫеҫ сулкаларӗ.

— Ҫук, эп санпа килӗшместӗп, атте. Хӑвӑн ӗҫне тӳрре кӑларма ан тӑрӑш. Каҫармастӑп сана куншӑн. Тӗлӗнтертӗн мана. Нихҫан та кӗтменччӗ санран кунашкал япала.

— Ак каллех пуҫларӗ,— йӑвашшӑн каласа хучӗ ашшӗ,— Вӑт куштан хӗр ӳсет манӑн! Ашшӗпе тавлашма пӑхать, кур-ха эс ӑна...

Элтюкка кӑштах чӳрече еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ те айккинелле ҫеҫ пӑхкаларӗ. Тавлашас тесен, сӑмахне тупатчӗ пулӗ-ха вӑл, анчах хӗрача ашшӗне тавӑрса калама та кирлӗ мар тесе шутларӗ. Систӗр, ун пек айван вырӑнне ан хутар хӑйӗн хӗрачине. Мӗскӗн тесе те ан шутлатӑр ӑна. Йӑнӑш ӗҫ тунине курсан, Элтюкка ашшӗне хирӗҫ сӑмах чӗнме те хӑраса тӑрас ҫук. Ашшӗ хальхинче ӑслӑ хӑтланмарӗ, тупата туршӑн, пӗрре те ӑслӑ хӑтланмарӗ. Вӑл тунӑ тӳрккес те вырнаҫусӑр ӗҫ пирки халь Элтюккан тавлашас та килмест. Кӳренӳ-и ку? Вӑл ҫеҫ мар, ку вӑл ахаль кӳренӳрен пысӑкрах япала. Анчах мӗскер-ши? Элтюкка ӑна халлӗхе хӑй те пӗлмерӗ.

ВУННАМӖШ СЫПӐК

I

Мархва пӳрчӗ ял картине кӗреймен-ха, вӑл укӑлча хапхи тулашӗнче ларать. Ӑна хирӗҫ кам та пулин килсе вырнаҫиччен ҫапла уйрах пурӑнмалла пулать пулӗ ӗнтӗ бригадирӑн, унччен уй хапхине кунтарах куҫармаҫҫӗ пуль. Юрать-ха, темех мар, тет Мархва, хӑй тӗллӗн кулма пӑхать: ун пек тӑлӑх арӑмӑн пӳрчӗ ҫакнашкал улах вырӑнта пулмалла та! Вӑл хӑйне тем тесен те тӑлӑх арӑм тесе шутлать. Тӗнче тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳрекен упӑшки ҫухалмаллипех ҫухалчӗ унӑн. Никодимпа ҫыхланса кайнӑ хыҫҫӑн Мархва Павӑл пирки шутлама та пӑрахрӗ. Икӗ уйӑх каялла Павӑл киле пырса каятӑп тесе ҫырнӑччӗ, килмерӗ, улталарӗ. Халь ӗнтӗ вӑл, тӗрӗссипе каласан, кирлех те мар.

Ӗнер Мархва чӳрече кантӑкӗсене ларттарчӗ. Вӗсене супӑнь шывӗпе ҫурӗ, хутпа, унтан марльӑпа тасатрӗ. Пӑхса тӑранаймасть халь бригадир хӑйӗн пысӑк та ҫутӑ кантӑкӗсенчен. Укӑлча хапхи чӗриклетсе уҫӑлнине илтнӗ-илтмен чӳрече патне чупса пырать. Апат ҫинӗ хушӑра та пулин, тутӑр ҫыхнӑ хушӑра та пулин урамалла пӑхса илет. Куҫпа ӑсатмасӑр никама та ирттермерӗ Мархва паян ирхине. Чи малтан укӑлча хапхине Шевле старик чӗриклеттерсе уҫрӗ. Вӑл, хапхана тирпейлӗн хупса, улӑм шлепки айӗн Мархва пӳрчӗ еннелле пӑхса илчӗ, унтан майӗпен чӳрече умнелле сывхарчӗ. Бригадир ӑна кантӑкран шаккать пуль тесе шутланӑччӗ, ҫук, шаккамарӗ, ҫурт ҫумӗпе ҫаврӑнса иртсе, кукурузӑ пуссинелле кӗрсе кайрӗ. Сисрӗ вара Мархва: Архип Лукич хӑй суркунне парне вырӑнне лартса хӑварнӑ йывӑҫсене килсе тӗрӗслерӗ иккен. Ҫак тӗлӗнтермӗш старикӗн пӗр йӑла пур: ялта кам та пулин ҫӗнӗ ҫурт-йӗр ҫавӑрнине курсан, вӑл ун патне темиҫе йывӑҫ илсе пырать, ҫӗнӗ пӳрт парни тесе, ӑна хӑех тирпейлӗн лартса хӑварать. Ҫийӗнчен ҫу каҫиччен темиҫе хутчен пырса тӗрӗслет-ха тата: вӑл лартнӑ йывӑҫсем типсе хӑрса кайман-и?

Шевле старик хыҫҫӑн укӑлча хапхинчен Варукпа Сухви тухрӗҫ. Вӗсем те, Мархва чӳрече кантӑкӗсем хӗвел ҫинче вутла ялкӑшнине асӑрхаса, пӗр вӑхӑт пӳрт еннелле пӑхса тӑчӗҫ. Унтан хапха патне Мархва ӗҫе тухма каласа хунӑ хӗрсемпе инке арӑмсем пырса ҫитрӗҫ. Вӗсем шавлӑн калаҫнӑ сасӑ лӑпланнӑ-лӑпланман ҫатан урапа ҫине юнашар вырнаҫса ларнӑ Яштайкинпа Никодим Федорович курӑнса кайрӗҫ.

— Э-э, бригадир, эс паян хире пуриччен кайран тухатӑн-и вара?— калаҫрӗ хӑй тӗллӗн Мархва.— Намӑс та мар-и сана? Васка, тӑванӑм, васка.

Темиҫе эрне каялла кӑна-ха Яштайкинпа Никодим Федорович Мархва пӳрчӗ умӗпе иртнӗ чух: «Бригадир килте-и?»— тесе кӑшкӑратчӗҫ, анчах пурӑна-киле, Мархва хӑйсенчен нумай ҫӑмӑл ыйӑхлӑ пулнине, вӑл ӗҫе ялти пуҫлӑхсенчен маларах туха-туха кайнине курса ӗненсен, ӑна чӗнме те пӑрахрӗҫ. Ак паян бригадир мӗшӗлтетсе кая юлчӗ пулать.

— Тупнӑ пӳрте тирпейлемелли вӑхӑт!— терӗ Мархва, ывӑҫ тупанӗ пек тӗкӗрне сӗтел ҫине ывӑтса.— Уйра пин тӗрлӗ ӗҫ халь санӑн. Эс, ҫич ачаллӑ хӗрарӑм пек, ку таранччен килтен тухса каяймастӑн!

Миҫе ҫул ӗнтӗ Мархва вӑхӑт ҫитменнипе аптрать. Уяр ҫанталӑкра мар, йӗпе-сапара та пӗр кун та килте йӑпанса лараймасть-ҫке вӑл. Ялан ҫынсене ӗҫе йыхӑрмалла. Ӗҫӗ вара чакмасть, кунсерен хутшӑнса пырать. Утӑ ҫулса пӗтернӗ ӗнтӗ, ак тепӗр эрнерен тырӑ вырма тухмалла, кукурузӑна силос валли ҫулма тытӑнмалла, улма кӑлармалла, кантӑр татмалла. Ҫук-ха, Мархвашӑн пушӑ вӑхӑт пӑхса та курӑнмасть. Ҫуртне те туса пӗтермен ав, кантӑк лартнӑ та кӑмака тутарнӑ, ҫавӑ ҫеҫ. Кӑмакине шуратман та-ха, урайне те сӑрлаттарман. Хӗлимун урайне хам сӑрласа паратӑп тенӗччӗ, вӑл та курнӑҫланчӗ ав, хӑйне пырса пуҫҫапасса кӗтсе пурӑнать. Кӗттӗр-ха, ытларах кӗттӗр, тет Мархва. Ҫурт лартма вӑй ҫи-

тернине ытти вак-тĕвекшĕн ҫын кусĕнчен пăхать-и вăл? Халь ун вăхăчĕ ҫук, ҫавă хуплать. Апатне те йĕркеллĕ ҫиеймен ав бригадир, хăярпа ҫăкăрне ҫул ҫинчех ҫырткаласа пырать. Шевле старике асăрхасан ҫеҫ Мархва кăшт чарăнса тăрать: ирхи апата кунашкал тунине ҫынна кăтартма юрамастех, ĕнтĕ, ҫывăрса юлнă тесе шутлĕҫ тата.

Мархва бригадира кĕнĕренпе такампа та харкашса, урлă пулса курнă пуль, анчах Архип Лукичпа пĕрре те вăрҫман-ха. Бригадир ҫĕр ĕҫне лайăх пĕлекен старикпе туслă пулма тăрăшать, никам сăмахне итлемесен те, ун сăмахне итлетех.

Вĕсем хальхинче те пĕр-пĕрне ыррăн сывлăх сунчĕҫ.

— Ĕнтĕ хăвăн команднăй пунктна ҫакăнта куҫарма шутларăн-и, Архип Лукич?— терĕ Мархва, уй варринчи кивĕ вышкă патне пырса тăрса.

— Ку вырăнтан ҫут тĕнче лайăхрах курăнать,— хуравларĕ Шевле.—Эс килĕшсен, эпĕ паянтан ку вышкă патне хуралҫăсем тăратассăн-ха.

— Ҫак ишĕлчĕк япалана хураллама-и?

— Вышкине те пăхас пулать, кукурузăна та сыхламалла.

— Камран?

— Ăна ĕнтĕ ҫавсенчен ыйт,— терĕ Шевле, кукурузă ăшĕнчен кăштăртатса тухнă Сашăпа Юркă ҫине кăтартса.—Вĕсем калаҫҫĕ, кукурузăна кураксемпе ҫерҫисенчен сыхламалла, теҫҫĕ. Сыхлăр, терĕм вара. Ав вĕсен пăшалĕсем те пур. Сан вĕсене ĕҫ кунĕсем памалла пулать, бригадир.

— Ĕҫ кунĕ тата! Кукурузăна таптаса ҫўренĕшĕн хăлхисенчен туртам. Эй, эсир, йĕпе сăмсасем, мĕн тума тухнă ҫакăн пек ир?— кăшкăрчĕ Мархва ачасене.

Сашăпа Юркă, аллинчи уххисене пеме хатĕр тытса, мăн ҫынсем патне пырса тăчĕҫ.

— Мĕн тума килнĕ эсир кунта ир-ирех?

— Кукурузăна хураллама,— терĕ питĕ ĕҫлĕн Юркă.

— Упапа кашкăртан хураллатăр-и-ха?

— Ҫук, кураксенчен.

— Кураксем ахаль те тутă халь. Вĕсем кукурузăна тапăнмаҫҫĕ.

— Тапăнаҫҫĕ. Эпир ĕнер куртăмăр. Ак Варук инкерен ыйт,— терĕ Сашă.

— Сыхлаччăр ĕнтĕ,— вĕсен хутне кĕчĕ Шевле старик.—Юри ҫапла ир тухнă вĕсем. Кăҫал ку йĕкĕтсем мана нумай пулăшрĕҫ.

— Варукпа Сухви мĕн тăваҫҫĕ сан?— ыйтрĕ бригадир, ачасем ҫинчен манса кайнă пек пулса.

— Вĕсем нимĕҫ пăрҫи патĕнче ĕҫлеҫҫĕ. Нимĕҫ пăрҫине темле пыйтă тапăнать, бригадир.

— Каллех инкек апла?

— Инкекĕ ҫу касиччченех ĕнтĕ вăл, тырпула пуҫтарса кĕртиччченех.

— Ну, асап кăтартрăн та эс мана кăҫал хăвăн кукурузупа, Архип Лукич! Нихҫан та кун пек тертленмен эпир...

— Асапĕ пулчĕ ĕнтĕ,— кўренмесĕр каларĕ Шевле старик.—Виҫĕ ҫул ĕҫлеменнине ĕҫлерĕмĕр. Ҫапах та чăн-чăн кукурузă ўстертĕмĕр, ҫапла-и? Куратăн пуль, парафинпа хутăштарнă кукурузă пĕтĕмпех пуҫ кăларать. Пасара кайса та сутма пултаратăн ун чаканĕсене. Вăл пирĕн вăтăр гектар...

— Лешне тек ҫумламалла мар-и ĕнтĕ?

— Ҫук, халь вăл ҫум курăкне парăнмасть.

— Эп татах ҫумлама хушатăн тесе. Ай, тинкене кăлартăн кăҫал, Архип Лукич! Пĕрре канма памарăн ҫу касиччен. Пĕлетне, эп акана тухнăранпа хулана кайса курман.

— Ҫанталăк ҫавăн пек пулчĕ, Марфа Осиповна,— ăнлантарнă пек каласрĕ Шевле.—Ҫăвĕпех ҫумĕр ҫурĕ-ске. Сиверех тăнипе кукурузă вăхăтра шăтаймарĕ, тăпра пирченсе кайрĕ. Кăҫалхи пек ҫум курăкĕ ашкăрнине эп хам та нумайранпа курман. Юрать-ха Никодим ăс пачĕ, пĕр пайне парафинпа хутăштарса акрăмăр. Тепĕр ҫул ăслăрах пул, бригадир, пĕтĕм вăрлăха парафин тусанĕпе хутăштар. Вăл кукурузăн ўсес вăхăтне — вегетацине ҫав тери кĕскетет иккен.

— Вăрман хĕрринчи участокра пуҫ кăлараймасть-и ĕнтĕ?— пĕлесшĕн пулчĕ Мархва.

— Ҫук, ĕлкĕреймест. Ăна ҫилослăх маларах ҫулса илетпĕр. Тухасса та унта силослăх курăк сахалтарах тухать.

— Ку чакансемпе мĕн тăватпăр, Архип Лукич?

— Ним те тумастпăр. Силоса каять. Пит тутлă силос пулать унран, акăш-макăш лайăх силос пулать.

— Кĕтерука савăнтаратăн ĕнтĕ.

— Чипер пуҫтарса кĕртсен, такам та савăнмалла-ха та ăна,— терĕ Шевле.—Ав ҫумăр хăратса тăрать. Кăҫал пĕлĕт маччи шăтнă тейĕн, тăкать те тăкать ҫумăр...

Ял леш енче, ыраш пуссинче, Мархва председательпе агронома шыраса тупрĕ. Тата тепĕр ҫын та пур иккен вĕсемпе. Бригадир ăна ҫывăха ҫитсе тухмасăр та паллаймарĕ. Ку ҫын райком секретарĕ Лукьяненко пулчĕ.

— Ҫуртри ытла чаплах мар сирĕн, анчах ыраш вăйлă. Тăватă ялăн та вăйлă. Пушă пучахсем те курăнсах каймаҫҫĕ,— Мархва пырса ҫитсен те каласма пăрахмарĕ Микола Платонович.—Шăркана ларнă хушăра уй тăрăх вĕрен карса ҫўремерĕр пулĕ те, Туймедова юлташ?

— Çук,— терĕ Мархва.—Пире вăрман çывăх пулнине çăлса хăварчĕ пулмалла.

— Çапах та вăйлă ĕçленĕ эс, Марфа Осиповна. Сана мухтаса илме юрать-и çак?

— Темĕн-çке, эп кăшкăрашнинчен усси пулайрĕ-ши? Архип Лукич тесен, ĕçлерĕ-тĕк ĕçлерĕ вара пирĕн...

— Тулă та чипер,— терĕ Лукьяненко, умра тем анлăш сарăлса выртакан тулă пусси çинелле киленсе пăхса.

— Уншăн чи малтан агронома тав тумалла,— сăмах хушрĕ Яштайкин.—Çăлчĕ пире хăйĕн тислĕкĕпе. Питĕ вырăнлă пулчĕ вăл хатĕрлеттернĕ торфпа тислĕк компосчĕ. Эпир кăçал тăкнă тислĕке колхоз вунă çул хушшинче те тăкман пулĕ...

— Унăн усси ӳлĕмрен те çухалмĕ-ха,— терĕ райком секретарĕ.—Тăкнă тислĕк тăпрана тепĕр çулхи тыр-пул валли те тулăх апат парĕ.—Çавăнтах вăл Яштайкина кăт! çеç чавсаран тĕкрĕ.—Атя, иксĕмĕр кӳршĕсем патне çитсе куратпăр. Вăхăту пур-и сан?

— Кайса килме пулать,— килĕшрĕ Яштайкин.—Анчах эсĕ мана районĕпех сĕтĕрсе ан çӳре вара. Юрать-и?

— Юрать,— терĕ Лукьяненко.—Хам кăмăллакан пĕр председатель патне çеç кĕрсе тухатпăр. Хăйне кура ăста хозяйственник. Саншăн çĕнни питĕ нумай унăн.

Райком секретарĕпе председателе ăсатнă хыççăн Мархвапа Никодим Федорович иккĕмĕш хут лартнă çĕр улми йăранĕсем тăрăх ялалла таврăнчĕç.

— Эс илтнĕ-и?— терĕ Никодим пăртак чĕнмесĕр пынă хыççăн.

— Мĕн пирки?

— Иксĕмĕр пирки, ара.

— Илтмен. Калаçма пуçланă та-и?

— Пуçланă. Ĕнер кĕтӳ хăваласа таврăнакан хĕрарăмсем çул тăршшĕпе пире шĕкĕлчесе пычĕç, тет. Часах туйĕ пулать вĕсен, тесе калаç, тет.

— Вара мĕн?— куçран тӳррĕн пăхса ыйтрĕ Мархва.

— Ним те мар. Чапа кăларăççĕ пире, çавă анчах. Сан Матĕрнӳ каласа кăтартнă пулĕ-ха сынсене.

— Эс мĕн тесе шутланă? Каçсерен вăрттăн çӳретĕп те, унта пулнине никам та сисмест тенĕ-и? Уй куçлă, вăрман хăлхаллă, тăванăм.

— Çапах та сыхланас пулать, Мархва,— терĕ Никодим, ăна шыв çурса кайнă вырăн урлă сиксе каçма пулăшса.—Упăшку персе çитсен, тем курса ларасси пур. Ялти сын элеклесе пама юратать-çке...

— Ку элек-и вара?— Мархва, вăл мĕн калассине кĕтсе, чарăнса тăчĕ.

— Элек теместĕп, çапах та аван мар-çке.

— Апла тек пымастăн та пуль?

— Эс мана ăнланмарăн, Мархва,—Никодим ун патне çывхарчĕ те бригадира хул хушшинчен тытма хăтланчĕ.

Мархва ăна хыттăн тĕртсе çеç ячĕ.

— Кай, хăравçă агроном!— терĕ вăл.—Эпĕ сана питĕ лайăх ăнлантăм. Ан пыр. Тек сана пырсан та кĕртместĕп! Ак кĕçĕр пыратăн — кĕртместĕп!

Вăл аллинчи пулса çитмен шăпкан аврине ун çинелле ывăтрĕ те, йăрансем урлă çăмăллăн сиккелесе, çуртри пусси хĕррине тухрĕ, качча тек пĕр сăмах чĕнмесĕр хăвărттăн хирелле утрĕ. Мархва кунашкал хивреленнине пĕрремĕш хут куракан Никодим тĕлĕнсе кайнипе ăна мĕн те пулин каласа тытса чарма та пĕлмерĕ.

2

Элтюкка хăйĕн Володине кĕтет. Халь ĕнтĕ ĕç ытла нумай мар пек каччăн, кĕрсе тухма пултарать вăл ял варринчи клуба. Вулама илнĕ кĕнекине килсе пама та вăхăт, мĕн тума темиçе эрне тытса усрамалла лайăх кĕнекене? Ĕнер çур çĕрччен çумăр çурĕ, çавăнпа килмерĕ пулĕ ĕнтĕ. Паян çула май та пулин кĕрсе тухать-тĕр-ха. Халь калаçса юлмасан, тырă вырма тапратсан вăхăт пулас çук унта. Механизатор тесе, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттерĕç-ха ăна.

Юрĕ-çке, Элтюкка кĕтме вĕреннĕ. Ĕлĕк вăл каччăшăн тунсăхлама пĕлместчĕ, ак пурнăç вĕрентрĕ. Ĕлĕк вăл камернăй музыкăна юратмастчĕ, халь юрататъ. Володьă çук чухне, ăна аса илсе, ун пластинкисене темиçе хутчен çавăрттарать. Нимрен те начар мар вăл юрăсем. Такама та килĕшмелле.

Элтюкка каччине кĕтсе илеймест, хыçалти урампа тӳрех хирелле çул тытать. Амăшĕ те хиртех пулĕ-ха. Сашăпа Юркă та ун патĕнчех апат çиеççĕ пуль. Элтюкка та килте вĕри апат пĕçерсе тăрас çук, вĕсемпе пĕрле çырткалĕ те каялла таврăнчĕ.

Чăнах иккен. Сашăпа Юркă вышкă çинче курал тăраççĕ. Аллисене иккĕшĕ те йывăç пăшал тытнă, пăшалĕсене тĕллеççĕ, шакăртмисене таçта илтĕнмелле шакăртаттараççĕ. Кураксем хăрамасан та, çерçисем кăштах шикленеççĕ пулĕ çав. Шевле старикĕн чăн-чăн пăшал та пурччĕ-ха çуркунне, ăна ĕнтĕ ачасене тыттармасть-тĕр.

— Атьăр киле, робинзонсем!—терĕ Элтюкка, çĕмрĕк картлашка тăрăх аран-аран çӳле хăпарса çитсе.

— Çук, эпир Архип Лукич хушмасăр киле каймастпăр,— хуравларĕ мăнаçлăн Юрки.

— Вăл сирĕн пуçлăх-и ĕнтĕ?

— Пуçлăх.

— Сирĕн пуçлăх эпĕ мар-и вара?

— Çук, эсĕ мар.

— Ну, киле пырăр-ха, эппин!— пўрнепе юнаса каларĕ Элтюкка.— Кăтартăп эп сире кам пуçлăх иккенне!

— Эпир кĕçĕр киле пымастпăр, Элтюкка аппа! Кунтах çывратпăр.

— Шăшисем çисе ярасран хăрамастăр-и?

— Хăрамастпăр.

— Ыран курăп-ха, сăмсана шăшисем кăшласа янă тесе макăраканни кам пулĕ унта.

— Ан суй, ан суй,— терĕ Сашă.— Вĕсем сынна тивмеççĕ. Вĕсем çĕр айĕнче, шăтăкра. Çапла-и, Юркă?

— Çĕр айĕнче çав,— терĕ харсăррăн Юркă.

— Ну, пыратăр-и эсир киле, пымастăр-и? Нумайччен тархасласа тăмалла-и манăн сире?

— Пымастпăр!— татăклăн пĕлтерчĕç ачасем.— Архип Лукич каламасăр кунтан ниçта та хăпмастпăр.

Шевле старикпе ĕçлесе, ачасем чылай çĕнĕ япала пĕлекен пулнă иккен. Вĕсем иккĕш те ухă йĕпписем тума, çĕмĕрен яма вĕреннĕ. Юркă тата çывăрма выртас умĕн Варук инкепе Элтюккана пĕр мыскара кăтартса култарса пĕтерчĕ.

Килти выльăхсене шăварнă чухне Элтюккана валашка кирлĕ пулчĕ. Вăл пысăках мар валашка нихçан та çухалакан марччĕ-ха, çăра шывпа улма хупписем тултарса лартнă сăра хуранĕпе юнашар яланах картишĕнчи пусă умĕнче ларатчĕ.

— Пирĕн валашкана кам илсе кайнă, анне?— терĕ Элтюкка, ăснă витрипе унталла-кунталла çаврăнкаласа.

— Пĕлместĕп,— терĕ амăшĕ.— Чăнах, кам йăтса кайма пултарнă ăна?

Картишĕнчи валашка ниçта та тупăнмарĕ. Пахчана тухса пăхрĕç — вăл купăста йăранĕсем хушшинче лара парать. Туллиех шыв тултарнă унта.

— Эп Юркăна купăста шăварма хушнăччĕ, çав илсе тухнă ĕнтĕ,— терĕ амăшĕ.

— Юркă, эс валашкана ма шыв тултарса лартрăн?— ыйтрĕ Элтюкка тем айкашакан ачаран.

— Çумăр çутаратăп!— пĕр кулмасăр тавăрчĕ лешĕ.

— Ун пек лартсан, çумăр çăвать-и?

— Çăвать çав. Архип Лукич калать, çумăр пĕлĕчĕсем пирĕн паталла шыв туртса илнипе килеççĕ, тет. Ак кĕçĕр çĕрĕпе ларать те вăл, ыран пирĕн пахчара çумăр çăвать.

— Вара мĕн?

— Вара манăн ыран купăстана шăвармалла та пулмасть. Çапла-и, Варук инке?

Варук инке тавăрса калас вырăнне ахăлтатса кулса çеç ячĕ.

Элтюкка çеç парăнмарĕ Шевлен пĕчĕк тусне.

— Сан валашку питĕ пĕчĕк-çке, Юркă. Çумăр пăртак çеç çусан, вара мĕнле?— ыйтрĕ вăл.

— Вара шăварма лекет,— терĕ Юркă.

Çапла каласса татăлса, вĕсем пахчаран картишне кĕчĕç. Тулли валашка хăй вырăнĕнчех ларса юлчĕ.

3

Ял вĕçĕнче таçта комбайн кĕрлет, çывăхра, çул хĕрринче, хĕрарăмсем ўкнĕ ыраша çурлапа выраççĕ. Хĕлимун, вĕсен куçне курăнас мар тесе, ыраш пуссинчи çинçе сукмакпа пĕшкĕнерех утать. Картусне вăл çамки çине пусса лартнă, кăмпа пуçтармалли кунтăкне, çĕр çумĕпе сĕтĕрнĕ пек, аялтан илсе пырать. Ак ăна хирĕç сукмакпа пĕр хĕрача килни курăнса кайрĕ. Хĕлимун кунтăка хăвăрттăн ыраш ăшнелле ывăтрĕ, хăй ним пулман пек малалла утрĕ. Чĕмсĕррĕн иртнĕ хĕрача куçран çухалсан, лач! сурса такама киревсĕр сăмахсемпе вăрçса илчĕ, каялла таврăнса, хăй хăварнă кунтăка шыраса тупрĕ, унтан, ăна пасăрхи пекех çĕр çумĕпе сĕтĕрсе, вăрман хĕрринелле пăрăнчĕ. Хăрасси пĕтмерĕ-ха унăн, вăл çав-çавах, мулкач пек, унталла-кунталла пăхкаласа пычĕ. Мĕн тăвас тетĕн, сынсенчен аван мар-çке пĕтĕм халăх хирте ĕçленĕ чух кăмпана кайма. Анчах каймасан та май çук: вăрманта хурăн кăмпипе хыр кăмпи хĕп-хĕрлĕ шăтса тухнă. Тăварласан, ăна халь хула пасарĕнче витри-витрипе сутма пулать.

Вăрмана кĕрсен вăл сехĕрленме пăрахрĕ курăнать, çăка пушăтĕнчен сарлака пиçиххи туса, кунтăкне сулахай хулпуççи урлă çакса ячĕ. Кĕсьерен пĕчĕк çĕçĕ кăларчĕ, тĕл пулнă пек кăмпана, кăчăрт! кăчăрт! касса, савăта майлаштарса хума пикенчĕ. Хутран-ситрен ăна хыр кăмпипе хурăн кăмпи кăна мар, кăрăçпа шурă кăмпа та тĕл пулчĕç. Хĕлимунăн кунтăкĕ тулнăçемĕн тулса пычĕ.

Юлашки кунсенчи ăшă çумăрсем хыççăн кăмпа питех те йышлă ĕрчесе кайнă иккен. Хĕлимун ўкĕнсе те илчĕ: тем тесен те, икĕ кунтăк çакса тухмаллаччĕ, терĕ. Халь мĕн тумалла ĕнтĕ, ку кăмпана киле леçсе вăрмана тепре килмелле-и? Эх, кăмпана ма çĕрле татмалла туман-ши? Çĕрле, пĕтĕм халăх çывăрнă чух татас пулсан, вăл ăна никамран хăрамасăр лавĕ-лавĕпе хатĕрленĕ пулĕччĕ.

Кăмпа тин шăтать-ха, хуртланма ĕлкĕрмен. Хĕлимун масла кăмпине çеç суйлакалать,

ыттине тĕрĕслемесĕр-тумасăр тӳрех кунтăка хурать. Алпа тытса пăхсах туять вăл — пĕр хурт та çук вĕсенче.

Çапах та кунтăк шăлами тулнă ĕнтĕ. Умри темиçе карта кăмпана ытараймасăр, Хĕлимун картусне пуçран сӳсе илет. Анчах картуса мĕн чухлĕ кăмпа кĕтĕр? Вăл тем аса илнĕ пек пулать те хăвăрттăн çиелти кĕпине хывма тытăнать. «Пасăрах çапла тумалла пулнă,— савăнать Хĕлимун.—Халь çак хурăнлăха та кĕме юрать ĕнтĕ. Унта кăрăç йышлă пулакан».

Темле путлăхра ăна вăрмана тин килнĕ Акку Иванĕ тĕл пулать, вĕсем мĕнле кăмпа шăтма ĕлкĕрни çинчен, çанталăк çинчен калаçкаласа тăраççĕ. Юлашкинчен сăмах пине çитет, вĕсем, пĕр-пĕрне ăнăçу сунса, иккĕш ик еннелле уйрăлса каяççĕ.

Ял хыçне Хĕлимун васкамасăр, пасăрхи пек çав тери сыхланса пырса тухать. Телее, ăна никам та асăрхамарĕ пулас. Хăйĕн пахчи тĕлне çитсен вăл тепĕр хутчен йĕри-тавралла пăхса илчĕ те кунтăкĕпе кĕперен тунă хутаçне карта урлă çĕклесе каçарчĕ, хăй карта тулашне çерем çине чĕлĕм туртма ларчĕ.

Шутласан тĕлĕнсе каймалла çав: мĕнле ухмах ăспа чарăнса тăмалла пулнă-ха çакăнта, чĕлĕм туртса кама кĕтмелле пулнă унăн? Килне çитрĕн-тĕк, часрах пахчана кĕрсе кай та никам куçне те ан курăн! Кам пĕлнĕ, тепĕр тесен, ăна хăйĕн пахчи хыçĕнче инкек кĕтсе тăнине!

Юнашарах çĕрĕк карта—шатăрт! турĕ, Хĕлимун умне çамрăк агроном Никодим Федорович тухса тăчĕ. Кам патне килнĕ пулнă-ши вăл ку таврана? Ун аллинче мĕнле япаласем пурччĕ-ши? Тупата туршăн, нимĕн те астумасть халь Хĕлимун.

— Эс мĕн туса ларатăн кунта, Филимон Петрович?— терĕ Никодим яланхи пек кăмăллă сасăпа.

— Ларатăп-ха,— чиперех тавăрчĕ ăна Хĕлимун.—Ывăннă пек пултăм та чĕлĕм туртса ярас терĕм.

— Юрать, юрать,— терĕ кайма тăнă агроном. Анчах карта леш енче пĕр кунтăк кăмпа ларнине асăрхарĕ те сасартăк тап! чарăнса тăчĕ.—Э-э, ывăнмалăх пур, Филимон Петрович! Кăмпаран таврăнатăн иккен-ха эсĕ. Аван, аван. Самăй кăмпана çӳремелли вăхăт халĕ! Тырă вырнă чухне татса юлмасан, хăçан татса юлăн ăна? Çапла-и?

Ĕнтĕ агроном сасси малтанхи евĕр кăмăллăн илтĕнмерĕ, Филимон Петрович тенинче хисепленинчен ытларах йĕкĕлтени туйăнса тăчĕ, аван, аван тесе те ăна мухтаса мар, тиркесе те сивлесе каларĕ.

— Ан хăра, тырă вырма та тухăпăр,— сăмах хушрĕ Хĕлимун, мĕн калам-ши кăна тенĕ пек шухăшласа ларнă хыççăн.—Паян ерçеймерĕм ав. Вăрмана кайса килмелли тупăнчĕ...

— Куратăп, куратăп,— çийĕнчех тавăрчĕ Никодим Федорович.— Ыран мĕнле ĕнтĕ? Ыран тухатни тыр вырма? Ав тыр-пул мĕнле йăтăнса пулнă, Филимон Петрович. Сая ярас марччĕ çав пурлăха.

— Куç курать унта. Ытла чĕнсен — тухатăп, чĕнмесен — тухмастăп. Эп ват çын ĕнтĕ, агроном, мана ирĕксĕр ĕçлеттерейместĕн.

Ку сăмахсем Никодим Федоровича пĕрре тĕлĕнтерчĕç, тепре тарăхтарчĕç. Вăл, кайма тăнă çĕртен çывăхарах пырса тăрса, хĕрӳллĕн калаçма пуçларĕ:

— Мĕн кирлĕ мара пуплетĕн, Филимон Петрович? Ăçтан ват çынсен шутне кĕртме пулать-ха сана? Этем аллă урлă каçман, йĕкĕлтесе эп ват çын тесе ларать. Намăс та мар-и сана, Филимон Петрович? Ма эс çынсене çав тери ухмах вырăнне хуратăн?

— Ватлăха çулпа кăна виçмеççĕ, Никодим Федорович,— лăпкăн çеç хуравларĕ Хĕлимун.

— Мĕн, чирлĕ тесшĕн-и эс хăвна?

— Чирлĕ пулмасăр!

— Апла справкă ил. Больницă хамăр ялтах. Анчах колхозран ун пек ан мăшкăла.

— Кирлĕ пулсан, справкă та илетĕп. Ман пек инвалида темле врач та хут туса парать. Ак ыран кĕрсе кур ман справкăна. Правлени çыннисене пурне те ертсе килме пултаратăн.

Хĕлимун çерем çинчен тăчĕ те майĕпен карта урлă каçрĕ, агроном çине çаврăнса пăхмасăр кăмпа кунтăкĕпе хутаççине илсе, пахчи тăрăх килнелле утрĕ. Агроном вăл чылай инçене кайсан тин вырăнтан хускалчĕ.

— Вăт этем,— терĕ вăл сасăпах.—Вăт сана Филимон Яштайкин! Эп сĕмсĕр çынсене курканă, анчах Хĕлимун пеккине курман. Ахаль мар çапăçса пурăнаççĕ вĕсем Аристарх Петровичпа. Кунпа килĕштерме май та çук.

Каçхине колхоз правленинче Никодим Хĕлимун пирки Яштайкина каласа пачĕ. Куçнепуçне вылятса, йĕри-тавра хаяррăн пăхкаласа итлерĕ председатель Никодим сăмахне. Итлесе пĕтернĕ-пĕтермен Самукова тепĕр пӳлĕмрен Мархвана чĕнсе кĕртме хушрĕ.

— Итле-ха, Туймедова, эс паян Филимон Яштайкина ĕçе тухма каланă-и?— терĕ вăл, Мархва хăйĕн умне пырса тăрсан.

— Каламан.

— Мĕншĕн?

— Эп ăна нихçан та ĕçе чĕнместĕп.

— Ма чĕнместĕн-ха? Вăл сан бригадă çынни мар-им? Вăл колхозник мар-им?

— Эс пĕлетĕн-çке, Аристарх Петрович...— терĕ Мархва кăшт вăтанарах.

— Эп нимĕн те пĕлместĕп. Халь пĕтĕм ха-

лăх — ватти-вĕтти — хирте пулмалла. Хĕлимун мĕнле улпут вара? Мĕнле тивĕç пур ун çынсем тар юхтарса тырă вырнă чух вăрмана кăмпана çÿреме? Кĕçĕр кайса кала, арăмĕпе ирех тыр вырма тухтăр. Ыран кăнтăрла килсе систер — тухнă-и, тухман-и вăл тырă вырма. Юрать-и?

— Юрать, Аристарх Петрович.

— Вĕрентĕп эп ăна, çав путсĕр кулака, колхоз ĕнси çинче ларма...

Мĕн каласшăн пулчĕ-ши Яштайкин çак сăмахсемпе, мĕн шутласа хучĕ-ши вăл хăйĕн тăван пиччĕшĕ тĕлĕшĕнчен — ăна çак вăхăтра никам та калама пултараймарĕ. Тепĕр кунне вара ялта, çавăн пекех хирти тыр выракан халăх хушшинче тĕлĕнмелле хыпар сарăлчĕ. Икĕ Яштайкин, Аристарх Петровичпа Филимон Петрович, чĕп-чĕр юн пуличчен çапăçса кайнă пулать, кÿршĕсем вĕсем иккĕшĕ пĕр-пĕрне урамра çерем çинче йăвантарнине те курнă. Унтан вара Аристарх Петровичĕ сухапуçĕ кÿлсе пынă та Хĕлимун пахчинчи çĕр улмине урлă-пирлĕ сухаласа тăкнă. Хăш-пĕрисем каланă тăрăх, колхоз председателĕ пахча сухалама Володьă тракториста ярасшăн пулнă, анчах лешĕ, трактор юсавлă мар тесе, кайма килĕшмен, кун хыççăн Яштайкин тек çын тавраш ĕ шыраса та тăман, сухапуç кÿлме колхоз картишне хăй чупнă.

Ялта ку ĕç пирки тĕрлĕ çын тĕрлĕ калаçрĕ. Пĕрисем колхоз председателĕ тĕрĕс тунă, унсăрăн Хĕлимун пек кахалсене итлеттерме те, колхозра йĕрке тума та çук, терĕç, теприсем кăшт шикленсе те илчĕç: ытла тÿрккес ĕç мар-и ку, тырă вырма тухмасть тесе, лартнă çĕр улмине сухаласа тăкма юрать-ши вара? Кирек мĕнле пулсан та, Яштайкинсен хушшинчи тавлашу шала кĕрсе кайрĕ.

Каçхине хăйĕн пÿлĕмĕнче сĕлкĕшшĕн ларакан председателе Халапсин çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ: Филимон Петрович шăллĕ пирки чуху пама райкома тухса кайнă, терĕ.

— Ытлашши пулмарĕ-и ку санăн, Аристарх Петрович? Ман шутпа, кăшт ытлашширех пулнă пек туйăнать, ия, çавăн пек туйăнать,— мăкăртатрĕ хăй.—Эп ăнланатăп-ха, эс ют çыннăнне мар, пиччÿ пахчине сухаланă. Çапах та комисси килме пултарать яла. Лекет санпа иксĕмĕре, Аристарх Петрович, иксĕмĕре те выговор параççĕ ак...

— Сана нимĕн те лекмест, секретарь, эс сехĕрленсе те ан лар!— касса татрĕ Яштайкин.—Эс манпа пĕрле дисциплинăшăн кĕрешмен, пахча та сухаламан. Тав тăвас — тав тумалăх ĕçÿ çук санăн, ятлас — ятламалăх çылăху çук. Мĕншĕн выговор паччăр сана? Тĕрĕс калатăп-и?

— Ун пекех мар та, ун пекех мар та,— терĕ Халапсин, пÿлĕмрен тухса кайма васкаса.— Пăртак ĕçлекелетпĕр те пуль, ия, пухусене ирттеркелесех тăнă. Кирлĕ пек ыйтусене ялан сÿтсе явнă. Хăвăнне ху пĕл ĕнтĕ, Аристарх Петрович, мана айăп ан ту...

«Ку та тутине усрĕ,— терĕ хăй тĕллĕн Яштайкин.—Темскер, çынсене пит çилентерекен пултăм-ха эпĕ. Пиччепе çапăççах кайрăмăр авă. Чăнах райкома элек пама кайрĕ-ши вăл? Апла райком пуçран шăлас çук мана куншăн. Халапсин каларăшле, яла комисси килессине кĕтмелле мар-и?»

(Юлашки пулать).

Иван **МАЛГАЙ**

* * *

Курман эп каçса чикĕ урлă,—
Тухман хам Тăван çĕршывран.
Пĕлетĕп çапах: ăçта хурлăх...
Ăçта мăшкăлаççĕ çынран.

Çитетĕп таçта та, таçта та
Вĕççе шухăшпа хăш чухне,
Анчах тĕл пулмастăп ниçта та
Тăван çĕршыв пек ыррине.

Паллах, сахал мар хитре вырăн,
Вĕсем пур çĕрте те пурах.
Мана пур пĕрех хам çĕршывăм
Ялан килĕшет ытларах.

Мĕне тăрать Атăлĕ унăн,
Мĕне тăрать Днепр, Байкал...

. . . .

Юратнă аннесĕм — çĕршывăм
Сана çитекенĕ çук халь.

Икĕ сăвă

ЮЛТАША

Эс инçетре.
Чĕкеç пек вирхĕнсе
Салантăмăр мĕн пур кĕтессене.
Художник эс:
Ĕмĕтÿпе çиçсе
Эс тупрăн пурнăçри çут тĕссене.

Тупасшăн эпĕ те чунри сасса,—
Çуралнă çĕр ыр тус пек пулăшать.
Шансам: шăнкрав пек уçă та таса
Вăл янăрĕ, вăл çĕклĕ шухăша.

Çĕр хăй те вăл юрлать — илтетĕп эп —
Юрлать ун шывĕ, чулĕ те юрлать.
Чĕреçĕм карăнтарнă хĕлĕх пек —
Ăçтан тÿлек тапма вăл пултарать?

Паллах, сассем пулаççĕ тĕрлĕрен,
Тĕссем те тĕрлĕрен...
Анчах Кун-çул
Пире салхуллă çемĕ ĕнĕрмен:
Ун ăслă сăмахне итленĕ пул!

Тăван çĕршыв!
Сан тĕсÿпе сассун
Илемĕпе çуталнă кăмăла
Телей лăпкать.
Çĕкленнĕ çамрăк чун
Сан халупа вĕçесшĕн кăйкăрла.

Çур ăшшинче ака тапраннă чух,
Çу кунĕнче тыр-пул хумханнă чух,
Кĕр пичкинче сăра пылланнă чух,
Хĕл сиввинче вăрман турттарнă чух —
Мĕн пек хитре сан сыннусен чĕри!

Эс ху та çамрăк пикелле хитре.
Тен, çавăнпа ман юрату вĕри?
Тен, çавăнпа чуна пусмасть тĕтре?

Çĕршыв...
Эс ху та ятăн юрласа:
Ĕçрен килеççĕ сыннусем яла.
Шавлать Кĕтнем çĕн ÿсĕме савса
Поэмă вулакан яш сăвăçла.

Вăл пирĕн шухă çамрăклăх пекех
Чупать,васкать — çитес çĕре çитет.
Тăванăм, çавăнпа пуль кулленех
Чĕремĕрте телей шевли сикет?

* * *

Каллех сĕм тĕттĕм, чĕмсĕр каçпала
Çыр хĕррине тăрса эс юлтăн шăппăн.
Тухаççĕ пулăçсем инçе çула,
Ăçтан-ха сулхăн çырантан эс хăпăн?

Пĕр ушкăн кĕмĕл хум йăлтăртатса
Сан паталла чупать, ав, ăмăртуллăн:
«Лăплан. Ан хуçăл. Юрату таса»,—
Тесе каланăн туйăнчĕ хăюллăн.

Чÿхерĕ те сив чуллă çырана
Çухалчĕ хăвăрт ушкăн хум-хыпарçă.
Шĕл-кăварланнă юрату чунна
Ĕненÿпе телей шевли хăварчĕ.

Ыран ирех вăл таврăнĕ.
Кулли
Сан чĕрÿнте телей чечекĕ акĕ.
Сана ун кăштăркка, вĕри алли
Çупăрласа ачашшăн илĕ акă.

Хумсем çинче сип-симĕс шевлесем
Асамлăн йăлкăшса вылянă майăн,
Савăнăçпа çуталĕç куçусем —
Тусу енне пуçна эс шăппăн тайăн.

Ан ман: санпа тĕл пуличчен хăйне
Вăл «тинĕсĕн ачи эп» тенĕ мар-и?
Пĕл: тинĕс тĕрĕсленĕ ун вăйне —
Çил-тăвăлра вăл хăрамарĕ.

Асту: санпа тĕл пулнă хыççăн, тем,
Çыран çинчех, çыран çинчех ун куçĕ.
«Сана пула писет манран этем!»—
Хăй çыранне çиленчĕ тинĕс уççăн.

Çиленнĕрен вăл кайрĕ хуралса,
Тĕреклĕ çырана ватасшăн урчĕ.
Анчах сана курсассăн, вăтанса,
Вăл чакрĕ... чакрĕ каялла — лăш пулчĕ.

Хăй сăн-питне вăл курчĕ куçăнта.
Сенкер куçри чечен-чечен йăвашлăх
Çĕнтерчĕ тинĕсе.
Сан умăнта
Тупасшăн вăл та лăпкăлăх, ачашлăх.

Юрий ЗБАНАЦКИЙ

Çĕнĕ Кун Аки

Украинăри паллă писатель, Совет Союзĕн Геройĕ Юрий Збанацкий ятне пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ. Унăн чăвашла куçарнă «Кăйкăр вăрманĕнче» повеçне тата калавĕсене республикăри ĕç çыннисем кăмăлласа йышăнчĕç. Иртнĕ çулсенче Юрий Збанацкий чăваш поэзине пуçласа янă поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен, вăл пурăннă вăхăт çинчен «Çеçпĕл» ятлă пысăк роман çырса пĕтернĕ. Роман Киевра 1961 çулта украинла тухнă. Çитес çул вăл Шупашкарта уйрăм кĕнекепе пичетленмелле. Ăна Александр Алга чăвашла куçарнă. Альманахăн ку номерĕнче эпир хамăр вулакансене «Çеçпĕл» романăн хăш-пĕр сыпăкĕсемпе паллаштаратпăр.

XV

Чухăнсен комитечĕн пуçлăхĕ мар пулмаллаччĕ Пакрышенĕн, иккĕмĕш е виççĕмĕш класра вĕренмеллеччĕ. Пурне те пĕлме тăрăшнине кура, вĕрентекен ăна çав тери юратнă пулĕччĕ.

Пĕр саманта та канăç памасть Хĕветĕр Михаил Кузьмина. Теме те пĕлесшĕн вăл: мĕнле çĕршыв вăл — чăваш çĕршывĕ, мĕнле çынсем вĕсем чăвашсем, епле пурăнаççĕ, мĕн çиеççĕ, мĕн ятлă турра кĕл тăваççĕ?— ыйтать те ыйтать.

— Пӳртсем сирĕн пирĕнни пек-и е урăхла-и? Илтсеттĕм эпĕ, таçта негрсем е индеецсем кимĕсем çинче е хӳшĕсенче пурăнаççĕ иккен. Тен, сирĕн те çаплах?

Кузьмин хăй сисмесĕрех Пакрышень çумнерех ларчĕ, Украинă поэзине юрататакан çак çынпа унăн çывăх пулас килнине туйрĕ. Пакрышеньпе пĕрле чухне ăна çăмăллăх килнĕ, вăл иртнĕ пурнăçăн киревсĕр енĕсене, пĕтĕм хуйха-суйха манса кайнă. Хĕветĕр ун тăван халăхĕн пурнăçĕ çинчен пĕлесшĕн пулни ăна хумхантарнă, чĕрине вĕрилентернĕ. Юлташĕ ыйтнине каласа пама тăрсан, вăл шухăшĕçуначĕпе Чăваш çĕршывне вĕçсе кайнă, тăван çĕрĕ-шывĕшĕн, тăван чĕлхишĕн чунĕ ыратнине туйнă. Пакрышень ыйтнине хирĕç каласа панă чух вара хăй хĕрнĕçем хĕрсе кайнă, ун куçĕ умне картинă хыççăн картинă туха-туха тăнă.

— Пӳртсенче пурăнатпăр. Чухăн пирĕн пӳртсем. Халĕ те-ха, таçта хĕсĕнсе ларнă ялăмăрсенче, çынсем хура пӳртсенче пурăнаççĕ. Хура пӳрт * вăл — мĕнле ăнлантарас-ши сана — хура пӳрт, унта пĕтĕмпех хура, мĕншĕн тесен вăл тĕтĕм кăларса ямалли мăрьесĕр, чӳречисем çав тери пĕчĕккĕ. Вучах хутса ярсан, тĕтĕм тулалла тухса кайтăр тесе, алăк уçса пăрахаççĕ...

— Хĕлле те çапла-и?

— Хĕлле те. Мĕн тăвăн, тĕтĕм куçа çиет, пыра антăхтарать.

— Апла иккен... Тĕтĕм хыççăн сывлăш?

— Ăнланаймастăп...

— Тĕтĕмпе пĕрле ăшă та тухса каять-и?

— Ăçта тытăнса тăтăр вăл? Çутă та вăл пӳртсенче тахçанхи-авалхи. Çеклĕ çине хăйăсем чĕрсе çакаççĕ, ун тĕлне, урайне, кăварĕ ӳксенех сӳнтĕр тесе, витрепе шыв лартаççĕ. Хăйă çунать, тĕтĕм кăларать — çапла пӳрт ăш-чикки кăшт çуталать.

— Пирĕн те çав хăйăсенчен нумаях пулмасть хăтăлчĕç, каганецпа усă кураççĕ,— ассăн сывларĕ Пакрышень.— Чухăн çынсен пурнăçĕ кирек ăçта та пĕр, курăнать.

— Хальхи пек астăватăп: хăйă вĕлтлетсе çунать, анне кĕнчеле арлать — кам пĕлет, курнă-ши вăл çиппине? Пӳрнисем хăйсем тĕллĕн çăмхаланă-тăр; атте, çутă патнерех ларнă та, çăкаран сӳнĕ пушăтран çăпата тăвать. Çăпата вăл — урана тăхăнмалли япала. Чухăн çын урине ата-пушмак кĕмест. Кивĕ çăпатапа ĕçе каять, ухва — çĕннине сырать. Килĕнче çăпати нумай пулсан, çын чухăн шутланмасть, вăл хăй те çăпатаран пуяннипе мухтанать...

— Авă мĕнле иккен... çапла иккен... Пирĕн те çавах. Çу каçах, çуркуннерен пуçласа хура

* Ку сăмаха чăвашла çырнă.

кӗрчченех, ҫăпатапа ҫӳретпӗр,— йӳнӗ те, ҫемҫе те.

Нимпе те тӗлӗнтерейместь Кузьмин Пакрышене. Ăна чăвашсен йăли-тӗселӗ, пӗтӗм пурнăҫӗ, Кашкăр Тăвӗ ҫинчи пек мар, йăлтах урăхла, интереслӗрех, хăйсен евӗрлӗрех туйăннă — курман халăх ҫинчен инҫетрен ҫапла шухăшланă вăл, анчах, курăсăр, нуша кирек ăҫта та пӗр пек иккен.

— Атăл питӗ сарлака пулас?

Кузьминăн кăмăлӗ уҫăлса каять. Атăл! Мӗн калас Атăл ҫинчен? Мӗнле сăмах тупас? Еҫрен пушаннă вăхăтра вăл яланах ҫӳлӗ ҫыран хӗррине тухнă, Шупашкар еннелле ҫаврăнса тăнă та, вара нумайччен-нумайччен Атăл тăрăхне — темиҫе ҫӗр ҫухрăма тăсăлакан куҫ виҫейми хир-улăха, вăрмансене шухăшпа ыталанă. Аялта, ҫыр хӗррине йывăҫ пристань йăпшăннă ҫӗрте, юхан шыв хăйӗн йывăр хумӗсене кустарнă. Ҫиллӗ кун Атăл ҫилӗллӗ, ҫуркунне тем териех сарлака, хӗлле вилнӗ пек чӗмсӗр, ҫулла ăшă кăмăллă. Вăл Атăл пек илемлӗ юхан шыв ҫӗр ҫинче урăх курман.

— Атăла ăна, Хӗветӗр, ху куҫупа хăвăн курас пулать. Ун ҫинчен каласа пама хӗн — вăл мӗнлине ăнлантарма ман чӗлхере сăмах ҫитеес ҫук.

Пакрышень ăнланать ăна.

— Вăл ҫапла. Пирӗн Десна, калăпăр, пӗчӗккӗ те лăпкă, анчах ун ҫинчен те ăнлантарма ҫăмăл мар. Вăл, кӗтнӗ телей пек — ҫутă-кăвак, лăпкă та кăмăллă чухне, ир-ирех ҫыр хӗррине тухса тăратăн та, ярăнса юхнине, кукăрта шыв ҫаврăннине курса тăранаймастăн; пăхатăн та ун тăрăхӗнчи айлăма — эсӗ ура ҫинче тăмастăн кек, ҫунат сарса вӗҫсе ҫӳренӗн туйăнса каять, кăкăрна савăнăҫпа телей тулать, сывлама сывлăш ҫитми пулать... Каҫ-каҫ хӗрсем юрă юрлаççӗ-и сирӗн?

— Хӗрсем?— хăй курса тăнă картинăсене ирӗксӗртен сирет Кузьмин.— Хӗрсем, тетӗн-и? Хӗрсем пирӗн те лайăх... Илемлӗ тумланаççӗ. Нихçанхинчен ытла уявра. Тӗрленӗ кӗпе тăхăнаççӗ. Кӗпе вăл — икӗ аркăллă платйӗ. Шӳлкеме ҫакаççӗ. Шӳлкемене кӗмӗл тенкӗсем тирсе тăваççӗ. Кăкăрӗ умӗнче йăлтăр-йăлтăр капăр шӳлкеме пулсан, вăл пуян хӗр шутланать, пӗр-икӗ кӗмӗл ҫеç ҫиçкелесен е пӗри те курăнмасан, пӗл — ҫавă хӗр тарçăран тухаймасть, ырă ят илтеймест. Пуҫа тухъя тăхăнаççӗ — илемлӗ ҫӗлӗк темелле. Урара — ҫăпата.

— Пирӗн хӗрсем ҫăвӗпех ҫара уран ҫӳреççӗ.

Кузьмин Пакрышень енне ӗнен иесӗр пăхрӗ.

— Ҫарранах-и? Пулма пултараймасть!

— Мӗншӗн ан пултăр? Йӳнӗ те, ҫăмăл та.

Кузьмин, тем шухăшпа, кулмасăр чăтаймарӗ.

— Пирӗн ун пек мар. Пирӗн хӗрсене ҫарран ҫӳреме юрамасть. Вăл тӳсме ҫук намăс шутланать. Хӗр пӳртрен пӗр саманта ҫарран чупса тухма хăяймасть. Пӗррехинче, эп пӗчӗк чухне, ялта ҫакăн пек мыскара е мăшкăл пулса иртрӗ. Пӗр хӗр — кайран унпа мӗн пулнине пӗлместӗп, тен, ухмаха ернӗ — урама ҫара уран тухнă. Ăна ял старости асăрханă, ыттисем те курнă. Мӗн кăна пулмарӗ вара! Пушар сӳнтерме васканă пек, пӗтӗм ял урама хăпса тухрӗ, ҫав хӗре хупăрласа илчӗҫ те, йăмра ҫумне ҫыхса хурса, пуҫӗнчен витри-витрипе ҫăл шывӗ сапрӗҫ. Хӗрӗх витре! Тепле чăтрӗтӗр мӗскӗн хӗр пуҫӗ. Пӗр каччă ун хутне кӗчӗ, юратнă пулмалла вăл ăна. Анчах нимпе те пулăшма, ҫăлма пултараймарӗ, хăй инкеке кӗрсе ӳкрӗ. Ăна тепӗр куннех салтака парса ячӗҫ. Ак мӗнле, тăванăм, пирӗн тӳрккес йăласем.

Пакрышень, куҫне пӗр хупмасăр таçта пӗлӗтелле пăхса, тимлӗн итлерӗ — вăл чунне хускатакан сăмахсене, ним сиктерсе хăвармисӗр пӗлесшӗн, темӗнччен тăнлама пултарнă. Ешӗл йăмра, ун ҫумне ҫыхса тăратнă мӗскӗн хӗр халӗ ун куҫӗ умӗнчен каймарӗ, хӗр пуҫӗ тăрăх шăпăртатса юхнă ҫăл шывӗ унăн хулне сивӗ тытнă пек ҫӳҫентерчӗ, хӗре ҫăлма пынă каччă вырăнӗнче вăл хăйне туйрӗ, унтан, пуҫне пӗкмесӗр, ылханлă салтак службине тухса утрӗ.

— Сирӗн те салтака илеççӗ, эппин?..

Тăлăх арăмăн килне
Килчӗ-кӗчӗ хурлăх:
Ун пӗртен-пӗр ывăлне
Салтак шăпи тухрӗ.
Илсе кайрӗҫ тăлласа,
Йывăр пулчӗ ҫулӗ.
Амăш йӗчӗ татăлса,
Тăкăнчӗ куççулӗ...

— Шевченко?

— Шевченко.

Пӗр саманта иккӗш те чӗнмеççӗ, кашни хăй шухăшне шухăшлать пулас.

— Сирӗн музыкă пур-и? Мӗнпе калаççӗ?

— Мӗншӗн ан пултăр? Музыкă та пур. Кӗслепе калаççӗ. Вырăсла — гусли.

— Кирек ăҫта та, эппин, хăйсен. Эх, ҫурăм шăмми мана ҫӗрелле пӗкӗрӗлтермесен-и,— хам та пӗлместӗп, мӗн кăна туман пулăттăм... Хутаҫа хул урлă ҫакăттăм, алла туя тытăттăм та — ăҫталла куҫăм курать — тӗнче касма тухса кайăттăм. Ҫак ҫут тӗнчере ҫынсем ăҫта мӗнле пурăннине ҫав тери пӗлес килет манăн. Пурне те пӗлес килет! Шухăшлатăн-шухăшлатăн та — ҫӗр ҫинче ҫын мӗншӗн пурăнать-ши, тетӗн. Пирех илес. Эпир, Кашкăр Тăвӗ ҫыннисем, мӗншӗн пурăнатпăр? Мӗн ку-

ратпӑр эпир? Ҫур ял пирӗн Остертан иртмен, Киев пурри ҫинчен илтнӗ кӑна. Хам пӗр карчӑкпа калаҫрӑм — суккӑрланма пуҫланӑ,— Киева тухтӑрсем патне кайма хушрӑм, вӑл мана: «Тем шухӑшласа кӑларатӑр эсир,— тет.— Мӗнле Киев? Нимле Киев та ҫук ҫӗр ҫинче, ҫын юмахӗ ҫеҫ вӑл, ҫав анчах». Илтнӗ-и эс ун пеккине, Михайло?

— Илтнӗ те, курнӑ та, Хӗветӗр. Пирӗн хамӑрӑн чӑвашсенчен ҫурри траххумпа чирлет, хура пӳртсенче ҫынсен куҫне тӗтӗм ҫиет, анчах ҫав чиртен хӑтӑлма пулассине ӑнлантарса ҫитерейместӗн. Эпӗ ялсенче тухтӑрсемпе пӗрле сахал мар пултӑм. Итлесшӗн те мар, пӗр сӑмах: «Пирӗн асаттесем те чирленӗ, аттесем те суккӑрланнӑ, эпир мӗнрен вӗсенчен лайӑх?» Ҫынсене хӑш чух вӑйпа ырӑ тума килет.

— Вӑл ҫапла,— килӗшет унпа Пакрышень.— Сирсе сирӗлми тӗттӗмлӗх. Мӗншӗн? Ҫынсем тӗнче курмаҫҫӗ, ытти ҫӗрсенче мӗнле пурӑннине пӗлмеҫҫӗ. Тупӑнасчӗ ӑслӑ ҫынсем, ӳркенмесӗр-тумасӑр кирек ӑҫта вӗсен ҫитсе курасчӗ, вара мӗн курни-илтнине ӑнланмалла ҫырса кӑтартасчӗ, вӗсен сӑмахӗсем ҫынсен чунне витерӗччӗҫ, ӑс-пуҫне ҫутатӗччӗҫ...

— Совет влаҫӗ саманинче ҫапла пулӗ те вӑл. Ҫавӑнпа пулнӑ та революци...

— Вӑл ҫапла. Анчах ӑна хӑвӑртрах тӑвас килет-ҫке.

— Пулать.

Вӗсен калаҫӑвӗ татӑлчӗ — комиссар килсе кӗчӗ.

— Эсир мӗншӗн тинӗс хӗрринче мар?— ыйтрӗ кулкаласа Антоненко.

— Мӗн... акӑ... выртатӑп,— тӳрре тухасшӑн пулчӗ Пакрышень.— Михайло манпа, калаҫкаларӑм...

— Тинӗсрен писме юрамасть,— хӑй сӑмахӗ ҫинех тӑчӗ комиссар.

— Вӑл тӗрӗс... ҫапла хушаҫҫӗ...

Комиссар Кузьмин енне ҫаврӑнчӗ.

— Манӑн сирӗнпе сӑмах пур, Кузьмин.

— Итлетӗп. Кӑмӑл тусамӑр.

— Хамӑр клубра литературӑ каҫӗ ирттерме хатӗрлӗр.

Кузьмин шартах сикрӗ.

— Литературӑ каҫӗ? Чӑн-чӑнах-и?

Комиссар тем астутарнӑ пек йӑл кулчӗ.

— Эсир те пӗлмесен, кам пӗлтӗр?

— Манран ӗҫ тухас ҫуккинчен хӑратӑп,— иккӗленчӗ Кузьмин.

— Ку вӑл — парти поручений ӗ.

Кузьмин хӑй сисмесӗрех тӳрленсе тӑчӗ, палӑрмаллах шурса кайрӗ.

— Итлетӗп, комиссар юлташ. Пулать!

— Малтанах ҫапла каламалла. Мӗншӗн-и? Литературӑ — ҫынсен чунне хамӑр май ҫавӑракан пысӑк вӑй. Куратӑр-и, ҫынсен кӑмӑлӗ ҫӗкленсе пырать, чӗре таппи, тухтӑрсем каларӗшле, лайӑхлансан, пурнӑҫ каять вара. Халӗ пире, нихҫанхинчен ытла, кӑмӑл ҫӗкленни кирлӗ. Тӗрӗс калатӑп-и, Пакрышень юлташ?

XVI

Кузьминшӑн чуна савӑнтаран е пӑшӑрхантаракан, тапхӑр-тапхӑр йывӑрлӑх кӳрекен кунсем пуҫланса кайрӗҫ.

Темиҫе кун хушши вӑл хӑйне ырӑ тӗлӗкри пек туйрӗ — нимӗне те мар, литературӑ каҫне хатӗрленчӗ. Литературӑна вӑл ҫӗр ҫинче нимӗнрен ытла юратнӑ, унран ӑс-хал илнӗ, кӗске пурнӑҫӗнче ҫав тери нумай вуланӑ, мӗн пурне пин ҫулта вуласа пӗтерес ҫуккине пӗлнӗ. Ҫав пуянлӑх ӑна савӑнтарнӑ. Кашни ҫӗнӗ кун халиччен пулманнине, ҫӗннине, тӗлӗнтермеллине илсе килнӗ. Акӑ, Тарас Шевченко. Вӑл аслӑ поэт ҫинчен илтмен мар, Шупашкар тӗлӗнчен Атӑлпа иртсе кайнӑ хыҫҫӑн Шевченко чӑвашсем ҫинчен мӗн каланине те пӗлнӗ, поэт патша пусмӑрӗнче тертленсе пурӑнакан чӑваш халӑхӗ хутне кӗрсе ҫырнӑ сӑмахсене вуланӑ, анчах унӑн поэзине сахал пӗлнӗ. Малтан ӑна Пакрышень Шевченко сӑввисене пӑхмасӑр каласа панӑ, мӗн астунине каласа пӗтерсен — хӑйӗн тӗпсӗр хутаҫӗнчен «Кобзарь» туртса кӑларнӑ. Ӑна хӑҫан ӑҫта кӑларни те паллӑ пулман; хуплашкасӑр, малтанхипе юлашки страницӑсӑр, такам аллине те кӗнипе лӳчӗркенсе пӗтнӗ сарӑхнӑ кӗнекене халӗ унӑн хуҫи шикленсе тыткаланӑ. Кузьмин ӑнланнӑ — Пакрышень пӗр уншӑн ҫеҫ ӑна хутаҫран кӑларнӑ. Ӑнланнӑ та — ӑшӗнче тусне чӗререн тав тунӑ.

Литературӑ каҫӗ пулас хыпар «Талас» ҫыннисенчен нумайӑшне хавхалантарнӑ. Литературӑ каҫне Кузьмин хатӗрлессине пӗлсен, ун патне палланӑ ҫынсем те, палламаннисем те пыра пуҫларӗҫ — пӗрисем Пушкинӑн, Лермонтовӑн сӑввисене вулама пулчӗҫ, Надсона юратаканнисем, Маяковские кӑмӑллаканнисем те тупӑнчӗҫ. Хӑйсем сӑвӑ ҫыраканнисем те пур иккен кунта: поэзи — халӑх ӗҫӗ-хӗлӗ, халӑх хушшинче поэт пулатех.

Кузьмин Пакрышене Шевченкон «Тӗлӗкне» вулама хушрӗ. Ку, вӑтанакանскер, итлесшӗн те пулмарӗ.

— Манран артист тӑвасшӑн-и? Мӗн эсӗ, Михайло, кулатӑн-им? Эпӗ хам палланӑ ҫынсене вуласа пама пултаркалатӑп, анчах пӗтӗм халӑх умӗнче... Ҫитменнине тата, выртса... Ҫук, ҫук, ан тив Кирило вулатӑр.

Турхан Шевченко сӑввисене вулама кӑна мар, поэтӑн пурнӑҫӗ ҫинчен каласа парса,

«тёттём» çынсене «çутта кăларма» та хавасланса килĕшрĕ.

Литературă касĕччен ик-виçĕ кун юлсан, программăна йĕркелесе çитерчĕç. Кузьмин унпа комиссар патне кайрĕ. Антоненко вăл вăхăтра самаях чирлесе ӳкнĕ пулнă, çынсем хушшинче сайра курăнкаланă, анчах кама та кама комиссар кирлĕ пулсан, хăй патне палатăна хăюллăнах пыма хушнă.

Вăл, вилнĕ çын пек сарăхса кайнăскер, питĕ имшерленнĕскер, хал юлман пуçне çӳлĕ минтер çине хурса выртнă. Куçĕсем кăна, пурте пĕлсе-хăнăхса çитнĕ куçсем, сӳнми чĕрĕ кăварпа çуннă, кăвакарнă çӳхе тутисене яланхи йăл кулă кăна тĕс кӳнĕ.

— А-а, Кузьмин! Кĕр, тăванăм, кĕр.

Кузьмин алăкра тăп чарăнса хытса тăнă.

— Мĕншĕн салхуллантăн?— куçне илмесĕр чĕнчĕ комиссар. — Эпĕ вырăнпа выртнинчен тĕлĕнмерĕн пулĕ-çке?.. Хам ирĕкпе мар, тăванăм, тухтăрсем ирĕксĕрлеççĕ. Тухтăрсем вĕсем тухтăрсемех... Мĕншĕн-и? Эпир вĕсен аллинче. Эпир санаторире, йĕнер çинче мар.

— Мĕн пулчĕ сире, комиссар?

Кăна вăл пăшăрханса, çынна савса-хисеплесе, унăн хурланса ыйтрĕ.

— Эпир кунта пурте пĕр пек. Выртма хушрĕç — чăт... Сан ĕçӳсем мĕнле? Эпĕ литературă пирки ыйтатăп.

Кузьмин, çапла йывăр чирпе выртакан комиссара курсан, чĕрине тем касса кайнине сисрĕ те, хăйĕн ĕçĕ ăна çав тери пĕчĕк япала пек çеç туйăнчĕ, хатĕрлесе çитернĕ литературă касĕ çинчен унăн асăнасси те килмерĕ.

— Кăç-и? Ăна ирттерме йывăр мар... сире акă питĕ асап... Эпĕ пĕлмен...

Комиссар сăн-питĕнчен йăваш кулă таçта çухалчĕ, сăнĕ салхулланчĕ, сарăхнă çамки çинчи хĕрлĕрех куç харшисем пĕрĕнчĕç, вĕсен хушшине тарăн йĕр выртрĕ.

— Ман лĕвĕм-сийĕмпе ӳтĕм-тирĕм никама кансĕрлемелле, чăрмантармалла мар,— кăмăлсăррăн кăна мар, хаяррăнах каларĕ пек вăл.— Санатори пурнăçĕ, тинĕс çинчи çанталăк пекех, эпир хамăра мĕнле туйнинчен килмест, Кузьмин.

Пĕр самант вăл чĕнмесĕр ларчĕ: калаçасши Кузьминпа малалла е çакăнпа сăмахăма пĕтерес-ши, тесе шухăшланă пек пулчĕ. Анчах пĕлесси килни, ырă кăмăлĕ çĕнтерчĕçех-мĕн.

— Ĕçӳ мĕнле пырать санăн? Литературă касĕ хăçан пулать?

Комиссар хăйне хута кĕнипе килĕшекен çын маррине Кузьмин ăнланчĕ. Антоненко пек вăйлă чунлă, çирĕп кăмăллă çынсем ыттисен вăй-халне хисеплеме пĕлеççĕ, хăйсене хĕрхенме никамран йăлăнмаççĕ. Вĕсемшĕн чи кирлли — уйрăм интерессем мар, чăн-чăн ĕç. Ăнланчĕ те çакна, шухăша кайрĕ: тен, комиссар мана хама çавăн пек туйăнать, терĕ хăй ăшĕнче.

Кузьмин çырса хатĕрленĕ программăна вĕсем темĕнччен сӳтсе яврĕç. Комиссар сасартăк чĕрĕлчĕ тейĕн, типшĕм питçăмарти çулăм пек хĕремесленчĕ, çамки çине шултра тар пĕрчисем тапса тухрĕç. Вăл пурне те ырларĕ, анчах вырăнти поэтсене паллисенчен уйăрма хушмарĕ.

— Эпĕ мĕншĕн кунта хăвăра курмастăп? Мĕншĕн эсир нимĕн те вуламастăр?

Кузьмин ларнă çĕртен хускалмарĕ.

— Аван мар... Организаторĕ хам...

— Мĕншĕн аван мар пултăр? Йăлтах урăхла — чăн-чăн поэт вуламасан — çынсене кăмăлламанни пулать.

— Тен, Пушкинăн е Лермонтовăн сăввисене?..

— Пушкинпа Лермонтов хăйсем çинчен хăйсем калĕç, эсир — хăвăр çинчен, çĕнĕ, пролетари поэчĕн сăмахне калăр.

— Анчах эпĕ чăвашла çыратăп-çке...

— Пулин. Мĕнех вара? Вырăссемпе украинецсем таçта ытти çынсем те ăнланмĕç, тесе шутлатăн-и? Ан шиклен — ăнланĕç. Пĕри теприне ăнланччăр тесе тунă та революцие, Кузьмин тăванăм. Мĕншĕн-и? Интернационализмсăр, тусăм, эпир вăйсăр пулăттăмăр. Ан иккĕлен, Кузьмин, чăн-чăн поэта, вăл кирек те мĕнле чĕлхепе калаçсан та, çынсем ăнлаççĕ. Мĕншĕн-и? Поэт сăмахĕ пек хăватлă, витĕмлĕ сăмах, эп ăна лайăх пĕлетĕп, урăх çук.

Комиссар палатинчен Кузьмин, чирлĕ çын патĕнче пулман пекех, тем туманахатĕррĕн хавхаланса тухрĕ. Çук, комиссар пек çынсем чирлемеççĕ. Тен, вĕсен те ыратать-и, йывăр суранĕ сурать пулĕ, типшĕм хул хыçĕнче вилĕм тăрать-и, анчах чунĕпе вĕсем сывă, шухăшĕсемпе вĕсем чире парăнмаççĕ — эппин, вĕсем çинчен чирлĕ, халран кайнă, пурнăç çыннисем мар ĕнтĕ тесе епле шухăшлăн-ха? Кузьмин вара хăйне хушнă ĕçе пуçĕпех парăнчĕ, палатăран палатăна çӳрерĕ; çыракансем пĕрле пухăнса тинĕс хĕрринче сăввисене лайăх вулама вĕренчĕç. Кузьмин ун пек те кун пек шухăшласа пăхрĕ — унăн епле те пулин комиссар кăмăлне юрасси килчĕ.

Комиссарпа калаçса тухнă хыççăн тепĕр кунне пуçланнă литературă касĕ лайăх иртрĕ. Кузьмин, литературă касне уçса, кĕске сăмах каларĕ, унтан Пушкин, Лермонтов сăввисене вуларĕç, Кирилл Турхан, палламалла мар улшăннăскер (кулас-иртĕнес йăли таста кайса кĕнĕ), Тарас Шевченкон асаплă кĕрешĕвĕпе парăнми чун-чĕри çинчен вăрахчен

каларĕ, «Прометей» сăввине питĕ ăста вулаcа пачĕ.

Çамрăк поэтсем хăйсен сăввисене вуларĕç. Вăл сăвăсем пурте пĕр евĕрлĕ пулнă, вĕсенче туйăм тапса тăнă, революци çинчен каланă хĕрӳллĕ сăмахсем умлăн-хыçлăн янранă, анчах, мĕн тăвăн,— поэзи сисĕнмен. Итлекенсем вулакансене пур пĕрех хытă алă çупрĕç — вĕсене сăввисенчен ытла вулани хавхалантарчĕ: çамрăксем, вăтаннипе хĕрелсе, хăйсене мухтанăшăн каçару ыйтнă пек вуларĕç.

Пакрышень хăйĕн кравачĕ çинче лăпкăн выртма пултараймарĕ. Тухса калакансен сăнпитне куçкĕски витĕр çеç курма тăрăшни ăна ниепле те çырлахтараймарĕ. Унăн сăвă вулакан кашни поэт патне пырса тăрасси килчĕ; вăл ăна, аллинчен хĕрӳллĕ чăмăртаса, хăй те сăвăсем çырни çинчен каласа парĕччĕ, «манăн, Шевченконне çитме инçе пулин те, кĕввипе Тарасăнни пек тухаççĕ» тейĕччĕ; вăл та, чир ăна вырăн çине йăвантарман пулсан, ăна, çуркунне хĕрарăмсем сĕрнĕ мăрье пек, йĕритавра тăмпа сĕрсе вырттарман пулсан, хăйĕн сăввисене хавасланса вулĕччĕ. Унтан, чăваш поэчĕ Çеçпĕл Мишши тухассине пĕлтерчĕç те, Пакрышень чăвашран кунта пĕр Кузьмин кăна мар иккен тесе шухăшларĕ.

Анчах, куçкĕски витĕр Михаил Кузьминăн пăшăрханнă сăн-сăпатне курсан, мĕн тери тĕлĕнсе кайрĕ вăл! Поэт тӳрех вулама тытăнмарĕ, вăл пăртак именчĕ пулас, нумай кравацьсем лартса тухнă еннелле вĕçĕмех пăхрĕ — вĕсем хушшинче комиссар вырăнĕ те пулнă.

Кăвак çутăран шăратнă акапуç,
Туртийĕ хушшинче хĕвел ташлать.
Çĕн Кун — шевле сарриллĕ ылтăн пуç —
Чăваш уйне ака тума тухать.

Пĕрремĕш строфине Кузьмин, темрен шикленнĕн, хăюсăртарах вуларĕ, анчах итлекенсем, акă халь тесен халĕ тĕлĕнмелле ырă та илемлĕ япала килсе тухасса кĕтекен çынсем пек, сасартăк шăпах пулчĕç. Пăшăрханни кăлăхах иккенне, хăйне çынсем ăнланасса, унра поэт чунне туясса, вăл çын чĕрине хăй май çавăрма пултарасса Михаил часах туйса илчĕ-мĕн. Унăн сасси, йыхрав пек, вăй-хăватлăн янăраса кайрĕ,— калăн, юлашки вăхăтра ыйха путнă е сасси тытăннă поэт-трибун тепĕр хут вăранса çĕкленсе тăчĕ. Вăл каллех хăйне хăй кĕрешӳри паттăр пек туйрĕ, вара чун-чĕре туртăмĕшĕн, чăн чĕрĕлсе тăракан малашлăхшăн виличчен çапăçма ăна никам та, нимле усал вăй-хал та чараяс çуккине туйрĕ.

Çĕн Кун аки пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри
Касса-касса уй урлă кас тăвать.
Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри
Вилсе выртса, пытарăнса пырать.

Пакрышенĕн кăшкăрас, кулас, ача пек сăвăнас килчĕ. Акă мĕн пĕлчĕ-курчĕ вăл! Мĕнле-ха вăл, Кашкăр Тăвĕ шуйттанĕ, Кузьмин ахаль Кузьмин мар, çавăн пек хăватлă чунлă чăн-чăн поэт иккенне халиччен пĕлмесĕр пурăннă?! Акă сана тепĕр Шевченко! Кур, мĕнле шăрантарать:

Çĕн Кун пăхать: ун ылтăн акипуç
Кăпăшласа хуратрĕ хытнă уйсене;
Сип-симĕс улăх урлă тĕпсĕр сив çăлкуç
Уйсем çине савса сапать шывне.

Çĕн Кун пин-пин кăварлă хурăç аллипе
Сар-хĕрлĕ кунтăкран уйсем çине
Кăварлă ывăçпа пин, çĕр пин çăлтăр акрĕ.
Ирхи шевле ун хыççăн ылтăн сӳрипе
Çĕр пин çăлтăрлăн çунан Чăваш çĕрне
Тĕр тĕрлесе, сӳрелесе пăрахрĕ.

Сăвăсемпе мар, ытарайми ĕмĕтпе çутатрĕ итлекенсен чĕрисене хавхаланса хĕрсе çитнĕ Çеçпĕл:

Çĕн Кун акин шăтма вăхăт çитсен,
Çĕн Кун умне хура çĕр айĕнчен,
Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн сарăлса,
хăюллăн
Чăваш çыннин кун-çулĕ тухĕ.
Укаллă, ылтăн-кĕмĕллĕ хĕлхемĕ унăн,
Кĕсле сасси пулса, çĕр тăрăх шуххăн юхĕ.

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе,
Кун-çул уйне тухса, хĕвел тумтир тумланĕ.
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

XVII

Поэт чĕринче телей нумаях пыраймарĕ, чечекĕ часах тăкăнса пĕтрĕ, ырă мар хыпар Мишша сăн-сăпатне хăвăртах тĕксĕмлетрĕ, куçне йывăр хуйхă карчĕ.

Çирĕм пĕрремĕшпе çирĕм иккĕмĕш çулсенче çамрăк Совет влаçне хупăрланă халиччен пулман хăрушă йывăр хурлăх Евпатори те, курортсем вырнаçнă ăшă çырана та, пĕр шухăшласан кĕтме сăлтав çукранах пек, персе çитнĕ. Санаторире Яким Иванович Потопальский çăкăрĕпе çынсем çăтмахри пек пурăннă, кунне кашнине икĕ кĕрепенке — сакăр çĕр грамм — çăкăр тивнĕ, ун патне тата ытти апат-çимĕç. Кунта пурте тăраниччен çинĕ.

Пур ҫӗрте те выҫӑпа аптранӑ вырӑнсенчен килнӗ ҫынсем малтан санатори столовӑйӗнче мӗн панине пӗтӗмпех ҫисе янӑ. Каярахпа пӗри, унтан тепри сӗтел ҫине ҫӑкӑр татӑкӗсем е котелок тӗпне сыпса пӗтерейммен яшкине хӑвара пуҫланӑ. Ҫынсем палӑрмаллах якалнӑ, савӑнӑҫлӑрах пурӑнма тытӑннӑ.

«Талас» санаторине уҫни икӗ эрне те иртмен, унта час та часах хуларан «хӑнана» ҫӳреме пуҫланӑ. Малтан типшӗм ачасемпе карчӑксем пыра-пыра кайнӑ —«паян пурӑнмалӑх» ыйтакансем. Унтан кунта выҫӑ маррисемех куранкаланӑ. Вӗсем санаторинчисем патне ҫӑкӑра, сахӑра, пуринчен ытла ют ҫӗршывсенчен килнӗ шоколада хӗртӗннӗ, вӗсене тӑварпа улӑштарма сӗннӗ; аслӑ ҫӗршывӑн кашни ялӗхулисенчех тӑвар ҫитмен, темрен те хаклӑ тӑвар, ҫынсем уншӑн тем пама хатӗр пулнӑ. Вӑл «хӑнасем» санаторинчисене хӑлхаран пӑшӑлтатнӑ — май пур чухне улӑштарса юлӑр, хӑвӑр валли те хатӗрлӗр, килӗрсене тӑварсӑр ан таврӑнӑрах, пӗтетӗр, тӑвар тӑванӑрсем валли чи хаклӑ парне пулӗ.

Ҫакланнӑ! Ҫакӑн пек ӑманпа темле пулла ҫаклатӑн. Тӑвар! Кирек мӗне те манма пултарнӑ, анчах тӑвара асран яман. Сывлӑхпа тӑварсӑр Крымран епле-ха таврӑнӑн?

Санатори ҫыранӗ вара сисмесӗрех пасар пек пулнӑ. Сывалакансем патне Евпаторирен сутӑҫсем, ҫывӑхри ялсенчен тутарсем ҫӳренӗ, кӑкшӑмсемпе вӗсем чӗптӗмӗн-чӗптӗмӗн тӑвар илсе пынӑ, хаклашнӑ, кӑшкӑрашнӑ; Иисус Христос улшуҫсене чиркӳрен хӑваласа кӑларнӑ пек, Яким Иванович ҫав хапсӑнчӑк йӗксӗксене ҫырантан хӳтерсе ярицченех ҫапла пулнӑ. Кайран вӗсем ушкӑнпа ҫӳреме хӑяйман, анчах пӗчченӗн-пӗчченӗн, кӑшкӑрашмасӑр-тумасӑр пур пӗрех пыркаланӑ-ха, тӑварне вӑрттӑн-хӗттӗн парса хӑварнӑ та, хӑйсем кунтан ҫӑкӑр, сахӑр, шоколад ҫаратса кайнӑ.

Выҫлӑх! Хӑрушӑ шӑмӑ аллипе ҫынсене мӑйран пӑвнӑ, чӗрнисем чӗре патнелле тискеррӗн ҫывхарнӑ. Кашкӑр йӑх-яхӗсем вара, выҫлӑх ҫӗмӗрсе килнине кура, нимле чыссӑр меслете пӑхмасӑр, пулас хура кунсем валли мӗн алла лекет ҫавна тӑпӑлтарма васканӑ, ҫынсем выҫса вилнӗ чух спекуляци туса пуйма ӗмӗтленнӗ.

...Литературӑ каҫӗ иртсен, тепӗр кунне, Кузьмин Пакрышеньпе калаҫрӗ. Вӑл ҫыру илнӗ иккен. Ҫуралнӑ ҫӗршывран килекен ҫыру поэта каҫса кайиччен савӑнтарнӑ. Халӗ те, тӑватӑ кӗтеслӗ ҫӑмӑл канверта алла тытсан, Мишша ҫав тери хӗпӗртенӗ, ӑна ӗлӗкхи телей ҫавӑрса килнӗн туйӑннӑ. Унта, Чӑваш ҫӗршывӗнче, поэта ӗнтӗ халӑх юратнӑ, унӑн сӑввисем хаҫатсенче пичетленсе тухнӑ, алӑран алла ҫӳренӗ, революци пурнӑҫ ҫулне кӑларнӑ, сӑвӑсем ҫырма хавхалантарнӑ ҫамрӑксем унпа паллашма тӑрӑшнӑ. Ӗнер ӑна санаторире тусӗсем поэт вырӑнне хурса саламланӑ, паян ирхине ӑна хӑйсем савӑнни-хавасланни ҫинчен кала-кала панӑ, телейлӗ пуласлӑх суннӑ. Кузьмин пултарулӑхӗшӗн пуринчен ытла Федор Пакрышень савӑннӑ.

Тинӗс хӗрринчен Мишша питӗ каҫа юлса таврӑннӑ — юри юлташӗсем ҫывӑрса каясса кӗтнӗ, вӑл та Кирилл Турханӑн ҫивӗч чӗлхинчен пӑртак шикленнӗ. Анчах шухӑшласа хуни кӑлӑх пулнӑ — юлташӗсем ҫывӑрса кайман иккен. Алӑк уҫса пӳлӗме ура ярса пуссанах, Кирилл командӑ панипе, пӗтӗм палатӑ илтӗни-илтӗнми сасӑпа виҫӗ хутчен «урра» кӑшкӑрнӑ, поэта, кулмасӑр-тумасӑр, чунтан саламланӑ.

— Санӑн... леш сисӗм-туйӑм тени пурах,— пурне те ӗнентермелле каласа хунӑ Турхан.— Поэзи асамне пӗлетӗн.

— Маттур, Кузьмин! Чи лайӑххи пултӑн,— мухтанӑ Сергей Иванов.

— Эпӗ малтан хам хӑлха илтнине хам ӗненмерӗм,— тенӗ Салагатов.

Пӗр Федор Пакрышень кӑна чӗнмен. Вӑл хӑй, поэт пулма ҫуралнӑскер, чун хӗлӗхне тивнӗ-тивмен ӑшра янӑраса каяканскер, пырне капланнӑ куҫҫульне аран-аран тытса чарнӑ. Ыталаса та чуп туса кӑна вӑл тулса тӑран туйӑмне кӑтартӗччӗ, анчах ҫакна тума ӑна курайми гипс хупписем ирӗк паман-ҫке. Вӗсем пулмасан та, вӑл тусне ыталама хӑюлӑх ҫитерейммӗччӗ.

Ун вырӑнне ирхине вӗсем нумайччен ыталайми калаҫнӑ, Хӗветӗр хӑй шухӑшне, Кузьмина чӑн-чӑн ҫын, поэт, халиччен хӑй пӗлмен инҫетри халӑхӑн мухтавлӑ ывӑлӗ вырӑнне хурса хисеплени-юратни ҫинчен, ҫут тӗнчере пурӑннӑ чух ӑна нихӑҫан-нихӑҫан манас ҫукки ҫинчен, хӗре сӑмах панӑ пек, хавхаланса пӗлтернӗ.

Кузьмин куншӑн савӑннӑ, вӑл, ҫынсем хушшинче хӑйне кӑтартма юратсах каймасан та, юлташпа ырӑ чунлӑ, ҫепӗҫ кӑмӑллӑ пулнӑ. Вӑл хӑй те лӑпкӑ чӗреллӗ, кӑшт айвантарах, ача пек пурне те пӗлме тӑрӑшакан ҫынна, аслӑ пиччӗшне хисепленӗ пек юратнӑ, чирлӗскере вырӑн ҫине ҫыхса вырттарнӑран мӗнле йывӑра килнине чунтан ӑнланнӑ. Анчах ун ҫинчен ним те шарламарӗ вӑл, Хӗветӗре йӑвашшӑн кӑна куҫран пӑхрӗ те, ялан пӗрле пулма тупа тунӑ пек, аллине чӑмӑртарӗ.

Кунтан ытла телей ҫынна кирлех те пулман пек туйӑннӑ. Ҫав ирхине ӑна ҫыру килсе пачӗҫ. Гурий шӑлнӗпе амӑшӗ, нумай асап тӳснӗ, пурнӑҫра сирсе-сирӗлми хӗн-хур кӑна курнӑ амӑшӗ, ҫырнӑ иккен вӑл ҫырӑва. Мӗнле юратнӑ амӑшне Мишша! Чӗнмесӗр, салхуллӑн, яланах тем ӑшталанса, вӑл тӑватӑ ывӑл

çуратса ӳстернӗ, анчах хӑйне пулӑшаканни пӗри пулман. Шевченко савӑнса «çынсем хушшинчи шӑши çурисем» тенӗ пек, пурте таçталла сапаланса кайнӑ. Вӑл, чи асли, вун пӗрте юпашарти Шӑхасан ялне икӗ класлӑ шкула вӗренме кӗнӗ, кӗçӗннисем — хӑшӗ ăçта. Пурин те çӑкӑрлӑх ӗçлесе тупмалла пулнӑ — тарçӑра, çынсен ӗнисемпе сыснисене пӑхса...

Пурте ашшӗне кӗтнӗ, анчах кӗтсе илеймен — революци хыççӑн тин хыпар тунӑ: ан кӗтӗр, таврӑнаймасть, çав тери инçетре, тарӑн çӗр айӗнче, унтан никам тухаймасть.

Амӑшӗ Мишшана пӑхса тӑранайман. Шӑхасанра вӗреннӗ чух çуллахи кунсене киле таврӑннӑ-ха. Лашипе выртмана çӳренӗ, хирте суха сухаланӑ. Унтан пурнӑç, çавра çил пек, кутӑн-пуçӑн çаврӑнма тытӑннӑ, ăçта кӑна çитсе ӳкме тӳр килмен çамрӑка. Вун улттӑмӗш çулта Гурий шӑлнӗне фронта вӑрттӑн тухса кайнӑ — вӑрçа хӑвӑртрах пӗтересшӗн пулнӑ, вӗсемсӗр çав фронтра йӗрке пулас çук тесе шухӑшланӑ çамрӑк пуçпа. Унтан Шӑхасанти юратнӑ учителӗ, Иван Опанасович, Теччӗри учительсем хатӗрлекен семинарие куçнӑ. Вӑл унта юратнӑ вӗренекенӗсене — Мишшапа тӑватӑ юлташне Шӑхасантан хӑй патне чӗнсе илнӗ. Çавӑнтанпа Мишша сайра хутра кӑна тӑван ялне — Касаккассине пыра-пыра кайнӑ. Çапла ӳссе çитӗннӗ. Чӑваш облаç ревтрибуналӗн пуçлӑхӗ пулса тӑрсан, теплерен пӗрре амӑшӗ патне кӗрсе тухнӑ. Амӑшӗ малтанах палласа илеймен ӑна. Ăçта унта паллама — сӑран пиншакпа, пуçӗнче те сӑран картус, атӑпа — чӑн-чӑн хӗрлӗ комиссар. Ним тума аптраса тӑнӑ — мӗншӗн-ха çак çын ун патне, чухӑн та тӑвӑр пӳрте кӗнӗ? Палласа илсен — ыталаса илсе кӑкӑрӗ çине пуçне хунӑ, унтан куçне çӗклесе, пӑхнӑ-пӑхнӑ — курса тӑранайман, йӗнӗ пулӗччӗ — куççулӗ пырта капланса ларнӑ, кӑшкӑрӗччӗ — сасси тухман. Çунат айӗнчен каллех вӗçсе каясран хӑранӑ пек, ыталаса илнӗ те ывӑлне, пӗр чарӑнми, куç илми пӑхнӑ.

— Мишша... ывӑлӑм...

Пурнӑçӗнче инкек килсе тухсан, чи малтан пӗр шухӑш ун чӗрине чиксе кайнӑ — амӑшне каласа ан паччӑрччӗ. Анне хӑлхине ан çитерӗр, тесе тархасланӑ. Амӑшӗ нихӑçан та ӗненес çук ывӑлӗ çапла телейсӗре тӑрса юлнине, эппин, мӗншӗн-ха ӑна пӑшӑрхантарас та асап кӑтартас? Ан тив, вӑл ывӑлӗ революцишӗн ӗçлени çинчен, ыттисен ачисем пекех, хӑй çулӗпе пыни çинчен шухӑшласа савӑнтӑр.

Акӑ ун аллинче халӗ — çыру. Амӑш çырӑвӗ.

Ăна вӑл, кӗтнӗ-кӗтмен çыру пек, хӑвӑрт уçса вулама пултараймарӗ. Юрать-и-ха анне çыруне ытахальтен кӑна уçма, ун пек йӗрпе пыман йӗркисене сивӗ куçпа ӳркевлӗн вуласа кайма?

Хӗветӗр умӗнче каçару ыйтса, вӑл васкамасӑр палатӑран тухса кайрӗ. Тинӗс хӗррине çитсе тӑчӗ те вӗçӗ-хӗррисӗр тинӗс тӳремӗ çине, инçете куç ывӑтрӗ. Мишша кӑкӑрне тулса ӑшӑтакан телей, тен, тинӗс шывӗнчен нумайрах пулнӑ пулӗ.

Çыр хӗррипе утса кайрӗ; тинӗс ӑна хӑйӗн ӑшӑ хумӗсемпе тем каласа саламланӑ пек шӑпӑлтатать, куçа тӗрлӗрен-тӗрлӗрен курӑнать — е хӗвел пек йӑлтӑртатса кулса илет, е çавӑнтах тата тӗксӗмленсе кӑтартать, чӑн та чӑн çын пекех туйӑнать. Мишша та пӗр йӑл кулчӗ, пӗр тӗксӗмленчӗ. Унӑн чӗри çумӗнче, чи хаклӑ япала пек, çыру выртать, вӑл тем аса илтерет, шухӑшлаттарать, чуна хумхантарать, пӑшӑрхантарать. Мӗнле пурӑнаççӗ-ши килте? Мӗнле-ши пурӑнăç Чӑваш çӗршывӗнче?

Инçете утса кайрӗ, вара, нумай пулмастьха комиссарпа вӑрахчен каласса тӑнӑ вырӑна çитсен, чул çине чипер майлашса ларчӗ те чӗтревлӗ аллипе канверта уçрӗ. Гурий аллипе çырнӑ çыру амӑшӗнчен пулнӑ. Шӑлнӗ Шупашкарта совпартшкулта вӗреннӗ, унӑн киле пыркаласа кайма май пулнӑ — пӗррехинчемӗн амӑшӗпе ларса çыру çырнӑ.

Инçетрен килекен кашни çыру пӗр пек тытӑнса каять, туринчен ытла тӑвансем патне çырни — вӑл таçтан авалтан, çынсем темиçе вуншар çул салтакра сӗтӗрӗнсе çӳренӗ саманаранах, йӑлана кӗнӗ пулас. «Кӑна çав-çав уйӑхра... аннӳ хушнипе... вӑл савнӑ ывӑлне...» Тӑван анне, çакӑ типӗ, ют сӑмахсем мӗне пӗлтернине те эпӗ, сан çинчен шухӑшласан, чунтан туятӑп, ăнланатӑп!

«Эсӗ мӗнле пурӑнатӑн унта, ывӑлӑм, эпир, турра шӗкӗр, халлӗхе чӗрӗ-сывӑ-ха, малалла мӗн курассине пӗлместпӗр, шанчӑк çукпа пӗрех, çӑлӑнăç нихӑш енчен те курӑнмасть...»

Акӑ вӑл халиччен чӗрене ыраттарса шухӑшланӑ хӑрушӑ хыпар, кӗтнӗ-кӗтмен çӗртен, вӗççе килчех иккен. Шупашкартан тухса кайнӑ чухнех туйӑпатчӗ Атӑл тӑрӑхне выçлӑх ярса тытасси, анчах çынсен çапах та темле шанчӑк пурччӗ-ха. Мӗн пур хирсене пулмасан та, çапах та акса хӑварнӑччӗ, çуркунне çӗр улмипе пахча çимӗç лартнӑччӗ — шӑтас-ӳсес пулсан, выçлӑх хӑратаймӗ, хиреймӗ, тетчӗç. Анчах шӑпа çынсем тӗлӗшӗнчен йывӑр та асап хатӗрленӗ-мӗн.

«Пирӗн кунта çав тери шӑрӑх çанталӑк тӑрать, пӗтӗмпех вутпа çунса кайрӗ, тейӗн; çумӑр çуркуннерен варах çумарӗ, юр айӗнчен тухнӑ ешӗл курӑк нумай пурӑчаймарӗ — çатма çине хунӑ пек çунса-ӗнсе кайрӗ...»

Куç умне тӑван ял хирӗсем тухрӗç. Хӗвел

хĕртнине юратман кĕл тĕслĕрех тăпра, çӳлĕ мар сăрт çамкисем,— ăна тарăн çырмасем çуркаласа пĕтернĕ. Пӳртрен тухса анкарти хыçне çитетĕн те, умра сарлака айлăм курăнса каять, ун варринче ятсăр пĕчĕк çырма, вăл çуркуннe кăна, пăтранчăк шывне Атĕк патĕнчи ту айнелле хăваласа, кĕрлесе-шавласа юхать; юнашар Атĕк те Қасаккасси пекех хĕнасап тӳссе пурăнать — çĕрĕ те, пурнăçĕ те пĕрех. Сăрт çинче — çил арманĕ, сайра юмансем, çăкасем; урамра, пӳртсем çумĕнче,— йăмрасем. Амăшĕ асăнмалăх хăй лартнă икĕ хурăн ĕнтĕ çӳле çĕкленнĕ-тĕр, пӳрт умĕнче ешĕл çулçисемпе шавласа лараççĕ пулас. Тен, вĕсене те усал шăрăх çунтарса янă, вĕлернĕ? Вĕри çил хир çийĕпе хура тусан вĕçтерет, ниçта пĕр курăк туни курăнмасть, пĕр ешĕл йывăç...

«Çынсем яла пăрахса каяççĕ, ĕнесем выçăпа тата шывсăр виле-виле выртаççĕ, ял хăрушшăн пушанса пырать, çитменнине тата, темле халер чирĕ çывхарать, теççĕ, çăлăнăçа ăçта шырамаллине кам пĕлтĕр. Сыхла хăвна, ывăлăм, шăпу ырă пултăрччĕ санăн, выçăхса вилме ан патăрах».

Йывăр, тӳсме çук йывăр пулнă çак сăмахсене вулама. Тăван халăхĕ çине йăтăнса капланнă хăрушă выçлăх Мишшана анратса янă. Нумай пулмасть килсе савăнтарнă телей таçта кайса кĕнĕ. Хăй ĕнер вуланă çулăмлă сăвă йĕркисем сасартăк манăçа путнă.

Вăл е́нтĕ тинĕс хĕрринче чулланса хытса ларнă. Тинĕс шавне илтмен. Ытарайми илемлĕ сăрсене курман. Чунĕ ыратнине туйман — çын асапĕ-терчĕ, çын хуйхи-суйхи ăна чĕререн çатăрласа илнĕ, хăйне мантарнă. Шухăш ерипен килнĕ:

«Мускавра Ленин. Вăл пулăшĕ чăвашсене».

Қаллех шухăшланă:

«Анчах ăна хăйне пулăшу кирлĕ. Пиртен, кашнинчен, мĕншĕн тесен вăл — эпир».

Вара чĕри кăштах лăпланнă.

XVIII

Акă тата... Вăл тĕлĕкĕнче Тусьăна курнă... Çук, курăнмарĕ, куç умне чĕррĕн тухса тăчĕ, ун çумне ларчĕ те алла итлемен çӳçне шăлса якатрĕ, «юрататăп» тесе пăшăлтатрĕ те — алăк хыçне кайса çухалчĕ. Вăл тăна кĕчĕ, алăк патнелле аллине тăсрĕ, вĕри тутипе, кăвар куçĕпе ăна ятран чĕнчĕ. Анчах хăйне хирĕç хупăннă-хупăнман алăкран илтĕни-илтĕнми вĕрекен çил кăна сасă пачĕ. Пулчĕ-и вăл кунта, пулмарĕ-и? Паллах, пулман. Анчах мĕншĕн апла чĕре сиксе тапать, мĕншĕн вăл сурать, ыратать, тахçан Тарас Шевченко каланă евĕр, выçă ача пек макăрса йĕрет?

Тепĕр хут çывăрса кайма пултараймарĕ. Қаç лăпкăн тĕлĕрет тулта, тӳпе кăвак хуппипе капăрланнă, тинĕс ӳркевлĕн карăнса анаслать. Тинĕсĕн те ыйхи килмест пулас, анчах кам пĕлет, мĕн пирки асапланать-ши вăл?

Куç умĕнче пĕр вăл кăна. Унăн чун савни, унăн çĕр çинчи пĕртен-пĕр лăпкă та ачаш савăнăçĕ, çав хушăрах унăн асапĕ-терчĕ. Лăпкă чунлă, чĕмсĕртерех те сăпайлă, ыттисенчен йăлтах урăхла, çĕр çинчисем пек мар, пирĕшти пек хĕрарăма аса илмессерен ун ăшĕнче яланах икĕ çивĕч сисĕм-туйăм хире-хирĕç тăраççĕ — вĕçĕ-хĕррисĕр телейпе вĕçĕ-хĕррисĕр хурлăх. Вăл çĕр çинче пурри, вăл ăна тĕл пулни, чунтан-чĕререн юратни, ăна вăл хăйĕн тусĕ тесе чĕнни — çакă ытарайми телей кӳнĕ; анчах вăл нихăçан та унпа çывăх пулас çук, вăл уншăн аякри ют, кам пĕлет, тен, вăл ăна чăн-чăнласах савмасть те-и, тен, чĕри ырăран кăна, иртĕнсе-выляса, юратăм пекки тăвать-и,— çакă ăна тӳсме çук хурлăх кӳнĕ.

Чулхуларан тухса кайнă кун вăл ун патне юлашки çыруне çырнă. Тăма май çукран выртса çырнă. Ăна çĕр çинче хăй юлашки кун мар, юлашки сехет пурăннăн туйăннă. Хăйне нихçан ура çине тăма пултарайми çапса хуçнă телейсĕр çын вырăнне хунă. Вăл чунĕнче чĕрĕ шухăшсем юлнăран хăйĕнчен хăй вăтаннă. Вилме выртнăскер, вăл пĕр ун çинчен, чĕринчи юратăвĕпе асапĕ çинчен шухăшланă. Қам вăл? Мĕскĕн чухăн, таçти тĕттĕм ялта ӳснĕ упа çури, çавăн пек, ытарайми пирĕшти пек, хĕрарăма юратма хăйнă! Хăйне те çаплах юратасса кĕтнĕ — ăраскалсăр айван! Вилме выртнă вырăну çинче те пулин тăна кĕр, пăрах асапланма, вĕри туйăмна чĕрӳне питĕрсе ил те, текех ан кăтарт уçса!

Қаласса нумай каланă! Унăн ачаш чун хĕрӳлĕхĕ, чĕререн килекен чăн сăмах, шанчăкĕ-ĕненĕвĕ, шиклĕхĕ хут çине мĕнле кăна вырнаçса е́лкĕрме пултарнă! Халĕ вĕсене пĕтĕмпех манас пулать, пĕр сăмах аса ан килтĕр, нимĕнле йĕр ан хăвартăр. Мĕне кирлĕ вĕсем ăна?

Вăл вара кĕскен, ĕлĕкхи пек мар питĕ кĕскен, ун патне юлашки çыруне çырнă. Вăл çакна çеç ыйтнă:

«Манăн халиччен хи çырусене çунтарса яр, ан тив пĕтчĕр. Ан тив эпĕ кăлăх асапланни çинчен пĕр йĕрке те тĕнчере никама каласа ан патăр т. ыт. те.

Манăн пĕтĕмпех манас килет. Манăн сана тăвач вырăнне хурса юратас килет».

Вăл çакă юлашки çыру пуласса ĕненнĕ. Хăй хыçĕнче вилĕм çава тытса тăнине туйнă, «леш тĕнчере» çыру çырмаççĕ. Унăн сăмахпа кӳрентересси килмен ăна, пĕлнĕ — вăл çынна ăнланакан ăслă хĕрарăм пулнă. Вăл унăн

юлашки çырупе, чуна ыраттаракан ӳпкев ăçтан килнине, телей курмасăрах мĕншĕн çĕре кĕнине ăнланмалла.

Вилĕм çавине сулма хăяйман. Вăл темрен хăрана, чакса тăнă. Халь ĕнтĕ Мишша вилĕм çинчен мар шухăшлать. Вăл ӳт-пĕвĕ кунсерен пурнăç сĕткенĕпе тулнине туять, нумай ĕçлесе çиеннĕ хыççăнхи пек усăннă пулнă аллисем унăн вăй илсех пыраççĕ, ури тĕрекленет, çивĕччĕн касса ыратмасть, хуçине çĕрле сайра хутра вăратать.

Кĕçĕр çĕрле ăна урăххи — ӳт суранĕпе пĕрех ыраттаракан чун суранĕ ыйхăран вăратрĕ, вăл — Туся.

Мĕнле унăн ăна курасси килсе кайрĕ! Пĕр саманта та пулин, пĕрре куç хупса иличчен те пулин. Тĕлĕкре вăл ăна курса ĕлкĕреймерĕ. Унăн пуçран шăлан ăшă аллине туйрĕ, курасса хăйне кураймарĕ. Мĕншĕн-ха вĕсем, çакăн пек тĕлĕнмелле ырă тĕлĕксем, вĕçне çитиччен курса пĕтеричченех çумран сирĕлеççĕ, куçран çухалаççĕ? Мĕншĕн вĕсем чи ырă самантра татăлаççĕ-ши?

Вăл вĕсене шăпа нихăçан пĕрлештерес çуккине, çав хушăрах кăкăра вут хыптарнă çулăма нихăçан сӳнтерес çуккине те лайăх пĕлсе тăнă; çулăмĕ темиçе çул хушши канăç паман, анчах вăл ăна чарма пултарайман. Хăй малтан çырмасан, хам пĕр сăмахпа хыпар тумастăп тесе, темиçе хут чунне хытарнă, анчах сăмахĕ çине тăрассине ĕненсех кайман.

Тен, сăмахĕ çине тăнă та пулĕччĕ, маннă та пулĕччĕ ăна, вăл хăй-çке хăйне аса илтерчĕ, çĕр варринче тĕлĕкре килсе курăнчĕ. Халĕ мĕн тăвас ĕнтĕ — сăмаха тытма епле пултарăн, вăл ăна тархаслать, чĕнет, йывăр тунсăхĕ çинчен каласа парать.

Аса килнĕ хĕрӳллĕ, пăлхавлă ĕмĕт-шухăшсем, тен, пинмĕш çырăва кĕме хатĕрленчĕç. Тута çине чи хитре сăвă-юрăри пек чи ачаш сăмахсем ӳкрĕç. Унтан сасартăк пĕтĕмпех арпашăнса кайрĕç. Амăш сăмахĕсем аса килчĕç: «Йăлтах, вут-çулăм тивнĕ пек, çунса-ĕнсе кайрĕ... çатма çинчи пек... сынсем ялтан туха-туха тараççĕ, ĕнесем вилеççĕ... кам пĕлет, таçта шырамалла çăлăнăçа».

Çакна Мишша йăлтах куç умĕнчи пек курчĕ, вара Туся сăн-сăпачĕ сасартăк тĕттĕме кĕрсе çухалчĕ, чĕлхе çинчи ăшă сăмахсем пăрланчĕç. Вăл чӳрече еннелле куç илми пăхса выртрĕ, анчах Крым ирĕ «Талас» картишне йăпшăнса кĕнине асăрхаймарĕ, ирхи çутçанталăк пĕтĕм Евпаторирен санаторин «кайăк фермине» пустарнă пĕчĕк чунсене вăратнине сисеймерĕ. Унăн куçĕ умĕнче хĕвел питĕнче хĕреличчен хĕрсе-ĕнсе кайнă тăван хирсем выртрĕç, пуçне шухăш хыççăн шухăш капланчĕ — нумайлăха-ши килнĕ çынсене асаплантарма çав хăрушă хурлăх?

Палатăна шупка шуçăмпа ăшă кăмăллă, тинĕс сывлăшĕпе çăвăннă çĕнĕ кун килсе кĕчĕ. Мишша тусĕсем кашни хăй евĕрлĕн сывăрнă-ха. Турхан, çывăрман чухнехи пекех, ыйхинче те лăпкă пулман, кравать урлă выртичченех тек çаврăнкаланă-çаврăнкаланă та, юлашкинчен, айккипе минтерĕ çине тĕшĕрĕлнĕ, е шăлне шатăртаттарнă, е харлаттарнă, е тата темĕн çинчен мăкăртатнă, унтан, чунĕ тухнă пек, шăпăртах пулнă. Салагатов — ку вара çывăрма пĕлнĕ. Вăратмасан, вăл çĕрĕнкунĕн сăмса витĕр илтĕни-илтĕнми шăхăрса выртнă пулĕччĕ. Яланах çывăрса тăранайманшăн ӳпкелешсе каланă. Иванов — харлаттарнă. Пуçне минтер çине хунă-хуман харлаттарма тытăннă — тăр та ташла хăть ун кĕввипе. Унпа юнашар вырăна йышăнакан Турхан ăна, тепĕр енне çавăрăнса вырттăр тесе, айăкран хытах мар тĕртсе-тĕртсе илнĕ. Федор Пакрышень кăна ача пек лăпкăн çывăрнă. Куçне хупсанах шăпăрт пулнă — те çывăрса кайнă, те шухăша путнă. Ун енчен пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмен.

Кузьмин ыйхи вĕçнипе асапланнă. Палатăра çывăракан юлташĕсем пулмасан, вăл пӳлĕм тăрăх чупкаласа çӳрĕччĕ, саксене патакпа шаккакалĕччĕ, пĕр саманта та лăпкăн лармĕччĕ. Халĕ, çак ирхине те ăна, ассăн сывлама хăймасăр, çывăранçи пулса выртма тивет.

Куç умĕнче каллех ĕнтĕ — хир. Тĕнче пĕтсе килет-ши чăвашсемшĕн, пулмĕ-шим телейлĕ çĕнĕ кун, ирĕк хирсене сухаçă савăнса акана тухмĕ-шим? Çав тăван хирсенче çӳлĕ ӳснĕ тырă çилпе хумханмĕ-ши, ăна курса çын юрă янратмĕ-ши? Çук, çакă нихăçан курман инкек иртсе кайĕ; çынсем вĕсем çавăнпа çынсем те, вĕсен пурăнмаллах, йывăр асапа çĕнтермеллех! Патшана тапса антарнă, тĕрлĕрен харам пыр улпутсене аркатса тăкнă, çĕнтерсе çĕнĕ пурнăç пуçласа янă — халĕ çав выçлăх айне пулса выртмалла-и, ăна парăнмалла-и? Çук, савăнăç килĕ, çĕнĕ кун çитĕ, тăван хирсенче çĕнĕ суха касси выртĕ, халиччен курман тырăпулă çитĕнĕ...

Крым тăвĕсем хыçĕнчен хаваслă хĕвел йăлтăртатса тухрĕ, ылтăн та кĕмĕл хĕлхемĕсене тинĕс хĕррине сапаларĕ, чӳрече витĕр курăнакан йывăç тăррисене çулăмпа çутатрĕ. Сенкер-кăвак тӳпен вĕçĕ-хĕррийĕ çук, ун айĕнче таса вăрлăх акнă куç виçейми хирсем сарăлса выртаççĕ. Ăна хурçăран шăратса тунă акапуç курăнать, турти хушшине хĕвеле кӳлнĕ; вăл тăпăлса тухнă çăпата сырнă чăваш çыннине курать: чăваш, хуп кунтăкĕнчен ывçăласа илсе, çĕре хура хурлăх мар, çĕр те пин çăлтăр пек ылтăн вăрлăха хĕрхенми сапать.

Ҫӗн Кун акни шӑтма вӑхӑт ҫитсен,
Ҫӗн Кун умне хура ҫӗр айӗнчен,
Хӗвел калчи пулса, хӗвеллӗн сарӑлса,
хӑюллӑн
Чӑваш ҫыннин кун-ҫулӗ тухӗ.

Те балкон енчи уҫӑ алӑкран ирхи сулхӑн кӗнӗрен-и, те урӑх сӑлтавпа ӑна сивӗ тытнӑ пек чӗтретме пуҫларӗ, пӗрне-пӗри перӗнмен пирки шӑлне ҫыртрӗ, тӑвӑлса ҫитнӗ чӗрине нимпе лӑплантарма пултараймарӗ. Вӑл ӗмӗтӗнче Ҫӗнӗ Кун курчӗ, Кун ҫывхарса килессине ӗненчӗ, вӑл ун умӗнче пӗтӗм чун-хавалӗпе хумханчӗ, чӗрипе ӑна парӑнчӗ.

Вара, савӑнӑҫпа телей капланса тулнӑран халран кайнӑ пек, ӗшеннӗ пуҫне минтер ҫине хучӗ. Унӑн хӗремесленнӗ хулӑнтарах тутисем, такама саламласа, йӑл кулаҫҫӗ. Умне каллех темшӗн айӑплӑн пӗшкӗнет сӑпайлӑ Туся. Анчах вӑл ӗнтӗ унран куҫне тартать.

— Ан кӗт...— пӑшӑлтатаҫҫӗ тутисем.— Текех ан кӗт...

XIX

Хаҫатсенче унчченех выҫлӑх ҫинчен ҫырнӑ хыпарсем е унпа кӗрешме чӗнсе ҫырнӑ статьясем курма пулнӑ. Анчах Мишша вӗсене ытлах асӑрхаман, чӗри патне илмен — вӑл тутӑ пурнӑҫа хӑнӑхман, хӑй астӑвасса яланах выҫӑлла-тутӑлла пурӑннӑ,— ҫавӑнпа та ҫав хыпарпа статьясене пысӑк пӗлтерӗшлӗ тесе е вӗсенчен хӑрушӑ инкек туса хума кирлӗ тесе шутламан. Халӗ вӑл хаҫатсем тӗрӗсне ҫырнине — халӑх выҫлӑх умӗнче чунтан хӑраса тӑнине ӑнланчӗ.

Комиссар ӑна хӑйсен палатинче хаҫатсем вулама, юлташӗсене хальхи политикӑна ӑнлантарса пама хушнӑ. Ку хыпара юлташӗсем хапӑл турӗҫ — Кузьмин тивӗҫлӗ вӑл ӗҫе, пултармалла, пӗр Турхан кӑна кунта та шӳтлемесӗр ирттерсе яма пултарайман.

— Кузьмин!— чӗннӗ вӑл Мишшана, тем амакӗ сиксе тухнӑ пек пӑшӑрханса, хутранситрен.

Мишша шикленсе ун еннелле ҫаврӑнса пӑхнӑ.

— Мӗн пулса иртет ҫут тӗнчере? Шуйттан пӗлтӗр-и, мӗнле йӗрке ку пирӗн палатӑра? Эпӗ пур — виҫӗ кун нимле агитацисӗр-мӗнсӗр сӗтӗрӗнсе ҫӳретӗп. Капла эпӗ хамӑн шухӑшӑмсемпе темле чӑтлӑха кӗрсе ҫухалса кайма пултаратӑп. Сана ман пуҫ мимине тасатса, уҫӑлтарса тӑма хушнӑ, эсӗ мана хампалан хама пӗччен хӑваратӑн.

Хаҫатсем санаторине йӗркеллӗ килсе тӑман — хӑш чухне пилӗкшер кун пыман. Ун вырӑнне Кузьмин агитатора сасартӑк пилӗкултӑ хаҫат тыттарсан,— вулама кӑна ӗлкӗр. Атьсем кашни пӗр хаҫат суйласа илнӗ те вара, чипер вырнаҫса ларса, ӑшра вулама тытӑннӑ. Пӗр Кирилл кӑна чӗнмесӗр ларайман.

— Ак мӗнле ӗҫсем!— персе янӑ вӑл часчасах.

Ӗҫсем мӗнлине каласа памасӑрах, каллех хаҫачӗ ҫине тирӗннӗ. Кам та кам ӑна мӗн тӗлӗнтерни ҫинчен ыйтсан, вӑл ҫиленнӗ:

— Ан ҫыпҫӑн, теп! Пулаҫҫӗ те иккен ҫынсем — хаҫат вулама памаҫҫӗ. Хаҫат вуламанни ҫулталӑк — тин кӑна алла тытрӑм, вӗсем сӑпса пек куҫа кӗреҫҫӗ. Кузьминран ыйтӑр, вӑл агитатор.

Мишша хӑй чунне мӗн ыраттарнине кӑнаваскаса вуласа тухнӑ, урӑххи ҫинчен текех пӗлесшӗн те пулман. Хӑйӗнне вуласа тухсан, вӑл яланах Федор Михайловичпа улӑштарнӑ — Пакрышень Кузьмина мӗн кирлине чунпа сиснӗ, ӑна ырӑ тӑвасшӑн пулнӑ.

Хаҫатсене вуласа пӗтерсен, калаҫу пуҫланса кайнӑ, вара палатӑра шӑв-шав тӑнӑ, пиллӗкӗн-ултӑн мар, ҫӗр ҫын. темле питӗ кирлӗ ыйту хускатса, тавлашӑва кӗрсе кайнӑн туйӑннӑ. Никамран ытла Турхан шавланӑ. Самана лару-тӑрӑвӗ хускатнӑ кашни ыйту пирки унӑн хӑйӗн татӑклӑ сӑмахӗ пулнӑ, никампа та килӗшмен, никама та парӑнман темелле. Кузьмин агитатора та итлесех кайман вӑл. Пуринчен ытла сӑмах выҫлӑх пирки пырать пулсан:

— Мӗн выҫлӑхӗ пултӑр унта!— кӑшкӑрашнӑ вӑл.— Курӑр, мӗнле хӑпартланса кайнӑ атьсен питсӑмартисем, эсир выҫлӑх ҫинчен сӳпӗлтететӗр. Пирӗн яланах ҫапла — ҫӗрпе пӗлӗт хушшинче темле хӑмӑр пӗлӗт курӑнсан, хаҫатсем сасартӑк шӑв та шав хускатса яраҫҫӗ, усал сывлӑша хӑваласа кӑларакан шаманюмӑҫсем пек, тем те тӗпӗртетме тытӑнаҫҫӗ. Мӗн пире выҫлӑх! Самурая ҫапса аркатасчӗ. Эпӗ ӗмӗр тӑршшӗпех выҫӑ. Ачаран ҫӗр улмипе ӳсрӗм, уйран ӗҫсе ҫитӗнтӗм, квaспа — ӑс пухрӑм...

— Эппин, ҫавӑнпа пулас питӗ ӑслӑ эс, Кирилл,— виртлесе илнӗ Салагатов.

Пӗр хӗрсе кайнӑ Турхан никам сӑмахне те хӑлхана чикмен.

— Революци пӗтӗм тӗнчипе ҫӗнтеричченех тутӑ пурӑнӑҫ ҫинчен шухӑшлама та намӑс. Рабочи класс пӗрремӗш хут мар хырӑмне писиххипе туртса ҫыхать — кӑна та чӑтса ирттерӗпӗр. Мӗн вӑл — тырӑ пулманни! Хӑҫан пулнӑ вӑл ҫӗр ҫинче яланах тыр-пул йӑтӑнса пулни? Ачаран варах эпӗ пӗр сӑмах илтетӗп: тырӑ пулмарӗ! Ҫӗр улми ӑнмарӗ! Утӑ ҫӗрчӗ! Выльӑх-чӗрлӗх вилсе пӗтрӗ! Кашни ҫул ҫын пуҫӗ ҫине мӗнле те пулин инкек хӑпарса ларать — ҫынни ҫаплах пурӑнать те пурӑнать...

— Пирӗн, чӑвашра,— йӑлтах ӗнсе-ҫунса кайнӑ... юлашки курӑк туни таран.

Турхан итлесшӗн те пулмарӗ Мишша сӑмахне.

— Ҫичӗ ҫул мӑкӑнь шӑтмарӗ — халӑх аптрамарӗ. Мӗнех вара, чӑвашра, сан ҫӗршывунта, йӑлтах ӗнсе-ҫунса кайнӑ пулсан та? Ҫутҫанталӑк инкек кӑтартнӑ эппин, тейӗпӗр. Чӑвашра мар-тӑк, ытти ҫӗрте ҫав инкек алхасма пултарнӑ. Мӗн тетӗн, Украинӑра типӗ килен ҫул сайра хутра пулать-им?

— Пӗтӗм Атӑл тӑрӑхӗ типсе-хӑрса кайнӑ... Мӗльюн ҫын выҫӑ...

— Унта типсе-хӑрса кайнӑ, тепӗр ҫӗрте ашкӑрса ӳснӗ — уйӑрӗҫ, пулӑшӗҫ. Самани-вӑхӑчӗ ӗлӗкхи мар. Ҫав самурай ҫӗленне Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнчен шыв урлӑ ывӑтасчӗ — акӑ ӑҫта чи йывӑрри.

Ҫапах та Турхан Кузьмина пӑшӑрхантарнӑ ыйтуран аяккалла пӑрӑнма пултараймарӗ.

— Пирӗн кунта ҫӑкӑра темпе те улӑштараҫҫӗ... самӑрланчӗҫ пулать... Пуйса кайрӗҫ,— ыттисене итлеттерессинчен ытла хӑйпе хӑй ҫиленнӗн мӑкӑртатса илчӗ Сергей Иванов.

— Евпаторирен тӑвар тиесе тухма чарнӑ пулсан, эппин, вӑл ҫапла кирлӗ,— хыттӑн каларӗ Турхан.— Эпӗ нихӑҫан контрабандист пулман, совет саккунне пӑсас пур, тӑварсӑр выртса вилем.

Вӗсен палатинчисем пурте вӑл тӗлӗшрен пӗр шухӑшлӑ пулнӑ.

Федор Пакрышень сӑмах илчӗ:

— Эпӗ ҫапла шухӑшлатӑп, атьсем, мӗн калам... ҫак вӑхӑтра, пирӗн тӑвансем ҫав тери выҫлӑхпа аптраса ӳкнӗ чухне, эпир кунта, санаторире, кунне икшер кӗрепенкке таран ҫӑкӑр пӗтеретпӗр. Лайӑх-ши вӑл капла? Хӑҫан пирӗнтен кам та пулин ҫавӑн чухлӗ ҫӑкӑр ҫинӗ? Шутлӑр-ха — икӗ кӗрепенкке! Пирӗн, килте, ҫӗнӗ ҫӑкӑр кӗтсе, касӑлса ҫитетчӗҫ. Яшка антарсан, анне ҫӳп-ҫӳхе чӗлӗ касса паратчӗ те, кирек те мӗн ту вара унпа — е курса савӑн, е ҫи. Аҫтан тупмалла пулнӑ-ха ӑна, ҫав ҫӑкӑра? Кунта сана — икӗ кӗрепенкке, пыртан каялла тапать...

Ана пӗр чӗнмесӗр итлерӗҫ, вӑл калани ҫинчен кашни хӑй ӑшӗнче хӑй пек шухӑшларӗ. Пӗр Кузьмин кӑна сывлама шикленчӗ тейӗн, хӑйӗн туйӑмне палӑртма хӑрарӗ. Вӑл кун пирки хӑй те пӗрре ҫеҫ мар шухӑшланӑ, анчах калама хӑяймасӑр пурӑннӑ. Пултарать, маттур та иккен Хӗветӗр, ӑна ыталаса илсе чуп тума ҫылӑх мар. Чӑн-чӑн тус, пӗр канашпа пурӑнакан юлташ.

— Эппин, пурне те калар паян: хырӑм ҫинчи пиҫиххисене, атьсем, кӑшт туртарах ҫыхар, апат ҫине ытла тирӗнсех каяс мар, революцие хирӗҫ пыракан тӗрлӗрен усламҫӑсемпе хутшӑнма пӑрахар. Тӑвансем пек пулса, выҫӑпа аптӑракан ҫынсене пулӑшар, куншӑн пире пролетариат тав тунисӗр пуҫне урӑх нимӗн те калас ҫук.

— Сан шухӑшу — тӗрӗс шухӑш,— терӗ Турхан.— Чӑн та, эсӗ ҫинӗ чух сан енне выҫӑ куҫпа пӑхаҫҫӗ пулсан, ҫӑвара кӗнӗ ҫӑкӑр анмасть.

— Комиссарпа калаҫса пӑхас пулать,— канаш пачӗ Салагатов.

— Кузьмина хушар,— терӗ Иванов.

Мишша ура ҫине тӑчӗ.

— Тавтапуҫ, юлташсем,— куҫҫульне аран тытса чарчӗ вӑл.— Эпӗ пӗлсех тӑтӑм... Эпӗ шухӑшларӑм... ӗнентӗм... Эпӗ халех... калаҫса пӑхатӑп...

XX

Яким Иванович Потопальскин ахаль те нумай ҫӗҫӗ ҫумне тата тепӗр ӗҫ хутшӑнчӗ — санаторире сывалакансене тивӗҫлине катса, выҫӑпа аптранисене пулӑшма уйӑрса хумалла. Ҫав ӗҫе тунӑ май, вӑл мӑкӑртатмасӑр ирттерсе яраймасть, хӑш чухне сасси хаярлансах ҫитет.

— Тем те хӑтланаҫҫӗ — ҫӑвар умӗнчи саккунлӑ ҫӑкӑра каялла туртса илеҫҫӗ. Сана, чирлӗ ҫынна, хысна шучӗпе, янтӑ апатпа тӑрантараҫҫӗ пулсан, кунне, яшкасӑр-мӗнсӗр пуҫне, тата икӗ кӗрепенкке ҫӑкӑр параҫҫӗ пулсан — ҫи чӗнмесӗр, сывал, вӑй пух, вӑл, тен, сыватасси тӑрантарнинчен хаклӑраха ларать-и. Ҫук-ҫке,— таҫта такам выҫӑпа аптранине, такама ҫиме ҫӑкӑрӗ ҫуккине пӗлнӗ-илтнӗ те — кур ӗнтӗ, ҫур пайока яхӑн катмалла килсе тухать. Выҫӑхакансене пулӑшма кашнинчен кунне ҫур кӗрепенкке ил-ха—сисмӗн те, хӑвӑн хырӑму выҫӑпа кӗвӗ калама пуҫлӗ. Эпӗ хам пирки шарламастӑп, хама тивӗҫлинчен ҫуррине парсан та, выҫӑхса-тирӗнсе ӳкес ҫук, кунне пӗр кӗрепенкке ҫӑкӑр мана мӑй таранах. Чирлисене илсен? Хамӑрӑн комиссарах илер — шӑмми те тирӗ, пӑхсан витӗр курӑнмалла, хӑй ҫапах ҫӑкӑрне выҫҫисем валли уйӑрса парать. Халӗ, юрать-ха, выҫӑпа аптракансене каять, тейӗпӗр. Унччен кам ӳркенмен ҫавӑ ҫиетчӗ комиссар ҫӑкӑрне. Тӑварпа улӑштарманни кӑна юлчӗ...

Яким Иванович комиссарпа хытӑ калаҫма шухӑшласа хучӗ.

— Вӑл мӗнле ҫын иккеннениепле те ӑнланса ҫитерейместӗп. Хӑйшӗн кӑна тӑрӑшас, хӑй валли кӑна хапсӑнас пулсан — тупӑка кӗрсе выртӑччӗ, суймастӑп, атьсем, суятӑп-тӑк, ҫакӑнтах ҫӗр тӗпне анса каям. Шӑмшакки кӑна сурмасть-ҫке-ха унӑн, тухтӑрсем каланӑ тӑрӑх, ҫав чир ӳпкине пырса тивнӗ. Унӑн хӑй

çине хăй çаврăнса пăхасчĕ, вăл итлесшĕн те мар. Пĕр-икĕ кун выртать те, каллех ĕçе тытăнать. Ылтăн çын пирĕн комиссар, анчах мĕн тумаллине пĕлместĕп — ĕç тесе тирĕнсе ан ÿктĕрччĕ, эпир те ют çынсем мар иккенне, эпир те хысна çăкăрне кăлăх çĕртменнине куртăрччĕ. Илтет те вăл çын — кам пĕлет, таçта çынсем выçăпа аптранине хаçатра вуласа пĕлнĕ,— ларма та тăма пĕлми пулать, сасартăках çав çынсемшĕн чĕрипе çунма тытăнать, «хамăр çăкăрпа, тет, пулăшма тивет». Эпĕ хĕрхенетĕп-и, атьсем, ырă çынсене çăкăрăмăра пама, ăна кăмăлтан сĕнетпĕр пулсан? Эпĕ тесен — хам Атăл çине çав çăкăра тăрантаспа леçĕттĕм, ан тив çынсем тутă пулччăр, выçăхса ан вилччĕр.

«Таласра» сывалакансемпе ĕçлекенсем Евпаторире чи малтан çав ĕçе — выçăхакансем валли пулăшу пухма пуçарса янипе, вĕсем хыççăн ыттисем те хутшăннипе, çапла вара, пулăшу комитетĕнче тырă нумайланнипе Яким Иванович каярахпа мухтанма та ÿркенсех кайман.

Антоненко комиссар та, хăйне шаннă çынсем таçти-таçти халăхсене тăванĕсем вырăнне хурса пулăшма пулнăшăн, чунтанах хĕпĕртенĕ. Ун патне Кузьмин пырса хăй ĕçĕ пирки, комиссар ăнланмасран шикленнĕ пек, аякран калаçу хускатса ярсан, вăл çавăн çинченех шухăшланă шухăшне сыпăнтарнă кăна.

Кузьмин малтан ăна хăйсен палатинчи юлташĕсем Атăл тăрăхĕнчи выçлăх пирки мĕн тери пăшăрханса шухăшлани-калаçнине пĕлтернĕ. Комиссар, сăмах ăçталла каяссине сиссе, чĕнмесĕр итленĕ. Мишша хăйĕн амăшĕнчен илнĕ çыру çинчен каласа парсан, комиссар пĕр саманта кăмăлсăр пулнă, Кузьмин пĕтĕм халăх çинчен мар, хăй кил-йышĕ пирки кăна пăшăрханать-ши тесе те шухăшланă вăл. Унтан, вăтăр иккĕмĕш палатăрисем, пурте пĕр кăмăллă пулса, выçăпа аптракансене пулăшма шухăш тытнине пĕлсен, комиссар тата ытларах салхуланнă — хальхинче вăл Кузьмина ăшенче кăлăхах айăплама тăнă пирки хăйне хăй çиленнĕ.

— Ку ĕçе тума пултарассине эпир пĕлетпĕр,— тенĕ Кузьмин, комиссар кăмăлне сиссе,— анчах хамăр шухăша каласа парас, терĕмĕр... ăна ăшра тытса тăриччен... Çынна ырă кăмăл кирлĕ...

Антоненко хăйпе калаçакана куçран ăшшăн пăхса илнĕ.

— Йышăнатăп, Кузьмин. Вăл ĕçе эпир тума пултаратпăр. Пирĕн республикăра кашни сирĕн пек шухăшласан, Атăл тăрăхĕнчи выçлăх, сирен халăхăра тивнĕ инкек ним чухлĕ те хăратаймĕччĕ. Ку вăл революци çĕнтерне çĕршывра кăна пулма пултарнă пархатарлă ĕç. Эпĕ сирĕн шухăшăра чĕререн йышăнатăп... Эсир тĕрĕс калатăр — çынна ырă кăмăл кирлĕ, юлташлăх. Çанталăк кÿнĕ инкеке çĕнтернĕ хушăрах эпир хамăр çынсен кăмăлне, хамăра хамăр та тĕрĕслетпĕр.

Кăнтăрлахи апат хыççăн тÿрех митинг уçрĕç. Советсен çĕршывне унта-кунта пысăк инкек килсе çитни çинчен комиссар хăй каласа пачĕ, вăлах партипе патшалăх, Владимир Ильич Ленин Атăл тăрăхĕнчи халăхсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшнине пĕлтерчĕ. Хăйсенчен пулăшасси пирки вăл ним те каламарĕ, анчах Атăл тăрăхĕнчи çынсемпе пĕр тăван пулнине, вĕсене чăтăмлă-тÿсĕмлĕ пулма суннине, çапла вара революцишĕн вăй пухма кирлине резолюцинче палăртса хăварма сĕнчĕ.

— Ку кăна сахал!— кăшкăрчĕ те Кирилл Турхан, комиссарпа юнашар пырса тăчĕ.

Михаил Кузьмин тин кăна çакă шÿт тума юратакан мăшкăлçă çав тери ырă кăмăллă та тарăн чунлă иккенне пĕлчĕ. Унăн ăна ыталаса чуп тăвасси килчĕ.

— Эпĕ çапла сĕнетĕп: хамăра санаторире тивекен пайока чĕрĕкне чакарар та выçăпа аптракансем валли тунă фонда кунсерен кашнинчен çур кĕрепенкке çăкăр уйăрса парар. Эпир, тепĕр тесен, патшалăх çăкăрĕпе ытла тутă пурăнатпăр, хăш-пĕрисен питçăмартийĕсем фотоаппарата кĕрес çук самăрланса кайрĕç, пĕр турам пирĕншĕн нимĕн те мар, выçă çынсене вăл пысăк пулăшу пулĕ. Тĕрĕс калатăп-и, юлташсем?

— Тĕрĕс!

Яким Иванович малтан шикленсех ÿкрĕ — вăл хăй комиссар умĕнче сывалакансене лайăх тăрантарма, мăнтăрлатма сăмах панине аса илчĕ. Тен, çав ик çĕр кĕрепенккене районти организацисенчен мĕнле те пулин майпа хăйпăтса илме пуласси пирки шухăшласа пăхрĕ. Ăна халиччен ниçта та пушă алăпа кăларса яни пулман — Евпаторири влаçсем сывалакансене мĕн вăй çитнĕ таран ялан пулăшма тăрăшнă. Анчах халĕ хăйĕн шухăшне вăл калама та ĕлкĕреймерĕ — сывалакансем хăйсене тивĕçлинчен чĕрĕкне катма пулчĕç. Кăна пĕр сасăллă пулса йышăнчĕç.

Михаил Кузьмин хăйне тепле вăйлă çапăçуран çĕнтерсе тухнăн туйрĕ. Çĕр çинче чăн-чăн йĕрке пуласса, хăй çуралнă çĕршывран выçлăх тухса тарасса, тăван çынсем ирĕккĕн сывлаласса вăл чунтан ĕненчĕ. Çапла пулатех, терĕ вăл хăй ăшĕнче. Мĕншĕн тесен выçлăха хирĕç халăх мĕльюн-мĕльюнĕпе çĕкленет.

Леонид АГАКОВ

САЛТАК АЧИСЕМ

КАМ ВĂЛ?

АЧАСЕМ ХАЛЬ пĕве урлă мар, çырма пуçĕнчи ансăр пралукпа кайрĕç. Пĕр вăхăт нихăшĕ те чĕнмерĕ, вĕсен урисем айĕнчи хытнă юр кăчăртатни çеç илтĕнчĕ. Таврара кăнтăрлахи пекех çутă пулчĕ — леш енчи йăмрасем хыçĕнчен тулли уйăх, тӳпенелле хăпарса, пĕтĕм ял çине сенкертерех сивĕ çутă сапса тăчĕ. Çуртсем, йывăççем çинчи, пахчасенчи юр йăлтăртатса выртрĕ, хăш-пĕр мăрьесенчен тухакан тĕтĕм те лайăх палăрчĕ. Илемлĕ хĕллехи уйăхлă каç!..

Анчах Евгени унталла-кунталла пăхмарĕ, кĕçĕр пулса иртнисем çинчен шухăшласа пычĕ.

— Çапах та Кольккине çапмалла пулман санăн,— терĕ вăл сасартăк, Аркаш пачах та кĕтмен çĕртен.— Хулигансене хирĕç хулиганла майсемпе кĕрешмесçĕ. Ун çинчен эпĕ темле кĕнекере те вуланăччĕ.. Кольккине çакăн пек тискерле хăтланнăшăн айăпламаллах, анчах сана хăвна та ăна хĕненĕшĕн айăплама пулать.

— Хĕнемен эп ăна,—пуçне пăркаласа илчĕ Аркаш.

— Хăлха чикки патăм, терĕн-çке?

— Вăл пăртак тăн кĕртмелĕх кăна.

— Хăй те хăвна хирĕç тыттарса ячĕ пуль-ха?

— Асту, çав ӳпренех çаптаратăп мар-и! Тĕкĕннĕ-тĕкĕнмен лĕр-р макăрса ячĕ те: «апия калап» тесе килнелле лăпсăртатрĕ. Шăллĕ те унран юлмарĕ. Ăна тивмен эпĕ, анчах вăл та хăйне пусма тапратнă пекех çухăрса чупрĕ. Çунашкине те пăрахса хăварчĕç...

Тусĕн сăмахĕсем Евгение пĕртте лăплантармарĕç курăнать. Вăл ассăн сывласа илчĕ те каллех калаçма тытăнчĕ:

— Вĕсем халь хăйсен амăшне пырса калана ĕнтĕ, лешĕ кĕçĕрех ял тăрăх янраса çӳреме тытăнать, пулни çумне пулманнине ытларах хушать, пирĕн çинчен усал сăмах сарăлать.. Мĕн тума кирлĕ ку?

— Усал сăмахне вăл хăйĕн Колькки çинчен сартăр! Эп никама та пуç çурăлса каймалла çапса ӳкермен,— мăкăртатса илчĕ Аркаш.

— Колькки çинчен сăмах пулĕ-ха, шкулта та, пионерсен сборĕнче те калаçĕç ун пирки, ахаль ирттерсе ямĕç. Халь тата паллă та мар-ха, кинеми сывлăхĕ темле пулать... Айăпĕ пĕтĕмпех Колька çинче.

— Калаçма та кирлĕ мар, тытмалла та Палляпа иккĕшне те шкултан хăваласа ямалла çеç!—тарăхса каласа хучĕ Аркаш.

— Вĕсемпе пĕрле — сана та-и?

— Мана мĕншĕн?

— Пулчĕ-пулмарĕ çапăçма кĕрсе кайнăшăн.

— Эп айăпсăр çынсене тивместĕп!

— Вăл пурпĕр, тусăм. Çыннăн нихçан та чышки

Ку повеçĕн пĕрремĕш пайĕ «Тăван Атăлăн» 1960 çулхи 5-мĕшпе 6-мĕш номерĕсенче тухнă. Кунта эпир иккĕмĕш пайĕн хăш-пĕр сыпăкĕсене пичетлетпĕр. Пĕтĕмĕшпе повеç сывăх вăхăтрах уйрăм кĕнекепе тухать.

малта пымалла мар, çавна ан ман эсĕ. Кам та пулин йăнăш тăвать пулсан, ăна чăн малтан сăмахпа ăнлантарма тăрăшас пулать.

— Ăнлантарăн Палляпа Колька пеккисене! Эс вĕсене ăнлантариччен вĕсем сан майна каялла пăрса хума пултараççĕ...

Çапла пĕр-пĕринпе хирĕçлерех калаçса, ачасем Паллясен тĕлне çитсе тăчĕç. Тĕрех кĕрсе каймарĕç вĕсем, малтан пӳрт умĕнчи решуткă карта урлă карăнса чӳрече витĕр шалалла пăхрĕç. Аркашран çӳллĕрех Евгени пӳртре çынсем пуррине асăрхарĕ, анчах никамах та палласа илеймерĕ.

Тепĕр минутран вара вĕсем пӳрте кĕрсе тăчĕç. Çынсем чылай иккен. Ваттисем те, ачасем те пур. Хĕрарăмсем те курăнкалаççĕ. Паллах, вĕсем пурте вăрçăран аманса таврăннă салтака курма пынă. Ĕмĕртен пыракан йăла вăл — салтак курма каясси. Вут-çулăм ăшĕнчен хăтăлса тухса йăпăртлăха киле лекнĕ çынна пурин те курса юлас, вăл каласа панисене итлес килет вĕт-ха.

Ачасем, алăк патĕнчен малалла иртмесĕрех, куçĕсемпе хăйсем палламан çынна шырарĕç — ăçта-ха вăл? Тĕпелти сĕтел пуçĕнче паян хăйсемпе пĕрле йăлăмра пулнă Сар Тимухха чĕлĕм туртса ларать— вăл хăй те ĕлĕкхи вăрçăра аманнăскер те, унăн хальхи вăрçă паттăрне пуринчен те ытларах курас килнĕ пуль, çавăнпа маларах иртсе ларнă ĕнтĕ. Чӳрече умĕнче Палля пĕчĕк мăлатукпа çапа-çапа мăйăр катать. Вăл çĕнĕ кăвак кĕпепе, амăшĕ ăна каклă хăна килнĕ ятпа ятарласах тăхăнтарнă пульха. Анчах ӳссе кайнă хĕрлĕ çӳçĕсем яланхи пекех тирпейсĕр, милĕк пек. Вăл никам çине те пăхмасть, мăйăр катать те çиет, катать те хыпать.

Пӳртрисем пĕри те чĕнмеççĕ, тем кĕтнĕ пек лараççĕ.

Ăçта-ха салтакĕ? Таçта тухса кайнă-ши? Апла килни те кăлăхах пулчĕ эппин?

Сасартăк кăмака çинче тахăшĕ вăрăммăн харлаттарса илни, унтан йынăшса яни илтĕнчĕ. Ав мĕн иккен! Салтак çывăрать. Çынсем вăл вăранасса кĕтеççĕ.

Алăк уçăлчĕ те, тултан Палля амăшĕ кĕчĕ. Евгенипе Аркаш ик еннелле пăрăнса ăна çул пачĕç, çав хушăрах Евгени вăл сăхман аркине хупласа темскер йăтса кĕнине асăрхаса юлчĕ. Хĕрарăм тӳрех чăланалла пăрăнса кайрĕ, унтан кĕленче темле хытă япалана перĕнсе чанклатни илтĕнчĕ.

Паллясем патне пынă çынсенчен пуринчен малтан Сар Тимухха сăмах хушрĕ.

— Итле-ха, Мари кин, вăратма пулмасть-ши ăна?—ыйтрĕ вăл.— Çывăрма кайран та пулать вĕт, хĕллехи çĕр вăрăм. Шутсăрах пĕр темиçе сăмах калаçса илес килет... Эп те салтак вĕт-ха, как-никак. Атту ыран ир манăн каллех йăлăма утă патне каймалла, килсе курма ерçӳ пулмасть...

— Чиччас тăрататăп, каçхи апат çитерес пулатьха ăна,—сас пачĕ Палля амăшĕ, чăланта савăт-сапасене кĕмсĕртеттерсе.— Çынни тем те курса пĕтнĕçке-ха вăл, сиввине те, выççине те тӳснĕ, амансан юр çинче те икĕ талăк юн юхтарса выртнă та — лайăхрах кантăр тетĕп-çке!

— Тĕрĕс калатăн, Мари кин, хамăршăн юн тăкнă паттăрсене хисеплес пулать вĕсене. Хам тӳссе курнă...

— Эс тӳснĕренпе çĕр çул та иртнĕ ĕнтĕ, ун чух мĕн пулнине манса та кайрăн, аса та илместĕн пуль.

— Э-э, Мари кин, манаймастăн ăна, виличчен те асран каймасть вăл, унта пулса курманнисем çеç чухламаççĕ ăна. Курса килнисем — манмаççĕ!

— Питĕ ăслă сан сăмаху, тĕрĕс пуплетĕн, юлташ,— илтĕнчĕ çав самантрах кăмака çинчен.

Салтак хăех вăраннă иккен. Вăл вăрăммăн, йынăшса янă пек анасласа илчĕ те кăмака çинчен сиксе анчĕ. Ачасем ăна куçĕсемпе çисе ярас пек пăхма тытăнчĕç. Лутрарах платна арçын, хулпуççисем сарлака, пуçне шакла кастарнă. Симĕс гимнастеркăпа, ваткăллă симĕс йĕмпе. Уринче «фабричнăй» çĕнĕ çăматă, сулахай аллине марлĕпе чĕркенĕ те темле пиçиххипе мăйĕнчен çакса янă.

Сар Тимухха ăна хирĕç тăрса ал пачĕ.

— Салам, юлташ, чипер таврăнса çитнĕ ятпа...

— Чиперрине ху куратăн, епле юсаса ячĕ шуйттан Гитлерĕ!— çыхнă аллине çĕклесе кăтартрĕ салтак.

— Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă унсăр пулмасть,— ассăн сывласа ячĕ Тимухха.—Манне те ав, вун улттăмĕш çулта, вĕсен Вильгельмĕ* урана хуçса ячĕ. Çавăнтанпах уксах автан пек хăрах ура çинче сиксе çӳретĕп...

— Ну, хальхи вăрçă унчченхинчен çĕр хут хăрушăрах вĕт! Самолечĕсем çӳлтен тĕвеççĕ, танкĕсем таптаççĕ, тупписем таçта çити переççĕ, автомачĕсем окопран пуç кăларма та памаççĕ...

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ, ĕлĕкхипе хальхине ăçтан танлаштаран? Вĕренсе çитрĕç ĕнтĕ çынна вĕлерме!— килĕшрĕ Тимухха.

Палля куккăшĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Туртмалли пур-и?— ыйтрĕ вăл Тимуххаран.— Манăн госпитальрен парса янă пирус та пурччĕ те— пĕтрĕ.

— Пирĕн кунта «сарайхыçтрест» кăна ĕнтĕ...— именнĕ пек пулчĕ Тимухха, табак енчĕкне ăна тăссса парса.

— Юрать вăл та, манăн халь çине ун пекки те çук-ха.

— Ыран эп сана тем чухлех тураса паратăп, кукка, тупса хутăм,—калаçăва хутшăнчĕ Палля, чӳрече аничи мăйăр хупписене пуçтарса.—Килыпех пулать.

— Эс ху та туртатăн пуль-ха, шельмă?—ун çине куларах пăхса илчĕ куккăшĕ.— Асту эп сана!

— Çук, туртмастăп эпĕ,— пуçне пăркаларĕ Палля.— Алла та тытман!

---

* *Вильгельм* — пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче (1914—1917) нимĕçсен кайзерĕ пулнă.

— Ма суян, туртатăн-иç?—пат! персе ячĕ çав вăхăтра Улюк тенĕ хĕрача, ыттисемпе пĕрле салтак курма пынăскер.— Сана шкулта та миçе хут ятланă уншăн!

— Хуп çăварна, асту кăларса ывăтатăп!—тăрук кăшкăрса пăрахрĕ ăна Палля.

— Табак тути кăмăла каять пулсан — турттăрах,— пурне те тĕлĕнтерсе, Палляна лăпкаса илчĕ куккăшĕ.— Эп хам та вун иккĕрех ĕмме тытăннă...

— Сиенлĕ вĕт-ха вăл, табак туртни!— каллех сас пачĕ Улюк.

— Арçыншăн нимех те мар... аптрамасть! Ну-кă, чĕркесе пар-ха эппин, тăванăм, мана хăрах алăпа кансĕр.

Палля хаçат хĕррине çурса илчĕ те, ун çине пĕр пысăк чĕптĕм табак хурса, йăпăр-япăр чикаркка туса пачĕ.

— Маттур, пултаратăн,— мухтаса илчĕ куккăшĕ,— арçын пула пуçланă санран.

— Анчах шкулта начар вĕренет вăл,—каллех каламасăр тӳсеймерĕ курăнать çав Улюках.—Ялан «неудсем» илет...

Вара пĕр самант хушшинчех çав тери тискер ĕç пулса иртрĕ. Палля вырăнтан сиксе тăчĕ те, Улюк патне чупса пырса, ăна питĕнчен иккĕ-виççĕ çутăлтарса ячĕ.

— Ак сана «неуд»! Ак «отличнă»!—кăшкăрчĕ вăл.— Тухса вăркăн пирĕн патран!..

Хĕрача нимĕн те чĕнмерĕ, Палля çапнă тĕлтен аллипе тытрĕ те пӳртрен хăвăрт тухса кайрĕ.

— Но-но, ку ытлашши вара,— ăна хăтăрнă пек турĕ куккăшĕ, çынсем умĕнче аван мар пулнипе.— Хĕрачасемпе çапăçмаççĕ, вĕсене юратаççĕ, тăванăм. Çиленсен те, вĕсене чĕпĕтме кăна юрать...

— Тепринче эп унăн çивĕтĕсене тăпăлтарса кăларатăп акă!— терĕ Палля.— Вĕрентĕп эп ăна элеклесе çӳреме!

Амăшĕ çаксене пĕтĕмпех курса тăчĕ, анчах ывăлне пĕр сăмах та каламарĕ.

— Эх, урамра пулмарĕ ку!— Евгение хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ Аркаш.— Ах, ăс кĕртеттĕмĕр пĕрре!..

— Ан шарла,—пăшăлтатрĕ Евгени.— Вăхăт çитсен кун çинчен аса илтерĕпĕр-ха ăна...

Палля амăшĕ сĕтел çине çăкăр касса хучĕ, унтан мăн чашăкпа апат тата хура чейникпе стакан пырса лартрĕ.

— Çийĕр! Чейникĕнчен хăвăрах ярса илĕр. Манăн кăмакаран кукăльсем кăлармалла-ха, ерçместĕп.

Чейникре сăмакун пулнă, Палля куккăшĕ малтан хăй умлăн-хыçлăн икĕ стакан ярса ĕçрĕ, унтан Сар Тимуххана та тыттарчĕ.

— Ĕçсе пар-ха ман сывлăхшăн... эп хамăн пуçа киле илсе çитернĕ ятпа!

— Çапла пултăр-ха эппин,— терĕ лешĕ.— Эсĕ... Лука ятлăччĕ вĕт-ха? Йăнăшмастăп-и эпĕ?

— Так точнă. Лука Лукиччă. Вамили — Козлов. Пирĕн асатте яланах качака усранă та, çавăншăн ăна хамăр ялта «Качака Петĕрĕ» тенĕ. Атя, çавăрса хур!

Тимухха хыççăн вăл каллех хăй тултарса ĕçрĕ те, часах ӳсĕрĕлни сисĕнме пуçларĕ. Тимуххан те пăртак пуçне кайрĕ пулмалла.

— Ну, Лука Лукич, хăв мĕнле çапăçни çинчен кăшт та пулин каласа кăтарт-ха пире, питĕ пĕлес килет,—ыйтрĕ вăл кăштах ларсан.— Ăçта çапăçрăн, мĕнле амантăн, тамăкран епле çăлăнса тухкаларăн?

Палля куккăшĕ çисе тăраннипе лакăрт! какăрчĕ те чĕлĕм тивертсе ячĕ.

— Калас пулсан, пит нумай калас пулать, ирччен те пĕтес çук ман юмахăм,— терĕ вăл мăн кăмăллăн.

— Эс пĕтĕмпе мар, кĕскен те пулин! Акă, кусем те илтесшĕн веç,— пӳртре ларакан ытти çынсем çине пуçĕпе сулса кăтартрĕ Тимухха.

— Нимĕççене Мускав патĕнче аркатса тăкни çинчен илтнĕ пуль эсир?—ыйтрĕ Козлов хăй каласа пама пуçличчен.

— Ăна илтнĕ-ха, уншăн тем пекех савăннă!—терĕ Тимухха.

— Вăт, самай çавăнта пулнă та эпĕ. Чăн-чăн тамăк хуранĕнче. Çитмĕл çиччĕмĕш артполк, тетчĕç пире. Иккĕмĕш дивизион. Хам эпĕ, конешнă, рядовой мар, командир оруди пулнă. Старши сержант Козлов. Малтан пирĕн нумай чакса килме тиврĕ. Ăна та илтнĕ эсир...

— Илтнĕ çеç мар, уншăн тем чухлех хуйхăрнă. Мĕн каламалли!— ассăн сывласа илчĕ Тимухха.

Çав хушăра Козлов — Палля куккăшне эпир малалла çапла калăпăр — тата тепре ĕçрĕ те тутине çанă вĕçĕпе шăлса илчĕ.

— Ну, вот... Мускав та инçе юлмарĕ. Пире приказ — урăх пĕр шит те чакмалла мар. Вилсен те вырăнта тăр! Оборонă. Çĕрĕн-кунĕн траншейăсем чаврăмăр, блиндажсем турăмăр, тем те пĕр. Пырса та ан çулăх халĕ пирĕн çумма. Анчах нимĕççен малалла каяс килет — вĕсене Гитлер часрах Мускава илме хушнă... Кашни кун çиччĕ-саккăр пырса сĕкĕнеççĕ пирĕн позици çине — ĕç тухмасть. Как пеме тытăнатпăр — пăрккин саланаççĕ. Тарăхнипе самолетсем яраççĕ пирĕн çине, бомбăсем тăкаççĕ, танксемпе те пыра-пыра пăхаççĕ — шалиш! Хурçă пек çирĕп тăратпăр, хамăр паталла пыракан нимĕççене çĕрпе, тăпрапа хутăштарса хуратпăр. Пĕр икĕ эрне çапла пулса пычĕ... Çав хушăра ман оруди сахалтан та пĕр аллă танк çунтарса ячĕ пулмалла, пехотăн шучĕ те çук. Пĕр икĕ пинĕ ăсанчех леш тĕнчене, ним пысăклатмасăр калатăп! Ну, орден лекетех куншăн сана, старши сержант Козлов, теççĕ аслăрах командирсем. Тен, пĕрре кăна та мар, иккĕ тан пулĕ, теççĕ. А эпĕ вĕсене: мана орден кирлĕ мар, маншăн — тăшмана ытларах пĕтерсе пултăр, тетĕп...

— Тĕрĕс каланă, питĕ тĕрĕс,— пуçĕпе сулкаласа илчĕ Сар Тимухха.— Тăшманне часрах пĕтерес пулать, орденĕсем пулĕç вĕсем!

— Орденне чăнах та пачĕç, Мускавран пынă гене-

рал хӑй аллипех ҫакса ячӗ ман кӑкӑр ҫине. Пӗтӗм полк умӗнче! Шел, госпитальре выртнӑ чух тахӑшӗ вӑрларӗ ӑна. Анчах уншӑн питех хуйхӑрмастӑп эпӗ, вӑрҫӑ пӗтиччен темиҫе те илме пулать-ха вӗсене. Ну, унтан наступленине кӗрсе кайрӑмӑр. Аркататпӑр анчах фашистсене. Мулкачсем пек тараҫҫӗ. Трофейсем илетпӗр кашни кун — блиндажсенче тем чухлӗ французски эрех, коньяксем, закуски... Ҫисетпӗр-ҫиетпӗр те — татах малалла. Нимле чару та ҫук пирӗншӗн. Мускавран пӗр икӗ ҫӗр ҫухрӑм ытла кайрӑмӑр. Вперед, хӗвеланӑҫнелле!— Козлов ку сӑмахсене такама командӑ панӑ пекех кӑшкӑрса каларӗ те чышкипе сӗтел ҫине чант! тутарчӗ.— Унтан вара пӗррехинче ак ҫапла пулса тухрӗ... Эпир пӗр вӑрман хӗррине чарӑнсаттӑмӑр. Нимӗҫсем пире асӑрхарӗҫ пулмалла та тытӑнчӗҫ сывлӑшран ӑшалама, апайтурах!.. Унтан арттиллерипе! Танксемпе! Пирӗн пӗри вилет, тепри аманать... Пӑхатӑп — эп пӗччене тӑрса юлнӑ. Нимӗҫсен енчен виҫӗ танк килет. Ман оруди ҫинех ыткӑнаҫҫӗ, мӗншӗн тесен пуринчен те ытларах эп тарӑхтарса ҫитернӗ-ҫке вӗсене. Ну, тинех пӗтмелли ҫитрӗ, халех лапчӑтса хураҫҫӗ кусем, тетӗп... Ҫапах та парӑнас шутӑм ҫук! Тытӑнтӑм пеме! Пӗрне лектертӗм — гусеници татӑлса ывтӑнчӗ, тепӗр снарядпа иккӗмӗшне тивертсе ятӑм. Виҫҫӗмӗшӗ хӑраса ӳкрӗ пулмалла та, вӑрр! ҫаврӑнса, каялла тӗпӗртеттерчӗ... Ну, халь ӗнтӗ ҫӑлӑнса юлтӑм, тетӗп. Оруди ҫумне таянса лартӑм та чӗлӗм чӗртсе ятӑм. Канас терӗм пӑртак. Ывӑнтарать вӗт пӗрмай пере-пере. Снарячӗсем йывӑр, пулӑшакансем никам та ҫук манӑн, пурте вилсе пӗтнӗ. Юрать-ха, хамӑн вӑйӑм пур та! Минут лартӑм-ши ҫапла, иккӗ-ши, пӗлместӗп. Унччен те пулмарӗ, пирӗн умри пӗр траншейӑран нимӗҫсем сиксе тухрӗҫ... Пехотӑ! Пӗр вӑтӑрӑн пуль, унтан кая мар. Ӑтарласа мана тытма сыхласа ларнӑ вӗсем. Мӗн тӑвас хайхи? Вилнӗ салтакӑн автоматне илтӗм те — ҫаксем ҫинелле шатӑрр! шатӑрр! тутартӑм. Ҫурри ҫавӑнтах тӑкӑнчӗҫ, ыттисем тарма тапратрӗҫ. А эп вӗсене —хыҫран! Шатӑрр! шатӑрр! Веҫ пӗтрӗҫ ҫаксем, пӗр ҫын та чӗрӗ юлмарӗ... Анчах хам та амантӑм ҫавӑнта: таҫтан мурӗнчен пӗр ухмах снаряд пырса ӳкрӗ те шап! хупласа хучӗ мана, шуйттан. Урӑх нимӗн те астумастӑп, госпитальте тин тӑна кӗтӗм. Вун пӗр осколккӑ кӗрсе ларнӑ ман ӳте. Сулахай хула ҫӗмӗрсех пӑрахнӑ...—Козлов мӑйӗнчен ҫакса янӑ аллине хускаткаласа илчӗ.

— Осколккисем халь те сан ӑшӑнтах-и вара?— ыйтрӗ Палля, ытти пур ҫынсем пекех питӗ тимлӗн итлесе ларнӑскер.

— Вӗсене магнитпа туртса кӑларчӗҫ. Анчах ку алли тӳрленмест-ха, суранӗсене ӳт илмест. Тухтӑрсем мана госпитальтен кӑларса ярасшӑн марччӗ, эпӗ хам ирӗкпе тухса килтӗм. Тӑвансене курас килекен пулчӗ...

— Ара, этем чунӗ килеллех туртать ҫав,—килӗшсе пуҫӗпе сулчӗ Сар Тимухха.— Манӑн хамӑн та ҫавӑн пекехчӗ...

Козлов тата тепӗр хут тултарса ӗҫрӗ.

— Ҫапла иртрӗ манӑн фронтри пурнӑҫ...

— Нумай, пит нумай тӳснӗ эсӗ! Калама та ҫук...

— Мӗн тӑвас тетӗн, вӑрҫӑ! Вӑрҫӑ, тӑванӑм!.. Ҫак алӑ чипер тытакан пулсан каллех кайма тивет акӑ. Тылра ларса пурӑнмалли ҫын мар эпӗ. Манӑн ҫапӑҫмалла, тӑшмана пӗтермелле. На то салтак! Салтак анчах та мар — старши сержант. Таврӑнсанах лейтенант тӑваҫҫӗ пуль-ха ӗнтӗ, ма тесессӗн ман халь опыт пысӑк, ҫитменнине тата эпӗ ҫапӑҫусенче те ҫав тери харсӑр пулнӑ...

Козлов ӳсӗрӗлсе кайрӗ. Унӑн сӑмаххисем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнми пулчӗҫ, анчах никамӑн те ӑна тиркес шут пулмарӗ: вӑрҫӑра тем те пӗр тӳснӗ салтакӑн халлӗхе вӑйӗ те ҫукрах пулӗ, тен ҫавӑнпа час ӳпресе кайрӗ вӑл...

Пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн Козлов тӑрук кӑшкӑрса юрласа ячӗ:

Там вдали, у реки,
Засверкали штыки...

Ӑна курма пынӑ ҫынсем майӗпе саланма пуҫларӗҫ. Евгенипе Аркаш та ӗнтӗ киле кайма шут турӗҫ.

— Ну, мӗнле? Хӑрушла каласа парать вӗт? Интереснӑ вӗт? Анчах эсӗ килӗшесшӗн марччӗ, айван,— терӗ Аркаш, вӗсем сивӗ те тӗттӗм урама тухсан.

— Итлеме интереснӑ та, анчах манӑн темле... питех ӗненесех килмест ӑна,— пуҫне пӑркаласа илчӗ Евгени.—Ытлашши мухтаннӑ пек туйӑнать. Ана пӗтӗмпех ӗненсен, фашистсене Мускав патӗнче вӑл пӗччене аркатса тӑкнӑ пек пулса тӑрать...

— Э, эс яланах хӑвна майлӑ шутлатӑн,— терӗ Аркаш, кӑмӑлсӑрланса.— Ара, ҫынни чӑнах та вӑрҫӑра пулнӑ вӗт-ха, аманса таврӑннӑ. Эппин, мӗн курмаллине курнах ӗнтӗ вӑл, хӑйӗнчен шухӑшласа кӑлармасть!

— Курассине, тен, курнӑ та пуль те...

Евгени хӑй шухӑшне каласа пӗтермесӗрех килнелле утрӗ.

— Неушлӗ вара вӑрҫӑра ҫавӑн пекех пулать?— хӑй ӑшӗнче тӗлӗнсе пычӗ вӑл.— Неушлӗ пӗр-пӗччен тӑрса юлнӑ ҫын ҫавӑн пек тем те пӗр тума пултарать-ши? Тӑшман танкӗсене те ҫунтарса ярать вӑл, пехотине те ҫавапа ҫулнӑ пек ҫулса тӑкать. Ытла та юмахри пек-ҫке ку? Ун пекех пулсан, тӑшмана пӗтерсе тӑкма йывӑрах та мар? Анчах ма-ха эппин пирӗннисем Мускав таранах чакса килчӗҫ, мӗншӗн халӗ те фашистсене ытла тӑрукках каялла хӑваласа яраймаҫҫӗ?..

...Палля куккӑшӗ ҫынсене пӗтӗмпех ӳлталанине, вӑл вӑрҫӑра нихҫан та пулманнине, хӑйне тӗрмерен кӑларнӑ хыҫҫӑн фронта ярасран тарса ҫӳренине Евгени пӗлмен, пӗлме те пултарайман ҫав. Лука Козлов епле пӳтсӗр ҫын пулнине чылай вӑхӑт иртсен тин пӗлнӗ вӑл...

КУНШĂН НИКАМ ТА КАÇАРМĔ...

ИРХИНЕ, тул çутăлса çитичченех, картлă кĕвентерен ик витре çакса ярса çырмари çăла шыв ăсма чупса ансан, Евгени унта кĕтмен çĕртен Антонина Клементьевнăна тĕл пулчĕ. Фельдшерицă тĕп хунă мăн çăматă тăхăннă, пуçне темле кивĕ кăвак шаль çыхнă та, Евгени ăна тăруках палласа та илеймерĕ. Евгение вăл хăй малтан сăмах хушрĕ:

— Ай-ай хытă çунтарать паян сив мучи! Сана епле пек, Евгени?

— Сивĕ çав,— терĕ Евгени.— Миçе градус-ши?

— Вăтăртан та иртет пуль...

— Ĕнерех апла марччĕ, эпир йăлăма ним мар кайса килтĕмĕр. Кĕçĕр сывламалла мар шăнтса лартнă — тĕлĕнмелле!

— Вăхăчĕ çавăн пек. Ĕлĕкхилле каласан, раштав сиввисем пуçланчĕç... Анчах эпир килте ăшă пÿртсенче ларса аптăрамăпăр-ха, пирĕннисем фронтра мĕн кураççĕ-ши?

— Кансĕр ĕнтĕ вĕсене, паллах...

— Çапах та, маттур çапăçаççĕ-ха! Хăвалаççĕ те хăвалаççĕ фашистсене хамăр çĕр çинчен! Эсĕ хаçатсем вуласа пыратăн пуль?

— Маншăн ку чухне хаçат тавраш̆е çăкăртан та хаклăрах, Антонина Клементьевна! Пирĕн Пауль Оскарович вара пĕр икĕ кун хаçат вуламасан апат çиме те, çывăрма та пăрахать. Каççерен эпир пĕтĕм кил-йышĕпе пĕрле пухăнса ларса вулатпăр.

— Халь пурте çапла ĕнтĕ, пурин пуçĕнче те вăрçă шухăшĕ анчах...

Фельдшерицă витрисене картлă кĕвентепе çаклатса çĕклерĕ те темиçе утăм тăвалла ярса пусрĕ. Çав вăхăтра Евгени тăрук ĕнерхи çинчен аса илсе ыйтрĕ:

— Антонина Клементьевна, Маюк кинеми пирки мĕн терĕç? Ăна больницăна леçме Назар Егорчăпа пĕрле эс ху та кайнă вĕт-ха?

— Кайнă çав. Ытлашши нимех те пулман, анчах пĕр эрнесем пек вырттарас пулать, терĕç.

— Илсе юлчĕç эппин хăйсем патне?

— Ман умрах вырттарчĕç. Тепĕр ик кунтан кайса пăхатăп-ха.

— Килĕнче кам вара унăн халь? Выльăхĕ-кайăкĕ... вĕсене камăн та пулин тăрантарас пулать вĕт-ха!

— Халлĕхе юнашарти Праски ачисем пăхаççĕ, кинне вăрман ĕçленĕ çĕртен килме хушса правлени ячĕпе телеграм патăмăр...

— Çакна веç Лавăшник Караçăм Колькки туса хучĕ, эсрел пуçĕ!— тарăхса каларĕ Евгени.— Хăй тунать тет-ха тата! Анчах эпир Аркашпа иксĕмĕр хамăр куçпа курса тăтăмăр...

— Вăл сирĕнпе пĕр класрах вĕренет мар-и çав?

— Пирĕнпе-ха. Ак, каникул хыççăн калаçатпăр унта эпир. Пĕрре лайăх кăна тытса лăскамалла пулать.

— Хĕнес теместĕр пуль те? Астăвăр, ун пек юрамасть, хăвăрах айăплаççĕ вара.

— Çу-ук,— ал сулчĕ Евгени.— Ун пек хăтланма ытла сĕм ухмахах мар-ха. Эпир ăна пĕтĕм класс умĕнче намăслантаратпăр. Стена хаçатĕнче çыратпăр.

—Намăслантарнинчен ытларах — çапла хăтланма юраманнине ăнлантарас пулать. Эсир пурĕ пĕрле калани унăн чĕри патне çиттĕр!

— Тĕрĕс...

Çăл патĕнчен вĕсем халь пĕрле хăпарчĕç. Ялан халăх хушшинче, çынсемпе пĕрле пулнипе пурин çинчен те ыйтса пĕлме, пурнпе те калаçма хăнăхса çитнĕскер, Антонина Клементьевна халь те калаçмасăр пымарĕ.

— Сирĕн килтисем епле пурăнаççĕ унта? Ку яхăнта пырса та кураймарăм, ниепле те вăхăт çитмест...

— Лайăхах пурăнатпăр-ха,— терĕ Евгени.

— Эстонецсен леш чирлесе пурăннă пĕчĕк хĕрачи мĕнле? Эльга ятлăччĕ-и-ха çав?

— Чупать! Кунĕпех Маринепе пĕрле вĕсем, шит те уйрăлмаççĕ. Тепĕр чух выляççĕ-выляççĕ те пĕрлех выртса çывăраççĕ.

— Ютшăнма пăрахрĕç эппин?

— Мĕн ютшăнни пултăр! Эльгипе Юули те чăвашла сăмахсем чылай пĕлекен пулчĕç ĕнтĕ. Марине вĕсене çине тăрсах вĕрентет...

— Вĕренччĕр, вĕренччĕр,—терĕ Антонина Клементьевна.— Кам пĕлет, тахçанччен пурăнмалла пулать-ха вĕсен кунта. Чăвашла пĕлни кансĕрлемĕ...

Икĕ урам хĕресленнĕ тĕлте вĕсем уйрăлчĕç. Хăйсен хапхи патне çитнĕ чух Евгени ялта почтă валеççе çÿрекен Варьккана — пĕчĕк те çап-çаврака сăн-питлĕ, тĕлĕнмелле вăрăм куç тĕклĕ хĕрачана тĕл пулчĕ. Вăл аслашшĕн кивĕ сăран сумккине кăкри умне çакнă та анатран хăпарать-мĕн. Ăна курсанах Евгени чарăнса тăчĕ.

— Пире валли мĕн пур?

— Хаçат кăна паян...

— Çыру çук-и?

— Çыруне тин çеç çырма ларнă тет-ха!—Варькка ăна сумкинчен «Чăваш Коммуни»* кăларса тыттарчĕ те малалла утрĕ. Евгени килне кĕрсе витресене кăмака çумĕнчи каткана пушатсанах чÿрече умне пырса тăрса хаçат вулама тытăнчĕ. Мĕн пĕлтерет-ха паян Совинформбюро? Тата миçе хулана ирĕке кăларнă-ши пирĕн çарсем?

Хаçатсем вулама халь савăнăçлă пулчĕ. Нимĕççесене Мускав патĕнче аркатса тăкнăран варах ырă хыпарсем пĕлтерчĕç унта. Хĕрлĕ Çар, хамăр çĕре фашист çĕлен-калтисенчен тасатса, малаллах пырать. Акă, çак кунсенче кăна пирĕннисем Калугă, Малоярославец, Наро-Фоминск, Можайск, Дорохово тата ытти чылай хуласене ирĕке кăларчĕç. Паян та пĕлтернĕ пуль-ха, тен...

---

* Хальхи «Коммунизм ялавĕ» хаçат.

«...вăйлă çапăçусем хыççăн Уварово хулипе ун çывăхĕнчи чылай ялсене ирĕке кăларнă»,— хăй ăшĕнче вуларĕ Евгени. Аван, питĕ аван!

Çак вăхăтра ун çумне шалти пӳртрен шăппăн ут-са тухнă ватă Пауль пырса тăчĕ.

— Ну, как? О чем пишут, чем радуют?—ыйтрĕ вăл.

Евгени хаçатра уйрăмах хура саспаллисемпе çырнă хула ячĕ çине вăта пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ.

— У-ва-ро-во...— вуларĕ те эстонец, шухăша кайнă пек пулса тăчĕ.— Не слышал. Где этот город?

— В Московской области,— ăнлантарчĕ Евгени,— тут написано....

— А дальше что пишут? Расскажи по-русски...

Евгенисем «Чăваш Коммуни» çеç илсе тăнă, вĕсен килĕнче вырăсла хаçат пулман, çавăнпа та Евгенин кашнинчех Совинформбюро пĕлтернисене те, вăрçăри ĕçсем çинчен çырнă ытти статьясене те Пауле вырăсла куçарса памалла пулнă. Лешĕ вара вĕсем çинчен хăйĕн кил-йышне çеç мар, урăх килсенче пурăнакан эстонецсене те каласа кăтартнă. Хальхинче те Евгени ăна Информбюро сводкинче çырнисене пĕтĕмпех куçарса пачĕ. Унта пирĕн çар чаçĕсем, уйрăм салтаксемпе офицерсем епле паттăр çапăçни çинчен, темле «Батя» ертсе пыракан партизансен отрячĕ, пĕр ялта тăракан гитлеровецсен гарнизонне сĕм çĕрле сасартăк пырса тапăнса, пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкни, совет летчикĕсемпе зенитчикĕсем кун каçа тăшманăн вун сакăр самолетне персе антарни çинчен, тылри заводсем фронт валли кирлĕ хатĕрсем туса кăларассине ӳстерсе пыни çинчен пĕлтернĕ.

Яланхи пекех, ватă эстонец Евгени куçарса каланисене питĕ тимлĕн, хамăрăн фронтри ĕçсем ăнса пынăшăн савăнса пуçĕпе сула-сула итлесе тăчĕ. Унтан, хăйĕн кил-йышĕ вырăн çинчен тăрасса кĕтмесĕрех чей ĕçрĕ те ăшăрах тумланса килтен тухса кайрĕ. Халь вăл пĕртте кунта килнĕ чухнехи пек мар тăхăнса çӳрерĕ: колхоз председателĕ Назар Егорччă ăна хăйĕн хура кĕрĕк пиншакĕпе пăру тирĕнчен çĕленĕ мулаххайне, «кукмăрски» текен тĕрленĕ кунчаллă кивĕ çăматтине парнеленĕ те, çавсене тăхăнчĕ. Килтисем хăш чух кулкаласа та илчĕç унтан:

— Сунара кăна çӳремелле санăн ку çи-пуçпа. Упа курсан, вăл та хăраса тарĕ санран!..

— Мана капăрĕ кирлĕ мар, мана ăшши пултăр,— терĕ кăна хирĕç Пауль Оскарович.

Чăнах та ăна халь нимрен ытла ăшши кирлĕ пулнă. Пĕр эрне каялла колхоз правленинче ял хуçалăх машинисене çур акине хатĕрлесси çинчен калаçнă. Ку ĕçпе районтан ятарласа çын та килнĕмĕн. Çав ларура ватă эстонец та пулнă — Евгенисен амăшĕ ăна ятарласах хăйĕнпе пĕрле илсе кайнă. Назар Егорччă плугсемпе ытти машинăсене юсама халĕ ялта пĕр тимĕрçĕ те çукки çинчен каласа парсан, ватă Пауль сăмах илет те: «Эпĕ механик, машинăсене юсаса хатĕрлессине пĕтĕмпех хам çине илетĕп», тенĕ. Вăл хăйне пулăшма пĕр икĕ вăйлăрах йĕкĕт тупса пама çеç ыйтнă.

— Эпĕ хам панă сăмаха тытманни нихçан та пулман-ха, çавăнпа та шанма пултаратăр,—тесе ĕнентерчĕ вăл.

Назар Егорччă ăна куншăн аллине чăмăртасах тав тунă:

— Спаççипă сана, Киккас юлташ! Çăлатăн вара эс пире. Манмăпăр эс ыр тунине...

Лару хыççăн тӳрех вăл Пауле хăй килне илсе кайнă та хĕлле тăхăнмаллисем парса янă. Тепĕр кунне ăна мĕн вăрçă пуçланнăранпах хупă тăнă тимĕрçĕ лаççин уççине тыттарнă, унтан юсамалли машинăсене турттарса пынă та, вăл иртен пуçласа каçченех хăй çеммипе лаçра кăштăртатнă. Ак халĕ те çавăнтах тухса кайрĕ ĕнтĕ вăл. Ĕмĕрне ĕçре пиçсе ирттернĕ çынна çакăн пек вăхăтра ĕççĕр ăçтан лартатăн? Чунĕ тӳсмест унăн ĕççĕр ларма!..

...Пурнăç çакăн пек пĕр майлă йĕркеллĕ шунă хушăрах, Хĕрлĕ Çар тăшмана кунран кун хĕвеланăçнелле хăвалана май çынсен кăмăлĕ çĕкленнĕçемĕн çĕкленсе пынă вăхăтрах, сасартăк пурне те çав тери тарăхтармалла усал хыпарсем сарăлма пуçларĕç. Ял çыннисен малтанах ĕненес те килмерĕ вăл хыпарсене — ытла та тискер, ку чухне пулма та пултарайман ĕçсем çинчен калаçнă пек пулчĕç вĕсем.

— Чăрăшкассинчи пĕр тăлăх арăма çаратнă. Упăшки вăрçăра вилнĕ, ачисем пиллĕк тан, пĕринчен тепри пĕчĕкрех, тет. Кĕлет çăраççине лумпа çĕмĕрсе кĕнĕ те пур-çук çăнăхне йăлтах илсе тухса кайнă...

— Юманайри колхоз ферминчен пĕр харăсах пиллĕк сурăх вăрланă. Фермăрисем çакна сиссе хыççăн хăвалама тăрсан, вăррисем вĕсене пăшалпа персе хăварнă. Хăйсем çунапах пулнă, пар лашапа, тет.

Аçтан-ха тăруках ĕненетĕн çакăн пек сăмахсене? Епле пулма пултарать-ха ун пекки хальхи вăхăтра?! Кун çинчен каллĕ-маллĕ шухăшласан пуç та çаврăнса каймалла!.. Хура тинĕсрен пуçласа Пăрлă океана çити ĕмĕрне пулман хăрушă вăрçă пырать, фронтра фашистсемпе çапăçса кашни кун пин-пин вăй питти çын пĕтет пуль, пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана тĕп тума, Тăван çĕршыва ютран килнĕ хурахсенчен епле те пулин хăвăртрах тасатма пулăшас кăмăлпа çĕрне-кунне пĕлмесĕр ырми-канми тăрăшать, çавăншăн халь ĕнтĕ ачасем те мăннисемпе танах ĕçлеççĕ, халăх нимĕн те хĕрхенсе тăмасть, хăйĕн юлашки тырри-пуллипе, хăй çиес апат-çимĕçпе пĕтĕмпе тенĕ пекех фронт валли парать, анчах çав вăхăтрах пирĕн хушăра хура юнлă, çĕлен чĕриллĕ этемсем те пур-мĕн-ха!

Пĕр каçхине, тин çеç районти учительсен канашлăвĕнчен таврăннă Рина Петровна Евгенисем патне пырсан, вĕсем чылайччен çав тискер хыпарсем

пирки каласса ларчĕç. Рина Петровна татах хăрушă сăмах илтсе килнĕ иккен...

— Атăл енчи пĕр ялта темле хурахсем, çил-тăманлă тĕттĕм кас учительницă хваттерне пырса кĕрсе, пĕр ырă япала та хăварман, тет. Фронтра çапăçакан упăшкин костюмĕсене, пальтисене, учительницин хăйĕн вăрçă умĕн кăна Мускавра илнĕ икĕ пин çурă тăракан кĕрĕкне, ачи-пăчин тумтирĕсене, çенĕкри чăланта упраннă аш-пăшне тата тем те пĕр илсе тухса кайнă...

— Хăй килте пулман-и-мĕн?—ыйтрĕ Евгени амăшĕ, сывламан пек итлесе ларнăскер.

— Килтех пулнă!

— Ма кĕртнĕ-ха вăл палламан çынсене? Кĕртес пулман унăн...

— Лешсем питĕ чее улталанă ăна: эпир районти милицирен, инçерен килетпĕр те — шутсăр шăнтăмăр, йăпăрт кăна ăшăнса тухма ирĕк пар, тесе каланă. Кĕрсен вара тўрех: шăп лар, кăшкăрса ачусене ан вăрат, вырăнтан ан хускал, унсăрăн халех леш тĕнчере пулатăн, тенĕ... Ку тўрех вилнĕ пек пулса ларнă, лешсем ним чăрмавсăрах çаратнă, мĕн куçа куранна — çавна илсе чикнĕ. Тухса кайнă чух пăшалпа юнаса хăварнă: тул çутăличчен алăкран тухатăн пулсан — çавăнтах вилсе выртатăн, пирĕнтен пĕри сана крыльца умĕнче сыхласах тăрать, тенĕ. Ну, лешĕ ирччен чĕтресе ларнă вара... Камăнха вăхăтсăр вилсе выртас килтĕр?

— Кай, ĕненес те килмест!— хаштах сывласа илчĕ Улька.— Çĕр çăттăрах! Камсем пулма пултарасçĕ-ха вăл хурахсем? Тем тесен те—пирĕн çынсем мар, фашистсемех пуль!..

— Фашистсемпе пĕр пекех ĕнтĕ,— терĕ Евгени.— Лешсем те çынсен пурлăхне çаратасçĕ, пусмăрласа, пăшалпа хăратса туртса илесçĕ, кусем те ав... Ма-ха тытмасçĕ вĕсене?

— Шырасçĕ те, тупаймасçĕ тет-ха, таçта питĕ тĕплĕн пытанса пурăнасçĕ курăнать,—терĕ Рина Петровна.

— Хĕлле ăçта пит аякка пытанччăр вĕсем? Çулла пулсан хуть вăрманта-мĕнте, улахрах çырмасенче выртĕччĕç, анчах халĕ ав епле шартлама сивĕсем çитсе çапрĕç те...

— Тен, вĕсене пулăшакансем ялсенче те пур? Тен, кам та пулин ăшă пўртрех усрать аçа çапманскерсене? Кам пĕлет! Çĕлен-калтасем пĕтмен вĕт-ха çĕр çинче,— терĕ Улька.

Пĕр хушă виççĕшĕ те чĕнмесĕр ларнă хыççăн сăмаха каллех вăл пуçларĕ.

— Ара, ун пек хăтланса çўрекенскерсем, вĕсем чип-чипер сывă, вăй питти арçынсемех пуль-ха, укçах-чăлахсем пулас çук,— терĕ вăл.— Апла-тăк мĕншĕн-ха вĕсем лере, вăрçăра мар? Епле майпа хăтăлса юлнă вăрçа каяссинчен? Халĕ вĕт кашни пăшал тытма пултаракан арçын, ăна военкомат ятарласа хăтарса хăварман пулсан, вăрçăра пулма тивĕç!— Улька темиçе самант хушши шухăшса кайнă пек пулчĕ, унтан татах калаçма тытăнчĕ.— Эпир пĕчĕк чух пире ялан таркăнсемпе хăрататчĕç, çавăн йышшисем мар-ши вĕсем?..

— Таркăн тесе ун чух дезертирсене каланă вĕт-ха?— ыйтрĕ Евгени.

— Ара, çавсем ĕнтĕ, кам пултăр тата! Германипе вăрçнă леш вăрçă вăхăтĕнче те, граждански чухне те нумайччĕ вĕсем. Халăха çаратса пит аптрататчĕç...

— Граждан вăрçи вăхăтĕнче пуринчен ытларах пуян-кулак ывăлĕсем тарса çўренĕ, ун çинчен вуланă эпĕ...

— Анчах халĕ дезертирсем пулмалла мар-çке!— аллипе сĕтеле шат! çапса илчĕ учительницă.—Кулаксем тахçанах пĕтнĕ пирĕн, тата ун чухнехипе хальхи хушшинче расналăхĕ ытла та пысăк: граждан вăрçи вăхăтĕнче кулак ывăлĕсем Совет влаçĕшĕн çапăçасшăн пулман,— вĕсем шурă гвардеецсене кĕтнĕ, шуррисем çĕнтерсен, хăйсем каллех хура халăха пусмăрласа пурăнакан хуçасем пуласса шаннă. Анчах халĕ те дезертирсем пурах пулсан, вĕсен мĕн ĕмĕтпе пурăнмалла? Енчен те, фашистсем пире чăнах çĕнтерес пулсан, вĕсене Гитлер уйрăмах ыр кăтартасса шанасçĕ-ши?

— Кам пĕлет, Рина Петровна, кам пĕлет!— терĕ Улька.— Тем тĕрлĕ çын та пур вĕт çĕр çинче! Пĕри халăхшăн чунне парать, çынсен телейĕшĕн вут ăшне кĕрсе кайса пуçне хурать, тепри — пĕр хăйшĕн çеç çунать, хăйĕн тирне çăлса хăварасшăн кăна тăрăшать. Ун пеккисен чыс та, намăс та, этем тивĕçĕ те çук, вĕсем Тăван çĕршыва та, ашшĕ-амăшне те сутма пултарасçĕ. Пур-ха ун пек анчăксем, пĕтереймен эпир вĕсене...

— Хаçатсенче çырасçĕ вĕт-ха,— терĕ Евгени,— нимĕçсем хăйсене пулăшса пыма пирĕн çынсенченех старостăсем, полицайсем суйласа илесçĕ, тет.

—Ирсĕр чунлă сутăнчăксем, предательсем тупăнасçĕ-ха эппин,— йывăррăн сывласа илчĕ Рина Петровна.— Анчах эпĕ çакна ăнланаймастăп: хаьл нимĕçсем патĕнче тĕрлĕ старостăсем, полицайсем пулма килĕшнисем вĕсем вăрçăччен пирĕн çынсемех, совет çыннисемех пулнă-çке-ха, пирĕнпе юнашарах пурăннă, пĕрле ĕçленĕ, пĕрле ĕçнĕ-çинĕ, темелле... Мĕнле-ха вĕсем тăруках тăшман майлă çаврăнма пултарнă?!— Учительницă куçĕсем хаяррăн çуталса илчĕç.

— Вĕсем ун чухнех чăн-чăн совет çыннисем пулман пуль çав,— терĕ Улька. — Эп çапла шутлатăп. Тулаш енчен çеç пирĕн çынсем пек курăннă вĕсем, анчах чĕрисенче — вĕри çĕлен ларнă. Кулак йăхĕсенчен юлнисем, тĕрлĕрен вăрă-хурах таврашĕсем пирĕн пурнăç йĕркисене ытах юратса пурăннă тетĕн-им эсĕ? Вăйĕсем çуккипе çеç шарламан вĕсем... Ак халĕ май килчĕ ĕнтĕ — Совет влаçĕ хăйсене кўрентернĕшĕн тавăрасçĕ мар-и! Фашистсен ури тупанĕсене çуллаканнисем — шăп та çавсем ĕнтĕ вĕсем, урăх никам та мар!

— Апла, тен, ку тăрăхра ашкăнса çўрекен леш хурахсем те çавăн йышшисемех мар-ши?

— Кам пултӑр-ха тата? Паллах ҫавсем!

— Тытаҫҫӗ ак вӗсене, нумаях иртӗнме памаҫҫӗ...— терӗ Евгени, хӑй сӑмахӗсене ҫирӗп ӗненсе.— Шпионсене тытаҫҫӗ пулать те!.. Лешӗсем бандитсем пек мар тӗплӗн пытанса пурӑнаҫҫӗ те — ҫавах лекеҫҫӗ вӗт!

— Тытсассӑн, эп вӗсене... ы-ых! Пӗтӗм халӑх умӗнче ҫакса вӗлерӗттӗм!— ҫилӗпе чышкине чӑмӑртарӗ Улька.— Пурте курччӑр, кашни иртен-ҫӳрен чарӑнса тӑрса суртӑр вӗсем ҫине!

— Алла лексен, куншӑн никам та каҫармӗ те-ха, мӗн тумаллине пӗлӗҫ, анчах тытасси тахҫан-ха,—терӗ Рина Петровна.

— Пӗтӗм халӑхпа шыраса хупӑрласа илес пулать вӗсене, кашкӑрсем ҫине облавӑ тунӑ пек облавӑсем тӑвас пулать!— хӗрӳллӗн сӗнчӗ Евгени.

— Ун пек тӑвас пулсан та, малтан вӗсем хӑш тӗлерех пытаннине кӑшт та пулин пӗлес пулатьҫке!— терӗ амӑшӗ.— Пушӑ вӑрмана е никам ҫук ҫырма-ҫатрана пушали кайса ухтар,— мӗн усси?

— Эппин, малтан вӗсен йӗрӗ ҫине ӳкмелле... Йытӑсемпе!

— Шыраҫҫӗ пуль-ха, тупаҫҫӗ пуль!

Калаҫу ҫакӑнпа пӗтрӗ, Рина Петровна Улькапа Евгение ырӑ каҫ сунса килне тухса кайрӗ. Эстонецсен ҫемйи паҫӑрах сывӑрса кайнӑччӗ ӗнтӗ,— халӗ кун каҫа тимӗрҫ лаҫҫинче ӗшенсе таврӑнакан ватӑ Пауль те часах выртать, анчах Евгенин ыйхи килмерӗ. Пурнӑҫра пулса иртекен пур ӗҫсене те мӑн ҫын пекех чӗре патне илсе, вӗсем пирки яланах хӑйне май шухӑшлама вӗреннӗскер, кӗҫӗр те вӑл хӑйсем халь кӑна калаҫса иттернисем ҫинчен вӑрахчен шухӑшласа выртрӗ. Таҫта ҫак таврарах темле пӳтсӗр хурахсем ахаль те хуйхӑллӑ-суйхӑллӑ пурӑнакан ҫынсене кӳрентерни, вӗсене тапӑна-тапӑна ҫаратни ҫамрӑк ачана ҫав тери тарӑхтарчӗ. Мӗнле хӑрушӑ чунлӑ тискер кайӑксем пуль вӗсем!

«...Хальхи вӑхӑтра миллионшар ҫын фронтра ҫапӑҫать... Пӗр пирӗн ялтан кӑна аллӑ ҫын ытла вӑрҫӑра. Тӑваттӑшӗ вилни ҫинчен хурлӑхлӑ хутсем килчӗҫ. Аманнисем вуннӑран иртнӗ. Вӗсем халь госпитальсенче выртаҫҫӗ, унтан сывалса тухаҫҫӗ те каллех акӑ вут ӑшне кӗрсе каяҫҫӗ. Анчах ҫав вӑхӑтрах кунта такам шуйттанӗсем, вӑрҫӑра фашистсене хирӗҫ ҫапӑҫас вырӑнне, хамӑр ҫынсене, тӑлӑха юлнӑ ҫемьесене ҫаратса ҫӳреҫҫӗ. Мӑшкӑл вӗт ку, никам тӳсме пултарайман мӑшкӑл!..»

Евгенин ҫав хурахсене халех, ыранах тупса тыттарас килчӗ. Вӗсене хупӑрласа илсе тытнӑ ҫӗре вӑл хӑй те хутшӑннӑ пекех туйрӗ. Бандитсем пурте темле хуп-хура мӑн сухаллӑскерсем, вӗсен чармак куҫӗсем вӑкӑрӑнни пек юнпа тулса хӗп-хӗрлӗ пулса кайнӑ, шултра шӑлӗсем малалла тухса тӑраҫҫӗ. Хӑйсем хулпуҫҫийӗсенчен урлӑ та пирлӗ темле авалхи пӑшалсем ҫакнӑ, пиҫиххисем хыҫне кукӑр авӑрлӑ вӑрӑм пистолетсем чикнӗ, нумайӑшӗ темӗн пысӑкӑш юман чукмарсем тытнӑ. Вӗсем вӑрманти пысӑк уҫланкӑваррине вут хунӑ та ӑшӑнса лараҫҫӗ пулмалла. Темскер шавлаҫҫӗ, ахӑлтатаҫҫӗ, ӗнерви ҫӗмкунсенче пит лайӑх ҫаратнипе мухтанаҫҫӗ пулас... Хӑйсене пырса тытма ҫав тери меллӗ ӗнтӗ ҫак вӑхӑтра!.. Акӑ, вӑрмантан милицисем йӑтӑнса тухрӗҫ, ҫӗр ҫын та пулӗ. Вӗсемпе пӗрле ахаль ҫынсем те нумай... Евгени хӑй те халӑхпа пӗрле, ун аллинче — ашшӗн икӗ кӗпҫеллӗ пӑшалӗ.

— Урра-а!—кӑшкӑрса ярать те тахӑшӗ, бандитсем ҫинелле ыткӑнать. Унпа пӗрле Евгени те малалла вӑркӑнать, чупнӑ ҫӗртех пӑшалӗпе кӗрс! тутарать. Хурахсен ӗнтӗ ним тума та ҫук, вӗсене пур енчен те хупӑрласа илнӗ, вӗсен пӑшалӗсене пӑрахса аллисене пӗлӗтелле ҫӗклесси ҫеҫ юлать. Тек вӗҫерӗнеймеҫҫӗ вӗсем! Ашкӑнса, ҫынсене вӳрентерсе ҫӳреймеҫҫӗ! Лекрӗҫ!

Анчах та ку тӗлӗк кӑна пулнӑ...

„ПУРНЕ ТЕ ӖҪЕ КӲЛЕТПӖР...“

КУН ХЫҪҪӐН КУН... Сисӗнмерӗ те, шкулти каникул вӑхӑчӗ иртсе те кайрӗ. Вӑл вуҫех те пулман, тейӗн!

Ачасем каллех вӗренме пуҫларӗҫ.

Малтанхи куннех, уроксем хыҫҫӑн, Рина Петровна вӗренекенсен пухуне ирттерчӗ. (Шкул директорӗ Васса Павловна чирлӗрех пурӑннӑ пирки кун пек ӗҫсене юлашки вӑхӑтра пӗрмай вӑл туса пычӗ). Питӗ шавлӑ пулчӗ ку пуху. Малтан Рина Петровна вӗренӳ ҫулӗн иккӗмӗш чӗрӗкӗнче пурин те тата тӑрӑшарах вӗренмелли, никамӑн та кая юлса пыма юраманни, вӗренӳре пӗр-пӗрине пулӑшса пымалли ҫинчен каларӗ.

— Хамӑрӑн ӗҫсем яланах ӑнса пыччӑр тесен, пире пуринчен малтан ҫирӗп дисциплинӑ кирлӗ,— терӗ вӑл.— Хӑвӑрах пӗлетӗр, эпир халӗ ҫав тери хаяр та хӑрушӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пурӑнатпӑр. Пирӗн аттесемпе пиччесем фронтра темӗн тӗрлӗ йывӑрлӑхсем тӳссе, тӑшмана епле те пулсан хӑвӑртрах ҫапса аркатасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсем унта пирӗншӗн, пире хӳтӗлесе юн тӑкаҫҫӗ... Ҫакӑн пек чух пирӗн пурин те уйрӑмах ӑнланулла, йӗркеллӗ, сӑпайлӑ та ӗҫчен пулас пулать. Иртӗнсе ашкӑнакансем, паян тӑвассине ырана хӑваракансем ку чухне вуҫех те пулмалла мар. Ҫакна эсир пурте ӑнланатӑр, пулӗ тетӗп...

— Ӑнланатпӑр!— илтӗнчӗ ӑна хирӗҫ унтан та кунтан.

— Ӑнланатӑр пулсан — питӗ аван,— терӗ Рина Петровна, класри пур ачасене те йӑваш куҫӗсемпе пӑхса ҫаврӑнса. Унтан темиҫе самантлӑха чарӑнса тӑчӗ те тарӑннӑн сывласа илчӗ.—Питӗ аван... Анчах пирӗн хушӑра ҫакна ӑнланманнисем те пур-ха ҫав! Хӑшӗсем шкулта та, урамра та хӑйсене пӗртте пионерла мар тыткалаҫҫӗ. Тепӗр чух никам каҫарма пултарайман ӗҫсем тӑваҫҫӗ... Сӑмахран каласан, Коля Герасимов ҫак каникул вӑхӑтӗнче мӗн туса хуни ҫинчен эсир илтнӗ ӗнтӗ?

Пурте шакӑрах хыҫалалла, Караҫӑм Кольки ларнӑ ҫӗрелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Лешӗ тӑрук хӗрелсе кайса пуҫне пӗкрӗ — никам ҫине те пӑхма пултараймарӗ.

— Ӑна пула Тукасри Маюк карчӑк кӑшт ҫеҫ вилсе выртман... Ӗнер кӑна больницӑран каялла илсе килчӗҫ. Хӑрушӑ япала ку, ачасем!

Ҫакӑнтан пуҫланса кайрӗ те вара. Рина Петровна хӑй сӑмахне пӗтерсен (хытӑ ятларӗ вӑл Колькӑна — пуринчен ытла Маюк карчӑк пӑрлӑ ҫул ҫине ӳксен ӑна пырса пулӑшманшӑн!), ачасем пӗрин хыҫҫӑн тепри сике-сике тӑрса хаяррӑн калаҫрӗҫ. Никам та Колькӑ майлӑ пулмарӗ — пурте тиркерӗҫ ӑна, вӑл хӑй ҫапса ӳкернӗ карчӑк патӗнчен тарнипе пӗртте совет шкул ачи пек мар, пионер пек мар, чи путсӗр хулиган пек тунӑ, терӗҫ. Хурлӑха лекнӗ ҫынна ҫавӑн пек пӑрахса хӑварма юрать-и вара?! Пуринчен ытла — ҫав хурлӑх хӑвӑн айӑпупа пулнӑ пулсан!..

Сӑмах Палля ҫине те ҫаврӑнса ҫитрӗ. Ӑна ӗнтӗ пӗрре мар, вунӑ хут та асӑрхаттарнӑ пулӗ, анчах та вӑл ҫаплах ашкӑнма пӑрахмасть-ха. Унӑн вӑрҫӑран аманса килнӗ куккӑшне курма пынӑ каҫ та вӑл ҫиччӗмӗш класри Улюка ҫынсем умӗнчех ҫупа-ҫупа янӑ ав. Улюкӑн та ашшӗ фронтра ҫапӑҫать, ҫавӑнпа та унӑн вӑрҫӑ ҫинчен каласа панисене пушшех итлесси килнӗ ӗнтӗ, анчах Палля ӑна, ним намӑса пӗлмесӗр, тӳсме ҫук хытӑ кӳрентернӗ. Арҫын ача хӗрачана ҫапни ахаль те калама ҫук киревсӗр япала...

Хӑшӗсем Колькӑпа Палляна халех шкултан кӑларса яма сӗнчӗҫ. Кун ҫинчен чӑн малтан Аркаш тӑрса каларӗ:

— Шкул ятне ярса пурӑнаҫҫӗ вӗсем. Пире намӑс кӑтартаҫҫӗ. Тасалас пулать ун пек путсӗрсенчен! — терӗ вӑл.

Анчах кунпа килӗшменнисем те пулчӗҫ. Палля ним айӑпсӑр кӳрентернӗ Улюках ҫапла каларӗ:

— Шкултан кӑларса яриччен вӗсенчен юлашки хут ыйтас пулать: ашкӑнма пӑрахаҫҫӗ-и вӗсем, пӑрахмаҫҫӗ-и? Тӳрленме шутлаҫҫӗ-и, ҫук-и? Неушлӗ вӗсен вӗренмесӗр тӑрса юлас килет?

Колькӑна ҫакӑн ҫинчен хӑйне калама хушсан, вӑл автан киккирикӗ пек хӗрелсе, пӗр сӑмах та чӗнеймесӗр тӑчӗ-тӑчӗ те лӗр-р макӑрса ячӗ. Палля чылайччен тарласа, куҫӗсене унталла-кунталла ҫавӑркаласа тӑчӗ, юлашкинчен ҫапах та темиҫе сӑмах каласа хучӗ:

— Урӑх никампа та вӑрҫмастӑп. Анчах мана та ан тивччӗр. Хама тивсен ҫавах хирӗҫ паратӑп...

— Ара, сана никам та тӗкӗнмест вӗт-ха, эсӗ ху пуринчен малтан ҫапӑҫма кӗрсе каятӑн! — тӳсеймесӗр кӑшкӑрчӗ малтарахра ларакан Евгени.

— Эп ҫапӑҫмастӑп, хама хӗнесрен кӑна... пӑспа хӑрататӑп, — терӗ те Палля, ҫамки ҫинчи тарне ҫанӑ вӗҫӗпе шӑлса илчӗ.

Кун пек калани пурне те култарса ячӗ. Ҫапах та Рина Петровна вӗсене Колькӑпа иккӗшне те тата тепре ал тупанӗпе сӗтел ҫине шаккасах асӑрхаттарчӗ:

— Ан манӑр, пӗр вӗҫӗмсӗр каҫару пулмасть! Тив эсир пӗчӗк ачасем мар ӗнтӗ, калле-малле шухӑшлама та вӑхӑт! Астӑвӑр!..

...Унтан Рина Петровна ку чухне пур ҫӗрте те, пӗтӗм Совет Союзӗпех пионерсемпе шкул ачисем «Тимур командисем» йӗркелени, хӑйсен шкулӗнче те ҫавӑн пек командӑ тусан пит аван пуласси ҫинчен сӑмах пуҫларӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫав «командӑсем» валли ӗҫ пит те нумай: фронтра ҫапӑҫакансен килйышӗсене, чӑн малтан ӗҫлеме пултаракансем ҫук ҫемьесене куллен пулӑшас пулать... Сӑмахран каласан, ҫав Маюк кинемее пулӑшакансем пулнӑ пулсан, вӑл нимӗнле хурлӑх та курман пулӗччӗ. Анчах ялта ун пеккисем татах та нумай вӗт!

Ачасем пур йышши ҫӗнӗ пуҫарӑва та юратаҫҫӗ. «Тимур команди» тума сӗнни те вӗсене питӗ килӗшрӗ. Вырӑссен ҫав тери лайӑх писателӗ Аркадий Петрович Гайдар ҫырнӑ «Тимурпа унӑн команди» ятлӑ кӗнекене иртнӗ хӗллех — вӑрҫӑ пуҫланиччен нумай малтан — классенче пӗрле пухӑна-пухӑна вуланӑ та, унти паттӑр Тимурпа унӑн тусӗсене пурте пӗтӗм чунтан юратса пӑрахнӑччӗ. Мӗншӗн тесен вӑл ачасем Хӗрлӗ Ҫар командирӗсемпе боецӗсен ҫемйисемшӗн пӗтӗм вӑйне хурса тӑрӑшнӑ, вӗсене куллен кун мӗнпе май килнӗ, ҫавӑнпа пулӑшса пынӑ... Маттур пулнӑ Тимур командинчи ачасем! Вата-вӗтӗсене киревсӗр ҫынсенчен хӳтӗленӗ, вӗсем хӑйсем тума пултарайман ӗҫсене туса пынӑ. Паллах, пурте ырланӑ вӗсене уншӑн, пурте тав тунӑ...

Ачасем ку сӗнӗве хапӑл туса йышӑннипе, Рина Петровна ӗҫе ҫак пухурах туса ҫитерме шутларӗ. Тахҫанах каланӑ вӗт-ха: тимӗре вӑл вӗри чух шаккамалла!

— Пирӗн «Тимур командин» ӗҫӗсене куллен йӗркелесе ертсе пыма пӗр пилӗк ҫын уйӑрса хӑварас пулать, — терӗ вӑл. — Штаб тейӗпӗр-и ӑна, совет тейӗпӗр-и, пурӗ пӗр. Анчах унта Гайдар кӗнекинчи Тимур пек питӗ хӑюллӑ, тӳрӗ кӑмӑллӑ, ӗҫлеме юратакан ачасем пулччӑр. Вӗсен чи малтан хӑйсен пурне те пример кӑтартмалла, ыттисене хӑйсем хыҫҫӑн илсе пыма пӗлмелле. Калӑр, кама уйӑрма кӑмӑл тӑвататӑр?

Чылай ятсене асӑнчӗҫ ачасем. Рина Петровна вӗсенчен пӗр вуннӑшне ҫырса юлчӗ. Сасӑласан вара командӑ советне ҫиччӗмӗш класран Миккӑнпа Улюк, улттӑмӗшӗнчен Аркашпа Евгени тата белорус ачи Петрусь Дорожка, хай Ҫӗнӗ ҫул каҫхине Янка Купала сӑввине хӑйсен чӗлхипе пит ӑста каласа пани, суйланчӗҫ. Петруҫа, Рина Петровна сӗннипе, ятарласах эвакуированнӑйсен ҫемйисемпе ҫыхӑнма, вӗсен пурнӑҫӗпе нушисене пӗлсе тӑма кӗртрӗҫ. Вӗсене пулӑшасси те пысӑк ӗҫ пулнӑ вӗт-ха, вӗсем ҫинчен ку чухне пӗртте манма юраман...

Пуху хыҫҫӑнах Рина Петровна тин ҫеҫ суйланнӑ совет членӗсене учительсен пӳлӗмне илсе кайса, вӗсемпе чылай калаҫса ларчӗ. Ӗҫе мӗнрен тытӑнмал-

ла, мĕнлерех туса пымалла... Çавăнтах Евгение совет председателĕ, Улюка секретарь тума йышăнчĕç. Чăн та, Улюк малтанах турткалашса тăчĕ, пултараймăп эпĕ, тем пăтратса пĕтерĕп тата, текелерĕ, анчах юлашкинчен çапах та килĕшрĕ.

— Эпĕ сана, Уля, халех хулăн тетрадь парса ярăп, эс вара унта хăвăр мĕн-мĕн тунисене тĕплĕн çырса пырăн,— терĕ ăна Рина Петровна.— Урăхла каласан, дневник пултăр вăл сирĕн. Ним те манса ан хăварăр, пурне те çырса пырăр — хăçан мĕн тунă, кама пулăшнă, ăçта пулнă... Вăрçă пĕтсен, хăвăрăн аçăрсемпе пиччĕрсем тăшмана çĕнтерсе киле таврăнсан, çак дневнике вĕсене те вулаттармалла пулĕ: акă, курăр, епле пурăннă эпир, мĕн ĕçленĕ, тăшмана çĕнтерме сире мĕнлерех пулăшса пынă... Пĕлсех тăрăр, вĕсем таврăнсан сирĕнтен ун çинчен ыйтаççех-ха акă!

— Юрĕ, Рина Петровна, эпĕ пĕтĕмпех эсир хушнă пек туса пырăп эппин,— терĕ кăштах хăюлланнă Улюк.— Аттесене кăтартма намăс пулмĕ!

Киле ачасем хавассăн шакăлтатса калаçса таврăнчĕç. Хăйсене çакăн пек ĕç шанса пани пурне те çĕклентерсех ячĕ курăнать. Ара, пысăк ĕç вĕт-ха вăл, калама та çук кирлĕ ĕç — фронтовиксен çемйисене пулăшасси! Хальхи вăхăтра фронт валли мĕн кирлине парса тăнинчен тата унта çапăçакансен ашшĕамăшĕсемпе ачи-пăчишĕн тăрăшнинчен кирлĕрех ĕç çук та ĕнтĕ! Çав ĕçе йĕркелеме халĕ никама та мар, вĕсене хушнă...

— Çапла эппин, тусăмсем,— терĕ Евгени, вĕсем икĕ урам хĕресленнĕ тĕле çитсе чарăнсан,— ыран пирĕн вырсарникун, шкулта вĕренес çук... Килти ĕçсене пуçтаркаласан, пĕр вунă сехетсем тĕлнелле, эсир пурте ман пата пырăр. Эп унччен фронтовик çемйисен спискине туса хатĕрлĕп. Вара çав список тăрăх килтен киле çӳрĕпĕр... Кама мĕн кирлĕ, камăн мĕнле нуша — пĕтĕмпех пĕлмелле пирĕн. Рина Петровна та çапла каларĕ, астăватăр пуль?

— Вара мĕн, вăл пирĕн делегаци пулать-и?— ыйтрĕ Аркаш, Евгени çине куçĕсене хĕсерех пăхса.

— Хăвна мĕнле килĕшет—çапла кала, хуть делегаци, хуть демонстраци, анчах та пирĕн пурин патне те çитсе вĕсем мĕнле пурăннине хамăр куçпа курас пулать. Ну, пыратăр-и? Ерçетĕр-и ыран?

— Эп пыратăп,— терĕ Улюк.— Анне ыран вут татмалла тетчĕ те — кайран та ĕлкĕрĕпĕр-ха, эпир каçченех çӳрес çук вĕт?

— Вăл хамăртан килет,— терĕ Евгени.— Хăвăртрах пухăнса васкарах çӳресен пĕр виç сехетрен ытла кирлĕ пулмасть пуль...

— Пыратпăр, кĕтсех тăр!— пĕр алшишĕпе тепĕр алсишне шап! çапса илчĕ Аркаш.— Халь киле каяр-ха, ман хырăм тирĕ çурăм çумнех сыпăçса ларчĕ, тӳсме çук çиес килет. Атя, Петруç, чупрăмăр!

— Вĕçтерĕр! Ыранччен эппин...

Тепĕр кунне вара, калаçса татăлнă вăхăтра, вĕсем пурте Евгенисем патне пухăнчĕç те вăрçăри çынсен килĕсем тăрăх çӳреме тухса кайрĕç. Урамра никамран малтан тĕл пулнă бригадир Сар Тимухха вĕсем çине тĕлĕнерех пăхса, ыйтмасăр тӳсеймерĕ:

— Ăçта васкать ку вак халăх? Мĕнле бригадă?

— Ĕçсем пур-ха, Тимухха пичче,— терĕ малта пыракан Евгени.

— Патшалăх ĕçĕсемпе çӳретпĕр,— хушса хучĕ Аркаш.

— Çапла пуль, çапла пуль хальхи ача-пăчан!— кăмăллăн кулкаласа юлчĕ Тимухха. Унтан, ачасем иртсе кайсан, хыçалтан кăшкăрчĕ:— Манăн та сирĕнпе патшалăх ĕçĕпе калаçмалли пур-ха! Шкула пырсах калаçатăп ак!

— Юрĕ, пыр!— терĕ ăна хирĕç Евгени.

— Эпир яланах хатĕр!— каялла пăхса ал сулчĕ Аркаш.

...Каçхине, лампă çутса уроксем тума ларсан, Улюк—халь ĕнтĕ тимур командин секретарĕ — Рина Петровна парнеленĕ хура хуплашкаллă тетраде уçрĕ те ун çине пуçласа çакăн пек çырса хучĕ:

«...Паян эпир ĕçе тытăнтăмăр, вăрçăри çынсен кил-йышĕсем мĕнле пурăннипе паллашса çӳрерĕмĕр. Пурĕ вун виçĕ килте пултăмăр...

«Чăн малтан Евгени пире Маюк кинеми патне илсе кĕртрĕ. Караçăм Колькки çунашкапа çапса ӳкернĕ хыççăн ăна больницăна илсе кайнă та вăл унта эрне ытла выртнă. Виçĕмкун çеç Антонина Клементьевна ăна киле илсе таврăннă. Унăн сывлăхĕ халь аптрасах каймасть, анчах хăй выртать-ха, тухтăрсем çапла хушнă, тет. Кинĕ вăрман каснă çĕртен таврăнман, çавăнпа та, килте никам та çук-кипе, Маюк кинемие Праски инкен аслă хĕрĕ Варькка-почтальон пăхать, анчах та унăн вăхăт çукрах, кашни кун Çирĕккассинчи почтăна кайса хаçатсемпе çырусем илсе килмелле, унтан вĕсене валеçсе çӳремелле.. Вăл хушăра кинеми пĕчченех выртать, шыв ăшăтса паракан та çук. Çавăн пирки ĕнтĕ ырантан пуçласа Маюк кинеми патне хамăр класри хĕрачасене черетлĕн дежурствăна яма тытăнас, терĕмĕр...

«Эпир пынă чух карчăкăн пӳрчĕ сивĕччĕ, хутма вутти те, апат пĕçерме шывĕ те çукчĕ. Çавна кура, пирĕн арçын ачасем наччасра эрне хутмалăх вутă хатĕрлерĕç, эпĕ çĕклемпе кайса шыв ăсса килтĕм. Шăп çав вăхăтра Варькка почтă салатса таврăнчĕ те васкасах вут хутса ячĕ. Маюк кинеми хăй пире тем пекех тав турĕ, эпир пулăшнăшăн савăннипе унăн куççульĕсем те тухрĕç. «Ах, ăслă ачасемçке эсир, ах, ылттăн ачасем, мĕнпе тав тăвам-ши сире куншăн?»— тет. Пире тав тума кирлĕ мар, эпир хальхи вăхăтра пионерсен мĕн тумаллине кăна тăватпăр, терĕмĕр ăна. Ыран хĕрачасемпе пĕрле ун патне каллех кайса пăхатăп-ха. Ытла та кăмăллă карчăк-çке! Хăй вата вăл, çитмĕлсенех çитнĕ, апла пулин те колхоз ĕçĕнчен юлмасть. Тырă та вырчĕ кăçал, çĕр улми кăларнă çĕрте те

пĕрмаях ĕçлерĕ. Пĕррехинче тахăшĕ ăна: «Маюк инке, сан пек ват çынна килте ларсан та намăс мар ĕнтĕ, тырри-пуллине сансăрах пуçтарса кĕрткелĕпĕр», тесен, вăл ăна хирĕç: «Манăн икĕ ывăл вăрçăра çапăçаççĕ, вĕсем унта выçă пурăнаççĕ-им? Манăн хамăн ывăлăмсем валли çăкăр тăвас пулать», тесе коларĕ тет... Мĕн вăрçă пуçланнăранпах уйхирте хастар ĕçленĕ пирки ун çинчен Шупашкарти хаçатра та мухтаса çырнăччĕ, эп ăна хам та вуланă. Çавăн пек ырă карчăка чут çеç вĕлерсе пăрахман вĕт эсрел Колькки!..

«...Унтан эпир Иливан арăмĕ Ультитти патне кĕтĕмĕр. Ун килĕ ял вĕçĕнче, чăн хĕрринче. Пӳрчĕ пĕчĕккĕ, виç çынна çаврăнмалăх та çук, анчах ачисем ултă тан, пурте вĕтĕр-шакăр, иккĕшĕ çеç шкула çӳреççĕ-ха, пĕри — виççĕмĕш класа, тепри — пĕрремĕшне. Эпир алăк патĕнчен пĕр утăм та малалла иртеймерĕмĕр — çав тери тăвăр! Чăн пĕчĕк ачисем кăмака çинче курак чĕпписем пек çăварĕсене карса пăхса лараççĕ. Кăмака çумĕнчех пăрушĕ кăкарăнса тăрать, сĕтел айĕнче икĕ ула путек курăнаççĕ.

«Хăй пире кăмăллăн йышăнчĕ.

— Килĕрех, килĕрех, ачамсем,— терĕ вăл вăтаннă пек пулса,— анчах малалла иртĕр теме те май çук-ха... Вăрçа тухса кайиччен пӳрт лартса хăвараймарĕ-çке пирĕн ашшĕ, çав хуплать! Пурине те туянсаттăмăр, ултă кĕтеслех тăвасшăнччĕ, анчах пулса çитеймерĕ. Халь ĕнтĕ хам пĕччен ун çинчен шутламастăп та... Тем çăмăлпа килтĕр ĕнтĕ эсир? Тем сăмах пурччĕ?

«Евгени хамăр мĕншĕн пынине каласа пачĕ.

— Э-эй ачамсем, мана пулăшас тесен пулăшса та пĕтерес çук,— терĕ Ультитти.— Ара, хам нимле йывăр ĕç те тăваймастăп мар-и! Кĕркунне ăнсăртран аслăк çинчен курита пуçне ӳксе хулпуççи шăммине хускатрăм пулмалла та, паян кун та сылтăм алăпа ним те тытаймастăп — тӳсмелле мар ыратать. Çавăн пирки салтак арăмĕсене панă вутта та турттарса килеймерĕм, хамăрăн кил выранĕнче акса тунă пăрçана та çапаймарăм — мунча çенĕкĕнче çаплипех выртать, армана та кайса килейместĕп — çăнăх пĕтнипе кӳршĕсенчен кивçене кĕрсе пĕтрĕм ĕнтĕ. Шутсăр кансĕр пурăнатăп! Ачисем манăн ытла та вĕтĕ-çке-ха, пĕри те ĕç патне пыраймасть... Шывне те хамах алăпа кӳрсе пурăнатăп.

«Евгени вăл каланисене пĕтĕмпех çырса пычĕ.

— Пулăшма тăрăшăпăр сана,— терĕ вăл.

— Ара, сирĕн хăвăрăн та аçăрсем çук вĕт, пирĕнни пекех салтакра, хăвăрăн та килĕрсенче ĕç мăй таранах пулĕ?— шанмасăртарах хуравларĕ Ультитти.

— Шкулта нумайăн эпир,— терĕ Евгени,—черетпе ĕçлесе паратпăр, уншăн пăшăрханмалли çук!

Эпир тухса кайма хатĕрлентĕмĕр, анчах Ультитти пире сасартăк тытса чарчĕ: чимĕр-ха, чимĕр, кун пек ырă ĕçпе çӳренĕшĕн эп сире пĕрер кучченеç парам хăть! Унтан вăл йăпăр-япăр тĕпсакайне анчĕ те саппун аркипе тытса темскер илсе тухрĕ. Пан улми иккен, ытармалла мар хĕп-хĕрлĕ аниссем! Эпир илесшĕн марччĕ, пире париччен — ачусене çитер луччă, терĕмĕр, анчах вăл сăйпах кашнине пĕрер пан улми тыттарчĕ... Эп ку тарана çитсе те пĕлмен — питĕ уçă кăмăллă хĕрарăм иккен вăл. Паллах ун пек çынна пулăшасах пулать. Евгени ăна вутă кӳрсе килес пирки Назар Егорччăпа калаçатăп, терĕ, пăрçине хамăрах çапса паратпăр, ытти ĕçсем пирки кунта та дежурствă тăвас пулать ĕнтĕ. Унсăр май килмест...

«...Кун хыççăн Маркка Петĕрĕ патĕнче пултăмăр. Вăл — пĕччен пурăнакан ват старик. Ун карчăкĕ улт-çич çул каяллах вилнĕ, вара вăл икĕ ывăлĕпе çеç тăрса юлнă. Анчах халĕ ывăлĕсем çук. Асли 1940 çулхи хĕлле Финлянди вăрçинче çапăçса вилнĕ, тет. Кĕçĕн ывăлĕ Шашшук — вăл командир, пĕлтĕр яла килсе кайрĕ—вăрçăччен границă сыхланă, анчах вăрçă пуçланнăранпа пĕр çыру та яман. Ăна пурте вилнĕ пуль, теççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, унăн халь никам та юлман. Хăй каçсерен ялти лавккана хурал тăрать, кăнтăрла вара ниçтах та тухмасть.

«Эпир пырса кĕнĕ чух вăл кăмака кукринче паранкă шуратса ларатчĕ — апат пĕçерме тытăннă пулмалла. Алăкран кĕрсенех, сăмсана питĕ йывăр шăршă пырса çапрĕ. Пӳрт ăшчиккине тахçантанпах тасатман, уçăлтарман пулмалла,— сывлăшĕ пăчăхсах çитнĕ. Ăсталла ан пăх — пур çĕрте те таса мар, çӳп-çап, тусан. Сĕтелĕ çинче апат-çимĕç юлашкисем, сакĕсем çинче — пушăт-курăс таткисем выртаççĕ, урайне ĕнтĕ çур çул та çуман пуль. Пăхмалла мар!.. Анчах пӳрчĕ лайăх, çĕнĕпе пĕрех-ха, ăна вăл ывăлĕсемпе пĕрле ĕçлесе, карчăкĕ вилес умĕн çеç лартрĕ — эп та астăватăп. Хĕрарăмсăр кил-çурт çавăн пек йĕрекерен тухса каять çав!

«Старик эпир çакăн пек тĕркĕлтипе пырса кĕнинчен тĕлĕнсе кайрĕ. Мана чĕнме килтĕр-и?— тесе, аллинчи çурри шуратнă паранкине куршака пăрахрĕ те каска пуканĕ çинчен тăчĕ. Каллех Евгенин ăнлантарса памалла пулчĕ хамăр мĕн шутпа çакăн пек çӳренине.

«— Çук, çук, мана никам пулăшни те кирлĕ мар, эп поккутă хамах майлашкаласа пурăнатăп-ха,— ал сулчĕ ăна хирĕç Маркка Петĕрĕ.— Кун пек вăхăтра çынна мĕнле чăрмантаратăн? Никама та çăмăл мар... Кашнин хăйĕн хуйхи!

«Анчах эпир ăна çапах та шута илтĕмĕр: старик патĕнче субботник тусах унăн пӳрт-çуртне пĕррелайăх кăна тасатса парас пулать. Тен, унăн улăштарса тăхăнма таса кĕпе-йĕмĕ те çук? Ку ĕнтĕ пирĕн, хĕрачасен ĕçĕ, ăна эпир хамăр çине илĕпĕр.

«Йĕркипех çӳрерĕмĕр çапла. Пулăшмалли килйышсем татах та пур. Пирĕн командă валли ĕç ытлашшипех. Анчах ӳркенмесен пурне те тума пулать. Ыран кусем çинчен Рина Петровнăна каласа паратпăр та, пурне те ĕçе кӳлетпĕр...»

ХĂРУШĂ ТĔЛПУЛУ

ШКУЛ АЧИСЕМ çакăн пек усăллă ĕç тума тытăнни çинчен пĕлсен, вĕсене ялта пурте чунтанах ырларĕç. Колхоз председателĕ Назар Егорччă правленире тӳрех каларĕ, тет:

— Тĕлĕнмелле ăслă хальхи ача-пăча. Питĕ шанчăклă йăх ӳсет! Кусем пурнăçа нихçан та юхăнтараса ярас çук...

Вăл çапла каланине Сар Тимухха итлесе тăнă та хăй шухăшне хушса хунă:

— Ачисем, чăн та, маттур ĕнтĕ... Колхоза кăçал тем териех пулăшрĕç. Халь те ĕçлеççĕ. Анчах манăн вĕсене тепĕр ĕç сĕнсе пăхас шутăм пур-ха...

— Мĕнле ĕç тата? — ыйтнă председатель.

— Акă, кур-ха...—Сар Тимухха, сăранланса ларнă кĕрĕк кĕсйинчен темиçе хут хуçлатнă кивĕ хаçат туртса кăларса, ун умне сарса хунă.— Вула-ха ак çакна... Унта Кольцовкăри колхоз ачисем çамрăк выльăхсене шефа илни çинчен çырнă. Питĕ интереснă. Арçын ачасем тихасене пăхаççĕ, тет, хĕрачисем—пăрусене... шутсăр тăрăшса ӳстереççĕ, тет. Çавăн пек тума пирĕн те май пур вĕт? Ан тив ĕçлеччĕр... Атту-тăк фермăра та, конюшнинче те çын çитмест, шалт аптрамалла!

Назар Егорччă кăштах шухăша кайса тăнă, унтан вара килĕшнĕ:

— Вăйпа хушма пултараймастпăр, анчах ачисем хăйсем кăмăл тусан — пăхчăр ара! Сиенлĕ пулас çук, усси пулма та пултарĕ тен...

— Эп те çавнах калатăп çав!— пĕççине шарт! çапса илнĕ Сар Тимухха.— Тихасемпе пăрусене вĕсене уйрăмăн-уйрăмăн çирĕплетсе парсан, каçса кайсах пăхма тытăнаççĕ акă!

Стариксем йăнăшман. Ачасене ку сĕнӳ калама çук килĕшрĕ. Вĕсем пĕр наччасрах икĕ звено туса хучĕç: пĕри, арçын ачасен звени, тихасем пăхать, хĕрачасен звени — пăрусем ӳстерет...

Çавăнтан вара лаша витинчен те, ĕне ферминчен те ача-пăча татăлма пĕлмерĕ, унта та, кунта та, ирĕн-каçăн вĕсен сасси янрарĕ. Хăйсене шанса панă тихасемпе тынашкасене ачасем хăйсене килĕшекен ятсем парса тултарчĕç: Самолет, Пулемет, Ăмăрт кайăк, Сокол, Çилçунат, Вуткăвар (кусем — тихасем), Розă, Мăкăнь, Шăпчăк, Чĕкеç, Кулюкка (кусем, паллах, тынашкасем), унтан вĕсене пĕр-пĕринпе ăмăртса пăхма тытăнчĕç. Камăн пăрушĕ хăвăртрах çитĕнĕ? Камăн тихи мăнтăртарах (çăмарта пек!) пулĕ?

Çакна май кӳренмеллисем те, кулмаллисем те сахал мар пулса иртрĕç, темелле. Хăшĕсем, хăйсен çамрăк тусĕсене часрах ӳстерсе самăртас тесе, çитермеллисене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хăйсен килĕсенчен йăтма тытăннă иккен. Пĕри сĕлĕ илсе каять, тепри пăçне парăнкă, апат юлашки тата ытти те. Анчах хăшĕ-пĕрисен амăшĕсем çакна сиснĕ те ачисене хăйсем пĕлнĕ пек тăн панă...

Никамран малтан Аркаш лекнĕ, терĕç. Вăл хăйĕн тимĕр-кăвак «Соколĕ» валли темиçе хут та пĕчĕк хутаçпа кĕлетри пурараи сĕлĕ тултарса кайнă-мĕн. Çавна пĕррехинче унăн Санькă ятлă пĕчĕк шăллĕ курнă та амăшне каласа панă. Малтанах Аркаш туннă, эп пĕр пĕрчĕ те илмен, тенĕ, анчах пĕр-ик кунтан амăшĕ ăна кĕлетрен хутаçпа тухнă чух тытнă та çавăнтах алла лекнĕ кив урхалăхпа çурăмĕ тăрăх темиçе хутчен шутсăр лайăх çунтарса илнĕ.

— Вĕрентĕп эп сана килти тыр-пула вăрлама, шуйттан урапи çинчен ӳксе юлнăскер! Тепре курсан — çапса пăрахатăп!..

Ыттисене те леккеленĕ тет çавăн пек...

Çапах та ачасен ĕçĕ чăн-чăнах усăллă пулни пĕр икĕ эрнеренех палăрма пуçларĕ. Ку таранччен ĕçре ĕшенсе çитнĕ ват лашасем пек салху, пуçĕсене пĕксе çӳрекен тихасем хавассăн та янравлăн кĕçенме, лаша вити çумĕнчи пысăк картишĕнче тĕпĕрти, тĕпĕрти чупма, выляма пуçларĕç, пăрусем те сисĕнмеллех тасалса кайрĕç. Ун пирки Сар Тимухха Назар Егорччăна çав тери тулли кăмăлпа пĕлтерчĕ:

— Тĕрĕс турăмăр эпир санпа, ачасене çак ĕçе шанса парса! Лайăх ĕçлеççĕ, ним те калаймăн! Хаçата çырса паратăпах кун çинчен, пурте пĕлччĕр пирĕн ачасем мĕнлине...

— Яра пар ара, мухтан, мухтан, эсĕ вĕт эп астăвассах — мухтанчăк,—кулса илчĕ ăна хирĕç ватă председатель.— Сан аçуна та ялта Вĕçкĕн Ваççа, тетчĕç...

— Мухтанса мар ара, тĕрĕссине кăна...— тӳрре тухма тăрăшрĕ Тимухха.

— Çыр, çыр! Анчах ытлашши суйса ан тултар. Хаçат тени — суйнине юратмасть.

...Тепĕр эрнерен район хаçатĕнче чăнах та «Çĕнĕ саманари» ачасем çамрăк выльăхсене чунтан тăрăшса пăхса ӳстерни çинчен пĕчĕк кăна статья тухрĕ. Унта чылай ачасен ячĕсене те асăннăччĕ. Статья айне «Т. Рыжов, колхоз бригадирĕ» тесе çырнă...

Ой, мĕн тери савăнчĕç ачасем уншăн! Ара, епле савăнмастăн-ха? Вĕсем çинчен халь пĕтĕм район пĕлет вĕт, вĕсем пĕтĕм район умĕнче ырă ятлă пулчĕç!..

— Эсĕ ку заметкăна касса кăларса хăвăн дневнику çумне çыпăçтарса хур,— терĕ Улюка Рина Петровна.— Малашне, тен, ун пеккисем татах та пулĕç, вĕсене те çухатас мар. Кайран вăрçă çулĕсем çинчен асăнмалăх пултăр...

Анчах ачасем çакăн пек хавасланнă кунсенчех ялта сасартăк калама та çук тĕлĕнмелле хăрушă ĕçсем пулса иртрĕç. Çуллахи тăп-тăр уяр, сеп-сенкер пĕлĕтлĕ кун асар-писер çиçĕм çиçсе аслати кĕмсĕртетсе иртнĕ пекех пулчĕ вăл...

Хĕвел кулленех çӳлтен çӳле хăпарса пынă май çĕр çине ăшăраххăн пăхса, кăнтăрласенче пӳрт-çурт тăррисенчен пирвайхи тумламсем ӳкерме тытăннă кунсенче Евгенисен ĕни пăруларĕ. Ял çыннишĕн

ĕне пăрулани — пысăк уяв пекех вăл. Халь ĕнтĕ кил-йыш валли сĕчĕ-çăвĕ те, турăхĕ-чăкăчĕ те пулать. Пуринчен ытла, кил-йышри ача-пăча валли лайăх вăл! Çавăнпа та ĕне пăруласан çынсем тустăвансене те чĕнеççĕ, вĕсене «ĕне ыррипе» хăналаççĕ. Ĕмĕртен пыракан йăли çапла пирĕн енчи чăвашсен.

Евгенисен амăшĕ хăна-мĕн пухасси çинчен шутламарĕ, анчах кайри пӳртре ула тынашка пурăнма пуçласан, виç-тăват кунтан, Евгение çапла каларĕ:

— Паян шкултан таврăнсан лаша кӳлсе кукамусем патне вĕçтер-ха эсĕ, илсе кил ăна ĕне ырри симе. Ахаль те нумайранпа курман, шутсăр курас килекен пулса çитрĕ. Пĕр эрне те пулин пурăнса кайтăр...

— Юрать, анне, унта кайса килесси маншăн ним те мар,— терĕ Евгени.— Юлашки урокра лармасан та пултаратăп — физкультурă кăна пулать, уншăн хăрамастăп эпĕ...

— Ку тата лайăх, часрах кайсан иртерех çаврăнса килетĕн. Анчах урокĕнчен учитлĕрен ыйтмасăр пăрахса ан кил, асту,— вĕрентрĕ амăшĕ.

— Юрĕ.

Евгени хăйсен кукамăшĕсем патне кайса килесси çинчен тахçанах шухăшласа пурăнатчĕ,— Ильинкăна эвакуированнăйсем илме кайсан та кĕрсе тухаймарĕ-çке вăл унта,— çавăнпа та паян амăшĕ хушни ăна чăннипех хĕпĕртеттерчĕ. Тинех Палюк куккăшĕ фронтран илсе килнĕ нимĕç япалисене курать ĕнтĕ вăл! Вĕсене куккăшĕ пĕркуннех парса ярасшăнччĕ — спектакльсем лартнă чух кирлĕ пулĕ, тенĕччĕ. Халь илсе килетех вĕсене Евгени, юлташĕсене кăтартса тĕлĕнтеретех!

Килтен вăл шăп кăнтăрла тухса кайрĕ те, лашине çул çинче уçăрах чуптарнипе икĕ сехетрен Ильинкăна çитсе, кукамăшĕсен хапхи умне пырса тăчĕ. Никамран малтан ăна Хураçка — пĕчĕкçеç çăмламас хура йытă кĕтсе илчĕ: хăйсен умне такам пырса чарăннине сиссенех хапха айĕнчен пуçне кăларчĕ те тарăхнипе çурăлса каяс пек вĕрме тытăнчĕ. Йытă çĕтĕлнине илтсе кукамăшĕ — çӳллĕ, арçын пек тĕреклĕ, сарлака хулпуççилĕ, тăваткăлтарах хура сăн-питлĕ хĕрарăм чупса тухрĕ, пĕчĕк хапхаран Евгени кĕрсе тăнине курсан савăннипе аллисене хире-хирĕç шартах çапрĕ:

— Эсĕ-и ку, ывăлăм?! Ай-уй, мĕнле килме пĕлтĕнех, ачам? Эп сире ман çинчен пуçĕпех манса кайрăр пуль тенĕччĕ ĕнтĕ! Хăçантанпа курман, тур çырлах...

Çапла калаçнă май вăл мăн хапхана уçса ячĕ.

— Атя, кĕрт лашине, тăварса лупас айне тăрат.

— Тăварса тăмастăп, кукамай, вăхăт çук!

Евгени хăй мĕншĕн килнине каласа пачĕ.

— Каç пуличчен пирĕн каялла таврăнса çитес пулать...

Кукамăшĕ хыпăнсах ӳкрĕ:

— Апайтурух, мĕнле пулса тухать-ха капла? Сирĕн пата пуш алăпа пыраймастăп ĕнтĕ эпĕ! Мĕн те пулин пĕçерес пулать... Хуран кукли те пулин çупам-ха эппин!

— Ан чăрман, кукамай, нимĕн те кирлĕ мар, халлĕхе çимелли пур пирĕн!— терĕ Евгени.

— Уй, ачам, чипер калаç-ха эсĕ!—ун çине тĕлĕннĕ пек пăхрĕ кукамăшĕ.— Хăçантанпа курмав пулать те, кучченеççĕр пыратăп-и вара? Хуран кукли пĕр наччасрах пулать вĕт вăл! Чĕрес ăшне хурса çиелтен лайăх чĕркетпĕр те, сирĕн пата çитиччен сивĕнме те ĕлкĕреймĕ...

Карчăк йăпăр-япăр тулти чăлантан кункрапа çăнăх илсе кĕртсе чуста çăрма тытăнчĕ. Хăй пĕрмай ыйтса пĕлчĕ:

— Мĕнле пурăнкалатăр эсир унта, ачам?

— Чиперех-ха...

— Чирлекен-тăвакан çук пуль?

— Пурте сывах.

— Вакуирăвăннăйсене усратăр, терĕç. Халь те пурăнаççĕ-и?

— Вăрçă пĕтиччен ăçта каймчăр ĕнтĕ вĕсем? Пит лайăх пурăнатпăр. Пĕр çемье пекех. Çыннисем кăмăллă.

— Вĕсене те шеллемелле çав. Пирĕн ялта та виçтăват çемье пур та, çавăнтан пĕлетĕп. Пĕрисен тăватă ача, пит тертленеççĕ. Амăшĕ чирлĕ. Пăхсав куççулĕ тухать. Эп вара час-часах кăшт-кашт кучченеçсем кайса паркалатăп... Çĕр çăтман вăрçи! Чип-чипер пурăнас çĕртенех мĕн чухлĕ халăх пĕтет, мĕн чухлĕ асапланать тата... Сирĕн ялта та вилнĕ хутсем килеççĕ пуль?

— Килеççĕ çав... Аманнисем те нумай.

— Аçу сырать-и? Сывах-и?

— Пĕр-икĕ эрне каялла сывахчĕ те... Халь çине çырман.

— Малашне те чипер сывă пулмалла пултăрччĕ! Эй, тур-тур... Вăрçин вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть вĕтха!— кукамăшĕ, ассăн сывласа илсе, çине тăрсах чуста çăрчĕ.

— Кукка ăçта?— ыйтрĕ Евгени.

— Советра! Ăçта пултăр ĕнтĕ вăл? Кунĕн-çĕрĕв çавăнта. Пин тĕрлĕ ĕç тупăнать ăна валли. Йытă пекех чупать.

— Манăн унпа калаçмалли пурччĕ те...

— Тен, килет пулĕ-ха, çак тĕлелле кăнтăрлахи апат çиме килсе каяканччĕ. Анчах тепĕр чух кунĕпех выçă çӳрет. Веç начарланса кайрĕ ĕнтĕ!

Кукамăшĕ çапла каларĕ кăна — тулта Хураçка вĕрни, унтан хапха шашулкки чанклатни илтĕнчĕ.

— Ак, çылăхсăр çын, çитрĕ те пулмалла! Чӳречерен пăх-ха, кукку мар-и?

— Вăл,— терĕ Евгени, унчченех кил хушшинелле пăхнăскер.

Тепĕр самантранах куккăшĕ крыльца картлашкисем тăрăх чупса хăпарса пӳрте кĕрсе тăчĕ. Çăлтăрлă салтак çĕлĕкĕпе, фуфайкăпа, симĕс галифе йĕмпе, атăпа. Сулахай айăкĕ çинче кивелнĕ полевой сумкă. Чăн-чăн салтаках ĕнтĕ, халь тесен халь

строя тăмалла, хăрах алли çеç çитмест ăна. Пушă çаннине пиçиххи айне чиксе çыхнă.

— О-о, пирĕн герой çитсе ларнă-çке!— терĕ вăл хавассăн, Евгение сулахай аллине парса.— Мĕнлерех чупатăн, Рыбаков юлташ?

— Аванах-ха,— терĕ Евгени, темшĕн — те хăйне «Рыбаков юлташ» тенĕшĕн?— тăрук хĕрелсе кайса.— Кукамая хамăр пата чĕнме килтĕм. Ĕне ырри çиме...

— Ĕне ырри? Пит лайăх япала! Пĕчĕк чух эпир ĕне ырри пĕçерессе мăнкуна кĕтнĕ пек кĕтеттĕмĕр...

Вăл çĕлĕкĕпе сумкине, унтан фуфайкине хывса çакрĕ те сĕтел хушшине ларса хăрах аллипех чикаркка чĕркеме тытăнчĕ. Евгени çавăнтах Палля хăйĕн аманнă куккăшне чикаркка пит ăста туса панине аса илчĕ, тахăш самантра унăн та чĕркесе парас шут çуралчĕ, анчах сĕнме именчĕ — хăйне чĕлĕм туртма вĕреннĕ тесе каласран хăрарĕ.

— Махмут Иванĕ аманса килнĕ, анне,— терĕ куккăшĕ чикарккине чĕртсе янă хыççăн, чăлан еннелле пăхса.— Халь çеç кĕрсе калаçса тухрăм.

— Пуçĕпех килнĕ-и?— ыйтрĕ амăшĕ.

—Çук, виçĕ уйăхлăха çеç янă. Сулахай хулĕн шăммине çĕмĕрнĕ унне, анчах хăрушах мар, тӳрленме пултарать.

— Кайран каллех каймалла пулать-и-ха?

— Тӳрленсе çитсен каять ĕнтĕ. Ун аллине ман пек татса ывăтман вĕт.

— Эп хам пулсан, пĕрре аманнă çынна вăрçа урăх вовçă ямăттăм. Пĕрре пулнă — çитет, пулманнисем кайса курччăр. Пĕркун хулана кайсан куртăм та эпĕ — таккуйски йăйăрсем шăл йĕрсе çӳреççĕ, вăрçăра пулма мар — пăшал пенине те илтмен пуль! Çавсене пухса ярас пулать...

— Хăшĕсене ятарласа тылра хăварнă, анне, фронт валли хĕç-пăшал, тĕрлĕ машинсем тума... Унсăр та май килмест-çке-ха. Анчах кашни аманнă çынна киле ярсан, çапăçаканни кам пулĕ? Çарта халĕ кашни виççĕмĕш çын аманнă ĕнтĕ.

— Пирĕн яла та пĕр виçĕ эрне каялла вăрçăра аманнă çын пырса кайрĕ,— калаçăва хутшăнчĕ Евгени.

— Хăвăр ялсемех-и? Кам тавраш̆ĕ?— ыйтрĕ кукамăшĕ.

— Çук, Хыркассисем, леш енчи Хĕрлĕ Мари шăллĕ. Аккăшĕ патне пырса темиçе кун пурăнчĕ. Çавăн пеках, сулахай аллине амантнă хăй. Эп те кайса куртăм, мĕнле çапăçни çинчен каласа панине итлерĕм. Анчах темле каламалла... ытлашширех мухтаннă пек туйăнчĕ. Танксене те пĕтернĕ вăл, ахаль салтаксене те чикĕсĕр нумай çулса тăкнă. Ĕненмелле те мар!

— Хăш-хăш чăвашсен мухтанас йăла пур çав, ĕçне пĕр пуслăх тăваççĕ — сăмахне пĕр тенкĕлĕх каласа тултараççĕ,— терĕ куккăшĕ.— Пуринчен ытла, кăштах «вутлă шыв» сăтнă хыççăн тапранса каяççĕ, чарăнма та пĕлмеççĕ вара.

— Ку та тăватă кун хушшинче пĕрре те урăлмарĕ, тет. Акăшĕ пĕр вĕçĕм сăмакунпа хăтланать те — май килнĕ ăна. Илтеттĕмĕр — кашни каç урама тухса çухăратчĕ: эп фронтовик, эп Гитлерпа çапăçнă, халăхшăн юн тăкнă! Каллех вилме каятăп! Ма ĕçес мар манăн?!— тетчĕ. Унтан, темшĕн, ялан тĕрме юррисене юрлатчĕ...

— Ун пек карма çăварсем те сахал мар. Суранĕсем кушак чавса илнĕ пек кăна пулнă пулсан та, «за што кровь проливали?!» тесе çуйăхаççĕ. Кунашкал суя паттăрсене куркаланă эпир...

— Çынсем тĕрлĕрен пулаççĕ çав,— терĕ çак калаçăва кăмака кукринченех илтсе тăнă кукамăшĕ.— Тата кашни хăйне майлă ухмаха ерет!

Вăл сĕтел çине пысăк шуç чашăкпа пăсланакан аш яшки илсе пырса лартрĕ.

— Çийĕр-ха, ачасем, эп çак хуран куклине туса пĕтерем...

Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕç — калаçма майĕ те пулмарĕ, çуллă вĕри яшка тута хĕррисене пĕçертрĕ, кашăк çине пĕрмай вĕрмелле пулчĕ. Кăшт тăхтасан вара сăмаха Евгени пуçларĕ:

— Кукка,— терĕ вăл,— хальхи вăхăтра дезертирсем пулма пултараççĕ-и? Ну, вăрçăран таракансем эппин. Вăрçа каяссинчен пытанса юлакансем... Пулма пултараççĕ-и, çук-и?

— Ма ыйтатăн эс кун çинчен?— çиме пăрахсах ун çине чăр-р пăхрĕ куккăшĕ.

— Ахалех... Пуçа çавăн пек шухăш пырса кĕчĕ те...— кăштах хĕрелсе илчĕ Евгени.

— Çук-ха, ахаль ыйтмастăн эсĕ, суйса ан лар,— терĕ куккăшĕ.— Сăлтавĕ пурах санăн...

— Пĕркун пирĕн патра хамăрăн учительницăпа пĕрле калаçса лартăмăр, çав аса килчĕ,—тĕрĕссине каласа пачĕ Евгени.

— Мĕн пирки калаçрăр вара эсир?

— Ара, унта та кунта çынсене тапăнса çаратни çинчен сăмах çӳрет те... Çав вăрă-хурахсем — дезертирсем, вăрçа каяссинчен тарса çӳрекенсем пуль, терĕмĕр. Тепĕр енчен, ку чухне дезертирсем пулма пултарассине те ĕненес килмест...

Куккăшĕ, пĕр вăхăт шухăшла кайса чĕнмесĕр ларнă хыççăн, хуллен кăна ответ пачĕ:

— Тĕрĕс шухăшланă эсир. Ирсĕр чунлă этемсем пĕтмен-ха çав пирĕн. Дезертирсем те пур, тăван сĕршыва сутакансем те. Çынсене çаратаканнисем те — çавсемех. Кашкăрсем пек вĕçем, çын курмалла мар çĕрте пытанса çӳреççĕ-çӳреççĕ те тăрук сиксе тухса сиен кӳреççĕ.

— Камсем, мĕнле çынсем-ха вĕсем, кукка?

— Тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Тĕрмере ларса тухнисем, кулак тавраш̆ĕсен юлашкисем...

— Рина Петровнăпа анне те çапла каларĕç. Чипĕр йĕркеллĕ совет çынни вăрçăран тарас çук, хурахпа та хăтланас çук. Çапла вĕт?

— Тĕрĕс! Чăн-чăн совет çыннин халь пĕртен-пĕр ĕмĕт — тăшман пилĕкне çапса хуçасси. Пурте çавăн çинчен шутлатпăр, çавăншăн тăрăшатпăр, ним те хĕрхенсе тăмастпăр. Пирĕн тăшмана часрах çĕн-

терсе каллех телейлĕ пурнăçпа пурăнас килет. Эпир ыранхи çутă кун çинчен ĕмĕтленсе пурăнатпăр. Анчах кусемшĕн пулсан — хăйсен тирĕпе карланки çеç хаклă. Вăрçăран пытанса юлас — унта вĕлерме пултараççĕ, ĕçме-çиме — çынсенне туртса илес, вăрлас, çаратас. Пĕр сăмахпа каласан,— тискер кайăксем! Нумай мар вĕсем, тен çĕр пинре пĕрре кăна пулĕ, çапах та пур-ха. Анчах ĕмĕрĕ кĕске вĕсен, халăх вĕсене пурĕ пĕр усал кăпшанкăна таптаса вĕлернĕ пек таптаса тăкать.

— Юлашки вăхăтра илтĕнсех каймасть пулас та-ха вĕсем çинчен?

— Ку тăрăхран таçталла пăрăнчĕç пулмалла. Тен, ку таранччен тытрĕç те-и. Тытман пулсан, тен, пĕрпĕр шăтăкра пытанса выртаççĕ-и...

Евгени çисе тăранса сĕтел хушшинчен тухрĕ.

— Кукамай, пирĕн кайма вăхăт, каçчен киле çитес,— терĕ вăл, чӳречерен тулалла пăхса.

— Халех, халех, ачам. Куклисене хурана ятăм ĕнтĕ, наччас пиçет!— сас пачĕ чăланта тăрмашакан карчăк.

— Унтан Евгени куккăшĕнчен ыйтрĕ:

— Эс мана пĕркун темле нимĕç япалисем çинчен каласаттăн, астăватăн-и? Вĕсем хăвна кирлĕ мар пулсан...

— Э, чăнах та-çке!— сĕтел çине ал лаппипе шат! çапса илчĕ куккăшĕ.— Ун çинчен эпĕ мансах кайнă, хăямат! Илсе кай, илсе кай, мана вĕсем ним тума та кирлĕ мар, сире хуть спектакльсем лартма юрĕç!

Вăл çенĕкелле тухрĕ те тепĕр минутранах салтаксен симĕс миххине çĕклесе кĕчĕ.

— Акă вĕсем, суйласа ил хăвна мĕн кирлĕ пеккине!

Михĕрен вăл чăн малтан нимĕçсен хура сăрпа сăрланă хурçă калпакне — каскă туртса кăларчĕ.

— Кур, епле шаплаттарнă!— Куккăшĕ каскăна шăп çамка тĕлĕнчен персе шăтарнине кăтартрĕ.— Лайăх лектернĕ вĕт? Витĕрех тухса кайнă!

— Пульă шăтарнă-и ăна? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Евгени.

— Панкрапа персе мар ĕнтĕ,— кулса илчĕ куккăшĕ.

Ун хыççăн михĕрен лутăрканса пĕтнĕ икĕ нимĕç пилотки, пĕр китель (салтак пиншакĕ), йывăç çулçисем евĕр арăш-пирĕш ӳкерчĕксем туса тултарнă маскировочнăй халат, чăн юлашкинчен икĕ «тимĕр хĕрес» — фашистсен чи хаклă орденĕ тухса выртрĕç.

— Пуçтарса чик,— терĕ куккăшĕ. Анчах Евгени иккĕленнĕ пекрех пулса тăчĕ:

— Пиншакне тăхăнма пулать-иç? Ăна хăвна валли хăвармастăн-и?

— Ан лăпăртат!— терĕ куккăшĕ.— Фашист тирне хам çие хума ухмахах ермен-ха эпĕ! Манăн ку япаласем çине куçпа пăхсан та ăш лĕклентсе килет!..

— Ну, юрĕ эппин. Эс калашле, спектакль лартма аван пулать. Чăн-чăн нимĕç тумне курасшăнах тем чухлĕ халăх пухăнĕ...

— Яра пар, яра пар! Тĕлĕнтер хăвăр ял çыннисене!

Тепĕр çур сехетрен Евгени лашине çул çине кайма хатĕрлесе хапха патне çавăрса пырса тăратрĕ. Кукамăшĕ çуна пуçне кив кĕрĕкпе чĕркенĕ чĕрес лартрĕ — унта вăл вĕри хуран кукли тултарнă, юнашарах шуç бидон вырнаçтарчĕ — унта çурри таран çав тери ырă шăршăллă пыл пулнă; çавăнтах шĕшкĕ çулçисем тăкăнма пуçланă вăхăтра çĕртенех пуçтарнă сап-сар măйăр тултарнă кив кĕпе çанни те вырăн тупрĕ. Нумайранпа курман аслă хĕрĕпе унăн ачисене темпе те хăналаса савăнтарасси килнĕ ĕнтĕ ват çыннăн!

Кукамăшĕпе Евгени çуна çине вырнаçса ларчĕç, халь хапха уçмалла та тухса каймалла çеçчĕ — çав вăхăтра Евгени куккăшĕ тем аса илсе кăшкăрсах ячĕ:

— Чимĕр-ха, тăхтăр! Ан васкăр ытлашши... çиччас, тепĕр кучченеç пур манăн!

— Мĕн тата? — кăмăлсăр пăхса илчĕ ун çине карчăк.

— Кĕлетри мăн карçинккăра эпир пĕркун тытса килнĕ шăннă чĕр пулă пур, çавна илсе кайăр! Вĕсем кăçал швежи пулă çисе те курман пуль-ха.

— Кирлĕ мар, кукка, ахаль те тем те пĕр тултарчĕ ĕнтĕ кукамай,— именнĕ пек пулчĕ Евгени.

— Аптрамасть, йывăр япала мар, хурса каятăн! Хăвăр патра пурăнакан эвакуированнăйсем те тутанса пăхчăр Атăл пуллине. Хамăра кирлĕ пулсан, эпир кунта живă-два кайса тытма пултаратпăр. Атăлĕ пирĕн — хамăрăн, темелле...

Çапла пĕр чарăнмасăр калаçнă маях, куккăшĕ темле кив хутаç ăшне шăннă пулă тултарса çуна пуçне пырса пăрахрĕ.

— Ну, халь ĕнтĕ кайма та пултаратăр!— Вăл мăн хапхана уçса ячĕ.— Чипер çитĕр, упа тĕлне ан пулăр!— çавăнтах кулса илчĕ хăй.

— Сыв пул, кукка, пирĕн пата пыр!— кăшкăрса хăварчĕ ăна Евгени.

Тепĕр вунă минутран вĕсем ялтан тухрĕç. Уйра паçăрхи пек мар, самаях сивĕ иккен, хĕвел тухăçĕ енчен хирĕçле çил вĕрет, пит-куçа чĕпĕтет. Уйĕ сарлака, тӳрем, таçта çитиех шап-шурă тикĕс юр сарăлса выртать, ниçта пĕр хӳтлĕх те çук. Евгени хăйсен çурăмĕ хыçĕнчи хĕвел çине çаврăнса пăхрĕ — вăл Атăл леш енчи вăрман тăррине тĕкĕннĕ пекех иккен, кĕçех анса ларать. Хĕвел курăнми пулсанах хăвăрт тĕттĕмленме пуçлать. Çулĕ çывăхах мар, васкамалла.

Евгени, тилхепене кăрт-карт туртса, лашана хытăрах чуптарма тытăнчĕ, çулăн икĕ енĕпе лартса тухнă чăрăш лăссисем — маяксем куç умĕнче вĕлт те вĕлт туса, хăйсемех каялла шунă пек курăнса, хыçа юлаççĕ. Кун пек кайсан, тепĕр сехет çурăиккĕрен киле те çитме пулать пулĕ.

Йĕри-тавралла пăхса пырса, Евгени хура кĕркунне çак çулпах эвакуированнăй эстонецсене илсе килнине аса илчĕ. Ун чух тин юр çума тытăннăччĕ-

ха, шăннă çĕр сийĕн урапа кустăрмисем сиккелесе, хăлтăртатса пычĕç. Çакăн пеках хирĕçле çил вĕретчĕ, ват Пауль утиялпа чĕркенĕ мăнукне чĕрçи çинче тытса пычĕ. Ун чухне вĕсем Евгенишĕн пачах та ют çынсемччĕ, Евгени Пауль Оскаровичпа сăмах хушма та аран-аран хăюлăх çитерчĕ, анчах халь акă вĕсем ĕмĕрхи тăвансем пекех пулса тăчĕç. Пĕр хурантан, пĕр çемье пек çисе пурăнаççĕ. Çыннисем чăнах та лайăх ĕнтĕ, тĕлĕнмелле ырă кăмăллă... Шутсăр ĕçчен тата! Вăрçă пĕтсен, вĕсемпе уйрăлма та йывăр пулать пуль. Анчах ун чухне вĕсем каяççех ĕнтĕ, кунта пурăнас çук, кашни çын чĕри хăй çуралса ӳснĕ çĕршыва туртать вĕт. Евгени хăй те, унăн çак Киккассем пек таçта аякка кайса пурăнмалла пулнă пулсан — унта темле ырă пурнăç пулсан та — тăван ялнех таврăнмалла çав...

Çул кăштах тăвалла хăпарма пуçларĕ, унтан малта вăрман курăнса кайрĕ. Ытти чухнехи пек хура тĕслĕ мар, темле кăвакраххăн курăнать вăл — йывăççене пас тытса лартнă пирки пулмалла. Евгенисен çав вăрман хушшипе пĕр пилĕк çухрăм каймалла,— малтан çамрăкрах вăрман пулать, ăна «хунав вăрманĕ» теççĕ, вăл пĕр вунă çул каялла ватă йывăççене каснă хыççăн ӳсет, унтан вара пĕлĕтех тăрăннă пек курăнакан хутăш вăрман пуçланса каять. Унта кăнтăр кунĕнче те тĕттĕмрех, темле уяр çанталăкра та çĕре хĕвел ӳкмест. Чăн та, сăвăри пек каласан, «сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман»...

Сасартăк Евгени чĕри кăрт-карт тапса, пăчăртанса илчĕ: ăна пасăр куккăшĕпе иккĕшĕ çынсене кĕтмен çĕртен тапăнакан вăрă-хурахсем çинчен калаçни аса килсе кайрĕ. Вĕсем çынсене шăпах çакăн пек вăрмансенче тытса чарса çаратаççĕ вĕт-ха? Ăнсăртран, халĕ çак вăрманта вĕсене те кам та пулин тапăнсан, мĕн тăвас? Таврара никам та çук, пыру çуралса кайиччен хурах кăшкărсан та усси пулмасть... Тытĕç те кукамăшпе иккĕшне те çапса пăрахĕç, унтан вĕсен тумтирĕсене сĕвсе илсе, хăйсен лашипех таçталла тарĕç. Пулнă тет-ха вĕт ун пекки...

Вăрман кашни самантрах çывхарса килчĕ. Акă, пĕр ик çĕр метр та юлмарĕ пулĕ. Лаша вăрăммăн ярса пуссa юртать, çуна тупанĕ айĕнчи хытнă юр пĕр майлă кăчăртатса пырать.

— Мăн вăрманне кĕрсенех лашана сиккипе яратăп, мĕн май килнĕ таран хытăрах чуптаратăп, сиккипе пыракан лашана никам та тытса чараймасть...— пăлханса шухăшларĕ Евгени.— Çын çула картлама тăрсан, ăна аяккалла вăркăнтарса хăварма пулать...

Çул тăршшипех ним чĕнмесĕр ларса килекен кукамăшне вăл хăй пăлханса пынине те палăртмарĕ, мĕн шутлани çинчен те каламарĕ. Ма пăшăрхантарас карчăка? Тен, нимĕн те пулмĕ-ха, вăрман витĕр чиперех тухса кайĕç вĕсем? Куккăшĕ те пасăр вăррисене «тен ку таранччен тытрĕç те-и», терĕ. Тен, кăлăхах аса илчĕ пуль вĕсем çинчен Евгени. Пасăр сăмах хускатнăран...

Çапах та, вĕтлĕх вăрмантан иртсе мăн вăрмана кĕрсенех, вăл хăй малтан шухăшланă пек турĕ: ура çине сиксе тăчĕ те, тилхепене карăнтарсах туртса, ахаль те чиперех чупакан лашана йĕкĕрлесе тытнă тилхепе вĕçĕпе тӳрчĕ тăрăх туртса çапрĕ. Лаша пĕтĕм вăйĕпе тапса сикрĕ, çуна картах малалла ыткăнчĕ, хыçалалла пăхса ларнă кукамăшĕ пĕтĕм кĕлеткипе çуна вĕçнелле сулăнчĕ, чутах тухса ӳкетчĕ.

— Ма ун пекех хăвалатăн ара? — каялла çаврăнса ыйтрĕ вăл Евгенирен.

Анчах Евгени вăл каланине илтмерĕ курăнать,

илтнĕ пулсан та хирĕç чĕнмерĕ. Вăл сиккипе пыракан лашине тата ик-виçĕ хут туртса çапрĕ. Çав тери хăвăрт пынипе вăхăчĕ-вăхăчĕпе çуна тупанĕсем çĕре те перĕнмерĕç.

— Хуллентерех, Евгени! Асту, вăркăнса юлатпăр!— кăшкăрчĕ кукамăшĕ.

Евгени каллех чĕнмерĕ. Чĕриех сиснĕ курăнать çав унăн кĕçĕр çакăнта ырă мар пуласса...

Хăй вăл, ура çинчех тăраканскер, лашине хăвалана хушăрах пĕтĕм куç вăйĕпе малалла пăхрĕ. Тавралăх тĕттĕмленсех пынă пулин те, куçĕсем чылай инçетрине курчĕç-ха. Çулĕ тӳп-тӳрĕ тăсăлса выртать, ун çинче никам та çук. Пуш-пушах. Шăп. Хăлхана лаша урисем тăпăртатса пыни тата çуна тупанĕсем тикĕс мар вырăнсенче кăлт-калт туни çеç пырса кĕрет. Питрен сив сывлăш çапать тата.

Часах çул сылтăмалла пăрăнмалла. Унтан вара уя тухасси инçех те юлмасть...

Тăпăрти, тăпăрти, тăпăрти!—ыткăнать лаша. Унăн кайри урисем айĕнчен çуна пуçне юр муклашкисем çапăнаççĕ, хăш чух кăкăра та пырса тивеççĕ.

— Ан чуптар ун пекех! Пӳлĕнсе ӳкет ак лашу!— кăшкăрать кукамăшĕ.

Евгени ун сăмахĕсене хăлхана та чикмест..:

Çул сылтăмалла пăрăнчĕ. Пăрăннă чух çуна тарăн сулнăка пырса çапăннипе чутах тӳнсе каятчĕ, юрать-ха ӳречисем вăрăм, тӳнме памарĕç.

Çунапа пĕрле лаши те сулăнса кайрĕ те сиккипе чупма пăрахрĕ. Тен, ывăнса та çитрĕ-и. Чĕрчун вĕтха вăл, мотор мар.

Шăпах çав самантра вара çулăн сылтăм енчи тем хулăнăш юман хыçĕнчен çул çине икĕ мĕлке чупса тухрĕç те, вĕсенчен пĕри тӳрех лашана йĕвенĕнчен ярса тытрĕ.

— Стой, миллай, ан васка!..

Хашкама ернĕ лаша тăпах чарăнчĕ.

— Ма тăратрăн тата? — ыйтрĕ тин кăна мĕн пулса иртнине ним пĕлмен кукамăшĕ, вырăнтан хускалмасăрах.— Лаши тăварăнса каймарĕ пуль? Каларăм сана ытла хытă ан хăвала тесе...

Евгени сас памарĕ... Вăл халĕ пĕр сăмах та калама пултараймарĕ, чĕлхи çыхăнса ларчĕ, чĕри те тапма чарăнчĕ-и тен. Куçĕсем хуралса килчĕç, чĕркуççийĕсем лĕнчĕрех кайрĕç.

«Ак хайхи, лекрĕмĕр... Пĕтрĕмĕр!» — шухăш вĕлтлетсе илчĕ ун пуçĕнче. Вăл çуна ӳречи çине лак! ларчĕ.

Çав вăхăтрах мĕлкесенчен тепри çунапа юнашар пырса тăчĕ те, Евгени çине хĕсĕк куçĕсемпе тăрăнса, хăйăлтатакан сасăпа ыйтрĕ:

— Мĕн тиесе каятăн? Мĕн пур çуну çинче? Кала часрах!..

— Нимĕн те.... çук...— пăшăлтатса илчĕ Евгени.

— Ан суй, анчăк çури! Кунта мĕн? — Вăрмантан сиксе тухнă этем Евгени кукамăшĕ çуна пуçне хунă япаласене хыпашлама тытăнчĕ.

Ют сасса кукамăшĕ те илтрĕ пулмалла та, каялла çаврăнса пăхрĕ. Хăйсене темле ют çынсем — кам пултăр, хурахсем ĕнтĕ!— тытса чарнине тавçăрса илсен, вăл та тăруках нимĕн те калаймарĕ, унăн та пырне темле хытă япала кĕрсе ларнă пек пулчĕ, сывлăшĕ пӳлĕнчĕ, пĕтĕм кĕлетки сасартăк шăнса кайнă пек вĕттĕн-вĕттĕн чĕтреме пуçларĕ. Анчах çапах та пурнăçра нумай хура-шур курнă карчăк ытла çухалсах каймарĕ, темиçе самантранах кăмăлне хытарма вăй çитерчĕ. Вăл йăпăр-япăр чĕркуççи çине тăрса ларчĕ те хаяррăн, шариех кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн кирлĕ сана? Ма çулăхатăн, намăссăр?! Иртсе кай хăвăн çулупа, пире чарса ан тăр, санăн пирĕнпе ним ĕç те çук!..

Бандит ун çине кăн-н пăхрĕ те сывăхарах пычĕ.

— Хуп çăварна, ватă кăвас-чĕрес, атту халех майна каялла пăрса лартатăп!— çĕлен чашкăрнă пек, сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса, хăйăлтатса илчĕ те вăл, карчăка пуçĕнчен çапса ярас пек хăмсарчĕ.

— Вĕлер ара, вĕлер, этем чĕри вырăнне хура юн муклашки çакăнса тăрать пулсан!— каллех кăшкăрчĕ ăна хирĕç карчăк. Унтан сăмахсене пăрçа сапнă пек сапма тытăнчĕ:— Намăссăр, кĕççе пит, вун ик мăйракаллă шуйттан! Сан пек молотеццăсем ку чухне пурте вăрçăра, Гитлере хирĕç çапăçаççĕ, халăхшăн пуçĕсене хураççĕ, эс кунта кашкăр пек сĕм вăрманта пытанса пурăнатăн та ват карчăксемпе ачасене çаратакан пулать, пӳтсĕр!..

— Молчать! Асту, туртса антарса юр ăшне кутăн чикетĕп!— Бандит татах аллине çĕклерĕ.

— Мĕн палкаса тăратăн эс вăл киреметпе? — кăшкăрчĕ çав вăхăтра тепĕр хурахĕ, лаша пуçĕнчен тытса тăраканни.— Пар ăна пĕрре тути урлă, юлашки шăлĕсем тухса сирпĕнччĕр!

— Эс хăвăн аннӳн шăлĕсене сирпĕнтер, чухах пулать ăна сан пек пӳтсĕр ывăл çуратса ӳстернĕшĕн! Мана çапма сăлтав çук сирĕн!— тата хытăрах кăшкăрчĕ Евгени кукамăшĕ. Малтан хăраса ӳкни пĕтĕмпех иртсе кайрĕ пулмалла унăн, халь тӳсме çук тарăхнипе пĕтĕм ăш-чикки хыпса çунчĕ, вăл кайран-малтан мĕн пуласси çинчен шутламасăрах хурахсене тем те пĕр каларĕ, вĕсене шăлпа çыртса çурма хатĕр пулчĕ...

Анчах Евгени ни чĕрĕ, ни вилĕ ларчĕ. Хăранипе те мар, çук. Тĕлĕннипе, хăй куçĕсемпе курнине хăй ĕненме пултарайманнипе.. Çуна патне пырса тăнă хурахĕ ик-виç сăмах каласанах, Евгение унăн сассси палланă сасă пек, ăна вăл таçта илтнĕ пек туйăнса кайрĕ, анчах ăçта, хăçан илтнине тăруках аса илеймерĕ. Хурах Евгени кукамăшне юнаса кăшкăрса пăрахсан, ун сасси каллех çавăн пек туйăнчĕ — илтнĕ, нумаях та пулмасть илтнĕ вăл ăна!.. Кукамăшĕ ятлаçма тытăннă хыççăн хурах чышкине чăмăртаса ун патнех пĕшкĕнсен, самаях тĕттĕм пулнă пулин те, Евгени ăна чип-чиперех палласа илчĕ. Ку этем — çак вăрманти хурах — хайхи Паллясен куккăшĕ, пĕр уйăх çурă каялла вĕсен ялне аманнă салтак пек пырса кĕнĕ Лука Лукич Козлов

пулчĕ. Çавах, çавах, урăх никам та мар!.. Сасси те савăн — çинçен, хăйăлтатса тухать, сăнĕ те: янах шăммисем сарлака, куçĕсем хĕсĕк, сухалĕ хĕрлĕ, халь шăрт пек ÿссе ларнă, нумайранпа хырман пулмалла.

Ак сана салтак, ак сана Мускав патĕнче фашистсене шутсăр нумай пĕтерсе тăкнă «герой»!.. Паллясем патĕнче ÿсĕр пуçпа хăйĕн «паттăрлăхĕпе» ним латсăр мухтанса ларнă чух вăл хăйĕн алли кÿрленсенех тепĕр хут фронта каясси çинчен сÿпĕлтетрĕ, анчах хăй ав мĕн хăтланса çÿрет. Дезертир! Вăрă-хурах! Бандит! .Тен, вăл вăрçинче те пулман, алли те аманман унăн? Юри лăпăртатнă çеç вăл; пире, айвансене, улталанă кăна!

Хăйсене çаратма тапăннă пирки хăранинчен ытла, Евгени Паллясен куккăшне, çак ирсĕр Лука Козлова палласа илни ăнран кăларса ячĕ. Мĕн тери тискер, тÿрĕ чунлă çын шутлама та пултарайман хăрушла ĕçсем пулса иртеççĕ иккен çут тĕнчере!..

Нимĕнле сăмахсемпе те каласа памалла мар хытă пăлханса кайнă Евгени чĕри мăлатук пек шаккарĕ, вăл пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе кĕскен-кĕскен сывласа ларчĕ

Козлов çав хушăра çуна çинче мĕн пуррине ухтарма тапратрĕ. Кĕçех çуна пуçĕнчен унта мĕн пуррине пĕтĕмпех туртса кăларчĕ: хуран кукли тултарнă чĕресе те, пыл бидонне те, мăйăрлă кĕпе çаннине те, куккăшĕ вăйпах парса янă чĕр пулла та.

— Охо-хо! Кунта пур-ха пире валли! — терĕ вăл лаша пуçĕнче тăраканнине хавассăн.— Туглă пулать пирĕн каçхи апат!..

Анчах çав самантрах Евгени кукамăшĕ ура çине тăрса ăна аллинчен ярса тытрĕ.

— Ан тивнĕ пултăр, продяга! Сан валли хатĕрлемен эп вĕсене, чирлĕ ачасем валли илсе каятăп!

— Ничево, пирĕн хырăма та пăсмĕ-ха!— кулам пекки турĕ бандит.

— Хур каялла, эсремет пуçĕ! Хур, теççĕ!— Карчăк хурах аллинчи япаласене туртса илме пикенчĕ.— Çĕленсене çитерместĕп! Луччă кăларса ывăтам!

Хăрас-тăвасси çинчен халĕ пуçĕпех манса кайнă карчăк хăй хураха çĕнтерессе шаннă пекех кĕрешме тытăнчĕ, ун пек те кун пек авкаланса, хăйĕн юратнă мăнукĕсем валли хатĕрленĕ кучченеçсене каялла туртрĕ. Анчах та кăлăхах пулчĕ вăл,—хурах сылтăм аллине вĕçертрĕ те карчăка икĕ куçĕ хушшинчен çав тери хытă чышрĕ. Карчăк çав самантрах каялла ывтăнса кайса пуçĕпе çуна ÿречине çапăнчĕ. Ку çитмерĕ-ха, тарăхса кайнă бандит çуна çине сиксе хăпарса ăна хырăмĕнчен çине-çине тапма тытăнчĕ

— Йытă вилли! Ме сана, ме, тăран!— хăйăлтатрĕ хăй.

— А-а-а! Ан вĕлер ман кукамая! Тархасшăн ан вĕлер! Мĕн тунă вăл сана?! — Козлов çинелле пĕррех сикрĕ вара Евгени, ку таранччен ним тăвайма-сăр тăнăскер. Арçын ача ик аллипе пĕр харăс кăкринчен пырса чышнипе Козлов каялла сулăнса кайрĕ те ÿрече урлă çул çине тухса ÿкрĕ. Анчах тепĕр самантранах сиксе тăчĕ те Евгение хăйне çулса илчĕ

— А-ах, йытă çури! Сана та кирлĕ пулчĕ-и?!— йынăшнă пек хăйăлтатрĕ те вăл, ачана çуна çинчен туртса антарса, пуçĕнчен, кăкринчен, айăкĕсенчен чышма тапратрĕ.

— Ан ça-ап! Ан ти-ив! Тархасшăн!— аллисемпе хÿтĕленме, пит-куçне амантса пĕтересрен пытарма тăрăшса, кăшкăрса макăрса ячĕ Евгени.— Эп сана паллатăп вĕт! Эс Паллясен куккăшĕ.. Козлов.. Лука .. Пирĕн ялта пултăн... Ан вĕлер!..

Евгени унăн ячĕпе хушаматне калани хураха тăрук урăлтарнă пек пулчĕ. Тарса çÿрекен çыншăн ăна кам та пулин палласа илни питĕ хăрушă-çке-ха вăл, хăйне тытнăпа пĕрех! Тĕлĕнсе кайнă Козлов ачана хĕнеме чарăнчĕ, йăпăрт кăна тем çинчен шухăшларĕ пулмалла, анчах тепĕр самантранах хаяррăн хăйăлтатса илчĕ:

— Паллатăн эппин, сволочь?!

— Паллатăп çав! Эсĕ вăрçă çинчен каласа панине те пырсэ итлерĕм... Ман атте те вăрçăра...— çĕртен тăма пикенчĕ Евгени.

— Апла пулсан, эп сана халех паллайми тăватăп! Н-на!— Козлов ачана каллех пуçĕнчен çапса ÿкерчĕ.— Вĕлеретĕп эп сана! Кайса пĕлтер вара ман çинчен.., леш тĕнчере!

Козлов хыпкăч пек хытă пÿрнисемпе Евгение пырĕнчен ярса тытрĕ. Ача мĕн вăйĕ çитнĕ таран тапкаланчĕ, аллисемпе çапкалашрĕ, вĕçерĕнме тăрăшрĕ — усси пулмарĕ: Козлов ăна çĕр çумне чĕркуççипе пусса лартрĕ те мăйĕнчен тата хытăрах пăчăртарĕ.

— Лукка, пăрах аппаланма!— кăшкăрчĕ çав вăхăтра тепри, лаша пуçĕнче тăраканни.— Хыçалтан лавсем килни илтĕнет, шăвăнас пулать часрах!

Вара Козлова Евгени çумĕнчен çил çĕклесе кайнă пекех пулчĕ. Вăл сиксе тăчĕ те çуна çинчи япаласем патне ыткăнчĕ, хăшĕсене юлташне тыттарчĕ, хăшĕсене хăй илчĕ. Тепĕр минутранах вĕсем вăрманалла тапса сиксе куçран çухалчĕç. Аран сывлăш çавăрса илнĕ Евгени çуна ÿречинчен тытса ура çине тăчĕ, халĕ те аран йынăшса выртакан кукамăшĕ патне пырса пăхрĕ, унтан тÿрех хурахсен йĕрĕпе вăрманалла чупса кĕчĕ. Унăн вĕсем ăçталла тарнине курса юлас килчĕ. Каласа памалла-çке-ха вĕсем çинчен, кĕçĕрех ăçта та пулин çитсе пĕлтермелле — халех шыраччăр, тытчăр!

Хурахĕсем иккĕшĕ те йĕлтĕрсемпе-мĕн, Евгенисем умне сиксе тухнă чух çеç йĕлтĕрĕсене йывăç кутне пăрахса хăварнă. Халь акă каллех йĕлтĕрĕсем çине тăнă та шалалла кĕрсе кайнă.

Лайăх-ха ку, йĕлтĕр йĕрĕсем пурри! Тĕлне манас марччĕ те, ирччен юр çуса ан ларттăрччĕ!..

Евгени çул çине каялла чупса тухнă чух кукамăшĕ пур-çук вăйне пухкаласа тăрса ларнă-мĕн, ан-

чах халь те йынăшать-ха. Ытла та хытă лектернĕ пулмалла ăна Козлов, тен, амантса та пĕтернĕ-и...

— Тарчĕç!— терĕ Евгени.

— Çимеллисене пурне те илсе кайрĕç пуль ĕнтĕ?— вăйсăр сасăпа ыйтрĕ кукамăшĕ.

— Вĕсем çинчен ан калаç-ха эсĕ, хамăр чĕрĕ юлнăшăн савăн...

— Çĕр çăттăрах явăлсене, пĕр-пĕр урнă кашкăр тытса çурса тăктăрах!

— Кашкăрсем çине шанса ĕç тухмасть-ха кунта,— терĕ Евгени, лаша урисем айне ӳкнĕ тилхепене пуçтарса тытса,— пирĕн халь часрах каялла кайса кукκана каласа парас пулать. Вăл мĕн тумаллине пĕлĕ. Района, НКВДăна шăнкăртаттарĕ те, лерен йĕрлеме тухĕç...

Çав вăхăтра вĕсем патне Атăл енчен килекен виçĕ утă лавĕ çитсе чарăнчĕç. Евгени лашине юр ăшне кĕртсе ярсах каялла çавăрма тытăннине курсан, малти лавĕ тăрринче ларакан хĕрарăм кăшкăрсах ыйтрĕ:

— Мĕн пулчĕ тата, ма таврăнатăр?

— Мĕн пулмалли пулчĕ-ха çав,— терĕ Евгени. Анчах хăйсене халь кăна хурахсем тапăнни çинчен пĕр сăмах та шарламарĕ, хĕрарăмсене хăратас мар, терĕ пулмалла.

Утă лавĕсем тĕлĕпе юр ăшшĕн ашса тухсан, Евгени пaçăрхи пекех ура çине тăрса лашине çурăм тăрăх туртса çапрĕ.

— Кукка патне епле те пулин хăвăртрах çитес пулать...

Пĕр хушă канса тăнă лаша тӳрех тапранса кайса сиккипе яра пачĕ...

Хаклă юлташсем!

1963 çулта „Тăван Атăл" альманахра Чăваш писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсем—

хальхи пурнăçран илсе çырнă, паянхи паттăрсене сăнласа кăтартакан романсемпе повеçсем, калавсемпе очерксем, сăвăсемпе поэмăсем,

ялти драмкружоксем валли çырнă пьесăсем,

литературăпа искусствă ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем,

чăваш композиторĕсен çĕнĕ юррисем тата ытти нумай тĕрлĕ материалсем пичетленеççĕ.

„Тăван Атăл" альманаха пурте çырăнса илĕр! Альманаха 1-мĕш номертен пуçласа илсе тăма 1963 çулхи февралĕн 1-мĕшĕччен çырăнтараççĕ.

45 çул
ЧĂВАШ СЦЕНИ ÇИНЧЕ

...ХĔРĔХ ПИЛĔК çул каялла, 1918 çулхи январь уйăхĕнче, çамрăк Совет республики чи йывăр вăхăтсене пурăнса ирттернĕ чух, Хусан урамĕсенчи витринăсем, хўмесемпе çурт стенисем çине пурне те тĕлĕнтерекен афишăсем çапса тухнă. Çав афишăсем çитес çывăх кунсенчех Вознесенски урамĕнчи ĕлĕк купецсен клубĕ пулнă çуртра пĕрремĕш чăваш спектаклĕ пуласси, вырăссен чаплă драматургĕ А. Н. Островский çырнă «Не так живи, как хочется» ятлă халăх драмине лартасси, артистсем спектакльте чăваш тумĕсемпе выляссине çинчен пĕлтернĕ.

Нумайăшĕн куна ĕненес те килмен, анчах та Хусан урамĕсенчи çав афишăсем тĕрĕссине пĕлтернĕ.

Чăнах та, çав вăхăтра Хусанти тĕрлĕ шкулсенче вĕренекен чăваш çамрăкĕсем, хăйсем пуçарнипе, театр искусствине юратакансен коллективĕ туса хунă та, чăвашла спектакльсем лартма шут тытса, хăйсен ĕмĕтне хĕрўллĕн пурнăçлама тытăннă. Чăвашсен хăйсен пьесисем пулман-ха, чăваш драматургийĕ çуралман та ун чух, çавăнпа та хастар çамрăксем Островскин асăннă пьесине илсе хăйсемех чăвашла куçарнă та репетицисем тума тытăннă.

Спектакле халăха кăтартмалли вăхăт çитсе килнĕ май коллектив умне пысăк чăрмавсем тухса тăнă: спектакле ăçта, мĕнле çуртра вылямалла? Чăваш тумĕсене ăçта тупмалла?.. Нумай шухăшласа тăмасăрах, çамрăксем кун пирки Хусан кĕпĕрни Советне кайса каласнă. Советра вĕсене питĕ кăмăллă йышăннă, ырă ĕç пуçланăшăн ырланă та «Куçса çўрекен чăваш совет театрне» туса хума пур енчен те пулăшнă...

Палăртнă кун — январĕн 14-мĕшĕнче — купецсен клубĕн нумайранпа вут хутман, сивĕ те нўрĕ залне халăх савăлпа çапнă пекех тулнă. Тăван чĕлхепе лартакан пĕрремĕш спектакле пурин те курас килнĕ çав! Курма пыракансем хушшинче Хусанта вĕренекен чăваш студенчĕсем, тĕрлĕ çар чаçĕсенчи чăваш-хĕрлĕ армеецсем, рабочисем пулнă. Билетсене тахçанах сутса пĕтернĕ ĕнтĕ, анчах спектакле курасшăн пулнисем çаплах пынă-ха. Залра çар оркестрĕ хĕрўллĕ маршсем каланă, курма пынисен пурин те кăмăлĕсем çĕкленнĕ, çынсем пĕрпĕринпе савăнăçлăн, хавассăн, хумханса калаçнă.

Савăнма та, хумханма та сăлтавĕ пысăк пулнă çав. Епле савăнас мар-ха!.. Çав каçхине

чăваш халăхĕн историйĕнче пĕрремĕш хут — пуçласа! — тăван чĕлхепе спектакль лартнă вĕт-ха, чăвашсен хăйсен **нациллĕ театрĕ** çуралнă! Вунă хут ылханлă патша вăхăтĕнче чăвашсен кун çинчен ĕмĕтленме те май килмен, — халĕ, çĕршывра рабочисемпе хресченсем пуç пулса тăрсан кăна, Совет влаçне пула çеç чă-

вашсем, Российӑри ытти вак халӑхсем пекех, хӑйсен профессилле искусствине пуҫласа ярса уралантарма тытӑнма пултарнӑ!

Анчах та, паллах ӗнтӗ, курма пынисенчен ытларах «артистсем» хӑйсем пӑлханнӑ. Вӗсен нихӑшин те театр енӗпе нимӗнле опыт та, нимӗнле хӑнӑху та пулман вӗт-ха. Вӗсем сценӑ ҫине пурнӑҫра пӗрремӗш хут тухнӑ. Уйрӑмах спектакльре выляс хӗрсем — сӑпайлӑ, именчӗк чӑваш хӗрӗсем! — пӑшӑрханнӑ. Акӑ, вӗсенчен пӗри, илемлӗ, ҫӳллех мар тӑп-тӑп кӗлеткеллӗ, ҫепӗҫ сасӑскер, сценӑ ҫине тухма тумланса, пит-куҫӗ ҫине грим хурса ҫитерсен, тепринпе юнашар пырса ларать те хӑвӑрт калаҫма тытӑнать:

— Эп ҫав тери хӑратӑп, Ева, ҫав тери! Чӗрем кӑкӑртан сиксе тухас пек тапать манӑн! Сценӑ ҫине тухсанах ҫухалса кайӑпӑр та... нимӗнле спектакль те пулаймӗ ак пирӗн! Вара мӗн-ха? Намӑса ӑҫта кайсе чикес?!

— А эсӗ, Оля, ун ҫинчен ан шухӑшла! — лӑплантарать ӑна юлташӗ.— Мана пӗр вырӑс артистки каларӗ — хӑюллӑрах пул, залра ҫынсем ларни ҫине ҫаврӑнса та ан пӑх, хӑвӑн рольне ҫеҫ пӗл, терӗ.

— Эс ним чухлӗ те шикленместӗн-и вара?

— Пӗртакках пур ӗнтӗ, анчах... хама шанатӑп! Хама ҫеҫ те мар, пурне те шанатӑп. Курӑн акӑ — питӗ ӑнӑҫлӑ иртет пирӗн спектакль!

...Шӑнкӑрав сасси. Иккӗмӗш, унтан виҫҫӗмӗш хут. Чаршав ерипен ик еннелле шуса уҫӑлать те — нумай кӗтсе пурӑннӑ спектакль пуҫланать. Залри халӑх — шӑп. Темиҫе ҫӗр ҫын мар, пӗр ҫын та ҫук тейӗн унта. Артистсем сценӑ ҫинче калакан пӗр сӑмахне те илтсе ӑнланмасӑр юлас марччӗ!

Пьеси куракансене питӗ кӑмӑла каять,— сценӑ ҫинче пулса иртекен ӗҫсем чӑваш ялӗсенче те час-часах пулса иртнӗ ӗҫсене аса илтереҫҫӗ: чухӑн хӗр пуян ҫынна качча тухнӑ (пуянӗ ӑна хӑй ирӗксӗрлесех илнӗ - ытла та хитре пулнӑшӑн...), анчах хӗре арӑм тусанах ӑна асаплантарма, ӑна выльӑх вырӑнне шутласа тискеррӗн мӑшкӑлласа пурӑнма тытӑнать...

Анчах пуринчен ытларах курма пынӑ ҫынсене чӑвашла тумланса тухнӑ артистсен вӑййи, вӗсем чӑвашла калаҫни хумхантарать. Ытла та чӑн пурнӑҫри пекех пулса пырать-ҫке сценӑ ҫинче! Залра пурте хӑйсене темле хӑватлӑ вӑй тенкелсем ҫумне пӑталаса хунӑ пек лараҫҫӗ, хускалма мар — хытӑрах сывлама та хӑраҫҫӗ. Упӑшки улталанӑ, асаплантарса ҫитернӗ ҫамрӑк хӗрарӑм пӗрремӗш акт вӗҫӗнче килтен тухса тарнӑ хыҫҫӑн чаршав хупӑнсан вара куракансем сасартӑк асамлӑ ыйхӑран вӑраннӑ пек пулаҫҫӗ те, залра аслати кӗрленӗ пек алӑ ҫупни кӗрлесе каять...

Спектаклӗн пӗрремӗш пайӗ ӑнӑҫлӑ пулнипе малтанхинчен те ытларах пӑлханса кайнӑ ҫынсем антракт вӑхӑтӗнче пӗр-пӗринпе пӗр чарӑнмасӑр сӑмах вакланӑ, артистсене ырланӑ, чӑвашсен театрӗн пуласлӑхӗ ҫинчен калаҫнӑ.

Пьесӑн иккӗмӗш пайӗ тата лайӑхрах иртнӗ. Курма пынӑ ҫынсем хӑйсен вӑййине ҫав тери ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑннӑшӑн хӗпӗртесе, ҫавӑншӑн тата ытларах хавхаланса, артистсем хӑюланнӑ, сценӑ ҫинче хӑйсене ирӗклӗрех тытнӑ, ҫавӑн пирки вӗсен вӑййи те ытларах ӗненмелле пулса тухнӑ.

Сасартӑк, спектакль пынӑ вӑхӑтрах, хӗрлӗ армеецсем ларакан вӑта ҫӗрти тенкелсем ҫинче тахӑшӗсем хыттӑн пӑшӑлтатса калаҫма тытӑнни илтӗнсе кайнӑ.

— Ку артисткӑна эпӗ пит лайӑх пӗлетӗп, вӑл пирӗн ял хӗрӗ,— тенӗ пӗри.

— Хӑшне? — ыйтнӑ тепри.

— Ҫамрӑккине...

— Ара, вӗсем пурте ҫамрӑк пулмалла!

— Эпӗ ку енчи, Грушӑна выляканни пирки калатӑп.

— Ан палкаса лар, Ларионов! — пӳлнӗ ӑна виҫҫӗмӗшӗ.— Пулма пултараймасть! Асту, сирӗнни пек ҫӗтӗк ялтанах артисткӑ тухать пуль! Ку вӑл, тем тесен те, кулачпа хӑйма ҫисе ӳснӗскер...

— Ӗненместӗн эппин? Тавлашатӑн?

— Хуп ҫӑварна, ан кансӗрле! Курнӑ-курман юратса пӑрахнӑ та эс ӑна — лӑпӑртатса ларатӑн тата!

— Юрать! Акӑ, спектакль пӗтсен эп сана сценӑ хыҫне илсе каятӑп та — курагӑн вара. Пӗлетӗн,— суятӑп-и эпӗ, ҫук-и!

Хыҫалта ларакансем ҫак тавлашакансене шӑпланма хушнӑ, тахӑшӗ вӗсенчен пӗрине ытлашши хӗрхенсе тӑмасӑрах айӑкӗнчен чышса илнӗ, вара залра каллех шӑп пулнӑ.

Салтаксен сӑмахӗ шӑпах спектакль пуҫланас умӗн хӑйӗн тантӑшне хӑй хӑрани ҫинчен каласа панӑ хӗр пирки — Оля, Ольга Шестипалова, Хусанти педагогикӑ институтӗнче вӗренекен студенткӑ пирки пынӑ. Чӑвашла спектакль лартма шут тытнӑ йӗкӗтсем пур ҫӗре те ҫитсе «артистсем» пухма тытӑнсан, вӑл сценӑ ҫинче выляма пуринчен малтан килӗшнӗ хӗрсенчен пӗри пулнӑ.

...Спектакль пӗтсен, курма пынӑ пӗтӗм халӑх пӗр харӑс ура ҫине сиксе тӑрса тӑвӑллӑн алӑ ҫупма тытӑннӑ. Зал нумайччен чарусӑр кӗрлесе тӑнӑ. халӑх хытӑ шавланипе чӳрече кантӑкӗсем те чӗтренӗ. Чаршава пӗр вунӑ хутчен уҫа-уҫа хупнӑ, хӑйсене кун пекех чысласса кӗтмен ҫамрӑк артистсем чӑннипех ҫухалса кайса пуҫ тайнӑ, анчах залри халӑх ҫаплах лӑпланман, хӑйсене уйрӑмах килӗшнӗ артистсен ячӗсемпе хушамачӗсене кӑшкӑрса ал ҫупнӑ.

— Ольга Шестипаловăна!..
— Осипова! Петр Осипова!
— Еккĕм Максимова!
— Ева Терентьевăна!
— Шестипаловăна!
— Матту-ур, чăваш ачисем!..

Спектакльре пулнисем пуринчен те ытларах Шестипаловăпа Осипов хушамачĕсене кăшкăрнă. Вĕсен вăйĕи уйрăмах кăмăла кайнă пулмалла çав.

Камсем пулнă-ха вĕсем, çав хĕрпе каччă? Ольга Шестипалова — вăл чăвашсен халăхи театр искусствинче чи паллă та хисеплĕ вырăн йышăнса тăракан Ольга Ивановна Ырзем, РСФСР тава тивĕçлĕ артистки тата Чăваш АССР халăх артистки; Осипов — чăвашсен халăхи паллă драматургĕ, «Айтар», «Кушар» тата ытти нумай пьесăсем çырнă Петр Николаевич Осипов, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ. Ун чухне, вунсаккăрмĕш çулта, вăл та Оля Шестипалова пекех студент пулнă — медицина институтĕнче вĕреннĕ. Чăвашла лартнă пĕрремĕш спектакльре, «Не так живи, как хочется» драмăра О. И. Ырзем иртен-çӳренсем çĕр выртма кĕрекен çурт (постоялый двор) хуçин Груша ятлă хĕрĕн рольне вылянă, П. Н. Осипов — Ерĕмкă ятлă тимĕрçĕн комикле ролĕнче пулнă. Иккĕшин вăйĕи те малтанхи хутах питĕ ăнăçлă та килĕшӳллĕ пулнă...

Курма пынă халăх юлашкинчен çапах та лăпланса çитсен, Оля-Груша сценă хыçне чупса тухнă, вăл театр тумне хывса пит-куçĕ çинчи грима тасатма васканă. Анчах ăна сасартăк темле хĕрлĕ армеец тытса чарнă.

— Улькка, тăхта-ха,— тенĕ вăл ялти пек,— эп сан патна килсеттĕм... Палламастăн-и?

Оля хăйĕнчен нумай çӳллĕрех салтак çине тĕлĕнерех, тинкерсе пăхма тытăннă.

— Паллатăп-çке!— тенĕ унтан.— Эсĕ— Якур вĕт, хамăр ялсем?

— Шăп çавă пулатăп!— савăнса кулса илнĕ те хĕрлĕ армеец, çавăнтах хăйĕн çурăмĕ хыçĕнче тăракан икĕ юлташĕ еннелле çаврăнса пăхнă.— Ну, мĕнле, ачасем? Куртăр-и? Халь ĕненетĕр-и ĕнтĕ?

— Ĕненетпĕр,— килĕшсе пуçĕпе сулса илнĕ хĕрлĕ армеецсенчен пĕри.— Ĕненмесĕр тăма майĕ çук...

— Мĕн пулнă вара? Мĕн пирки калаçатăр эсир?— интересленсех ыйтнă Оля.— Эп нимĕн те ăнланмарăм...

Вара хăйсен ял çынни Якур вĕсем сценă хыçне мĕншĕн çакăн пек кĕтмен çĕртен килсе кĕнине каласа панă.

— Манăн юлташсем пирĕн ялта сан пек лайăх артисткă çуралса ӳсме пултарнине ĕненесшĕн марччĕ. Çавăнпа юриех илсе килтĕм вĕсене. Чăрмантарнăшăн каçар...

— Уй, мĕнле артисткă вара эпĕ! Кулатăн эс, Якур,— аллипе сулнă Оля.— Пирĕнтен артист пуласси инçе-ха. Чăн та, ку ĕçе юрататăп эпĕ, килĕшет вăл мана, анчах ĕç те тухать-ха, те тухмасть — кам пĕлет ăна? Халлĕхе нимĕн те паллă мар...

— Анчах пирĕншĕн паллă,— тенĕ Якур юлташĕ.— Эсĕ артисткă пулатăнах, йăмăкăм. Пысăк артисткă пулатăн. Çулу такăр пултăрах санăн. Эс чăн-чăн артисткă пулассине эпир паян хамăр куçпа куртăмăр!

— Тавтапуç ыр сăмахшăн...— именсе пуç тайса илнĕ Оля.

* * *

Кайран вăл чăнах та артисткă пулнă. Пĕтĕм чăваш халăхĕ юратакан, пултаруллă та чăннипех тава тивĕçлĕ артисткă пулса тăнă. Унăн нумай енлĕ таланчĕ çултан çул аталанса, ăсталăхĕ пĕрмай ӳссе пынă. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне, пĕтĕм вăйне тăван искусствăна панă. Сценă çинче ун чухлĕ ĕçленĕ урăх пĕр артист та çук-ха пирĕн. Искусствăра ĕçлекен пур çамрăксемшĕн те вăл калама çук ырă тĕслĕх пулса тăрать.

...Пĕрремĕш спектакль ăнăçлă иртнĕ хыççăн Хусанти çамрăк театр коллективĕ çĕнĕрен çĕнĕ спектакльсем хатĕрлесе лартнă. Малтанхи вăхăтра, хамăрăн пьесăсем пулманнипе, вырăсларан куçарса лартнă, анчах та каярахпа артистсем хăйсемех пьесăсем çырма тытăннă: П. Н. Осипов, И. С. Максимов-Кошкинский, Акимов тата ыттисем те. Чăвашсем хăйсем чăваш пурнăçĕнчен илсе çырнă пьесăсене куракансем тата ытларах хапăл туса йышăннă.

Çамрăк артисткă Ольга Шестипалова хăй валли «Ырзем» текен псевдоним йышăннă,— литературăпа искусствăра ĕçлекенсем хушшинче çавăн пек урăх ят — псевдоним йышăнас йăла тахçантанпах пырать вăл. Пур спектакльсенче те тенĕ пекех ăна тĕп рольсене выляттарнă. Пур чухне те куракансем ун вăйĕине ăшă кăмăлпа йышăннă — Островский е Шиллер, Гоголь е Мольер пьесисенче вылянă-и вăл, «Вăхăтсăр вилĕмри» Верука е «Ялтари» Елюка вылянă-и — унăн ĕçĕ шав ăнăçлă пулса тухнă. Çавна пула çамрăк артисткă театр ĕçне те ытларах та ытларах юратакан пулнă, вăл хăйĕн пултарулăхне çирĕпрех ĕненсе пынă. Паллах, хăш чухне кӳренмеллисем те, хурланмаллисем те пулнă,— пурнăç нихçан та пĕр тикĕс пымасть, искусствăри ӳсĕм çулĕ пушшех тумхахлă,— анчах Ольга Ивановна хăй пĕрре суйласа илнĕ пурнăç çулĕнчен пăрăнман, вăл хăйĕн творчествăллă ĕçĕнче йывăрлăхсем те

сахал мар пулнӑ пулин те, малаллах пӑхнӑ, малаллах утнӑ...

Тӗрӗссипе каласан, О. И. Ырземӗн пурнӑç çулӗ çӑмӑлах пулман çав. Вӑл 1892 çулта, Чӑваш республикинчи хальхи Куславкка районне кӗрекен Куснар ялӗнче, чухӑн хресчен çемйинче çуралнӑ. Кил-йышӗ вӗсен пысӑк пулнӑ, тепӗр чух çиме те çитсех кайман, çавӑнпа та Улькка (килте ӑна çапла чӗннӗ) ялти церковно-приходски шкултан вӗренсе тухсан (унта тӑватӑ çул вӗрентнӗ), ӑна ашшӗпе амӑшӗ ялти фельдшер патне няньӑра ӗçлеме панӑ. Çав фельдшер Ульккана «латин чӗлхине вӗрентме», гимназие вӗренме кӗмешкӗн хатӗрлеме пулнӑ, анчах та ку пуш сӑмах çеç пулса юлнӑ. Пӗчӗк хӗрачана иртен пуçласа каçченех ӗçлеттернӗ, унӑн кӗнеке тытса ларма вӑхӑт та юлман...

Çавӑн пек пӗр çулталӑк тертленсе пурӑнсан, вӑл килне таврӑннӑ. Кӗçӗн хӗрӗ (Улькка кӗçӗнни пулнӑ) хутла вӗренес енпе пултаруллӑ пулнине кура, ашшӗ ӑна епле те пулин малалла вӗрентесшӗн пулнӑ. Вӑл, ялти учительницӑ патне кайса, хӑйӗн хӗрачине пулӑшма ыйтнӑ. Икӗ çултан вара Ульккана Шупашкара илсе кайса, унти хӗрсен гимназине вырнаçтарнӑ.

Анчах ашшӗн хваттершӗн тӳлеме укçи пулман, çавӑнпа та гимназисткӑ Оля пӗрисем патӗнче прислугӑ (тарçӑ) вырӑнӗнче ӗçлесе пурӑннӑ — шыв йӑтнӑ, урай, хуçисен кӗпийӗмне çунӑ. Уроксене вара çӗрле, пурте çывӑрса пӗтсен тин тытса вӗренме май килнӗ...

Çапла çул хыççӑн çул иртнӗ. Унтан ашшӗ Ольӑна Царевококшайскри (хальхи Йошкар-Олари) гимназие куçарнӑ,— такамран вӑл унта вӗренме условисем лайӑхрах, çулталӑкне хӗрӗх тенкӗ пулӑшу пама пултараççӗ тенине илтнӗ имӗш. Анчах Оля пурнӑçӗ унта та улшӑнманпа пӗрех. Царевококшайскра та вӑл пӗрисем патӗнче пурӑнса, килти пур хура ӗçсене те туса пынӑ...

Çулла каникул вӑхӑтӗнче вӗренекенсем канаççӗ, çитес вӗренӳ çулӗ валли вӑй пухаççӗ, анчах Ольӑн канасси çинчен шухӑшлама та май пулман. Царевококшайскра пӗр хӗл вӗренсе таврӑнсанах, çуллахи каникулта ӑна Шупашкарти Ехрем хуçа патӗнче урай çуса пурӑнма «вырнаçтарнӑ». Унта вӑл хӗвел тухнӑ чух хытӑ вырӑн çинчен тӑрса ӗçлеме тытӑннӑ та тӗттӗм пулса ларичченех лӑш курман. Урама тухса курма та вӑхӑт пулман унӑн. Çак каторгӑри пек ӗçшӗн ӑна уйӑхра вунӑ тенкӗ тӳленӗ. Анчах Оля ку укçашӑн та савӑннӑ,— унӑн хӗл каçа вӗреннӗ чух мӗнпе те пулин пурӑнмалла пулнӑ-çке! Çавӑнпа та кашни çуллах Ехрем хуçа патне пырса тарçӑра ӗçленӗ.

Темле йывӑр пулнӑ пулсан та, юлашкинчен Оля гимназирен вӗренсе тухнӑ та хӑйсен ялӗнче учительницӑ пулса ӗçлеме тытӑннӑ. Анчах çав вӑхӑтрах унӑн малалла вӗренес ӗмӗт те пулнӑ. Ялта пӗр çул ӗçлесен, 1917 çулта, февральти революци хыççӑн ӗнтӗ, вӑл Хусана кайса пединститута кӗнӗ. Октябрьти революцие çамрӑк студенткӑ Хусанта кӗтсе илнӗ... Хулара вӗçӗмсӗр митингсем, çамрӑксен пухӑвӗсем, студентсен вечерӗсем пулнӑ... Аслӑ революци хыççӑн виçӗ уйӑхранах вӑл чӑвашсен пӗрремӗш спектаклӗнче вылянӑ. Кайран спектакльсене çар чаçӗсенче, клубсенче кӑтартнӑ. Куракансем пуринчен ытларах Хӗрлӗ Çарӑн Хӗвелтухӑç фрончӗн боецӗсемпе командирӗсем пулнӑ... Шӑп та çавсем ӗнтӗ кайран шурӑ чехсене те, Колчак адмирал çарӗсене те ним юлмиччен çапса аркатнӑ,— акӑ камшӑн, кам валли ӗçленӗ çамрӑк артисткӑ, чухӑн чӑваш хӗрӗ!

1918 çулта, çуркунне, Хусана шурӑ чехсем пырса кӗрсен, чӑваш театрӗ вӑхӑтлӑха ӗçлеме чарӑннӑ, анчах Хусана шуррисенчен тасатсанах, вӑл каллех ӗçе тытӑннӑ. Театра чӑн малтан таврӑнса пынӑ артистсенчен пӗри — Ольга Ырзем пулнӑ.

Пурте пӗлеççӗ ӗнтӗ — чӑваш театрӗн чӑн-чӑн творчествӑллӑ пурнӑçӗ вӑл 1920 çулта, В. И. Ленин алӑ пусса кӑларнӑ декрет тӑрӑх, Чӑвашсен Автономиллӗ облаçне туса хунӑ хыççӑн Шупашкара куçса килсен пуçланнӑ. Кунта ӑна хӑйне уйрӑм çурт панӑ, театр труппине государствӑ бюджечӗ çине илнӗ. Театр ӗçне чунтан юратнӑ çынсемпе пӗрле Ольга Ивановна Ырзем те Хусантан Шупашкара килсе тӳрех сценӑ çинче ӗçлеме тытӑннӑ.

Çавӑнтан пуçласа, вӑл пӗр кун та театр тулашӗнче тӑман. Малтанхи (Хусанта лартнӑ) спектакльрен пуçласа шутласан, вӑл ӗнтӗ пирӗн театрта таттисӗр **хӗрӗх пилӗк çул** ӗçлет. Çур ӗмӗре яхӑн!..

Çирӗммӗш çулсенче йывӑрлӑхсем те сахал мар пулнӑ — сивви те, выççи те, тем те. Театр вутӑсӑр та ларнӑ, артистсене тепӗр чух темиçешер уйӑх ӗç укçи те парайман. «Канлӗрех пурнӑç» шыракансем театртан пӑраха-пӑраха тухса кайнӑ, анчах Ольга Ивановна хӑйӗн юратнӑ ӗçне нимӗнле «ырлӑхсемпе» те улӑштарман...

Ольга Ивановна дневниксем çырса пымасть. Унӑн хӑй хӑçан мӗнле рольсем вылянине йӗркипе çырса пыни те çук. Театр архивӗнчи хутсемпе афишӑсем çеç каласа параççӗ вӗсем çинчен. Пӗтӗмпе илсе шутласан, хӗрӗх пилӗк çул хушшинче Ольга Ивановна **ик çӗр аллӑ роль ытла** вылянӑ, сценӑ çинче тӗрлӗрен тӗрлӗ хӗрарӑмсен сӑнарӗсене ик çӗр аллӑ ытла кӑтартнӑ! Вӗсем пурте пӗр-пӗринчен расна, хӑйсене майлӑ пулнӑ,— кашнинчех урӑх сӑн-сӑпат, урӑх характер. Вӗсене ӗнентерӳллӗрех кӑтартса пама кашнинчех шырамалла, туп-

малла пулнӑ. Мӗн тери кӑткӑс та йывӑр ӗç вӑл!..

Ватӑрах çынсем Ольга Ивановна «Нарспи», «Ялта», «Айтар» драмӑсенчи героиньӑсене — Нарспие, Елюка, Пинерпие, каярахпа вӗсен амӑшӗсен ролӗсене епле хӗрӳллӗн, пысӑк ӑсталӑхпа вылянине те, А. Н. Островскин нумай пьесисенче («Вӑрман», «Айӑпсӑр айӑплисем», «Кашкӑрсемпе сурӑхсем» т. ыт. те) купецсемпе мещен хӗрарӑмӗсене мӗн тери ӗнентерӳллӗ кӑтартнине те, нумай комедисенче выляса епле култарнине те, психологиллӗ драмӑсенче выляса куракансене куççулӗ кӑларттарнине те пит лайӑх астӑватпӑр.

Çавӑн пек вӑл нумай енлӗ талант, унӑн чӑнчӑн асамлӑ вӑй пур!

Юлашки çулсенчи рольсене илсен, уйрӑмах Ольга Ивановна В. Ржановӑн «Энтип» драминчи Энтип арӑмне — Анюка, М. Горькин «Мещенсем» пьесинче Акулина Ивановнӑна, «Старик» драминчи Захаровнӑна, Китай драматургӗ Цао-юй çырнӑ «Тӑвӑл» драминчи Ши-пина пысӑк ӑсталӑхпа кӑтартса панине палӑртас килет.

Вӗсем çеç те мар ӗнтӗ,— Ольга Ивановна нумайлӑха асра юлмалла кӑтартса панӑ сӑнарсене йӗркипех асӑнса кайма пулать...

О. И. Ырземӗн творчествӑллӑ ӗçӗнчи чи паха ен вӑл — хуть те мӗнле роле те (пысӑк-и вӑл, пӗчӗккӗ-и, пурӗ пӗр!) тӗплӗн хатӗрлесси, сӑнара туллинрех кӑтартса автор шухӑшне куракансем патне илсе çитересси. Вӑл вылянӑ сӑнар нихçан та «пушӑ» пулмасть, çавӑнпа юратаççӗ те ӑна пирӗн театра çӳрекенсем.

Хӑйӗн пӗтӗм пурнӑçне театрта ирттернӗ, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне-халне, пултарулӑхне сценӑ искусствине панӑ ватӑ артисткӑн пархатарлӑ ӗçӗсене пирӗн халӑх, пирӗн правительствӑ пысӑка хурса хакларӗ. Вӑтӑрмӗш çулсенчех ӑна Чӑваш республикин тава тивӗçлӗ артисткин хисеплӗ ятне панӑ. 1945 çултанпа О. И. Ырзем — Чӑваш республикин халӑх артистки, 1957 çултанпа — РСФСР тава тивӗçлӗ артистки. Унӑн кӑкри çинче Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ йӑлтӑртататъ. Тивӗçлӗ награда!

Ольга Ивановнӑна халӑх юратни, ӑна чунтан хисеплени, шанни çакӑнтан та питӗ лайӑх курӑнать: ӑна умлӑн-хыçлӑн пилӗк хут Шупашкар хула Совечӗн депутатне суйланӑ. Депутат ӗçӗсене вӑл яланах çав тери тӑрӑшса, пӗтӗм чунне парса туса пырать...

Нумаях та пулмасть Ольга Ивановна 70 çул тултарчӗ. Унӑн юбилейӗ пӗтӗм чӑваш искусствин уявӗ пек пулса иртрӗ. Чӑвашсен пӗрремӗш артистки, чӑваш сценин ветеранӗ çитмӗл çул тултарнӑ тата вӑл театрта ӗçлеме пуçланӑнӑранпа 45 çул çитнӗ ятпа Совет Союзӗнчи тӗрлӗ республикӑсенчен, нумай хуласенчен, предприятисенчен, организацисенчен, колхозсенчен, уйрӑм çынсенчен ӑшӑ саламсем нумай килчӗç — 300 ытла! Саламлӑ телеграммӑсем хушшинче чӑваш халӑхӗн пӗтӗм тӗнчипе чапа тухнӑ ывӑлӗ — летчик-космонавт, Совет Союзӗн Геройӗ Андриян Николаев телеграмми те, Совет Союзӗн халӑх артисчӗсем, паллӑ ученӑйсем, писательсем янӑ саламсем те йышлӑ пулчӗç...

Çитмӗл çул — сахал мар ӗнтӗ, анчах пирӗн Ольга Ивановна çине пӑхсан, вӑл пӗртте çав çула çитнӗн туйӑнмасть. Вӑл паян кун та кашни çӗнӗ спектакльтех вылять, халӗ те — çамрӑксемпе танах — çулла та, хӗлле те, хуть те мӗнле çанталӑкра та гастрольсене çӳрет, хӑйӗн искусствине хамӑр республикӑра çеç мар, ытти республикӑсемпе облаçсенче пурӑнакан чӑваш ӗç çыннисене те çитсе кӑтартать. Унӑн ӗçри хастарлӑхӗ — ыксӗлми, халӑхшӑн ӗçлес кӑмӑлӗ — яланах чӗре тулли.

Ольга Ивановна вылянӑ спектакльсене курнӑ çынсем ун патне тӑтӑшах çырусем çыраççӗ — колхозниксем, вӗренекенсем, культурӑ фронтӗнче ӗçлекенсем. Кунта çакӑн пек факта асӑнса хӑварас килет: 1948 çулта, пирӗн театр 30 çул тултарнине палӑртнӑ кунсенче, Ольга Ивановна патне хайхи 1918 çулта Хусанта лартнӑ пӗрремӗш спектакль хыççӑн сценӑ çине пынӑ хӗрлӗ армеец, халь ӗнтӗ ватӑ колхозник Ларионов тӗлӗнмелле ӑшӑ çыру çырса янӑ. Вӑтӑр çул хушши ырӑпа асӑнса пурӑннӑ çав çын пӗрремӗш спектакль çинчен, унта вылянӑ артисткӑна çавӑншӑн вӑтӑр çултан тепӗр хут тав тунӑ!

Çавӑн пек çырусем, тав тунисем, пӗтӗм халӑх юратни Ольга Ивановнӑна ытларах та лайӑхрах ӗçлеме хавхалантараççӗ. Хӑй çитмӗл çул тултарнине уявланӑ кaç та вӑл çапла каларӗ:

— Эпӗ халех ӗçлеме пӑрахас çук-ха. Хама çакӑн пек чысланӑшӑн тав туса, манӑн тата нумай-нумай лайӑх рольсем вылясс, хальхи совет хӗрарӑмӗсен таса сӑнарӗсене кӑтартас килет, хамӑр çӗршыври коммунизм строительствине вӑйӑм çитнӗ таран усӑ парас килет...

Питӗ лайӑх ӗмӗт! Ырлӑх та сывлӑх сунатпӑр эпир хамӑрӑн халӑх артисткине çав ӗмӗтсене тултарса пыма.

Ал. ЛИРОВ.

Д. Н. Мамин-Сибиряк

Кăçалхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче вырăссен паллă писателĕ Дмитрий Наркисович Мамин-Сибиряк çуралнăранпа 110 çул çитрĕ.

Вырăссен классикăллă литературин паха енĕсене тытса пырса, вăл хăйĕн чи лайăх произведенийĕсенче çăткăн капиталистсен тискерлĕхĕпе ирсĕрлĕхне, пусмăрти халăхăн йывăр пурнăçне витĕмлĕн кăтартса панă. Урал тăрăхĕнче çуралса ӳснĕскер, Мамин-Сибиряк унти пурнăçа, çынсене, çутçанталăка уйрăмах аван пĕлнĕ.

...Акă, йĕри-тавра авалхи хыр-чăрăш вăрманĕсемпе кашласа ларакан тусăртлă вырăн. Айлăмалла Висим, Уткă, Шайтанкă шывĕсем кĕрлесе юхса выртаççĕ. Çак шывсем хĕррипе тимĕр ирĕлтерекен рабочисен поселокĕ вырнаçнă. Йывăр ĕçре ывăнса çитнĕ рабочисем, аран-аран ураран ура ирттерсе, канма таврăнаççĕ е, юрлă пурнăç пирки пуçа пĕксе, ĕçе утаççĕ. Çав вăхăтрах мул хуçисем, капиталистсем, пуянлăх шыраса, çĕнĕрен çĕнĕ заводсем лартаççĕ, ылтăн, кĕмĕл, платинă е хаклă йышши чулсем кăлармалли рудниксем алттараççĕ, рабочисем валли татах та хăрушă асап, хĕн-хур хатĕрлеççĕ. Пурнăç йӳççине ир тутанса курнă çамрăкăн чĕрине çак ӳкерчĕксем ĕмĕр кивелми кĕрсе вырнаçнă.

Шăпах çав Висимо-Шайтански завод поселокĕнче (Анат Тагиль çывăхĕнче) çуралнă та Мамин-Сибиряк. Вун тăватă çула çитсен, вăл хăй тĕллĕн пурăнма тытăннă. Духовнăй училищĕпе семинаринче вĕренчĕ хыççăн Петербургри медицинă академине кайса кĕнĕ. Кунта тăватă çул вĕренсен, чире пула, университета, юридически факультета, куçнă. Анчах университетра та нумай вĕренеймен вăл, ашшĕ вилнĕ хыççăн пăрахма тивнĕ.

1877 çулта Мамин-Сибиряк Урала таврăннă. Тăватă çул Екатеринбургра ачасене вĕрентсе пурăннă та пĕтĕмпех литературă ĕçне куçнă. Мамин-Сибирякăн малтанхи пĕчĕк калавĕсемпе повеçĕсем Петербургра чухнех пичетленсе пынă. Вăл хăйĕн произведенийĕсене темиçешер хут юсанă, хăйĕн ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçленĕ.

Мамин-Сибиряк халăх пурнăçне тĕрĕс сăнласа кăтартакан писатель-реалист пулнă. Хăйĕн «Бойцы» очеркĕнче вăл çитмен пурнăç хăваласа тухнă бурлаксен йывăр та хăрушă ĕçне-хĕлне çырса кăтартнă. Кунпа пĕрлех писатель халăха асап-хурлăхра пăчăхтарса усракан çăткăн капиталистсене питлет, вĕсен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Шăпах çак тĕллевпе çырнă та вăл хăйĕн «Приваловские миллионы» романне

Писатель пурăннă вăхăтра Урал — тимĕр-чугун, ылтăн, кĕмĕл, платинă тата хаклă тĕрлĕ йышши чулсен

çĕршывĕ — капиталистсен аллинче пулнă. Пуянлăхпа услам шыраса, вĕсем Урал вăрманĕсемпе тăвĕсене шалтан шала кĕрсе пынă. Халиччен сунарçăсем кăна çӳренĕ вырăнсенче рудник хыççăн рудник чавнă, заводсем лартнă. Выçă куçлă та тискер завод хуçисемпе купцасем, ĕç халăхне сĕмсĕррĕн пусмăрласа, мĕн пур çутçанталăк пуянлăхне хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Хăйĕн кивелми романĕсенче писатель çаксем çинчен ăста çырса кăтартма пĕлнĕ.

1891 çулта Мамин-Сибиряк Петербурга пурăнма куçать. Кунта вăл, Урал тăрăхĕнче тĕпчесе пĕлнĕ материалсемпе усă курса, «Золото», «Хлеб», «Весенние грозы», «Без названия» романĕсемпе «Охонины брови» повеçне çырнă. Юлашкинчен писатель тĕп хула пурнăçĕпе интересленме тытăннă. Çак темăпа çырнă «Господин Скороходов», «Черты из жизни Пепко», «Враг», «Ранние всходы», «Падающие звезды», «Профессор Спирька», «Мумма» тата ытти романĕсемпе калавĕсем Мамин-Сибиряк творчествинче паллă вырăн йышăнаççĕ.

Патша саманин çĕрсе пăнтăхнă ăшчиккине сăнланипех çырлахман писатель. Вăл интеллигенци хушшинчен тухнă уйрăм çынсем обществă пурнăçне улăштармалли çулсем шыранине те уççăн палăртнă. Пурнăçăн тӳнтер енне çеç мар, ыррине те, лайăххине те курма пĕлнĕ. Ĕçе юратакан вырăс çыннине, унăн çутă ăс-хакăлне, паттăрлăхне, çирĕп шухăш-кăмăлне мухтанă. Писатель ĕç халăхне юратса сăнарлать, вăл çутталла туртăннине, ирĕклĕхшĕн чунне парса кĕрешме хатĕр пулнине палăртать. Шăпах çавăн йышши произведенисен шутне кĕрет те унăн «Охонины брови» повеçĕ. Кунашкал произведенисе халăх пурнăçĕпе пурăнакан, унăн вăйне, пултарулăхне хаклама пĕлекен, халăх тĕрĕслĕхшĕн хыпса çуннине чĕрипе туякан художник çеç çырма пултарнă. Çапла пулин те, рабочисем ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве çĕкленнине кăтартса парасси Мамин-Сибиряк творчествинче тĕп вырăн йышăнайман. Вăл çĕршыва патшапа помещиксен, капиталистсен пусмăрĕнчен хăтарас ĕçре рабочи класс пысăк вырăн йышăнса тăнине, ĕç çыннисем хаяр кĕрешӳре çеç çăлăнăç тупма пултарнине ăнланайман. Çак ĕçе вăл капиталистсемпе каласса килĕшнипех тума пулать тесе шутланă. Ку шухăш унăн чылай произведенийĕсенче палăрать.

Мамин-Сибиряк ача-пăча валли те сахал мар çырнă. 1892 çулта унăн «Улюна юмахĕсем» пичетленсе тухнă. Ку вăл вăрманти тискер кайăксемпе вĕсен кайăксем çинчен çырнă хаваслă юмахсен пуххи. Пирĕн вулакансем Мамин-Сибирякăн произведенийĕсене чылайранпа тăван чĕлхепе вулаççĕ. Унăн чăвашла куçарса кăларнă малтанхи произведенийĕсем «Кайăкçă Емелпе» «Кăвак мăй» (1924 ç.) пулнă. Ун хыççăн «Студеная çинче хĕл касни», «Калавсемпе юмахсем», «Улюна юмахĕсем», «Емель-сунарçă», «Пуянпа Ерми», «Тăрантаракан» ятлă кĕнекесем тухнă.

Мамин-Сибиряк чăн-чăн халăх писателĕ, патриот, демократ пулнă. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл вырăс халăхĕн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне, унăн шăпине, нацилле уйрăмлăхне анлăн та ĕненмелле кăтартса панă. Унăн пуян творчестви хамăр çĕршывăн иртнĕ пурнăçĕпе паллашма пулăшать, тăван халăха, çĕршыва чĕререн юратма, Октябрь революци тăвăлĕнче çĕнсе илнĕ ирĕклĕхе хаклама вĕрентет. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн творчествине М. Горький пысăка хурса хакланă. Вăл Д. Мамин-Сибиряк çинчен «пирĕн тус тата учитель», «чăн-чăн вырăс писателĕ», тенĕ. Унăн кĕнекисем «вырăс халăх чĕлхине ăнланма, юратма пулăшасса» шанса тăнă.

Н. ГРИГОРЬЕВ

А. Е. ГОРШКОВ,
Чăваш АССР кĕнеке издательствин главнăй редакторĕ.

1963 çулта вулăр...

Вулакансем пирĕн писательсемпе поэтсенчен çулсеренех совет çыннисен чаплă ĕçĕ-хĕлĕпе паттăр кĕрешĕвне, вĕсен чĕрĕ çăлкуç пек хăватлăн тапса-вĕресе тăракан пурнăçне туллин те тараннăн сăнласа кăтартакан илемлĕ литературă кĕнекисем ыйтаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ иртнĕ çулсенче е кăçал мĕнле кĕнекесем тухнине çеç мар, писательсем хăйсене çитес çулсенче мĕнмĕн парнелессе те малтан пĕлсе тăрасшăн.

Паянхи вулакан, темиçе çул ĕлĕкхи пек, пĕчĕк калăплă произведенисемпе çеç çырлахмасть, ăна халь романсем, повеçсем, поэмăсемпе пьесăсем, чун-чĕрене тытса илсе хумхантаракан калавсемпе очерксен, хальхи пурнăç таппипе тан пыракан çĕнĕ сăвăсен кĕнекисене пар... Вăл пирĕн аслă саманан шухăшра шăнăçайми улăпла утăмĕсене нумай енлĕн те сарлакан курасшăн, ку чухнехи обществă пурнăçĕн паллăрах пулăмĕсене тараннăн ăнланса илесшĕн. Анчах та ăна кĕнекен калăпăшĕ çеç илĕртмест. Вăл чи çивĕч куçлă, пысăк ăс-хакăллă критик. Пурнăça виçесĕр хитрелетсе кăтартни те, хура куçлăх витĕр пăхса хаклани те пирĕн вулакана тивĕçтерме пултараймасть. Вăл писательсемпе сăвă-юрă ăстисенчен кирек хăçан та пурнăça, унăн çунатлă аталанăвĕнче илсе кăтартса, тĕрĕс те витĕмлĕ сăнласа кăтартма ыйтать.

Калас пулать, 1962 çул чăваш литературишĕн тухăçлă çул пулчĕ. Пирĕн писательсемпе поэтсем вулакансене кăмăла çĕклентерсе хавхалантаракан кĕнекесем сахал мар парнелерĕç. Анчах та тунă ĕçсемпе йăпанса ларасси, çырлахса пурăнасси — пирĕншĕн ют. Çавна май, Чăваш АССР кĕнеке издательствин 1963 çулхи планĕпе паллашнă хыççăн, тăван чăваш литератури хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă уй-хирĕсенче çитес çулта татах та пуянрах «тырă-пулă, иплĕ-сиплĕ çимĕçсем» çитĕнтерĕ тесен те йăнăш пулмĕ, тетпĕр. Вăл тепĕр пысăк утăм тăвĕ, чун-чĕрене çунатлантаракан çĕнĕ произведенисемпе пуянланĕ. Килес çул кăларма пăхнă кĕнекесен ал çырăвĕсене вĕсен авторĕсем издательствăна панă ĕнтĕ. Кĕнеке кăларакан юлташсем çав ал çырăвĕсене вуласа тухса тивĕçлĕ хак пачĕç. Çавăнпа та ку статьяра эпир вулакансене çĕнĕ çулта тухмалли кĕнекесем çинчен кĕскен те пулин хамăр шухăшăмăра каласа парас тетпĕр.

Чăваш АССР кĕнеке издательстви çулсерен вырăс тата ытти тăванла халăхсен литературисенчи чи лайăх произведенисене чăвашла куçарса кăларать. 1963 çулта та çавăн пек кĕнекесем чылай кăларма палăртнă.

Вырăссен ку чухнехи паллă писателĕ Михаил Шолохов çырнă «Лăпкă Дон» романăн пĕрремĕш кĕнекине улт-çичĕ çул каялла Илья Тукташ чăвашла куçарса кăларнăччĕ. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ талантлă писатель, хăй тытăннă ĕçе вĕçне çитерейменĕ пулин те, чăн-чăн пысăк ăсталăхпа тунă. Çакна ĕнтĕ Шолохов кĕнекине тăлмачă тĕлĕнмелле лайăх куçарни çинчен вулакансем издательствăна çырса тăракан çырусем те аван кăтартса параççĕ. Вĕсем çак чаплă роман-эпопейăн малалли кĕнекисене те тăван чĕлхепе вуласа курасшăн. Аркадий Малова пирĕн республикăра унăн хасат журналсенче пичетленнĕ калавĕсемпе очеркĕсенчен, фельетонĕсемпе сăвви-юррисенчен пĕлеççĕ. «Лăпкă Дон» романăн иккĕмĕш кĕнекине чăвашла вăл куçарнă. Çапла вара, вулакансем, совет литературин чаплă шедеврĕ пулса тăракан çак романăн малалли кĕнекине хамăр чĕлхепе вуласа, тăлмачăн пултарулăхĕпе çывăхрах паллашĕç, тивĕçлĕ хак парĕç.

Чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши хăйĕн кун-çулĕн юлашки çулĕсене Украинăра пурăнса ирттернĕ. Революцин хĕрÿллĕ юрăçине чăваш халăхĕ «кăвар чĕреллĕ поэт» тесе асăнса пурăнать. Украина халăхĕ те ăна манмасть. Мухтавлă чăваш поэчĕн ячĕ çак икĕ халăх хушшинчи нихçан

арканми çирĕп туслăх символĕ вырăнче упранать. Çеçпĕл Мишшин кĕрешӳри пуян кунçулĕпе ĕçĕ-хĕлĕсем çинчен Украинă писателĕ Юрий Збанацкий «Çеçпĕл» ятлă пысăк роман çырса кăларчĕ. Çак кĕнекене чăваш поэчĕ А. Е. Алга куçарнă.

Килес çул çавăн пекех М. А. Стельмахăн «Правда и Кривда» романĕ те чăвашла тухмалла. Ку вăл — Ленин идейисен тасалăхĕшĕн, партие ертсе пырас ĕçре ленинла меслетсемшĕн пыракан кĕрешӳ çинчен хавхаланса, пысăк ăсталăхпа, тарăн туйăмпа çырнă кĕнеке. Писатель хăйĕн кĕнекинче суялăхпа икĕпитлĕхе, ял хуçалăхне ертсе пырас ĕçре тунă пысăк йăнăшсене сивлет.

Романăн тĕп геройĕ — Марко Бессмертный. Вăл коммунизм идейисене парăннă, таса чун-чĕреллĕ, тарăн шухăш-ĕмĕтлĕ çын, чăн-чăн коммунист. Марко 1937 çулта уйрăм çынна пысăка хурса пурăннă тапхăрпа çыхăннă йывăрлăхсене хăюллăн тӳссе ирттерет, Отечественнăй аслă вăрçăра фашистсене хирĕç пурнăçне шеллемесĕр кĕрешсе, Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме тивĕçлĕ пулать. Вăрçăра йывăр суранланнă хыççăн Марко Бессмертный тăван колхозне таврăнать, унăн юхăнса çитнĕ хуçалăхне ура çине çĕклес тесе пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Кĕрешӳ çулĕ çинче пысăк йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. вăл бюрократсене, элекçĕсене, обществă пурлăхне çаратакансене хирĕç кĕрешет, вĕсене питлесе тăрă шыв çине кăларать. Çак кĕрешӳре Марко пĕччен мар, унпа пĕрле ялти малта пыракан çынсем — коммунистсемпе партире тăманнисем. Вĕсем партипе халăха шанаççĕ, çакă вĕсене кĕрешме хавхалантарать. Тĕрĕслĕх суялăха çĕнтерет. Çакăн çинчен М. А. Стельмах питĕ ăста, пурнăçра пулнă пек тĕп-тĕрĕс те илемлĕ çырса кăтартма пултарнă.

Чăваш кĕнеке издательстви вырăс тата ытти халăх писателĕсен чи паллă произведенийĕсене çулсерен чăвашла кăларса пыни -- ырă ĕç. Кăна вăл вулакансен шухăш-кăмăлне туллирех тивĕçтерес тесе тăвать.

Каларăмăр ĕнтĕ, 1963 çулта чăваш литератури çĕнĕ романсемпе, повеçсемпе, поэмăсемпе пуянланать, калавсен, сăвăсен тата пьесăсен кĕнекисем те йышлăн тухаççĕ.

Литературă ӳсĕмĕ чи малтан прозăра палăрать, теççĕ литературоведсем. Ку çаплах. Эпир те сăмахăмăра прозăлла произведенисенчен пуçлăпăр.

Юлашки вăхăтра чăваш писателĕсем хальхи пурнăç çинчен ытларах çырма пуçларĕç. Ку вăл Чăваш кĕнеке издательствин 1963 çулти планĕнчен те лайăх сисĕнет

Чăваш вулаканĕсен юратнă писателĕ Леонид Агаков халĕ «Йывăр юрату» ятлă повеç çырать. Çак повеçе 1963 çулта уйрăм кĕнекен кăларма палăртнă. Питех те кирлĕ, çивĕч темă хускатать автор унта.

Çамрăк кăна хĕр пĕр колхоза библиотекарьте ĕçлеме пырать. Унăн шухăш-ĕмĕчĕ пысăк, тĕллевĕ çутă, пурнăç çине вăл таса куçпа, хаваслăн пăхать. Акă кĕçех юрату пуçланать. Хĕрĕн кĕтнĕ телейĕ çитет: савнă каччипе иккĕшĕ туй туса ĕмĕрлĕхе пĕрлешеççĕ. Анчах унăн упăшки Совет Çарне тухса каять. Çамрăк хĕрарам упăшкин ашшĕ-амăшĕпе çеç юлать. Анчах та çак кил-йышра кивĕ йăла-йĕркесем çаплах пуç пулса тăраççĕ-ха. «Ытла мăнкăмăллă, вăтанма та пелмест, иртĕхме парас пулмасть ăна»,— теççĕ «тăванĕсем» кинĕ çинчен варттăн. Вĕсем ăна намăслантарас шутпа тĕрлĕ элек сараççĕ, унăн хĕрачкне чиркӳре вăрттăн ят хуртараççĕ те çакăн çинчен хăйсемех комсомол райкомне пĕлтереççĕ. Анчах та таса чунлă çамрăк хĕрарăм пуçне усмасть, чăн-чăн юратăва нимĕнле йывăрлăх та сӳнтерсе лартаймасть. Акă, унăн упăшки Совет Çарĕнчен таврăнать. Çамрăк çынсем каллех телейлĕ...

Юлашки çулсенче чăваш прозаикĕ Мĕтри Кибек литературă ĕçĕнче пысăк утăмсем турĕ. Кăçал та унăн Чăваш кĕнеке издательствинче «Кайăк тусĕ» ятлă романĕ пичетленсе тухрĕ. 1963 çулта вăл вулакансене çĕнĕ кĕнеке парнелесшĕн: ячĕ — «Уйăх витĕр çул курăнать». Нумаях пулмасть автор кĕнеке алçырăвне издательствăна пачĕ. Унта — икĕ повеç: «Уйăх витĕр çул курăнать» тата «Кам пулнă-ши вăл?». Пĕрремеш повеçĕн кĕске содержанийĕ çакăн пек: вунă çул вĕренсе пĕтернĕ Тамарă хăйĕн чун туртакан ĕçне тăван колхозĕнчех тупать. Вăл кукурузă ӳстерекен звенона ертсе пырать. Анчах унăн çак ĕçре тупнă телейне колхоз бухгалтерĕнче ĕçлекен Мышкин арăмĕ — тӳрпилĕк Укçине (вăл Тамарăпа пĕр класра вĕреннĕ) туртса илесшĕн. Звеньевойăн ĕçлемесĕрех ĕç кунĕ пулать тесе, вăл Тамарă вырăнне кĕресшĕн. Хăйĕн ирсĕр ĕмĕтне Укçине упăшки пулăшнипе пурнăçлать. Мышкин, икĕ питлĕ элекçĕ этем, колхоз председателĕ Ятманов умĕнче тем те пĕр йăпăлтатать, Тамарă çинчен элеклет, ăна, звеньевойран кăларса, ĕне фермине ĕçлеме кĕртме хĕтĕртет. Ятманов, хăй умĕнче пуç таякансене çеç юратакан тӳрккес çын, Мышкин сăмахне итлесе, Тамарăна чăнах та звеньевой ĕçĕнчен хăтарать, ăна ĕне фермине яма тăрать. Тамарă килĕшмест, вăл хăй кăмăлламан ĕçе тытасшăн мар, мĕншĕн тесен кирек мĕнле ĕç ăнăçлăхĕ те ăна юратса туниччен килнине хĕр аван ăнланать. Çапла Тамарă ĕçсĕр юлать, ун вырăнне Укçине йышăнать. Кĕçех колхоз председателĕ,

каллех Мышкин хĕтĕртнипе ултавлă пуху иртнерсе. Тамарăсен çемйине колхозран кăларать. Анчах тĕрĕслĕх çĕнтерессе шанакан хĕр алă усмасть, хăйĕн хуйхи çинчен вăл распубликăри хаçат редакцине çырса пĕлтерет. Тĕрĕслĕх çиеле тухать. Тамарă каллех кукурузă хирĕнче. Мышкин пек таса мар чунлă çынсене те, вĕсене хӳтĕлекен тӳрккес председателе те — Ятманова, тĕрĕс çултан пăрăнса кайнăскерне, тăрă шыв çине кăлараççĕ.

«Кам пулнă-ши вăл?» повеçри ĕçсем аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, 1942 çулта, Хура тинĕс хĕрринчи пĕр хулара пулса иртеççĕ. Хулана оккупациленĕ Итали çарĕнчи сержант Антонио Арзини, фашистсене чун-чĕререн курайманскер, вырăссем енне куçса, партизансен отрядне лекет. Вăрçăра асапланса çитнĕ Итали салтакĕсене юрăпа хавхалантарма фашистла юрăç Марио Маретти килсен, Антонио ăна вĕлерет те хăй Маретти «пулса тăрать». «Сорренто» ресторанта юрлать. Анчах унăн юррисем фашистсене хавхалантармаççĕ, вĕсен тискерлĕхне хаяррăн мăшкăласа питлеççĕ кăна. Çапла, Антонио чăннипе кам пулнине пирĕн партизансем туйса илеççĕ, ăна хăйсен ĕçне хутшăнтараççĕ. Кĕçех Антонио тăшман çинчен кирлĕ сведенисем пухма тытăнать, вăрттăн типографире прокламацисем пичетлесе хăйĕн çĕршывне ăсатать, тĕрмене хупса лартнă партизансене хăтарать т. ыт. те.

Повеç вĕçĕнче Антонио Арзини чăвашран тухнă çын иккенне пĕлетпĕр. Унăн ашшĕ, 1914 çулччен Питĕрти филармонире ĕçленĕ музыкант, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче Австри тыткăнне лекет. Унтах авланать—итальянкăна качча илет. Вăрçă чарăнсан, вĕсем Италие куçса каяççĕ. Антонио — вĕсен ывăлĕ.

Вулакансем хапăлласа йышăннă «Хура çăкăр» роман авторĕ Илпек Микулайĕ чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçне сăнласа панисĕр пуçне коммунизм тăвакан совет çыннисен кулленхи хастар ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те калавсем сахал мар çырать. Вĕсем ку таранччен «Тăван Атăл» альманахпа «Ялав» журналта пичетленсе пынă. Килес çул издательствă çав калавсене тата халиччен ниçта та пичетленменнисене уйрăм кĕнекен кăларма палăртрĕ. Унăн ячĕ «Сурпан». Кунта автор коммунизм тăвакансен — Совет Çарĕнчи тĕрлĕ наци çыннисен нихçан арканми çирĕп туслăхĕпе хастар ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсен çĕнĕ йăли-йĕркисем çинчен çырать. Калавсенче асра юлакан сăнарсем нумай, пирĕн кулленхи пурнăçра тĕл пулакан конфликтсем кĕнеке содержанине интереслĕ тăваççĕ. Калавсен чĕлхи пуян, илемлĕ, автор ваттисен сăмахĕсемпе, çунатлă сăмах çаврăнăшĕсемпе пĕлсе, вырнаçуллă усă курать.

Степан Асланăн «Ял калавĕ» ятлă калавсемпе очерксен сборникне те палăртса хăварас килет. Вулакансем умне хальхи чăваш ялĕн пурнăçĕ тухса тăрать. Калавсемпе очерксен тĕп геройĕ — коммунизм тăвассишĕн ырми-канми ĕçлекен ял çынни. Кĕнекере «Эх, çак Укçине» повеç, «Хам айăплă», «Майрине», «Савăнăçлă ир», «Кукамай» ятлă калавсем, «Снайпер патне янă çыру», «Ай, улми, сад улми» очерксем, фельетонсем пичетленеççĕ.

Чăваш АССР кĕнеке издательстви юлашки вăхăтра çулсеренех очерксен кĕнекисене кăларать. Тӳрех калас пулать: чăваш литературинче совет çыннин чун-хавалне, ĕмĕт-туртăмĕсене тарăннăн кăтартса паракан очерксем сахал-ха. Ку таранччен пичетленсе пынă чылай очерксен пĕр çитменлĕх пур: унта эпир производствă процесĕсене сăнласа панине кăна куратпăр. Вĕсем çавăнпа производствăпа техникă литератури майлăрах туйăнаççĕ. Кунта çакна асра тытас пулать: очерк вăл — илемлĕ литературă жанрĕсенчен пĕри. Апла пулсан, унта ытларах çыннăн чун-хавалĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕ, савăнăçĕпе хуйхи-суйхи сăнланмалла. Пĕр сăмахпа каласан, очерк калав е повеç пекех вулантăр. 1961 çулта А. Эсхелĕн «Колхоз агрономĕ» ятлă очеркĕ тухнăччĕ, ăна вулакансем пысăк хак пачĕç, мĕншĕн тесен автор геройĕн — Елчĕк районĕнчи «Победа» колхоз агрономĕн Е. Васильевăн ĕçĕ-хĕлне çеç мар, унăн чунне, шухăш-ĕмĕчĕсене туллин, пурнăçри пек кăмăллăн уçса кăтартнăччĕ.

1963 çулта очерксен пилĕк кĕнекине кăларма палăртнă.

Вĕсен авторĕсем ку чухнехи совет çыннисен çутă ĕмĕтне, пуян шухăш-кăмăлне витĕмлĕн, асра юлмалла кăтартасса шанас килет.

Çамрăк прозаика В. Бурнаевские ытларах тинĕс теми канăç памасть. Вулакансем унăн «Тинĕс калавĕсем» кĕнекине лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çитес çулта вăл «Тинĕс хуралçи» ятлă калавсен пуххине кăларма хатĕрленет. Унăн тĕп теми — çар морякĕсем мирлĕ вăхăтри кулленхи пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ. Ак, сăмахран, «Телей» калаври ĕç Инди океанĕнче, пысăках мар совет карапĕ çинче пулса иртет. Çак карап Инди валли хаклă япаласем турттарса каять. Çул çинче хăрушă çил-тăвăл пуçланать. Анчах та хастар моряксем унран хăраса ӳкмеççĕ, çине тăрса кĕрешнипе штормa çĕнтереççĕ, Тăван çершыв хушнă ĕçе чыслăн пурнăçлаççĕ. Хăй те флотра службăра пулнăскер, Бурнаевский моряксен кулленхи пурнăçне, йăли-йĕркисене, ĕçĕ-хĕлне ĕненмелле сăнласа парать.

Çамрăк авторсенчен П. Маркин прозаик та тухăçлă ĕçлет. 1963 çулта вăл хăйĕн иккĕмĕш кĕнекине кăларать. Унăн ячĕ «Надломленная ветка» (вырăсла). Автор çамрăксен юратăвĕ,

телейĕ ҫинчен ҫырать. «Надломленная ветка» калаври тĕп герой Алексей Корнев хăйĕн савнийĕн ашшĕне вăрманта вăрттăн майпа йывăҫ каснă ҫĕрте тытать. Унăн юратнă хĕрĕ ҫакăншăн Алексейран сивĕнет. Икĕ ҫамрăкăн нумай асапланма тивет. Юлашкинчен хĕр хăйĕн йăнăшне ăнланса илет. Ҫамрăксем мăшăрланаҫҫĕ. «Йывăр телей» калавра автор комсомол организацийĕн секретарĕн ĕҫĕсене сăнласа парать.

Вулакансем Юрий Скворцовăн 1962 ҫулта пичетленсе тухнă «Хĕрлĕ мăкăнь» повеҫне хапălласа йышăнчĕҫ, лайăх хак пачĕҫ. 1963 ҫулта писатель вулакансем валли тепĕр парне хатĕрлет. Кĕнеке ячĕ — «Уках хурăнĕ». Ку вăл — повеҫсемпе калавсен пуххи. «Уках хурăнĕ» повеҫре автор Отечественнăй аслă вăрҫă ҫулĕсенче совет ҫыннисем тылра вăй-хала шеллемесĕр ĕҫлени ҫинчен ҫырать. «Яшлăх» повеҫ теми — ҫичĕ ҫуллăх ҫыннисен ĕҫри хастарлăхĕ. Повеҫсемсĕр пуҫне, кĕнекере «Юрăҫ Ваҫҫа», «Парăм» ятлă калавсем пичетленеҫҫĕ, вĕсенче автор хальхи вăхăтри ял пурнăҫне сăнлать.

Н. С. Хрущев совет писателĕсем умĕнче тухса каланă сăмахсенче сатирăпа юмора пысăк хак панăччĕ. Совет ҫыннисене коммунизм тума кансĕрлекенсем — харампырсем, ĕҫсе-ҫупса пурăнакансем, бюрократсем, йăпăлтисем, халăх пурлăхне ҫаратакансем тата ытти тĕрлĕ йăх-ях пирĕн хушăра ку тарана ҫитсе те пĕтмен-ха. Вĕсене хаяррăн питлес, тăрă шыв ҫине кăларас, намăслантарас ĕҫре сатирăпа юмор вăйĕ питĕ пысăк. Чăваш АССР кĕнеке издательстви юлашки вăхăтра сатирăллă произведенисем сахал мар кăларчĕ. Акă, сăмахран, Леонид Агаковăн «Хаклă кĕрӳ», авторсен коллективĕн «Тĕгре сирĕлсен» (тĕн сĕрĕмне хирĕҫ), Н. Черепановăн «Личная репка» (вырăсла) кĕнекисене вулакансем чĕререн килĕштерсе йышăнчĕҫ. Ун пек кĕнекесене 1963 ҫулта та кăларма палăртнă. Кунта чăваш писателĕн Аркадий Эсхелĕн «Хастар Иван» кĕнекине асăнса хăварма кирлĕ. Ку вăл — харампырсене, бюрократсене, элекҫĕсемпе йăпăлтисене питлекен калавсен пуххи. П. Львовăн ҫитес ҫул тухмалли «Чĕлĕхсĕр хут купăс» кĕнекинчи калавсем те хăш-пĕр ҫынсен ăс-тăнĕнчи кивĕ пурнăҫ юлашкисене тăрăхласа сивлеҫҫĕ.

Ҫапла ĕнтĕ, 1963 ҫулта издательствă хальхи пурнăҫа сăнласа паракан произведенисен кĕнекисене чылай кăларать.

Чăваш прозаикĕсем историллĕ темăсене те манăҫа хăвармаҫҫĕ. Ĕҫ ҫыннисен революцичченхи пурнăҫне сăнласа паракан кĕнекесем совет ҫыннисене халăхăн революциллĕ традицийĕсемпе паллаштараҫҫĕ, коммунизм тăвас пархатарлă ĕҫпе кĕрешӳре иксĕлми вăй-хал хушаҫҫĕ, хавхалантараҫҫĕ.

Вулакансем Куҫма Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романне лайăх астăваҫҫĕ пулĕ. Унăн пĕрремĕш кĕнеки 1960 ҫулта пичетленсе тухнăччĕ. Халĕ писатель иккĕмĕш кĕнекине ҫырса пĕтерчĕ. Кунта автор чăваш халăхĕ XVI ĕмĕрте Вырăс государствине хăй ирĕкĕпе пĕрлешни ҫинчен каласа парать.

Темиҫе ҫул каярах издательствă Чăваш халăх поэчĕ С. В. Элкер ҫырнă произведенисене пухса кăларма тытăнчĕ. 1963 ҫулта тăваттăмĕш том тухмалла. Унта «Шурăмпуҫ килсен» повеҫ тĕп вырăн йышăнать. Ҫак повеҫри ĕҫсем чăваш ялĕнче вырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăхăтĕнче пулса иртеҫҫĕ. Вулакансем умне чăваш хресченĕсен пурнăҫĕпе революциллĕ кĕрешĕвĕ анлăн тухса тăрать. Автор тăваттăмĕш томра «Шурăмпуҫ килсен» повеҫсĕр пуҫне ял пурнăҫĕ ҫинчен ҫырнă калавсем те чылай кĕртет.

Чăваш АССР кĕнеке издательствин 1963 ҫулхи планĕнче сăвăлла произведенисем те пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. Чăваш поэчĕсен П. Хусанкайăн «Савни», А. Алган «Кунсемпе ҫулсем», Г. Ефимовăн «Кун-ҫул утти», С. Шавлын «Сăвăсемпе поэмăсем», Н. Васянкан «Хастарлăх», Н. Евстафьевăн «Улмуҫҫи», В. Давыдов-Анатрин «Сăвăсем» тата ытти сăвă кĕнекисем те вулакансен кăмăлне каясса шанас килет. Пысăк та кирлĕ темăсем хускатаҫҫĕ пирĕн поэтсем. Вĕсем хастар совет халăхĕ пĕр кăмăллăн коммунизм тăвас ĕҫе хутшăнса ĕҫлени ҫинчен, хамăрăн асран кайми Тăван ҫĕршывăмăр ҫинчен, мирлĕ пурнăҫпа ҫамрăксен хĕрӳллĕ те таса юратăвĕ ҫинчен, туслăх ҫинчен хавхаланса ҫыраҫҫĕ.

1963 ҫулта Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай ҫырнă «Ту урлă ҫул» ятлă сăвăллă романĕ иккĕмĕш кăларăмпа тухать. Ҫак романа чăваш халăх пурнăҫĕн эпопеи тесе хакласан та йăнăш пулмасть. Унта поэт чăваш хресченĕсем социализм ҫулĕ ҫине куҫнине сарлакан илсе кăтартать. Эпир «аслă улшăну» вăхăтĕнчи чăваш ялĕн пурнăҫĕпе паллашатпăр. Ленинăн кооператив ҫинчен калакан идейисем хăватлăн ҫĕнтернине куратпăр.

1963 ҫулта тухмалли кĕнекесем ҫинчен сăмах хускатнă май «Вăхăт утăмĕсем» ятлă сăвă сборникне те асăнас килет. Ҫак кĕнеке—чăвашсен паллă поэчĕсен (П. Хусанкайăн, Я. Ухсайăн, С. Шавлын, Г. Ефимовăн т. ыт. те) вырăсла куҫарнă сăввисен пуххи. Куҫаракан — вырăс писателĕ П. Градов. Вăл чăваш поэчĕсен чи лайăх сăввисене стиль тĕлĕшĕнчен те, шухăш енчен те ăста куҫарнă

Чăваш АССР кĕнеке издательствин 1963 ҫулхи планĕнче вилнĕ поэтсен кĕнекисене кăлар-

ма палăртнă. Фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн çапăçса пуçне хунă поэт-лирикăн К. Кольцовăн «Манăн сасă» кĕнекинче унăн чи лайăх сăввисем пичетленеççĕ. Чăваш поэчĕ М. Ястран та Отечественнăй аслă вăрçăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Издательствă çитес çулта унăн суйласа илнĕ сăввисене уйрăм кĕнекен кăларать, ăна «Лирикă» тесе ят панă. Темиçе çул каярах çĕре кĕнĕ чăваш поэчĕн М. Хурин «Сăвăсемпе поэмăсем» ятлă кĕнекине ытларах унăн халиччен пичетленмен сăввисемпе поэмисене кĕртме палăртнă.

1963 çулта чăваш драматургийĕ те çĕнĕ утăм тăвать. Н. Айзманăн «Оперă çурални», И. Максимов-Кошкинскин «Пьесăсем», М. Ухсайăн «Комедисем» художествăллă пултарулăх коллективĕсен репертуарне пуянлатас пирки иккĕленме кирлĕ мар. Кунпа пĕрлех тата тĕрлĕ авторсен чи лайăх пьесисене те уйрăм кĕнекепе пухса кăларма палăртнă.

Темиçе çул каярах издательствă «Асталăхпа чăнлăхшăн» ятлă критикăллă статьясен пуххине пичетлесе кăларнăччĕ. Унта чăваш литературинчи паллăрах прозаиксемпе поэтсен ăсталăхĕ çинчен çырнăччĕ. Çавăн пек кĕнекесем усăллине шута илсе, Чăваш кĕнеке издательстви 1963 çулта В. Долгов критикăн «Чăваш литературинчи сăнарсемпе идейăсем», В. Алагерăн «Тăван литературă пирки» ятлă кĕнекисене кăларма палăртнă. В. Долгов хăйĕн кĕнекинче революцичченхи чăваш писателĕсен М. Федоровăн, К. Ивановăн, Тайăр Тимккин, Н. Шупуççыннин тата чăваш совет писателĕсен — Çеçпĕл Мишшин, И. Ахахăн, И. Тăхтин, Д Исаевăн, С. Элкерĕн, П. Хусанкайăн, Я. Ухсайăн произведенийĕсене тишкĕрет. Çавăн пекех критик чăваш литературипе ытти тăванла халăхсен литературисем хушшинчи çыхăну çинчен те çырать.

1963 çулта ачасем валли те çĕнĕ кĕнекесем нумай тухаççĕ. Вĕсенчен эпир чи паллăрахисене кăна асăнăпăр.

Нумаях пулмасть-ха çамрăксемпе ачасен юратнă писателĕ А. Артемьев издательствăна 1963 çулта пичетленсе тухмалли «Алтăр çăлтăр» кĕнекен ал çырăвне пырса пачĕ. Кĕнекене хальхи чăваш çамрăкĕсен кулленхи хăстар ĕçĕ-хĕлне сăнласа паракан çĕнĕ калавсем кĕртнĕ. Вĕсен тĕп геройĕсем — çамрăк строительсем — комсомолецсемпе пионерсем.

Кĕнекере «Алтăр çăлтăр» тĕп вырăн йышăнать. Автор унта совет çамрăкĕсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тылпа фронтра вăйхалпа пурнăçа шеллемесĕр ĕçленине тата кĕрешнине сăнласа кăтартать. Кĕнекере ӳкерчĕксем те чылай пулаççĕ. Автор хăйĕн кĕнекине аслă тата вăтам классенче вĕренекен ачасене халаллать.

Александр Кăлкан — чылай пьесăсемпе юптарусен авторĕ. Юлашки вăхăтра вăл прозăллă произведенисем çырас тĕлĕшпе те ăнăçлă ĕçлет. Акă, сăмахран, 1963 çулта издательствă унăн «Пĕчĕк сунарçă» ятлă калавсен пуххине кăларма палăртрĕ. Кĕнекене вунă пĕчĕк калав кĕртнĕ. Вĕсен тĕп геройĕсем — кĕçĕн классенчи шкул ачисем. Çав калавсем ачасене ĕçе юратма, тăрăшса вĕренме тата юлташĕсемпе хăйсенчен аслăраххисене хисеплеме вĕрентеççĕ. Кĕнекене хитре тунă ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ.

1961 çулта Герасим Хăрлампьевăн «Илемлĕ ир» ятлă повеçĕн пĕрремĕш кĕнеки тухнăччĕ. Вулакансем çак кĕнеке пирки издательствăна та, авторĕ патне те çырусем пĕрмай çырса тăраççĕ, унăн иккĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухасса кĕтеççĕ. 1963 çулхи плана тунă чухне издательствă вулакансен кăмăлне шута илчĕ: килес çул «Илемлĕ ир» повеçĕн иккĕмĕш кĕнекине кăларма палăртрĕ Кунта та, пĕрремĕш кĕнекери пекех, тĕп герой—Эскетен. Пурнăçра вăл чылай йывăрлăхсем курать, кĕрешет, çентерет, хушăран йăнăш утăмсем те тăвать. Пĕррехинче вăл хăрушă инкеке лекет, вăра ăна ырă çынсем хăтараççĕ, вĕсем пулăшнипе Эскетен хăйĕн чăн-чăн телейне тупать.

Куçма Чулкаçăн килес çул кăларма палăртнă «Кĕтӳç ачи» ятлă повеçне те асăнмасăр иртме çук. Çак кĕнекере автор чăваш ачин революцичченхи асаплă пурнăçĕпе паллаштарать. Пĕр ӳстермесĕрех калăпăр: автор ачасен психологине лайăх уçса пама пĕлнĕ, çавăнпа произведенири тĕп геройăн сăнарĕ асра юлать. Кĕнекене писатель вăтам классенче вĕренекен ачасем валли çырнă, унта ӳкерчĕксем те нумай пулаççĕ.

1963 çулта Александра Лазарева писательницă шкул ачисене «Çамрăк талантсем» ятлă кĕнеке парнелеме хатĕрленет. Ку вăл — вăтам классенче вĕренекен ачасем валли çырнă çĕнĕ калавсен пуххи. Вĕсенче сăнласа паракан ачасем, шкулта вĕреннисĕр пуçне, тăван колхозне те хĕрӳллĕн пулăшаççĕ, хăйсен кану вăхăчĕсене савăнăçлăн ирттерме пĕлеççĕ.

Г. Краснов-Кĕçĕнни «Амăшĕ» кĕнекине тĕрлĕ вăхăтра çырнă калавсене кĕртет. Çав калавсенче автор Аслă Отечественнăй вăрçă тапхăрĕнчи совет ачисен паттăрлăхĕ, вĕсен амăшĕсен ырă чунĕ çинчен çырса кăтартаççĕ.

В. Алендейĕн «Çĕмĕрт çеçкере» кĕнекине те палăртса хăвармаллах. Пурне те хумхантаракан пысăк темăсем хускатать автор хăйĕн калавĕсенче. Вĕсенчен чи паллăраххи — çамрăксене ĕçре воспитани парасси. Эпир ял хуçалăхне çĕклессишĕн вăй-халне шеллемесĕр кĕ-

решекен ачасен сăнарĕсене куратпăр. Автор коммунизм обществи тăвас ĕçĕн романтики çинчен чĕререн хавхаланса çырать. Çак кĕнеке аслă классенче вĕренекен шкул ачисемшĕн тивĕçлĕ парне пулĕ.

Чăваш АССР кĕнеке издательствин 1963 çулхи планĕпе паллашнă май эпир çĕнĕ ятсем куратпăр. Акă, сăмахран, çамрăк автор Н. Иванов килес çул «Вăрман тухтăрĕ» ятлă пĕрремĕш кĕнеке кăларать. Унта вăл кĕске калавсемпе юмахсем («Чечек çыххи», «Вăрман тухтăрĕ», «Çĕмĕртпе сирень», «Чее тилĕ», «Шăхлич», «Чĕрĕп», «Юратнă туссем» т. ыт. те) кĕртет. Вĕсен геройĕсем — çутçанталăка тимлĕн сăнакан шкул ачисем. Çак калавсемпе юмахсем ачасене хăйсен пĕлĕвне ӳстерме пулăшĕç.

1963 çулта ача-пăча валли сăвă кĕнекисем те кăлармa палăртнă. Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай вăтам классенче вĕренекенсем валли «Сулпикепе Валĕм-хун» ятлă сăвăллă юмах çырса пĕтерчĕ. Ку вăл чăваш халăх юмахĕ, ăна халăх поэчĕ çĕнетсе юсанă. Поэт пĕр чăваш хĕрĕн кун-çулĕ çинчен çырать. Çак хĕр, хăйĕн ырă тĕллевне пурнăçлас тесе, нимĕнле йывăрлăхран та хăраса тăмасть. Чăваш поэчĕ Уйăп Мишши те кĕçĕн классенче вĕренекен ачасене çитес çулта хăйĕн сăвă кĕнекине парнелет. Туслăх, вĕренӳ тата ĕç — çакăн пек поэт сăввисен тĕп шухăшĕ.

Асăннă кĕнекесемсĕр пуçне 1963 çулта ачасем валли Е. Афанасьевăн «Шăнкăрч», А. Воробьевăн «Çунатлă туйăм», В. Давыдов-Анатрин «Наша улица» (вырăсла), А. Лукинăн «Çĕнĕ уйăх», И. Малгайăн «Костер умĕнче», В. Чаплинăн «Бабушкины каникулы» (вырăсла), Н. Черепановăн «Верный товарищ» (вырăсла) кĕнекисем пичетленсе тухаççĕ.

Килес çул издательствă шкулсенчи драмă кружокĕсем валли «Ача-пăча пьесисем» кăларать. Вĕсен авторĕсем моральпе этикă ыйтăвĕсене хускатаççĕ, шкулта тата çемьере ачасене сиенлĕ, педагогикăна хирĕç меслетсемпе воспитани панине сивлеççĕ.

Вырăсларан чăвашла куçарса кăларакан кĕнекесенчен вырăс литературин классикĕсен произведенийĕсене асăнмалла. А. И. Купринăн «Ю-ю» кĕнекине чĕрчунсем çинчен çырнă калавсем кĕреççĕ («Ю-ю», «Шăнкăрчсем», «Барбоспа Жулькă» т. ыт. те). А. Н. Толстой хăй ĕмĕрĕнче вырăс халăх юмахĕсене чылайăшне юсаса çĕнетнĕ. Чăваш АССР кĕнеке издательстви çитес çулта çав юмахсенчен чи палăраххисене пухса «Юмахсем» ятлă уйрăм кĕнеке кăларать. Çак кĕнеке кĕçĕн тата вăтам классенче вĕренекен ачасемшĕн хаклă парне пулĕ. Çитес çул вырăс совет писателĕсен произведенийĕсене те чăвашла куçарса кăлармa палăртнă. Паллă совет писателĕн С. Антоновăн «Хаклă сăн-сăпат» («Дорогие черты») кĕнекинче вулакансем умне халăхсен аслă çулпуçĕн В. И. Ленинăн вилĕмсĕр сăнарĕ яр-уççăн тухса тăрать. Автор Ильич пурнăçĕнчен интереслĕ эпизодсем илсе кăтартать. А. Гайдарăн «Пĕчĕк калавсем» кĕнекинче çичĕ пĕчĕк калав пичетленмелле: «Совет площачĕ», «Василий Крюков», «Патронсем», «Поход», «Маруся», «Вĕри чун» т. ыт. те.

Пирĕн чаплă янташăн В. И. Чапаевăн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен З. Лихачева писательницă Е. Матвеевăпа пĕрле «Вася Чапаев» ятлă интереслĕ повеç çырнă. Е. В. Матвеева ача чухне Чапаева лайăх пĕлнĕ. Вăл унпа граждан вăрçи çулĕсенче те пĕрре мар тĕл пулнă. Çак повеçе издательствă 1963 çулта чăвашла пичетлесе кăларать.

Чăваш АССР кĕнеке издательствин 1963 çулхи планĕпе кĕскен паллашнă май эпир акă мĕн куртăмăр: чăваш совет литератури çулсерен тăвалла утать, паянхи вĕресе тăракан пурнăç çинчен çырнă кĕнекесен шучĕ ӳсет. Çакă та савăнтарать: тăван литературăра пысăк калăплă произведенисем (темиçе кĕнекеллĕ романсемпе повеççем) çырас тапхăр пуçланчĕ. Çакă вăл чăваш писателĕсем пурнăçпа тан утма тăрăшнине кăтартать.

Геннадий ХЛЕБНИКОВ

Чăваш романĕн çулĕ

1. УКĂЛЧАРАН ТУХАС СУКМАКСЕМ

Вăтăр çул ĕлĕкрех пирĕн литературă пахчине çĕнĕ культурă шăтса тухрĕ.

Кĕвĕçсе те ăмсанса пăхаттăмăр эпир унччен хăш-пĕр халăхсен цивилизаци сачĕсене, унти сĕткенлĕ çимĕçсем çине. «Сыпма пулмасть-ши çав паха йышши сорта хамăр улмуççисене? Пархатарлă-ши чăваш пурнăçĕн тăпри?» — иккĕленетчĕ чăрсăр шухăш.

Халĕ ĕнтĕ эпир алла тараватлăн тăсса кăтартма пултаратпăр: акă, курăр, мĕнле тымар ячĕ çĕнĕ культурă, епле паркаланчĕç ун турачĕсем! Пушă мар чечекĕсем, тутăсăр мар ун улмисем. Поэт каларĕш:

> Салам сана, чăваш çĕршывĕ,
> Эс хăрхăм мар, эс хĕсĕр мар!

Çапла, литературăра пирĕн çĕнĕ жанр — **р о м а н** вăй илсе кайрĕ.

1

Мĕн вăл роман?

Мĕнле пуçланса кайнă-ха чăваш романĕ?

Литературăри пур явлени пекех, ку жанр та ĕмĕрех пулман. Малтан «роман» тесе авалхи француз чĕлхипе — роман чĕлхипе — çырнă рыцарла фантазилле эпоса каланă. Эпир халĕ ăнланакан çĕнĕ жанр — чăн-чăн роман — XVII ĕмĕрĕн пирвайхи вунă çулĕнче çуралать. Пĕрремĕш роман — Сервантесăн «Дон Кихочĕ».

XVII-пе XVIII ĕмĕрсенче роман Англире (Дефо, Лесаж, Филдинг) тата Францире (Руссо, Стерн, Годвин) çĕкленет XIX ĕмĕрте вăл Германире, унтан Российйăра т. ыт. çĕрте те вăй илсе каять.

Çĕнĕ саманара вулакан чи юратакан жанрсенчен пĕри — роман.

Апла чăваш литературинче те романсем çуралма пуçланинчен тĕлĕнмелли пачах çук пек. Çапах та, тĕлĕнмелли çук пулин те, шухăша каймалли темĕн чухлех: тен, чăваш романĕ — урăх çĕртен вăхăтсăр куçарнă япала çеç? Тен, роман, ыттисене кура,— ют тумтир тăханни, çĕнĕ модă кăна?

Мĕнрен килет-ши вăл аталанасси?

Роман вăл — «çĕнĕ саманари эпопейă», тенĕ Белинский. Авалхи эпопейă шутне грексен «Илиадипе Одиссейи», тюрксен «Манасĕ», вырăссен былинисем, чăвашсен Улăп çинчен калакан халапĕсем т. ыт. те кĕреççĕ. Эпопейă пĕр-пĕр халăх пурнăçне татăкăнкĕсĕкĕн мар, пĕтĕм анлăшĕпе çутатса пама тăрăшать. Çавăн пекех роман та обществă пурнăçне тарăннăн та туллин тата нумай енлĕн сăнласа кăтартать. Анчах авалхи эпопейă геройсене мифологилле, юмахла шухăшлаттарать, çынна улăп-паттăр вырăнне хурать. Ачалăхри халăх çутçанталăк тата обществă явленийĕсене турă хăвачĕпе ăнлантарать е пурнăçри кашни пысăк ĕç (вăрçă, суту-илӳ) патшаран е пĕр-пĕр паттăртан килнĕ пек курать. Ку вăл — этем хăйне халăхран уйăрман тапхăр. Çав вăхăтра пĕччен çыннăн хăйне уйрăм хуйхи-суйхи мар, халăхăн пĕрлехи тăвăмĕ этеме ытларах интереслентерет. Кулленхи йывăр пурнăç мар, тĕтреленнĕ, иртнĕ пулăм уншăн поэзи шутланать.

Авалхи эпопейăран чăн роман Возрождени хыççăн калча кăларса, хунаса каять. Энгельс сăмахĕсем тăрăх, Ренессанс вăл — «Этемлĕхе унччен нихăш тапхăр пек те мар малалла янă аслă улшăну»[1].

Буржуалла строй этеме хăй тĕллĕн ирĕклĕ тăвать, ытти çынсемпе ăна нимпе те мар, хăйĕн уйрăм интересĕсемпе çеç çыхса ярать. Вăл ĕнтĕ хăй тĕллĕн «ирĕк» этем шутланать; никама та пăхăнмасть, никама та кансĕрлемест. Экономикăлла çыхă «çеç» — хырăм выççи — ăна сăнчăртан та хытăрах мул хуçи çумне çыхса лартать. Çапла, капитализм чухне обществă никĕсĕ — производствăлла çыхăнусем «çиеле» тухаççĕ. Кашни «ахаль çын» кун-çулĕ витĕр пĕтĕм обществă пурнăçĕ курăнса тăма пуçлать. Литературăра уйрăм çын кун-çулне, «ăраскалне» тишкерекен формă кирлĕ пулса тăрать. Çĕртен уйрăлса, ĕç шыраса, «çапкаланса» çӳрекенсен пурнăçне улăпла паттăрсен эпосĕпе çырса кăтартаймăн ĕнтĕ. «Прозăлла тумтир» кирлĕ.

Дон Кихотпа Санчо — шăп та шай çавăн пек чухăн «çапкаланчăксем». Дон Кихот, рыцăрла çӳлĕ тĕллевпе хавхаланнăскер, ĕлĕкхилле, «паттăрла» пурăнма хăтланать, анчах прозăллă тĕнче ăна кашни утăмрах такăнтарса пырать.

«Уйрăм çын шăпи», «кулленхи прозăллă пурнăç» — акă мĕнпе сăнласа кăтартать роман çав саманари халăх пурнăçне.

Капитализм ăста аталанать — çавăнта роман валли çуралма тивĕçлĕ майсем пулса пыраççĕ: чи малтанах — буржуаллă Испанире, унтан, XVIII ĕмĕрте,— фабрикăлла Англире (типлă буржуа — Робинзон Крузо), каярахпа — Германире т. ыт. те.

Çапла вара, роман пуçланса каясси, чи малтанах обществăри хутшăнусем улшăннинчен, çынсем пурнăçа тăрă та вичкĕн куçпа, «практикăлла» курма пуçланинчен килнĕ.

---

[1] К. Маркс тата Ф. Энгельс искусствă çинчен, I том. Мускав — 1957, 346 стр.

2.

Чăваш çĕршывĕнче буржуалла çыхăнусем XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче хăвăрт аталанма пуçлаççĕ XX ĕмĕрте вĕсем татах вăйланса пыраççĕ. Çĕре тара парса, ĕç шыраса çÿрекен чухăнсем, кулаксен мăшкăлне тÿсекен «çил хăвалакансем», «çаракутсем» пиншерĕн Атăл çине бурлака çÿреççĕ: Хусана, Чулхулана, Донбаса, Аçтăрхана вăхăтлăха ĕçе кайса вырнаçаççĕ.

Çавсем ĕнтĕ — çурма-пролетарисем, патриархаллă общинăран туха-туха ÿкнисем, тĕрлĕ пурнăç курнă çынсем — халăхăн патриархаллă ăс-тăнне улăштаракансем, хăйсене роман формипе çырса кăтартма «ыйтакансем» пулса тăраççĕ.

Анчах.. чăвашра роман çаплах çуралмасть-ха. Мĕншĕн-ши?

Пирĕн фольклорта пĕр интереслĕ улшăну пур: XIX ĕмĕрте асамлă юмахсем вырăнне кулленхи чăн пурнăçран илнĕ калавла юмахсем йышланса пыраççĕ. Ĕлĕкхи Юман паттăрпа юнашар Йăван тарçă, Ухмах Иван, Кукша Йăван, Шелпи тарçă тухса тăраççĕ. Ку геройсем асамлă вăйпа усă курса сĕт çырмисем тумаççĕ ĕнтĕ. Вĕсем — хăйсен ăсĕпе, тавçăрулăхĕпе пупран, улпутран, сутăçран шăл йĕрсе çÿреççĕ, вĕсен ултавне тăрă шыв çине кăлараççĕ. Пурнăçри кăткăс лару-тăруран тухма, хирĕçÿлĕхе сирсе яма юмахсенчи çĕнĕ геройсем ылтăн çĕрĕпе те, асамлă чукмарпа та усă курмаççĕ, вĕсем хăйсен «характерĕнче» вăй тупаççĕ. («Кукша Йăван», Йăванпа пуп», «Пуппа тарçи» т. ыт. те).

Çак калав е анекдот пек юмахсене пĕрле пухсан, пирĕн умма кулленхи пурнăçăн мозаикăлла тĕпренчĕкĕсем., «Йăван паттăр çÿревĕсем» тухса тăраççĕ. Роман пек, анчах.., роман мар. Нимĕçсен ашкăнчăк геройĕ Тиль Эйленшпигель çинчен калакан фольклорла «романĕнче» эпир герой историйĕпе, биографийĕпе паллашатпăр пулсан, чăваш Йăванĕн çÿревĕсем пĕр-пĕринпе сыпăнса тăмаççĕ-ха Чăваш хресченĕн ăс-тăнĕ çынна ун биографийĕ тăрăх ăнлантараймасть. Герой пултарулăхĕнчен характер уйрăлса тухман.

Чăваш условийĕнче капитализм вăйлах аталанайман-ха, вăл патриархаллă-феодаллă çыхăнусемпе варташса пĕтнĕ. Ялти тĕттĕм массă ват çын, хурăнташ йăлинчен тухса пĕтмен, общинă ăс-тăнĕнчен чылай чухне иртеймен.

Çурма колониллĕ Российăра, «халăхсен тĕрминче», чăваш пек «ют йăхсене» патша самодержавийĕ хăйĕн ури айĕнче пусарса тăнă. Кунсăр пуçне, вĕсен пичет те, театр та пулман, шкулсем те сахал пулнă. Чăн-чăн роман, сăмах вĕççĕн çÿресе, фольклорла пурăнма пултараймасть. Геройăн кăткăс биографине астуса тăма йывăр.

Чăн та, И. Я. Яковлев 1871—73 çулсенче чăваш çырулăхне пуçласа яни, тăван чĕлхепе букварьсем тата ытти кĕнекесем кăларни, шкулсем уçни илемлĕ литературăна та чĕртсе ярать. Анчах правительствă чăвашла хаçат-журнал уçса паман. Астăвăр-ха, И. Н. Юркин 1899 çулта «Пулхăр» хаçат уçма ыйтсан, Шалти ĕçсен министерстви ăна «Юрамасть» тесе пĕлтернине. Аса илер-ха М. Ф. Федоров пек маттур сăвăç хăйĕн талантлă «Арçурине» пичетре курмасăрах вилнине..

Çапах та çырăнман мар, XIX ĕмĕртех çырăннă чăваш прози (И. Яковлев, Игн. Иванов, И. Юркин).

Юркин хăйĕн повеçĕнче («Этемĕн пырĕ тутă та, куçĕ выçă», «Мул») «ашшĕсемпе ачисен» хутшăнăвĕсене укçа-тенкĕ йăлисем кăшлама пуçланине кăтартасшăн. Автор, вырăс реалисчĕсенчен вĕренсе, пурнăçа конкретлă тата чылаях анлăн уçса парасшăн. Хăш-пĕр сăнарсем психологи тĕлĕшĕнчен ĕненмелле тухнă. Сюжет та, чăваш литературинче пĕрремĕш хут, чиперех аталанса пыма тытăнать. Анчах кунта этнографилле «каласа пани», натурализм вăйлă. Реалистла характер сăнлама авторăн социаллă ăнланăвĕ те, çынсен этемлĕхĕпе вăйне ĕненни те çителĕксĕр. Сюжет тĕввине автор кирлĕ пек вĕçлеймест. Хăйĕн хĕрĕн телейне çиекен пуян çине, «турă çырнипе», мачча кашти хуçăлса анать. Мулшăн çунакан карчăк чикĕсĕр пÿкле вилĕмпе вилет. Çапах та, реалистла пиçсех çитмен пулин те, ку — шăтма тытăннă повеç, е урăхла каласан, «романран туртса кăларнă сыпăк».

Юркин ал çырăвĕсем кун çути курайман, çак тарихчченех вĕсем архивра выртнă.

1905—07 çç. революци çеç вырăс мар халăхсен тăвăлса çитнĕ демократиллĕ тата нациллĕ ыйтăвĕсене кăшт тивĕçтерме пултарать. Чăваш историйĕнче пĕрремĕш хаçат — «Хыпар» — тухма пуçлать (1905—07 çç.). Анчах реакци хаçата хăвăрт хупса хурать. Оригиналлă, прогрессивлă шухăшлă произведенисем пичетлеме пачах чараççĕ. Ивановпа Шупуçсынни çырнисене халăх юмах-халапĕсен шутне кĕртсе кăларма тивет. («Сказки и предания чуваш», 1908 ç.; «Бросьте курить табак и пить водку», 1911 ç.).

Пĕрремĕш революци роман çырăнмалăх услови туса параймасть.

Роман вăл — *историе тата кулленхи пурнăç йĕркине чи çывăх жанр.*

Этемĕн ăшри туйăм-суйăмĕсене уçса паракан лирикă та, геройсен принциплă тытăçăвне кăтартакан драмă та хăйĕн содержанийĕпе романран абстрактлăрах. Вĕсем ĕмĕртен пыракан ыйтусене лартаççĕ, формипе этем психологийĕпе ытларах килĕшсе тăраççĕ. (Тен, çавăнпах пулĕ, Шекспир драмисем çеç мар, Софоклăн «Эдип-патши» те халичченех сценă çинчен анмаççĕ, Петраркăн сонечĕсем çеç мар, Эзоп юптарăвĕсем те хальхи вулакана кăмăла каяççĕ.)

Пурнăçăн конкретлă тĕсĕсемпе пурнăç философийĕ авалхи эпопейăра пысăк вырăн йышăннă пулсан, «урăх саманари эпопейăра» — романра — саманана историлле ăнланни тĕп вырăн йышăнса тăрать. Реалистла роман историллĕ концепцисĕр вăйлăн аталанма пултараймасть.

Акăлчансен романĕ Англи историне тишкерекен Вальтер Скотт произведенийĕсемпе чечеке ларать. Французсен романĕ Бальзакăн «Этем комедийĕ» текен романĕпе, француз обществи 30 çул хушши мĕнле улшăннине сăнласа кăтартакан романĕсем хыççăн вăй илсе каять. Вырăссен классикăлла романĕ Пушкинăн историллĕ произведенийĕсенчен пуçланать. Пушкин хăй вăхăтĕнчен обществă аçталла кайнине пĕлес тесе, Российă историйĕн чи пысăк çул юпписене — Борис Годунов чухнехи «пăтранчăк вăхăта» («Борис Годунов»), I Петĕр патшалăха Европă çулĕпе янине («Арап Петре Великого») — тĕпчесе тухать. «Евгений Онегин» та, унти геройсем хушшинче пĕр историллĕ çын çук пулин те, Белинский калашле,— «историлле» произведени.

Пушкинсăр тата Белинскин вырăс обществи çулне тĕрĕс ăнлантаракан философийĕсĕр, вырăссен социаллă-психологиллĕ, хăй вăхăтĕнчи темăна уçса кăтартакан романĕ те ĕрчесе каймĕччĕ (Лермонтов, Тургенев, Гончаров, Достоевский тата ыттисен романĕсем).

Чăваш романĕ пуçланса каясси те обществăра конкретлă-историлле шухăшласси аталаннипе çыхăнса тăрать. Чăваш халăх пурнăçне этнографи енĕпе XIX ĕмĕртех чăвашсен демократиллĕ юхăмĕн пĕрремĕш тапхăрĕнчех, чылай уçăмлăн тĕпченĕ пулсан, унăн социаллă историне тишкересси пĕрремĕш революци вăхăтĕнче тин пуçланать. Сăмахран,

К. Иванов Пăкачав вăхăчĕ çинчен çырма палăртса хурать («Çĕр вăтăр çул ĕлĕк») т. ыт. те. Паллах ĕнтĕ, чăн-чăн роман çырма çав вăхăтри писательсен обществăри социаллă хутшăнусене тĕплĕн тишкерме пĕлĕвĕсем çитеймен-ха.

Революци тапхăрĕ чăваш халăхне роман мар, лирикăпа публицистикă кӳрсе парать, драмăна аталантарма пулăшать (Акимовăн «Ялти пурнăç» ятлă пĕр пайлă сцени, К. Ивановăн «Щуйттан чури» трагеди сыпăкĕсем).

Анчах чи «пиçсе çитнĕ» жанр çав вăхăтра—поэмă. Çак жанрпа чăваш литератури чи пысăк çитĕнӳсем тăвать («Нарспи», «Хитре Чĕкеç», «Янтрак янравĕ» т. ыт. те).

КĂВАК ХУППИ УÇĂЛЧĔ...

1.

Мĕншĕн-ха Октябрьти революциччен ытти жанр мар, *поэмă* вăй илсе аталаннă?

Тулашĕнчен пăхсан, ку питĕ ансат пек туйăнса каять: пичетлеме май пулман та, прозă та çырăнман, тейĕн. Пирĕн шутпа, пĕрремĕш революци вăхăтĕнче «Нарспи» евĕр поэмă шăранса тухни çиелти сăлтавсенчен çеç мар, халăхăн çав вăхăтри хăй евĕрлĕ ăс-тăнĕнчен те нумай килнĕ. Хут пĕлекен çынсем сахал пулнипе е тата ытти сăлтавсемпе те чăваш литератури чи малтанах хресченсен масси çине тĕревленет. Çакăнта унăн вăйĕ те—халăха çывăх пулни,— вăйсăрлăхĕ те — тематикă ансăр пулни — палăрса тăрать.

Ытла та йывăр тата тĕттĕм пулнă-ха хресчен пурнăçĕ. Революцилле кĕрешĕве рабочисенчен ытларахăшĕ çекленнĕ пулсан, хресченсенчен вара, Ленин шутланă тăрăх, пĕрре пиллĕкмĕш е пĕрре тăваттăмĕш пайĕ çеç хутшăннă.

Йĕрен ывăнса килсен, хресченсене хăйĕн чун-чĕрине çунатлантарса çĕклентерме юмахри паттăрсем кирлĕ пулнă. Чĕре ыратнине эмеллеме таса хитрелĕхпе чечеклĕ фантази юрăхлă пулнă. Чăн та, ашкăнчăк Кукша Иван — нимĕнле улăп та мар, пурнăçри ахаль çынах. Анчах мĕнле йывăрлăхсене çĕнтерсе хавхалантармасть-ши вăл çынсене?

Айван улпута, ун «арăмне вăрларĕç» тесе ĕнентерсе, «тĕнче пĕтесрен» хурăна тĕревлесе тăма хăварать те хăй ун лашисемпе килне вĕçтерет («Кукша Иван»); чиркӳре турăшсен тутисене вăрттăн хăйма сĕрет те пупа турăшсене хĕнеттерет («Пуппа тарçи) т. ыт. те.

Эппин, Йăван тăшманĕсем — айван-ха. Йывăрлăха çĕнме пурнăçри пек мар ансат пулса тухать. Çак юмахла çăмăллăхпа, суя кулăшпа сын хаяр тĕнче умĕнче хăйне лăплантарать. Пĕтĕмлетсе каласан, хресчен масси «тасарах» илеме юрататъ.[1]

Пĕрремĕш революци чăваш хресченĕн моралĕпе эстетикине çĕнĕ йăла, çĕнĕ туйăм кĕртсе хăварать: активлă пулмалли, кĕрешмелли, этем чысне вараланăшăн касарма юраманни çинчен вĕрентет. Тăшман мăшкăлласан, кӳренес, ӳкĕнес е сакăнса вилес выранне, халĕ ĕнтĕ ăна революци опычĕ пусмăрçăсене хирĕç тăма хушать. Фольклортра шăпах çак вăхăтра тăшмана ылханни, хресчен хăйĕнчен хăй тăрăхлани, иронипе сатирă вăйланаççĕ.[2] **Ку вăл чăваш халăхĕн хăйне евĕрлĕ тапхăрĕ — патриархла-идеаллăрах шухăшсенчен реалистла шухăшсем çине куçса пынă тапхăр пулнă. Поэмăран ытла мĕнле жанр-ха çав тапхăрти шухăш-туйăма кĕвĕлеме юрăхлăрах пултăр? «Поэмă идеаллă тавралăха сăнласа парать тата пурнăçăн чи çӳлĕ саманчĕсене ӳкерсе хăварать»,—тенĕ Белинский. Ку çеç те мар, Ивановпа Шупуççынни поэмисен меслечĕсем те çав ĕмĕр пусламăшĕнчи чăваш обществин идеаллăрах тĕнче курăмĕнчен килнĕ.**

Çапах халăх массисемшĕн эстетикăлла чи пиçсе çитнĕ япала вăл çав вăхăтра демократиллĕ шухăшкăмăл пулнă. Чăваш çынни пусласа хăйĕн вăйне куракан пулать, хăйне этем вырăнне туйса илет. Тĕнче уншăн кăвак хуппи пек илемлĕн уçăлса каять. Ку — этем чĕрĕлни, шанчăк сӳнменни, ытарлăрах каласан, «Чăваш Возрожденийĕ». Ахальтен мар «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ сăвă, калав, статья ячĕсем те чĕрĕлӳ çинчен калаççĕ: «Çуркунне», «Чăвашсем улшăна пуçларĕç», «Çутта тухасчĕ», «Пурнăç çутти» т. ыт. те. Ахальтен мар «Нарспи» поэмă та çуркуннерен пуçланать. Поэт чăтаймасăр:

> **Çакă сутă тĕнчере**
> **Вăйли çук та этемрен.**
> **Шывсем çинче, çĕр çинче**
> **Хуçа пулса вăл тăрать,—**

тесе ярать.

Анчах çав «возрождени» ытла та кĕске: куç умĕнчех-çке-ха революцие путараççĕ, йывăр-ха çынсене этем пулса çĕкленме. Революцие пула, социаллă танмарлăха поэт çивĕччĕн ăнланса илнĕ; хыттăн хирĕçлет вăл укса-тенкĕ йăлисене, çемьери домостройла йĕркесене; сивлет вăл «усал тĕнчене», анчах — ăçталла каймалла? Уççи-хуппи курăнмасть. Çапах та этемĕн хăйĕн телейĕшĕн, тивĕçĕшĕн кĕрешме кирлине поэт кăмăллать.

2.

«Нарспи» авторĕн эстетикăлла тĕнчекурăмĕ халăх поэзине çывăх. Ахальтен мар К. Иванов ытларах Кольцов сăввисемпе Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине» килĕштерет. Тĕнче икĕ тĕрлĕн курăнать: таса хитрелĕх тата унăн нĕрсĕр начар енĕ.

Геройсем — вăйлă туйăмлă, пысăк кăмăллă, хăйсен шухăшĕ-ĕмĕчĕсене вĕçне çитиччен пурнăçлас шутлă. Ĕçĕ-тăвăмĕ те вĕсен чылаях идеаллă.

Сетнерпе Нарспи «ирхи реализмăн» геройĕсем майлă. Йĕри-тавра хăйсен юратăвне таптакан «усал тĕнче» пуррине пĕлсен те, вĕсем «икĕ вăйлă алли» çине шанса, ниçта каясса пĕлмесĕр, вăрмана тараççĕ. Темĕн те тӳссе çирĕпленнĕ хĕрарăм, Нарспи, Тăхтамана вĕлернĕ-вĕлермен савнийĕ патне тухса чупать. Ял çыннисем умĕнче хăй айăпне сирмелли çинчен тата кун пек никама пĕлтермесĕр тухса тарсан, ун çине шутлама, ăна айăплама пултарни çинчен вăл аса та илмест. Ун пек конкретлă-историллĕ шухăш (Нарспине арестлесе тĕрмене хупма пултарасси т. ыт. те)поэмăра пуça та пырса кĕмест[3].

---

[1] «Тасарах илем» тес вырăнне эпир малалла «идеаллă» сăмахпа усă куратпăр. Художествăлла «идеализаци» тата «типизаци» меслечĕсем текен терминсем хальхи совет литературоведенине кĕнĕ ĕнтĕ. «Идеализаци» меслечĕ фольклорта тĕп вырăн йышăнать, çавăнпа та хăш чух эпир ăна «фольклорла» меслет те тейĕпĕр.

[2] Сăмахран: «Васли амăшĕ ылханать хытă патшасен пуçне çĕр çăттăр тесе» («Çерем пăсаççĕ»); «Эпир кунти çынсем мар, Энтри пасар панчисем, Антракăшман ялĕсем те, Ухмах Йăван ачисем» (150 стр); «Ирĕксĕрех кайма лекрĕ çĕнĕ çĕре»... (143—144 стр.) т. ыт. те. («Чăваш фольклорĕ», 1949 ç.) Пурнăç йывăрлăхне тӳррĕн сăвăласа калама пултарни хресченĕн ăшри вăйĕ ӳснине пĕлтерет.

[3] Паллах, кашни произведенирех çакнашкал ситуацисене пурне те тĕпĕ-йĕрĕпе уçса пама кирлĕ мар. Анчах «Нарспире» ăнсăртран мар «чи çӳлĕ самантсене» çеç илет поэт!

Ку трагеди те, антикăри трагеди пек,—геройсем хăйсен çылăхĕсемшен турă янă айăпран пĕтнĕ пек ăнсăртран вилсе пĕтнипе вĕçленет. Вĕсен вилĕмне реалистла сăлтавлани тăрăх мар, идеаллă туйăм тăрăх кăтартнă: ун пек таса ĕмĕтлĕ çынсем ку тĕнчере пурăнаймаççĕ.

Вăхăт историлле шуса иртни курăнмасть-ха. Нарспипе Сетнер трагедийĕ пулать-иртет, анчах мĕн улшăну кĕртет вăл ял пурнăçне? — паллă мар.

«Нарспи» чăваш обществине «урлă» касса уçса пăхнă: ун хуçалăхне, йăлисене, культурине, çынни-сене яланхи, ĕмĕрхи паллисемпе кăтартнă.

1905—07 çç. революцин демократиллĕ-гуманистла вăйне курнă поэт тĕнчен куç умĕнчи картинисене юмахла пысăклатмасăр, мифологиллĕ улăпсемсĕр, тĕрĕс сăнлать. Çапах та вăл тĕнче çине çамрăк ача пек «тап-тасан», чечен хитрелĕх е нĕрсĕр илемсĕр-лĕх витĕр, кăшт фольклорла пăхать.

Чи илемлĕ, идеаллă туйăм вăратасси «Нарспи» поэмăн пафосне кĕнĕ.

«Çӳлте пĕлĕт айĕнче,
Тари юрри илтĕнет,
Çемçе курăк çийĕнче
Путек сурăх сиккелет...
. . . .
Тăрă шывăн âшĕнче
Кăвак пелĕт явăнать.
Вата йăмра танăлса
Тĕсне пăхса савăнать».

Ку вăл — çутçанталăк пуянлăхĕ çеç мар, чăваш чунĕн хитрелĕхĕ те.

Епле кăмăлтан савăнса, «юрла-юрла» тĕрĕ тăвать, пир тĕртет, çĕлет, хăна валли апат хатĕрлет тата Нарспи! Малтан, хĕрача çенеççĕн ĕçленине кăтартнă май, кĕвĕ те ярăнать: иле-ет те, лара-ать те, ты-та-а-ть те... Ала хĕрсе кайса выляна чухне — ритм та «тĕпреленсе» каять: «пер кĕрет те пĕр тухать», «çĕвви шăрçа пек пулать», «çипне тирет çĕррине...»

«Нарспи»» поэмăра тĕнче çав тери пуян: куçа савакан асамат кĕперри пек тĕссем, сăмсана кăтăклакан ырă шăршăсем, таврана ян-ян яран кĕмĕл шăнкăравлă сассем, кайăк чăрлатнисем, вăрман кашланисем... Сăвăпа кăтартма чи йывăр япаласене — панорамăпа хусканăва — *поэмăра тĕлĕнмелле çăмăл* сăнланă. Кашни действи валли малашлăх, художник калашле, «сывлăш» пурри туйăнать.

Поэтпа пĕрле эпир тупери тари юрланине илтетпĕр, таса шыв ăшне те тинкеретпĕр, туй лавĕсем çывхарнине аякран илтетпĕр («ял вĕçĕнчи сĕм вăрман темĕншĕн пит янăрать»), пиçсе тухнă апат-çимĕç шăршие урамранах туятпăр. Вата çын пĕр выраăнта сиккелемесĕр ларнине тĕлĕнмелле палăртнă: урайĕнчи хĕвел çути «шуса-шуса пырать те» кăвак пуç çине сиксе ларать... Старикĕн йывăр шăм-шакĕ хускана пуçласан, сăвă ритмĕ те аран-аран йăраланать:

Унтан старик чăрăнса
Шухăшласа тăчĕ те,
Кĕрĕкĕпе çĕлĕкне
Сакки çине хучĕ те...

Вата çын сывлăш çавăрса каласнă май вулакана та сывлама йывăрланать: поэмăра пĕрремĕш хут фразă строфăра шăнăçмасть, сывлама чарса тăрать...

Тĕнчене çакăн пек пур енчен те — унăн тĕсне, сассине, шăршине, панорамипе хусканăвне — пĕр харăс, тытса пăхас килмелле туллин, *пластикăлла* сăнлани демократилле тата нацилле çĕкленӳ тапхăрĕшĕн питĕ характерлă. Пурнăçа юратнă чухне эте-мĕн пур сисĕмĕ те вăранса каять, пур çĕрте те вăл килĕшӳлĕх, çыпăçулăх, тăрă канлĕх шырать.

Анчах Иванов социаллă тĕнчере гармони çуккине те курать. Вара, чĕрери йĕрке пăсăлсан, çутçанталăк та хăйĕн сивĕ тĕсĕсене кăтартма, хурланчăк сассине пама тытăнать: *çапах тĕнчепе çын ăш-чикки хушшинче килĕшӳлĕх таталмасть иккен.*

Малтан çанталăк Нарспи килтен тарса кайнă чухне пăсăлать: «Çил тухать те çил каять, выçă кашкăр пек ӳлет»... Хĕрача ĕмĕрлĕхе савнийĕнчен уйрăлса ют çĕрте, Хушăлкара тăрса юлсан, çутçанталăк та хăйĕн ирĕксĕррĕн ванакан сăнĕсене кăтартать:

Хирте ака айĕнче
Çерем лап-лап касăлать...
Хирте çава айĕнче
Курăк вăш-ваш йăванать...

Çын вĕлерне хыççăн — чи пысăк йĕркесĕрлĕх, тĕнче ишĕлни, ахăрсаман тапранать...

Нарспипе Сетнер пăвăннă пек асапланнине кăтартма вăрман тискеррĕн ахăрать. Этемле мар хăрушă сассем — а-а-а! ш-ш-ш! х-х-х! р-р! с-с-с!—пыр тĕпĕнчен тухнă пек улăшаççĕ. Ку вăл — усал вăйсен туйĕ, асар-писерлĕх тапса тухни, вилĕм ташши. Ку вăл сăвă кăна та мар. Ку — живопиçпе музыкă хутшăнса янăрани.

Çак сценă чăвашăн мирлĕ те кăмăллă характерĕшĕн питĕ кăтартуллă: çынна вĕлерни — чи усал, чи хăрушă япала, чăнах та, пĕтĕм тĕнче кисренни...

3.

Идеаллă туйăм поэмăн композицийĕпе архитектоникине кристал пек кĕрнеклĕ тунă. Вăл чăваш характерĕн пысăк çыпăçулăхĕ, пластики тăрăх аталанса пырать.

Çуркуннене сăнланă чух çара савăнăç çеç мар, кăшт хурланчăк туйăм та пур. Иртнине, сивĕ хĕле шеллемесĕр чăвашăн сисĕмлĕ чунĕ çĕннипе хыттăн савăнма вăтанать.

Пурте кунта нӳремлĕ, вырăнлă, кăнттам мар. Поэмăра 14 сыпăк, кашни сыпăк 20-шер йĕркеллĕ строфа çине пайланать, строфа — куплетсем çине. Кашни строфа уйрăм пĕчĕк темăна уçса парать, куплет — пĕрер шухăша е пĕр туйăмлă пĕчĕк картинăна. Куплет форми фольклорла параллелизм патне туртăнать.

Сыпăк нихăçан та хăй «темине» уçса çитермесĕр, хăйне валли «канлĕх» тупмасăр вĕçленмест, е — хĕрӳленсе çитнĕ туйăма мĕнпе те пулин лăплантаратех. Çапла, тăпăр-тăпăр сикекен шавлă туй çинчен калакан сыпăка пат! чарса лартман, ăна вĕçлеме автор ӳсĕр старик сăнарĕ тупать. Ват çын ыйăха путнăçемĕн вулакана та туй шавĕ вăйсăрланнă пек туйăнать. Çемçе кулăш («выртнă çĕрте сиккелет, анчах тăма вăйĕ çук») туй шухăшне пачах сĕвĕртсе хăварать.

Сăмах майĕн старик сăнарне кĕртсе, автор тата тепĕр ĕç тăвать: туй хыççăн тӳрех сюжетпа çыхăнсах тăман юмăç-старик çинчен калама, çĕнĕ сыпăк пуçлама ĕнтĕ пĕрре те «тӳрккес» мар, çыпăçуллă.

Хăш чухне кăна çак классикăлла кĕрнеклĕх йĕркерен тухса ӳкет, анчах, музыкăри диссонанс пек, çак «пăсăк» вырăн хăй те пурнăç йĕрки пăсăлнине туйтарать.

Ака Сетнерпе Нарспине вăрмантан тытса килеççĕ те çыхса хурса саламатпа ислете пуçлаççĕ, унтан хăйсен намăссăр ĕçне, пите кĕççе çĕлесе, ташăпа путарма тăрăшаççĕ: «тăпăр-тăпăр тăпăртăк, атьăр шепрех туй тăвар!» Шăп та шай çакăн пек чухне строфăра икĕ вĕçленмен йĕрке тĕнкĕлтетсе юлаççĕ

Акă туй та çакă туй,
Пысăк туй та пăсăк туй!

Илемсĕр япалана пĕлтерсе, кĕвĕ юриех «шăхăртса» хăварать.

Поэт пур çĕрте те килĕшӳлĕхпе гармони тăвасшăн. Хăш-пĕр сивĕ ăс-тăнлă çынсемшĕн ытлашши пек туйăнĕ поэмă вĕçĕ умĕнхи икĕ сыпăк: вĕсенче Нарспи Тăхтамана вĕлернĕ хыççăн темшĕн каллех Тăхтамана вĕлерме Сетнер шут тытни çинчен каланă,— сивĕ ăс-тăна çав, гармони туйăмне м...р. Килĕшӳлĕх туйăмĕ Сетнере те асапланма хушать. Унăн та Нарспи тунă «хура ĕçĕн» хăрăмне сĕртĕнсе пăхмалла. Иккĕшин те вĕсен пĕр пек айăп пулмалла.

«Нарспи» поэмăна, унăн музыкăлла нӳремлĕхĕ енчен, оперăпа танлаштарма пулать.

Пуçламăшĕ — увертюрă майлă. Савăнакан çутçанталăк хăйĕн вăркăшуллă чĕрĕ хитрелĕхĕпе Нарспин телейлĕ çамрăклăхне ĕнĕрет. Çак увертюрăра автор хăйĕн философиллĕ шухăшне каланă, социаллă йĕркесĕрлĕхсене систернĕ. Оперăри пекех, пĕр евĕрлĕ кĕвĕсем çаврăнса пырса аталанни пур. Тăхтаман арăмне хĕненĕ чухне кĕвĕ саламат чăвăшлатнă май янăрать.

Хĕнех, хĕнех Тăхтаман...
Асаплантар, Тăхтаман.

Нарспи упăшкине наркăмăш парса вĕлернĕ чух каллех çак чăвашлатнă сасăллă ритм илтĕнсе каять:

Çиех, çиех, Тăхтаман...
Пĕтрĕн ĕнтĕ, Тăхтаман.

Çак кĕвĕ Тăхтаманăн усал ĕçне аса илтерсе, Нарспи айăпне сирме пулăшать.

Акă тата тепĕр «кĕвĕ» — ватă йăмра сăнарĕ. Лаштра йăмра, чăваш ялне илем кӳрекен, вут-çулăмран сыхлакан ешĕл йăмра...

Малтан вăл, тăрă шыв ăшне пăхса, хăй тĕсĕпе киленет. Каярах ун айĕнче Сетнерпе Нарспи тĕл пулаççĕ. Юлашкинчен, поэмă вĕçĕнче, çак поэзиллĕ йывăç каллех тухса тăрать: ун çинче çакăнать Нарспи, «анне-йăмрана» çеç шанать вăл хăйĕн тăлăха тăрса юлнă пуçне...

Çапла, хĕвелпе, тĕнче чĕрĕлнипе пуçланать те поэмă... вилĕмпе, хура çĕрпе вĕçленет. «Тăпру çăмăл пултăр!» тенĕ пек, юлашки куççуль тумланать:

Ялан, çумăр çумасан,
Шыв сапаççĕ тăприне.

«Нарспи» поэмă халăх реалистла илемлĕх патне туртăна пуçланă вăхăтра, тĕнче идеаллăрах курăннă вăхăтра çыраннă. Çавăнпа поэт фольклорпа питĕ анлăн усă курнă. Поэмăра халăх юррисенни пек сăвă ритмĕ, эпитетсем, метафорăсем...

Поэмă чĕлхи, кулленхи калаçу чĕлхи пулсан та — халăхшăн «илемлĕ» шутланакан чĕлхе. Сăмах çаврăнăшне ытларах хăнара е халăх умĕнче калаçмалли çыпăçуллă «чĕлхерен» илнĕ. Вăл уйрăм формипе те хитре калаçу: «Усал сăмах илтменччĕ», «Ялта ятăм кайманччĕ», «пĕртен-пĕрех пуçăм пур» т. ыт. те. Поэт халăх чĕлхин «хатĕр» ылтăн пĕрчисене суйласа пуçтарнă та якатса татах илемлетнĕ.

Поэмăри ырă геройсен психологийĕнче чăваш ĕç халăхĕн чи хӳхĕм енĕсем, сывлăм тумламĕнчи ирхи хĕвел пек, курăнса тăраççĕ. Чăваш характерĕн идеалĕ — кулленхи пурнăçра çемье педагогики вĕрентсе ӳстерекен лайăх енĕсем — вăл çакă: ĕçе тĕплĕн туни, йĕри-тавралăха сăнама, пур япала çинчен те пĕлме тăрăшни, çынна кӳрентерме, ашкăнма юратманни; тĕрĕслĕхе, ырлăха хытă ĕненни, усаллăхран вутран хăранă пек хăрани, ăшри хĕрӳлĕх,— пĕр сăмахпа, таса та ăшă кăмăл.

Пиншер çул ĕмĕтленсе, пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, чĕлхине, пĕтĕм культурине, педагогикине кĕртнĕ шухăль, таса илем çак поэмăра хăйне валли тивĕçлĕ формă тупнă. Çавăнпа «Нарспие» халăх хăйĕн чи юратнă, чи чаплă поэзийĕ тесе шутлать.

Нарспи портречĕ — юрă-сăвăра ĕç халăхĕ тахçанах тупса хунă хӳхĕм хĕрача сăнĕ: сарă чечек пек пичĕ, кайăк сасси евĕр янăравлă сасă, хура шăрçа пек мăшăр куç, çӳхе тутисем, çирĕп сывлăх, акăш утти... Нарспи усă кăмăллă, хăнасене хапăл пулни, ĕçченлĕхĕ, вăр-варлăхĕ — чăваш педагогикин пĕрремĕш тĕллевĕсем. Нарспин кашни хусканăвĕ чăвашла илемлĕ, чипер. Асăрханă-и эсир? Вăл вăййа тухма тумланнă чухне сăвă ритмĕ те çепĕç, хĕрачан ачаш ĕмĕтлĕ хусканăвĕсем евĕр. Нарспи юратăвĕ — чăвашла хитре юрату: вăл цыган хĕрĕ Земфира вĕрин чуптуни те мар, вырăс Катеринăн сутă ĕмĕтлĕ те чарайми туйăмĕ те мар, тутар хĕрĕ Галиябану уççăн юратни те мар. Чăваш юратăвĕ — вăтанчăкрах, ăшри тытăм енчен — хытăрах, çавăнпа çепĕçлĕхĕ ун çиелтен мар, пĕтĕм ăшран тухать. Нарспи Сетнере çав тери юрататă пулсан та, хăй туйăмĕ çинчен сăмах вакламасть. Уйрăлас умĕн çеç «сана тем пек юратса, савса эпĕ пурăнтăм» тесе ярать.

Хăйне ашшĕ çичĕ юта сураçса хунине пĕлсессĕн те, Нарспи малтанах «йăваланса макăраймасть-ха», «вăрттăн-вăрттăн вăл йĕрет». Сетнер ун ашшĕ-амăшĕ çинчен çиленсе калаçсан, Нарспи: «Ан ӳпкелешсем, Сетнер, мĕншĕн çынна ӳпкелес?», тет. Кунта эпир чăваш çамрăкĕ ют çынна, ваттисене мĕн таран хисеплеме вĕреннине туйса илетпĕр.

Астунă-и эсир, кӳршĕ арăмĕ ытла та тӳрккес, нĕрсĕр, персе ярсан: «Мĕншĕн Нарспи хуйхăран? Каччу ытла ватă-им? Парнӳ ытла сахал-им?» тесен, Нарспи сăмах чĕнмесĕр утнине? Таса юратăва ăнланми пулнă, кĕççе пек хытнă чунсемпе питлешсе чăваш хĕрĕ ятне те вараламасть.

Эпир, чăвашсем, историлле условисене пула, йывăрлăха ытларах ăшра тӳссе ирттерме вĕреннĕ. «Пирĕн ăшра вут çунать, çулăм тухни курăнмасть», тесе ахальтен юрламан ĕнтĕ. Маркс, Флеровский (Берви) историк çырнă «Положение рабочего класса в России»[1] текен кĕнекене тишкĕрнĕ чухне, чăвашсем çинчен калакан йĕркесене («Хусан кĕпĕрнинче чи лайăх çĕр ĕçлекенсем — чăвашсем») палăртнипе пĕрлех, тутарсем çинчен каланă çак йĕркесене палăртса, чĕрсе хунă: «Тутар çынни... пуринчен те хăй ирĕклĕрех, шăллăрах; вăл ăçта пынă унта меллĕрех пурăнма тăрăшать».

Эпир, хамăрпа юнашар пурăнакан тутарсемпе танлаштарсан, чуна ирĕке ярса, хамăр савăнăçшăн пурăнма вĕренеймен-ха. Чуна ытларах хистени, калас тенĕ шухăша ăшра тӳссе ирттерни, вăтанчăклăх пирĕн пурах. Наци хăюлăхне, этем мăнаçлăхне ӳстерессси хальхи вăхăтра та пирĕн идеологиллĕ тĕп задачăран тухса ӳкмелле мар. Коммунизм тума хăюллă, вăйлă, ирĕк чун хаваллĕ çынсем кирлĕ. Паллах, ку психологи социаллă йывăрлăхсенчен килнĕ, пурнăçри условисем улшăннă май вăл улшăнса пырать. Революциччен вăл вăйлăн палăрнă. Ăна вырăссен демократиллĕ писателĕсем те асăрханă. Вĕсем çыннăн трагедийĕ пирĕн час-часах кĕтмен çĕртен, сасартăк, çав вăхăтрах ытла та хăрушшăн, вĕçне çитиччен пулса иртнине сăнанă.

---

[1] К. Маркс ку кĕнекене пысăк хак панă. (К. Маркс и Ф. Энгельс сочин. т. XXIV, 292 стр.).

Н. Г. Гарин-Михайловскин «Сарпи» пьесинче чăваш хĕрĕ Сарпи, савнийĕ улталанине пĕлсен, кĕтмен ҫĕртен хăйне шăнтса вĕлерет.

Н. Д. Телешовăн «Тип шар» повеҫĕнче чăваш тарҫă Максимкă, курайман тăшмана тавăрас, «тип шар» кăтартас тесе, ун пӳлĕмĕнче ҫакăнса вилет.

Ҫапла, Нарспи те «вĕсне ҫите пуҫласан *йăваланса* макăрать». Ашшĕ-амăшĕ хăнк та тумасан — савнийĕпе тухса тарать... Ҫавăн пекех Тăхтамана ирĕксĕр качча парсан та, малтан вăл ҫухăрашмасть, улăшмасть: «мĕскĕн арăмĕ тӳсет асапсене *чĕнмесĕр»,* анчах «вĕсне ҫитсен»—хăй тăшманне вĕлерсе хурать. Революцин мораллĕ урокĕ Ивановшăн ахаль иртмен: усала активлăн хирĕҫ тăма кирли Нарспи сăнарне те кĕрет. Поэмă вĕҫнелле вăл педагогикăн чи ҫӳлĕ норминчен, идеалран тухать. Упăшкине вĕлерекен хĕрарăмăн, чĕрĕ юлса та ырă герой пулас тесен, ирĕксĕрех хăй евĕрлĕ пурнăҫ тӳссе иртерме, психологилле чĕрĕ йĕрсем туянмалла.

Акă Нарспи хăй кун-ҫулне пăхса тухма тытăнать, туй умĕнхи конкретлă сцевăсене аса илет. Характера чи «йӳҫĕ» лару-тăрăва кĕртсе ярсан, ун идеаллă «ӳт-тирĕ» ҫурăлса каять. Йывăрлăх тӳснĕ хĕрарăм сăнарĕ ҫуралса тухать.

Ҫак тĕлте психологиллĕ детальсем йышланаҫҫĕ, туйăмăн уйрăм саманчĕсем курăнса каяҫҫĕ, лирикă «тĕпренсе» психологиленме пуҫлать. Тăхтамана наркăмăшлă яшка сĕтел ҫине лартса панă чухне, Нарспи яшка *пăсланнине асăрхать.* Тăхтаман вилсен, «пӳртри сĕтел-пукансем пайтах *пăхрĕҫ шеллесе* хуҫин сивĕ виллине» (Г. Х. палăртнă.) Тĕттĕм пулсан Нарспие вилен алли *вăрăмланнă* пек курăнать.

Асса кайнă вăрманта нумайччен асапланнă хыҫҫăн, Сетнерпе Нарспи тĕл пулсан — идеаллă туйăм тăрăх — «канлĕх» ҫитмелле пек. Чăн та: «Икĕ савни пĕрлешсен, пуҫне тайрĕ ват юман»... Анчах Нарспи ăшĕнче хăрасси, дисгармони, иртмен-ха. Унăн тĕшмĕше ĕненекен чунне кăтартма каллех психологилле деталь тупнă:

> Анчах вăрман ăшĕнче
> *Хура кайăк чăйлатать:*
> Ай Тăхтаман, Тăхтаман,
> Нарспи чунне вăл шырать!

Идеаллă тĕнче кисреннĕ хыҫҫăн пурнăҫăн конкретлă тĕсĕсем уйрăмăнах интереслĕ пулса каяҫҫĕ. Эпитетсем, сăмахран, прозăллă та интереслĕ, вĕсен ăшри типлă пĕлтерĕшĕ тухса тăрать:

> Сетнер *пĕчĕк* пӳртĕнче
> Вĕсем иккĕш лараҫҫĕ.
> Лутра сĕтел хушшинче
> Каҫхи апат тăваҫĕ.

«Пĕчĕк пӳртпе» «лутра сĕтел» кунта «сарă чечекпе» «хура шăрҫа» пек таса хитрелĕх ҫинчен мар калать, Нарспишĕн хаклă, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт ҫитнине пĕлтерет. («Ҫĕр хут ытла телейлĕ юрлă ҫын та пуянран», тенине конкретлă сăнлама пуҫлать ĕнтĕ автор).

Ҫапла, «Нарспи» *чухăнсен моральне ҫĕклесе, чăваш халăх эстетикине те малалла ярать: «начар» япала хăйĕн чăн пĕлтерĕшĕпе лайăх, ырă, хитре япала пулма тытăнать.*

Нарспин ҫирĕпленнĕ, вăйлă характерĕн енĕсем, тулашĕпе «хитре» мар пулсан та, чăн илем пек курăнса каяҫҫĕ. Чăнлăха тӳррĕн калама, йăлăнма мар — хушма пултарать ĕнтĕ вăл.

Ана хăй тăшманĕсемпе — ашшĕ-амăшĕпе — куҫакуҫăн тăратса драмăллă ятлаҫтарма та май пур ĕнтĕ:

> Мĕншĕн ҫапла ху хĕрне
> Парса ятăн кашкăра?
> Саншăн ҫав пур ырăлăх
> Мĕн пурĕ те укҫара...—

тет Нарспи ашшĕне. Характер хăй евĕрлĕ уҫҫăн палăраймасть пулин те, вăл кăшт туйăнать.

Михетерпе карчăккин те психологилле характер пурри сисĕнет. Михетер — ял хушшинче хăйне хисепрен кăларассинчен хăракан, чăваш юмăҫĕсемпе килĕштерсе пурăнакан патриархла кулак. Вăл тарҫисене ҫеҫ ĕҫлеттермест, хăй те «пичĕ тăрăх тар юхтарать». Вулăр-ха тепĕр хут вăл Нарспие ӳкĕтленине: епле чее тактик вăл, хĕрĕн кăмăлне ҫавăрма епле ăста!

Михетерĕн хăйне евĕр чĕлхи пур; мулшăн ҫунни ăна витĕр ҫапнă: «мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан юрататăн Сетнере?» — тет вăл, хăй те сисмесĕр.

Михетер карчăкĕ упăшки пек хăйне васкамасăр тытса, тавраран ҫӳрекен ҫын мар. Вăл, кĕске турталлăскер, ҫапă пек хăвăрт ҫатăртатса каять. Асĕпе те, чĕлхипе те ҫивĕчскер, пĕрремĕш сăмахĕнчех чухăн ҫын ырă ята тивĕҫсĕр пулнипе тĕксе илет:

> Ялти ырă ҫынсенчен
> Кунта тесе илтрĕмĕр...—

тет. Сетнере вăл «ĕҫре хытнă аллине» тĕксе кӳрентерешĕн. Старикки ирĕке ярсан, ун чараксăр чĕлхи ҫатăлтатма пуҫлать: «Сетнер, йытă, кĕҫҫе пит, пуян хĕрне ан хапсăн», «хĕрӳ ҫине сур ĕнтĕ», «пĕтĕр, типĕр ҫакăнта, типĕр хăрăк турат пек! Шăммăр-шаккăр ҫĕриччен, асапланăр йытă пек!»

Поэмăра тин пулма пуҫланă тата тепĕр типлă сăнар пур: юмăҫ сăнарĕ. Калаҫăвĕ ун — чăваш юмăҫĕсен профессиллĕ чĕлхи: халăх ăслăлăхĕпе витĕнсе, яка та татса калакан философиллĕ «тарăн» та хăрушă сăмахсем. Анчах ку «оракул» хакшăн тавлашать, «юлашкинчен тин вара мăшăр чăлха, кĕпе» парассипе килĕшет. Ҫынни тухса кайсан: «Суйса парас тенĕччĕ, ак тамаша, тĕрĕс-шим?» тесе иккĕленсе ларать. Хырăмне тăрантармалăх «суя сăмах суйяса улталаса яраттăм» текен чăваш юмăҫĕн типĕ ку!

5.

Ҫапла, пĕрремĕш революци урокĕсем тата вырăс литератури вĕрентĕвĕ Ивановшăн пысăк шкул пулса тăнă Обществăн социаллă хирĕҫĕвне вăл курать. Силпи ялне илемлĕн сăнласшăн пулни («Силпи ялĕ пуян ял»... «Кантур пекех ҫурчĕсем» т. ыт. те) автора унти йывăрлăха тупма чармасть. Ялта чухăн ҫын «шăтăк-шăтăк», «пĕчĕкҫеҫҫĕ» пӳртре пурăнать. Пуян киленче тарҫă-тĕрҫĕ вăйран кайса ĕҫлет. Кулак чухăна вĕлерес пек тулама пултарать. Упăшки арăмне ҫын вырăнне шутламасть. Ҫак йĕркесĕрлĕхĕн сăлтавне автор тĕппипех ăнланман пулин те, вăл укҫа-тенкĕ йăлисенче, самана никĕсĕнче пулнине систерет («Савăнăҫ ҫук ку тĕнчен», «Ҫапла-тĕр ҫав самани»).

Домостройла-патриархаллă кивĕ йăласене сивлесси, ӳссе пыракан капитализмăн укҫа-тенкĕ принципĕ ҫынна пăснине хирĕҫлесси, пуян-кулак моральне гуманизм ячĕпе критиклесси — поэмăн тĕп шухăшĕ.

«Нарспи» авторĕ фольклорла идеализацилекен меслетрен реализмла меслете куҫма хăйне евĕр питех те оригиналлă утăм тунă: юмахла ҫăмăллăха пăрахăҫа кăларнă, кулленхи пурнăҫа, ахаль ҫынсене поэтизацилеме тытăннă, ҫынсен социаллă тата уйрăм характерне те кăшт кăтартнă.

Ҫапах хăй евĕрлĕ характер — тип ҫуралса тухаймасть-ха. Геройсен уйрăм биографийĕ ҫукпа пĕрех. Сетнер сăнарĕ произведени тăршшипе те идеаллă

нормăран тухаймасть. Нарспие «хура ĕçшĕн» кaçарма, ун хăтланăвĕсене хӳхĕмрех тума тăрăшнă, ун тăшманне, Тăхтамана, этем ĕренки çук пек хуратнă. Тăхтаман хайхи савман каччă çеç мар, ватă çын та чунсăр этем пулса тăнă:

> Лаптăк сăмса, хĕсĕк куç,
> Сарă çӳçпе сар сухал;
> Лаши вĕçсе пырупа
> Пичĕ-куçĕ пит усал.

Вăл арăмне «йытă вырăнне» хурать, «Куллен-кунах... саламатпа кастарать», этемле хăтлану ун çук та темелле.

Поэмăра *«ирхи реализм»* *принципĕсем пуç пулса тăраççĕ.*

Иванов фольклора пĕлекен массă валли, пĕрре итлесе асра юлмалли сăвăсем çырнă. Паллах, çав вулакансене Михетерпе Тăхтаман пек чăваш типĕсен *социаллă биографине тата психологине* тĕпчесе пĕлни кирлĕ пулайман-ха.

Çавăн пирки ĕнтĕ, чăвашра, ăнсăртран, роман çырма услови пулнă пулсан та, вăл характер аталанăвĕ çинче никĕсленсе тăман пулĕччĕ. Çак шухăша пирĕн кӳршĕсен — тутарсен — малтанхи романĕсем те çирĕплетсе параççĕ.

Хăшĕ-пĕри кунпа килĕшмесĕр тăма пултарĕ: «Çĕнĕ жанра «алла илесси» пĕр писатель пултарулăхĕнчен кăна килмест-ши? Вăл аслă литературăсен опытне ăнăçлă вĕренессипе çеç çыхăнса тăмасть-ши?» — тейĕ.

Чăн та, çамрăк литературăшăн этемлĕхĕн унчченхи опытне вĕренни — пĕчĕк ачана алă парса уттарни пекех. Çапах та ача утма пуçласси ытларах организм тĕрекленнинчен килет.

Художник пĕтĕм чун-чĕререн хăй тавралăхĕпе, йышĕпе, халăхĕпе çыхăнса тăрать, ун ăс-тăнне, психологине, чĕлхине шута илсе çырать. Сăмахран, роман-эпопейă текен жанр вулакансемшĕн ăнланма пачах йывăр чухне, çав жанра алла илесси писатель пуçне те пырса кĕмест.

Обществăра кирлĕ пек услови çитĕнмесĕр, çĕнĕ жанр та тымар яраймасть.

ВĂЙ-ХАЛ ПУХНИ

Этем ăш-чикĕнчен йывăрлăх сирĕлсен кăна, вăл чун-чĕрипе вăйлансан, унăн кулленхи пурнăç хакĕпе илемне пĕлес килсе каять. Вăл ĕмĕте юмахра та таса пĕлĕт çинче мар, «прозăллă» тĕнчере шыра пуçлать. Иртнипе хальхин çул йĕрĕсене ним йĕрĕнмесĕр тишкерме тытăнать. Вара тин историлле интерес пуçланать.

Халăхсем те çавăн пек.

Аслă Октябрьти революцире чăваш халăхĕ нацилле тата социаллă пĕртанлăх туянчĕ. Кая юлнă культурине хăвăрт малалла яма пурлăх-ырлăх енчен тивĕçлĕ услови илчĕ. Шкулсемпе больницăсем, музейсемпе библиотекăсем, театрсемпе клубсем (малтан — «халăх çурчĕсем»), хаçат-журналсем—çак пур канал тăрăх та малта пыракан цивилизацин сĕткенĕ тăван чĕлхепе халăх ăс-тăнне кĕре пуçларĕ. Чăваш ĕç халăхĕ хăй вăйне туйрĕ çеç мар, этем тивĕçне хăй аллине тытрĕ. Анчах ку ĕнтĕ — историре пулман çĕнĕлле «чĕрĕлӳ»: уйрăм талантсем мар, пĕтĕм ĕç халăх культурă тума май илет.

«Историе халĕ хăйсен ирĕкĕпе миллионшар тата вуншар миллион çынсем тăваççĕ»,— тенĕ Ленин 1918 çулта. Халĕ ĕнтĕ ĕç халăх массин историе çĕнĕ куçпа курасси-пĕлесси килсе каять. Нациллĕ хĕнхур тӳснĕ халăхсен, вĕсен шутĕнче чăвашсен те, ку историллĕ интерес тата вăйлăрах: вĕсен çырнă истори пулман: вĕсен «кĕнекине ĕне çинĕ». Камсем эпир? Камсем пулнă эпир? — акă этем шутне кĕнĕ халăхăн пĕрремĕш ыйтăвĕсем.

Чăвашра нациллĕ-историлле интерес хĕрӳллĕн сарăлса пырать.

Чăваш йăхĕ-тĕпĕ ăçтан пуçланса кайни çинчен, халăх пăлхавĕсем çинчен кĕнекесем, статьясем йышлăн пичетленеççĕ (вĕсем хушшинче йăнăш шухăшлисем те нумай пулнă). Ашмарин ученăй Атăлçи пăлхар чĕлхин тĕпренчĕкĕсем тăрăх чăвашсем авалхи пăлхар халăхĕ пулнине тĕпчесе пĕлнĕ, халĕ ун теорийĕ массă хушшине сарăлать. Ф. Павлов композитор венгри музыкинче чăваш кĕвви йĕрĕсене шыраса тупать. Пулас сатирик Иллариус (Иван Мучи) халăх вăййисемпе йăлисенче драмă элеменчĕсем тупса кăларать т. ыт. те.

«Çĕнĕ вăйсем чĕрĕлсе пыни, вĕсем Совет Российинче çĕнĕ искусствăпа культурă тăвасшăн ĕçлени— аван вăл, питĕ аван,—тенĕ Владимир Ильич.— Вĕсем çав тери хăвăрт ӳссе пыни питĕ ăнланмалла, вăл усăллă. Пирĕн çĕршер çул кая юлнине пĕтермелле, пирĕн хуса çитмелле».

Культурă çамрăккине шута илсен, çав вăхăтри интерессем тĕлĕнмелле анлă, сарлака: Колчакран тăрăхласа кулакан сатирăран пуçласа 26 Баку комиссарĕн вилĕмĕ пирки хуйхăракан поэмă таран; Пугачев сăнарĕнчен пуçласа чăваш театрĕнче Бомаршепе Шиллера тăван чĕлхепе выляса кăтартни таран! Хĕрӳллĕ романтизм тата свифтла чунран ахăлтатса кулни, юмахри пек чечеклетсе сăнлани тата пурнăçăн вичкĕн чăнлăхĕ — хăш самана, мĕнле шĕвек юлнă классицизм ĕмĕрĕсем танлашнчĕр çак революцилле вăй тан тапнипе!

Ун чухне кашни писатель искусствăн чи тухăçлă «йăранне» шыраса тупасшăн. Çамрăк писатель Лашман 1924 çулта çĕнĕ эпопейă «Улăппиада» çырма сĕнет, юмахри Улăп-паттăр хальхи героикă валли чи килĕшӳллĕ япала тет пулас. Анчах большевиксен партийĕ çакна асăрхаттарать: чи пысăк паттăрлăхпа ĕмĕте чи вичкĕн, тăрă куçпа пăхса практикăлла ĕçленипе çыхăнтарса пырас пулать. Интервенци, граждан вăрçи, кулак пăлхавĕсем, Атăл тăрăхĕнчи 1921 çулхи выçлăх, хресчен çĕршывĕнче социализм тума йывăрри — çĕнĕ саманари мĕн пур кăткăсланнă ыйту çĕнĕлле, *конкретлă-историлле* шухăшлама хушать.

Çав вăхăтрах националистсем историре халăхпа халăх вăрçса пурăннă пек çеç кăтартасшăн. «Вырăс, тутар, калмăк-кăркăс, ытти çичĕ ют халăхсене пусмăрлама памасăр... çапăçнă пирĕн асаттесем»[1],— тесе çырать Юман, чăвашсем паттăррине кăтартас тесе, вăрçăна класс енĕпе ăнлантарма манса.

«Ялан сирĕн патăра ытти халăхсем янă çынсем килсе тăнă. Вĕсем сирĕн нушасене, сирĕн чун ыратнисене пĕлмен, пĕлесшĕн те пулман... Ют çын вăл ют çын нушине епле пĕлме пултартăр... Патша вăхăтĕнче те вăл çаплаччĕ, халĕ те вăл çаплах»[2], «вĕрентет» чăвашсене Милли 1919 çулта.

1920 çулсенче чăваш историографийĕнче палăрнă националистла йăнăш ковцепци литературăна чылай сиен кӳнĕ. Çапах çĕнĕ обществăлла ăс-тăна чарса лартма пултараймам.

Совет писателĕсемшĕн ĕнтĕ демократилле тĕнчекурăмпа демократилле гуманизм çеç çителĕксĕр. Çыннăн çынлăхне кăвак хуппи пек курса кайни, ăна юратса сăнлани сахал. Этеме телейлĕ тăвасси пуянăн «хытă чунне» питленипе е çемьери усал йăласене хирĕçленипе çех пулмасть. Саманана никĕсрен витĕр курмалла. Этемшĕн кĕрешес тесен, ун

[1] «Шурăмпуç» журнал 1919 ç. 2, 44 стр.
[2] Унтах, 37 стр.

валли тĕрĕс социаллă çул кăтартмалла, конкретлă-историллĕ условисене шута илме вĕрентмелле, уйрăм харпăрлăх танатине пĕтерме пĕлмелле.

Марксизм-ленинизм философине вĕренмесĕр, историе тĕпчемесĕр çĕнĕ ĕмĕр пурнăçне тĕрĕс çутатса пама май çук.

Социализмла революци уйрăм çыннăн кулленхи пурнăçне пĕтĕм обществă уттипе тата таччăнрах пĕрлештерсе ярать. Çак çĕнĕ çыхăнусене тĕрĕс кăтартма пурнăçăн уйрăм енне, пĕр-пĕр пайне çеç пĕлни сахал. Ăна кăтартма роман форми те урăхлараххи кирлĕ.

Çирĕммĕш çулсен варринче чăваш литературинче жанр тĕлĕшпе пĕр интереслĕ улшăну пулса пырать: пуян традициллĕ поэзи историлле пысăк тематикăна кая юлса пыракан прозăран маларах ярса илет. Поэзире (кăштах драмăра та) эпикăлла тата историлле туртăм вăйланать. Эпир уйрăммăнах Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмипе (1923—1930 çç.) Шупуççыннин «Еркĕнĕ» (1926—1928 çç.) çинче чарăнса тăрасшăн. Историк те çутатса парайманччĕ-ха аякри чаплă ĕмĕре — Пугачев вăхăтне — икĕ поэт ăна сăвăлласа çырса кăтартма хăюллăн пуçăнаççĕ.

Анчах ку поэмăсене пĕр-пĕрне пачах хирĕçле меслетсемпе çырнă. Мĕнле меслетсем-ши вĕсем?

Акă Шупуççыннин эстетикăлла тĕнчекурăмĕ:

Çăл кусĕнчи тăрă шыв
Ирхи çилпе йĕрленет,
Çăлтан тухса юхан шыв
Хумханать те тӳрленет.

Çамрăк хĕрĕн таса юн
Тӳлек юхать клеткере,
Тĕл пулать çеç тепĕр чун —
Иртет канлĕх чĕрере...

Çапах поэт кунта канлĕх иртнине мар, хуйхă-суйхăна мар, чĕрери килĕшӳлĕхпе çутçанталăкри хитрелĕхе ытларах сăнлать. «Çăл кусĕ», «тăрă шыв», «ирхи çил», «таса юн» — пурте фольклорти таса илеме ĕнерекен кĕвĕсем. Епле çăмăл вылянать-çке сăвă ритмĕ, ташлас килсе каймалла:

Тĕпри лаша тĕпретет,
Çул варрине çĕмĕрет.
Икĕ пичев пĕр пекех
Çул чаваççĕ сиккипех.

Шупуççыннин чĕрĕ картинăна туйтарас таланчĕ пысăк. Идеаллă таса хитрелĕх унăн — улшăнса, юхса тăракан япала:

Пĕрчийĕсем чăр-чар туни
Юн тумланăн туйăнать.
Атăл çине сăнĕ ӳкни
Вут-кăвар пек курăнать.

Ку поэт — художествăлла импровизатор. Пĕрре туйса илнĕ картинăна, çав пĕрремĕш чĕрĕ сисĕм сӳниччен, вылянă пек сăнласа пама пултарать. Аспапуçпа вакласа тăмасăр, туйăм зăратнă сăмахсене вăять кăна (пĕр енчен, художествăлла сисĕме шанни поэта тĕлĕнмелле ăнăçлă миниатюрăсем тума пулăшать, тепĕр енчен — туйăма ытлашши ирĕк панипе вăл ăнсăртран аса килнĕ сценăсем, сăмахсем кĕртсе хăварать). Акă — сисĕм эрешленĕ тĕлĕнмелле миниатюрă:

Улма пахча — сат пахчи,
Ярăм çеçки — пан улми,
Шăрши-маси — тăхлачи,
Тути-маси — куками.

Халăх юрри-сăввипе çывăх çак меслете, идеаллă илем курма тăрăшаканскерне, Иванов традицийĕ теме пулĕччĕ (поэт «Нарспи» авторĕнчен вĕренсе пыни чăнах та туйăнать). Анчах мĕне хитрелетет-ха Шупуççынни çакна май? Чăваш улпучĕ Урха иккен чи чаплă та хитре сăрăсемпе сăрланаканĕ. Ăна автор, пултаруллă та паттăр чăваш тесе, сывлăш çавăрайми мухтать:

Кам илтмен ун çинчен?
Кам пырсан пуç таймасть?
Кам пурлăхне ас тивмен?
Кам çиллинчен сыхланмасть?

Вулакан астăвать пулĕ: «Нарспире» автор Михетер пурлăхĕпе ним чухлĕ те киленместчĕ, чăваш пуянĕ хăй: «мĕнĕм çук-ши çуртăмра?» — тесе мухтаннăшăн кăна ун пуянлăхне тĕрĕссипе çырса кăтартнăччĕ; автор кăмăлĕ ялан «пĕчĕкçеççĕ пӳрт» енчеччĕ — эппин, автор хăй Урха пуянлăхĕнчен тĕлĕнсе, чăваш хăватне касса кайса мухтать. Урха патне Çĕрпӳри «хвицерсем» çӳреççĕ, ăна Шупашкарти воеводă хăнана чĕнет. Вăл, тавçăруллă чăваш. кирлĕ чухне «хытса» тăмасть: акă, чухлайман çармăссенчен кĕмĕл читлĕхри хур акăшне сутăн илес тесе, хăйĕн икĕ кĕсрине сутса ярать. Ку экзотикăлла тĕлĕнтермĕш япалана Урха майра-патшана парнелет. Армире офицер пулнăскер, вăл «обществăра» та хăйне тыткалама ăста. Хăйĕн çаврăнăçулăхĕпе, хитрелĕхĕпе вăл майра патша пуçне çавăрать.

Çийĕнчен тата, вырăс тĕнне йышăннă пулсан та, арăмĕ хистенипе, чăваш тĕнне те пăрахмасть. Çавăншăн вырăс пупĕсемпе Шупашкар воеводи ун çулне картлама тăрсан, вăл тĕрмерен те хăтăлса тухать. Кун хыççăн кам калама пултарĕ Урха «паттăр турхан» мар тесе?

Поэт-демократ революциччене Михетерпе Тăхтаман пек çĕрме пуянсене укçашăн сутăннă кĕççе чунсем тесе питленĕ пулсан, Шупуççынни, хăй те кулаксене сахал мар питленĕскер, «Еркĕнре» вара чăваш улпутне, дон-жуанла çăмăлттайла ăнăçсем тунăшăн, пĕлĕте çити хăпартса ярать.

Шупуççынни улпутсем пусмăрçăсем пулнине ăнланман мар. Идеологи фронтĕнче социализмшăн сахал мар ĕçленĕ çын, вăл класс хирĕçĕвĕсене курать.

«Еркĕн» поэмăрах Урхан тарçисем «шар курнине» асăннă, «çич хĕрарăм чурара» пулни çинчен каланă. Акă, майра-патша Шупашкара пырсан, чăваш çамрăкĕсем ăна хирĕçлев хучĕ парасшăн кĕпĕрленсе тăраççĕ. Вĕсем куланай нумай сăптăрнине хирĕç, пăрлă шывра тĕн кӳртнине хирĕç пăлханаççĕ. Каярахпа халăх Урхана хирĕç кĕрешӳ пуçласа ярать, «Пăкачав» вăхăтĕнче ăна çакса вĕлерет.

Çапах та автора националистсен сĕреки хупăрласа илетех. Урхан чăвашла паттăрлăхĕпе, хăюлăхĕпе, уçăмлăхĕпе ниме пĕлми савăнать поэт. Анчах Урха сăнарĕ иккĕлле ăнланмалла пулнишĕн Шупуççынни килĕштерекен идеаллă меслет — фольклорла ансатлăх та «айăплă». Урхана пĕр харăсах икĕ хирĕçле тĕспе сăрланă: поэмăн пĕрремĕш çурринче — çутă тĕспе, каярах, пăлхавçăсене сценă çине кăларсан, ирĕксĕрех Урхан киревсĕр ĕçĕсене кăтартма тивнĕ, вара ăна хура тĕспе лаплаттарса этем ĕренки çук «тăшман» пек туса хунă. Çавăнпа Урха сăнарĕ пĕр сăраллă илемлĕ сăнар пулса тăрайман.

Идеаллă меслет çителĕксĕррине Шупуççынни хăй те туять. Хăш чух вăл пурнăçа пĕтĕм «сĕлтĕшĕпех» поэмăна кĕртсе ярасшăн. Анчах прозăллă сăнсем кунта килĕшмеççĕ, мĕншĕн тесен ытла та халаплаюрăлла пуçласа янă вăл поэмăна.

Хăй евĕр юмахла хитреччĕ-ха Урха сăн-пичĕ. Анчах ахахсем хушшинче кĕтмен çĕртен мунча чулĕсем курăнса каяççĕ:

Вăрăм яштак пӳ ҫинче
Хура ҫӳҫлĕ *тăрăх* пуҫ.
Тӳркен сăмси ик енче
Икĕ ҫутă чакăр куҫ.

Ҫак юмахри паттăртан «сурчăксемпе сирпĕтсе» калаҫасса та кĕтменччĕ эпир. Анчах ку... Урха-ха, тейĕпĕр.

Акă Ентимĕр, автор шухăшĕпе — чăн идеал, пăлхавҫă, «Пăкачав тусĕ». Мĕнле сăрăпа сăрланă-ши ку паттăрăн сăн-питне?

Пичĕ-куҫĕ тăваткал,
Кăвак куҫсем *чармака*
. . . .
Анлă кăкăр-ҫурăмсем,
Каска пекех урисем.
. . . .
Ҫĕр вăкăрĕн сассипе
Пухă уҫать чĕлхипе.

Улăпла сăнарсене кура, эпир илемне те юмахла тасан, чеченĕн курасшăнччĕ. Анчах пĕр чăваш та ҫак сăн-пите чипер тесе йышăнмĕ. Ҫавăн пекех, Ентимĕрĕн «хаяр тути йăл кулчĕ» тени те персонажа ялан хаярланса, усалланса ҫӳренĕ пек кăтартать.

Кун пек прозăллă вак-тĕвеке идеаллă хитрелĕхпе майсăр пăтраштаракан килĕшӳсĕр вырăнсем поэмăра сахал мар.

«Нарспире» шăпăр кĕвви кайăк пек вĕҫетчĕ те ҫемҫен, сăпайлăн чăйлататчĕ:

Ярăнтарса — явăнса
Шăпăр кĕвви...

(Асăрхăр-ха сăвăри сасăсен ылмашăвне, епле шăпăр кĕвви майлă янăрать вăл: малтан «ярăнтарать», унтан ҫӳле вĕҫтерет: ăпăррĕвви-и!) Ун хыҫҫăн ҫеҫ ӳсĕрсем тăпăртатни урайне янрататчĕ:

. . . . . ташлатать.
Ырă хуҫа хушнипе
Туй халăхĕ туй тăвать.
Туй халăхĕ туй туса
Ывăнать те савăнать...

(т-т-т)

«Еркĕнре» вара музыкă тенин ним латти-сыппи те ҫук:

Шăпăр сасси уласа,
Хирти ҫил пек йынăшать,
Кĕҫ мăн саспа шавласа
Вăрман шавĕ пек урмăшать...
Арҫури пек ахăрать,
Ҫич шуйттан пек ĕрĕхет,
Урса кайса пăтрашать...

Константин Ивановăн кулли те ăшă. Ҫемҫе, ăслă кулă: «Ҫуркуннехи пылчăк та канма ҫемҫе туйăнать...», «ҫапать паттăр лашине хăй аллинчи хуллипе» т. ыт. те.

Шупуҫҫынни кулли — ҫара, ытла тӳрккес, сипетсĕр:

Камăн кăмăл пĕсехе —
Хатĕр уншăн эрехе...
. . . .
Нирăн, нирăн нирăнна!
Аҫа патне кил ама! —

т. ыт. те.

Ҫакăн пек ула-чăла стиль пире акă мĕнле шухăша ярать: Совет влаҫĕ вăхăтĕнче ӳссе пыракан хăюлăх, паллах, нацин эстетикăлла туйăмне те малалла ярать: алăк патĕнче ҫăвар уҫмасăр тăнине халĕ никам та «сăпайлă» тесе ырламĕ. Пур ĕҫе те хакламалли виҫе абстрактлă этемлĕх, йăвашлăх, ҫыпăҫулăх мар,— конкретлă-историллĕ «кирлĕлĕх», тĕрĕс туни. Нихҫанхинчен ытларах халĕ сынна ĕҫне кура хакласҫĕ! Абстрактлă гуманизм — ăшă кăмăл, тасалăх, сынна юратни — ҫĕнĕ саманари этеме хаклама ҫителĕксĕр. Ҫавăнпа та литературăра идеаллă меслет юрăхсăра тухать. Ҫын ĕҫне-хĕлне *историлле хаклакан реалистла меслет кирлĕ*[1].

Шупуҫҫынни ҫакна туйнă, вăл тем тĕрлĕ «прозăлла» хура-марана та поэмăна кĕртме тăрăшнă, анчах фольклорла меслетне пăрахăҫлайман. Этем кăмăлне ытла та ҫиелтен ăнланнипе, вăл наци хăюлăхне те «вообще» ырлама тытăннă. Наци характерĕн формипе ҫеҫ интересленсен, паллах, абстрактлă ирĕке ырлани нумай сĕре илсе пыма пултарать: вĕскĕнлĕхпе асар-писерлĕхе тата «аслă сословин» мăнаҫлăхне мухтасси патне те, ытти халăха сĕнтерсе пуҫтахланасси патне те, вăрă-хурахла индивидуализма ырласси патне те...

Шупуҫҫынни Ентимĕрĕпе унăн висĕ ывăлĕ — шăпах ҫав абстрактлă характерсем. Вĕсен социаллă тымарне ăнланмасăр, мĕншĕн тата кампа кĕрешнине тĕпчемесĕр, пĕр шухă кăмăлне тата пуҫарулăхне (чăннипе — пуҫтахлăхне) кура ҫеҫ, автор вĕсене идеаллă геройсем туса хурать.

Вĕсем «чухăнсем», «кĕтӳҫсем» пулни пĕртте туйăнмасть. Вĕсем — хăюллă, паттăр, анчах мĕнле майпа-ха патриархла-феодалла пусмăр айĕнче этем мăнаҫлăхне ҫухатман? — кăна автор юмахла ҫăмăл ăнлантарать:

Кĕтӳҫ пиҫнĕ хĕвелпе,
Ӳснĕ уйри ҫилпеле,
Вăйлăланнă вăрманта —
Кашкăрсемпе вăрҫăра...

Ентимĕрпе висĕ ывăлĕ халăха пăлхавăр тума хускатаҫҫĕ, Пугачев хусканăвне активлăн хутшăнаҫҫĕ пулать. Анчах вĕсем, чăннипе илсен, вăрăхурахсем ҫеҫ. Вĕсем Атăл ҫинче, Качака утравĕнче иртен-ҫӳрен кимĕсене сыхлаҫҫĕ, тавар ҫаратаҫҫĕ. Хăйсен «уртипе» (ордипе) Шур Атăла ҫитиччен чашкăртса ҫӳреҫҫĕ, «тир тавраш, хаклă чул, ылтăн-кĕмĕл, хисепсĕр пурҫăн-тутăр, тĕрлĕ мул» пухса таврăнаҫҫĕ.

Ҫапла, «Еркĕн» идейи — историрен ҫуталса тухнă шухăш мар; «ҫара» хăюлăха, мăнаҫлăха, парăнманлăха историллĕ фон парса хитрелетес тени ҫеҫ. Историлĕх кунта ҫук. Пугачев вăрҫине кăтартма шут тытнă поэмăри халăх нушине кăшт-кашт ҫеҫ асăнкаласа иртнĕ. Малтан чухăна ырлама чăваш улпутне мухтани чăрмантарать; кайран, Ентимĕрсен вăрă-хурахла асар-писерлĕхне кĕвĕленĕ чухне, каллех чухăна ырлани килĕшмест: чухăн хресчен — «мĕскĕн», хăравҫă, ун «сехри хăпнă» тата вăл пуҫтахлăха мар, тĕрĕслĕхе юратать.

Вара ĕҫ ҫынни улпут туйĕнче епле савăннине кăтартнă:

Карчăк-кĕрчĕк пĕҫерет,
Хуран пăтти хатĕрлет,
Старик тени сăрапа —
Пĕрмай пăхать лакуна.

---

[1] Эпир кунта Шупуҫҫыннин пĕтĕм пултарулăхĕ пирки сăмах хускатмастпăр. Унăн талантлă произведенийĕсем ҫинчен нумай ырă сăмах каламалла. «Еркĕн» поэмăна эпир революци хыҫҫăн реализм меслечĕ мĕнле хирĕҫӳлĕхпе аталаннине кăтартас шутпа ҫеҫ тишкĕретпĕр (Г. Х.).

Ку тĕлте ирĕксĕрех «Нарспие» аса илетĕн: унта та Михетер туйĕнче ялти тантăш-тăвансен «пырĕ-тĕпĕ янăратчĕ», «тута-çăвар çуланатчĕ», «ури каятчĕ çĕкленсе». Анчах çакна аса илмесĕр хăварас марччĕ:

Килти пĕр чун хуйхине
Пĕрре вĕсем сисмеççĕ,—

тесе хак панă çав «хырăм рыцарĕсене» автор. Илемлĕхе чухлакан вулавçă çак шухăша унччен туйнăччĕ те хытă чунсем çине тарăхса пынăччĕ. «Еркен» поэмă вара пачах урăхла — хресченсем саваннине кăтартма çеç çăмăллăн кĕвĕлесе парать...

Произведенири фактсем нумайăшĕ историре чăн пулнă: II Кетерне патша 1767 çулта Хусана кайнă чух Шупашкара кĕрсе тухнă; Пугачев Çерпуре пулнă т. ыт. те. Анчах поэт историлле фактсене халапла ăнлантарнă. Самахран, XVIII ĕмĕрен 30—40 çулĕсенче, каярах та, Атал çинче чăн та вăрă-хурахсен шайккисем пулнă. Мĕнле салтавсене пула хресчен вăрă-хураха тухнă-ши? Ентимер йышĕ асас шутпа е пурлăха хапсăнса çеç кимĕсене çаратса çӳрет пек курăнать. Пугачев Хусан хыçĕнче поражени тӳсни те юмахла тухнă.

«Еркен» поэма реалистла, историллĕ мотивировкă çинче тытăнса тамасть. Халапла пуçланать те халаплах петет. Пулнă-ши чăваш çершывĕнче, уйрăмах XVIII ĕмĕрте, вырăс улпучĕсем, чиновникесем, пупĕсем килсе хĕсне хыççăн, пĕр-пĕр чăваш пуянĕн «виçмен хирсем», «чикелемен çарансем»?

Çапла вара, шупуççынни, историре пулнă событисене сырса кăтартать пулин те, идеаллă меслетрен реалистла меслете куçса çитеймест. «Еркен» художествалла ăсталăх телешĕпе кăна мар, меслечĕпе те «Нарспи» поэмăн реализмĕнчен чылай кайра тăрать.

ИЛЧĔ, КИЛЧĔ, ПАРНЕ ПАЧĔ...

1.

Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмин меслечĕ «Еркенрен» чи малтан хăйен историллĕ чăнлăхĕпе уйралса тăрать.

Иккеше те вĕсем пĕр вăхăталли тапхăра илнĕ: «Еркен» Пугачев хусканăвĕ пуçланнипе веçленет. «Хĕн-хур айĕнче» çав хускану хыççăн вунă çултан, 1780-мĕш çулсенче пулса иртнĕ событисене сăнласа кăтартать.

Анчах ăнсăртран ман вĕсенчен пĕрне — «Еркĕн» (ерешке, фаворит) ят пана, теприне вара «Хĕн-хур айĕнче», тене. Пĕри революцилле самана çине маира патша еркенĕн кун-çуле витер пăхтарать (çав героя тĕрес мар ăнланнине пула, саманине те йанăш сăнласа парать, çиенчен тата поэтăн пăтрашуллă меслечĕ кансерлет). Тепри çав историллĕ хусканăвăн тĕп вăйне—чухăн хресчене—тĕп герой туса хурать. Чаккан нушалла кун-çулĕ халăх пурнаçĕн печĕк тĕкĕрĕ пулса тăрать. «Еркĕн» авторĕ этем пултарулăхне, хăюлăхне (вĕçкенлĕхĕпе асар-писерлĕхне те уямасăр) сăнлама терле-терле кĕвĕсем тупать: ташлаттарать, юрлаттарать, лашапа чуптарать, кĕрештерет, усаллантарать, намăслантарать. Кашни сценă валли поэмăра уйрам кеве пур.

Эльгер произведенийĕ вара — йывăррăн пусса пыракан сăвăллă, чере тепĕнчен тухакан сывлашлă:

Тырри-çке пулмасть, укçи тупăнмасть,
Каçарăр паян,— теет вăл аран...

Хăйĕн васкамасăр каласа паракан стилĕпе вăл чăвашсен авалхи юрри-такмакĕсене аса илтерет.

Историлле документсене тишкерсе тата ваттисем каланисене тĕпчесе, Эльгер XVIII ĕмĕре национа-лист-историксем пек мар, тĕрĕс ăнланнă. Чăваш халăхĕ пĕр сийлĕ хура халăх пулнă тенине вăл ĕненмест. Çав ĕмĕрте чăваш турханĕсем пысăк вăйпулса тăнă пек Шупуççынни сăнласа пани те, ун шучĕпе, тĕрĕс мар.

XVIII ĕмĕрти чăваш общинисенче пуç пулса тăракансем турхансем мар пулнă. Хресченсем хушшинченех çĕнĕ «аристократи» çуралса тухать: пуянсем, çĕрме пуянсем, куштансем.

Поэмăра каланă тăрăх, «мăнланнă чăваш чăвашах çиет». Çавăн пек «мăнланнă чăваш»—Алапит пуян. Чӳклеме ĕçкиличе акă епле мухтанать вăл хăйĕн мулĕпе:

«Пин пăт тырă пур, çирĕм пăт пыл пур.
Кĕтӳпе сурăх, ултă ĕç лаши...
Кăçал çич ĕне çӳрет картара,
Утмăл купа утă çултăм пахчара».

Алапит — XVIII ĕмĕрти пуян. Российăра I Петĕр патша реформисем хыççăн хресченсен натуралла хуçалăхĕ шĕкĕлченме пуçланă, таварлă хуçалăх çине куçма тытăннă. Алапитĕн 300 тенкĕ кĕмĕл укçа пур. Вăл мĕнле пуйса кайнине уççăн калайман, анчах «шур пӳрт тулли йыш-ачасемсем маттур» тени пушă сăмах мар. Чăваш пуянĕсем ытларах йышлă çемьесенчен тухса кайнă. Унсăр пуçне, Алапит патĕнче кӳршĕ хĕрачи—«шур ӳтлĕ Альтут унтах хăйийне тăрать майласа» — тени те ăнсăртран мар. Анчах çынна ĕçлеттерсе çеç мар, куштанла майсемпе те пуять иккен Алапит. Ĕçкĕре вăл ак çапла харкашса илет:

«Пахча ман пысăк — шăп ик теçеттин,
Сан пĕчĕк пулсан, аслат эс, эппин!»

Пуян Текей, çемçен пулин те, ун хапсăнчăклăхне тĕксе илетех: «Ытла высăхсан, ялтан аван мар». Чăн, ун чухлĕ мула вăл сĕмсĕррĕн хапсăнса пурăнмасăр пухайман. Ял хушшинче çынна элеклесе путарни, ачи-пăчи кӳштесе, çынна хĕнесе çӳрени, хăй ывăлĕ вырăнне чухăна салтака ямалла туни Алапитĕн куштанлăхĕ çинчен каласçĕ.

Çапла, чăваш общини ăшĕнчех «хура халăхăн» хăйĕн хаяр пусмăрçи пуррине Эльгер поэмăра тĕрĕс те конкретлăн уçса парать. Алапит пек сăхă куштана тăван-хурăнташ йăлипе ниепле те ӳкĕте кĕртме çук ĕнтĕ. «Мул — вăл çын турри, этем — ун чури» текен йĕркепе пурăнать ун пек куштан.

Ку саманашăн паларуллă япалана—патриархаллă тĕрĕслĕх çухалса пынине — кăтартас тесе, писатель лайăх сăнар тупнă. Ку вăл — «ват çын» Тевенеш, хурăнташ йăлисене упракан, халăхăн ырă та чăнлăхлă чунĕ, ялти хисеплĕ «аслатте». Патриархла-общинăлла йăласем XVIII ĕмĕрте чылай вăйлă пулнă-ха. Анчах вĕсем ĕнтĕ, буржуаллă укçа-тенкĕ йăлисем кĕнипе, хавшама пуçлаççĕ. Чăваш ваттисем чунĕпе çĕнĕ пусмăр йăлисене хирĕçлеççĕ, çапах вĕсем те мул хуçисен аллине кĕре-кĕре ӳкеççĕ. Чи çирĕпписем, маттуррисем кăна, куштан-пуян ултавне тăрă шыв çине кăларма, халăх интересĕшĕн вĕçне çитиччен кайма пултараççĕ.

Çакăн пек социаллă-психологиллĕ тип XVIII ĕмĕрти чăваш ялĕшĕн характерлă, мĕншĕн тесен халăх пăлханнă вăхăтра ваттисен ячĕ те çĕкленет. Ахальтен мар казахсен паллă писателĕ М. Ауэзов хăйĕн «Абай» ятлă историллĕ роман-эпопейинче, XVIII ĕмĕре çывăх саманана сăнланă чух, çак Тевенеш майлă сăнарсем кăларать: ку вăл — патриархла пĕртанлăха упрама тăрăшакан Зере, Абай асламăшĕ, тата пусмăрçăсенчен мăшкăлласа юрлакан акынсем (Дулат т. ыт. те).

Тевенеш старике сăнлама поэт ăшă сăрсем тупнă. Тевенеш çынна çын çинине чăтма пултараймасть:

«Сынна айăпсăр шыва ярас мар». Пухура Алапит Чакка çине асар-писерле тăрăнсан, чухăна çине тăрсах хӳтĕлекенĕ — Тевенеш. Вăл пĕтĕм халăх умĕнче куштанăн хура ĕçĕсем çинчен калама пуçлать. Алапит ăна çапса ӳкерет. Анчах ятлă сынна çилентерни куштана хăратса пăрахать. Акă çĕрме пуян Тевенеш старик килне пырать, ун умне чĕркуçленсе, каçару ыйтать. Çак сценă — самана палли, социаллă вăйсен шайне пĕлтерекен вырăн. Общинă йăлисене тытса пыракан «ват сын» умĕнче мул хуçи хăй пуçне тайма та хатĕр. Анчах мĕн тĕллевпе-ши? Ял ăс-кăмăлне хăй енне çавăрма!..

Айта-ха, пичей, каяр ман пата.
Пăртакçă «тутли» юлсаччĕ унта.
Ĕçер те пĕрре, пĕтчĕр сăмахсем...

Çак чеелĕхре — Пугачев вут-çулăмĕн, халăх çиллин йĕрĕ те сисĕнет.

Тевенеш малтан ял-йыш хӳттине ытлашши шанать-ха, пуянсене ӳкĕте кĕртме пулассине те ытлашши ĕненет. Анчах вăл таса та тӳрĕ чунне нихçан та варалас çук. Акă мĕнле хуравлать вăл Алапите, ун чеелĕхне сиссе:

Каях, кирлĕ мар санăн шерпетӳ!
Пулинччĕ пĕрре ултавсăр чĕлхӳ...

Намăс курнă Алапит, çиллине чараймасăр, тинех чăн шухăшне уçса кăтартать:

Питех хирĕçсен, палла эс мана:
Эс мар ял хуçи,— хуçи ак вăл — ку!
Чакку мĕнĕпех ăсатăп, асту!—

тет хăйне кăкăртан чышса.

Чăнах та, Алапит ялта хуçа пулнине вăраха ямасăр çирĕплетет: Тевенеше, пăлхавçăсене хӳтĕлет тесе, тĕрмене тыттарса ярать.

Çапла, XVIII ĕмĕрĕн мул урапи патриархла тĕрĕслĕхе хăй айне пĕтĕрсе чикет...

«Хĕн-хур айĕнче» поэмă патшалăх пусмăрне те историлле тĕрĕс кăтартса парать. Улпутла-монархиллĕ патшалăх—чăваш хресченĕсен тĕп пусмăрçи. Куланай пусмăрĕнчен хресченсем вăрмансене тарса пытанаççĕ.

Вĕсем тарса çухалнин сăлтавĕ — куланай тӳлевĕ шутсăр пысăкланни, патшалăх ĕçĕсене ĕçлеттерме таçта-таçта çити (Петербург, Баку, Гилянь...) сĕтĕрни тата 25-шер çула салтака илсе кайни. Анчах «патша тарçисем, усал пуçлăхсем кунти кĕтессе те пуçланă çитме»:

— Часрах куланай! Куланай!.. тесе,
Чухăн халăха пăвнă тек майран.

Патшалăх пусмăрĕн тепĕр уйрăмлăхĕ вăл — чиновниксем халăха уççăнах çаратни. XVIII ĕмĕр историйĕн кашни страници тискер ултавпа, саламатпа, юнпа сырăннă. Çак крепостла пусмăра Эльгер тĕрĕс те художествăлла çивĕччĕн сăнласа парать. Вăрмансем кăкласа çĕр тунисем, курăс-чĕренче сутнисем, Шупашкара тĕрлĕ тавар турттарма тытăннисем — XVIII ĕмĕршĕн питĕ характерлă явленисем.

Çапах хресченĕн тăкаксене витме укçа çитмест. Куланай укçи час-часах темиçе çулшăн пухăнса каять. Вара патша йыттисем хресчене вĕлериччен тулласа тăкма та пултараççĕ...

Эльгер произведенийĕ нациллĕ пусмăра та кăтартать. Патша самодержавийĕ вырăс мар халăхсен чĕлхипе культурине те, тăван йăлисемпе тĕнне те путарса пынă. 1740—64 çç. Атăлçи халăхсене «хĕреспе тата хĕçпе» йышăнтарнă христиан тĕнĕ халăх чунне кĕмен. «Тĕне кĕртес» сăмах халĕ те чăваш чĕлхинче «мăшкăллас» е «асаплантарас» тенине пĕлтерет. XIX ĕмĕр вĕçне çитичченех, чиркӳ ĕçне чăвашла туса пыма пуçличчен, халăх «вырăс тĕнне» ĕненмен, сивленĕ.

Эльгер çырса кăтартакан вăхăтра — XVIII ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕнче — çак хирĕçӳ ытла та çивчĕ пулнă. Поэмăра кăтартнă тăрăх, турăшсене тĕнсакайне пăрахаççĕ, туррин куçне шăтараççĕ. Пуппа тиечук чăваш ĕçкине пырса кĕрсен, хăнасем тĕпĕрт! киле саланса пĕтеççĕ. Сĕмсĕр пупĕ сынсене ирĕксĕррĕн сăх-сăхтарать. Вăрçа-вăрçах вырăсла кĕлĕ юрри юрлаттарать. «Киремет вилнĕ — хоспоть пор!» тесе янрашать.

Миссионерсене халăхăн тăван йăлисене таптани çитмест, вĕсем, тӳре-шарасем пекех, сăткăн сăтăрçăсем иккен. Акă Чакка хĕрес çакса çӳременнине курнă пуп ăна каторгăна ярассипе хăратма пуçлать, е, 3 тенкĕ парсан, çырлахтарма пулать, «Укçа памасан, виç пуç выльăхна тытатпăр»,—тет вăл. Ку — суя хăрату маррине Чакка аван пĕлет.

Çакăн пек хĕсĕкре пурăнать, тӳсме çук йывăрлăх тӳсет чăваш чухăн хресченĕ. Поэмăра пурте историлле чăнлăхпа çыраннă, пурнăçри пек ĕненмелле тухнă. Автор пурнăçăн тĕп япалисене (çĕр, вăрман, пурлăх, ĕç хатĕрĕсем...), социаллă условисене самана викĕсне хывать. Писатель обществăна марксистла ăнланать. Тĕрĕс тĕнчекурăм Эльгере XVIII ĕмĕрĕн чи характерлă енĕсене тупма пулăшать.

Чакка, Алапит, Тевенеш т. ыт. те, Энгельс сăмахĕпе каласан, «чăнах та пĕр-пĕр класс тата историллĕ юхăмсен сыннисем, апла пулсан, çав вăхăтри идейăсен представителĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсен сăлтавне пули-пулми аппаланнинчен мар, хăйсене çĕклесе пыракан историллĕ юхăмран тупса кăлараççĕ».

Чакка патша стройне хирĕç кайни — хăй еккишĕн çеç хăтланни мар. Историллĕ йывăр условисем ăна хирĕçтерсе янине эпир аванах куртăмăр.

2

Анчах герой мĕн таран художествăллă характер тип пулса тăнине пĕлме унăн социаллă тата историллĕ енĕсене çеç шута илни сахал-ха. Паллах, обществăна историлле тĕрĕс ăнланнисĕр реалистла эстетикă пулма пултараймасть. Çапах та реалистла художествăллă меслет пĕр унран çеç килмест. Ку чăн-чăн илемлĕхе писатель историлле конкретлăх таран *чун-чĕрепе туйма пултарнинчен, ун чунĕпе ăс-тăнĕ çĕнĕ илеме курма ӳссе çитнинчен те килет.*

Илемлĕх туйăмĕ ĕçре çуралнă: япала мĕн чул ĕçе юрăхлăрах, çавăн чул илемлĕрех курăннă. Çĕçĕ аври алла вырнаçуллăрах пулсан, вăл хитререх туйăннă, сĕтел пичĕ якараххи, шăрпăксăртараххи капăр курăннă.

Чăваш вун икĕ пушăт çăпатине ахальтен мар юратнă: ун вĕтĕ те шăт-шăт йăллисем ăна шăрçа пек курăннă.

Пурăна-киле, практикăна тĕссем те яваçаççĕ. Малтан — çутă е сарă тĕссем хитререх туйăннă: вĕсем уяр çутçанталăкри ăшă та çутă хĕвелĕн ырлăхне аса илтернĕ. Ахальтен мар чăвашăн чи ырă та хитре эпитет—«сарă»: сарă хĕвел, сарă чечек, сар ача, сарă хĕр, сарă тĕнче, сар кайăк... Хура тĕсе авалхи сынсем юратманни фольклорта та курăнать: хура тĕспе усал-тĕселе, курайман тăшмана, хĕн-хура сыхăнтараççĕ. Хура тĕс пĕчĕк ачасене мĕнле хăратать, çавăн пекех авалхи этеме те тĕттĕмлĕхпе хăрушлăха аса илтернĕ. Тĕнче тĕсĕсене практикăна яваçтарнăçемĕн (хура лаша, хура тикĕт), этем те хура тĕсе «хитрелетнĕ»:

Хура тĕсе ан хурлăр,
Уйра пухра хуп-хура,—

тесе юрланă чăваш хĕрĕ, япалан хитрелĕхне унăн чăн пĕлтерĕшĕпе курмаллине кăтартса.

Амма тиркен эс савни?
Хура тĕсе тиркетне?
Хура сукна хулара
Ыр хуçасем çийĕнче,—

тет ĕнтĕ маттурланнă чăваш хĕрĕ.

Эппин илемлĕх япалан *пĕлтерĕшпе* çыхăнса тăрать. Сăмахран, ункăллă-ункăллă çĕлен, тĕрĕс симметриллĕ пулсан та, ун чăн пĕлтерĕшĕ — хăрушă, сиенлĕ; çавăнпа вăл хитре мар. Тĕнче формисем этемĕн ирĕклĕ те ырă ĕмĕтлĕ вăй-халне туйтарса тăрсан çеç, вĕсем илемлĕн курăнаççĕ.

Анчах пурнăçра «хатĕр» те «тулли» хитрелĕх ытла та сахал: çиссе тăракан панулмиех хăш чух ăшĕнчен хуртлă, сăн-питрен чипер çынах—кăмăлĕпе начар. Хальхи этеме «хатĕр» илемрен ытларах илем *епле пулса кайни* интереслентерет. Чĕрĕ çутçанталăкри пек çуралса, аталанса, ÿсĕнсе пурнăçри пек «тасамарлăхпа», йывăрлăхпа хутăш, анчах çав йывăрлăхпа кĕрешсе, тĕрекленсе пырать те ĕнтĕ чăн-чăн илем. «Улăхри сарă чечексем» пек хĕрачасем, «Атăл хăмăшĕ» евĕр пĕвĕсем, «шăрçа пек» куççем, «акăш уттисем» чĕрĕ çыннăн чунне мар, çиелти ÿт-пĕвне те конкретлăн кăтартаймаççĕ. Хальхи историлле шухăшлакан этемлĕхе чăн пурнăçри илем кирлĕ. Чăнлăха тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмесĕр, çав хитрелĕхе курма çук.

Мĕнле илемлĕх шыраса тупать-ха Эльгер хăйĕн произведенийĕнче?

Поэмăн малтанхи сыпăкĕнче историллĕ фон панă: XVIII ĕмĕр вăрманлă чăваш çĕршывĕ, ялĕ... Анчах епле уйрăмлăх кунта «Нарспипе» танлаштарсан. «Нарспире» кăвак пĕлĕтпе тăрă шыв, ачашланакан çурхи çанталăк; Эльгер поэминче — *историлле уйрăм тапхăршăн* характерлă «хутăш» илем: курăк айĕсемпе юхакан —çут тĕкĕр пек тăрă шывпа пĕрлех — «шурлăха çăрса» çÿрекен луççем, «лапсак, çăмламас, хаяр упасем» т. ыт. те. Яланхи хитрелĕхрен ытларах автор самана паллисене курасшăн: тискер, тĕкĕнмен çĕршыв, çав вăхăтрах — айванла çамрăклăх та.

Яштак чăрăшсем вăрман айĕнчен
Пăхнă кармашса тĕнче хĕрнелле.

Çак «тĕнче хĕрнелле кармашакан» çамрăк хăват илемĕ тулашĕнчи хитрелĕхрен, вăхăтлăх гармонирен темчул пахарах. Вăл — чăтлăхран çутта тухас тени. Ку илем — историллĕ прогрессивлăрах.

«Хĕн-хур айĕнче» поэмă 1923 çултах çырăнма пуçланă. Вырăссен те совет саманинче историлле пĕрремĕш романсем 1920 çулăн вĕçнелле тин тухаççĕ. Чăвашăн XVIII ĕмĕрне тĕпчени вара пачах пулман темелле. Ун чухнехи самана халăх силлипе тулнă халапсем, юрă-сăвăсем витĕр туйăмлă та тĕтреллĕ курăннă. Çавăнпа Эльгер малтан эпикăллă поэмă жанрĕ суйласа илнĕ. Ахальтен мар поэмăн пирвайхи страницисем туйăм витĕр çырăннă. Вăрман «тем канашласа» шавлани символла янăрать. Тарăху витĕр вулакан умне куланай пухни, чухăнсене хĕнени тухса тăрать: «эсрелле кантур таврашсем», «тискер чуниллĕ», «сив куçлă пурмис», «аслати пек сас», «тискер чĕри», «пурмис мĕкĕрет», «çÿлелле вĕрет», «лÿпперрĕн пăхать»...

Ку сăрăсене совет литературин пĕрремĕш тапхăрĕнчи абстрактлă символикăран аякка кайнă теме çук-ха (аса илĕр-ха Малышкинăн «Даир парăннине», Маяковскин «150.000.000не»).

Анчах реалистла поэзи те идеаллă туйăма пачах йышăнмасăр тăмасть. Хальхи математикă Эвклид геометрине пĕтĕмпех суя тесе хуратса тăкман пек, реалистла эстетикăлла курăм та авалхи ансат та вичкĕн туйăма пĕтерсе хумасть, ăна уйрăм вырăн çеç парса хăварать.

Авалхи хăватлă туйăм эпопейăлла темăра та аван. Ахальтен мар Эльгер те историллĕ произведение фон пама, чухăнсен тарăхавне самана асапĕ пек кăтартма «пĕтĕмлĕрех» картинăсемпе усă курнă.

Автор ялти конкретлă-социаллă çыхăнусене уçса пама тытăннă чух тĕнчекурăм та «тăрăлать», çутçанталăк та хăйĕн конкретлă тĕсĕсемпе вылляма пуçлать:

Хура кĕркунне. Çанталăк *йĕпе.*
Ак, кайăк-хурсем карти-картипе
Киклаççĕ вĕçсе çут кăнтăр енне.
Шур акăш кĕтÿ те васкать хăй килне.
Çаралчĕ йăлтах Кушлавăш чĕрçи,
Шурать те типет ун симĕс витти.
Хурхулă пиçен çуртрисем анчах
Лараççĕ çаплах тĕл-тĕл хумханса.

Çак йĕркесенче вулакан çакна туять: Пушкинран вĕренни автора пархатарлă сиплев панă. Пушкинăнни пекех кунта лирикă «шала» кайса тунсăха ернĕ, япаласен объективлă енĕсем нумайланнă. Самана паллисене те ĕнтĕ яланхи курăмĕпе мар, пĕр *самантра* илме тăрăшнă. («Савкай мучи те...») Апла пулсан, *историн характерлă* енĕсем хăйсен кулленхи индивидуалăхне туянаççĕ; реалистла, типлă картинăсем ÿкерĕнме пуçлаççĕ.

Герой прозăллă тавралăхпа ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен хутăшса пынине кура тата пурнăç картинисем хăйсем тĕллĕн, эпосла, аталаннине кура, эпир ирĕксĕрех çак ыйту сине пырса тăрăнатпăр: роман марши «Хĕн-хур айĕнче?» Сăвăлла çырăнман-ши чăвашсен пĕрремĕш романĕ?

3.

Пугачев теми хăйĕн эпикăлла анлăшĕпе те, тĕрлĕ идейăллă геройĕсемпе те, историллĕ тарăн тымарĕсемпе те, пăтрашуллă драматизмĕпе те пирĕн шутпа ытларах роман тума юрăхлă. Эльгер çакна туйнах. Саманана тишкерсе пĕлнĕ çемĕн,поэмă жанрĕпе çак темăна уçса пама йывăрлансах пынă.

Автор ку поэмă çинчен çапла калать: «...ăна пĕрикĕ тапхăр та çырма пăрахса, çулталăкĕ-çулталăкĕпе выртарнисем пулчĕç. Анчах поэмăн малтанхи сыпăкĕсем («Сунталра») çапăнса тухнă пирки тата вулакансенчен нумайăшĕ ăна çырса пĕтерме ыйтнă пирки, ку поэмăна юлашки çулсенче те пулин çырса пĕтермеллех килчĕ. Çакăнпа пĕрлех поэмăн «Сунталра» çапăннă сыпăкĕсене чылай çĕнĕрен тÿрлетсе якатмалла пулчĕ».

Автор историлле роман патне туртăннине тата тепĕр факт çирĕплетсе парать. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна çырма пăрахса, вăл кĕтмен çĕртен 1926 çулта «Шуçăм килсен» роман сыпăкĕсем пичетлет.

Роман тумалăх «Хĕн-хур айĕнче» произведенире *саманана конкретлă* пĕлни çителĕклĕ. Уйрăм çынсен кулленхи пурнăçĕ уççăнах вак-тĕвек хирĕçÿсем çине пайланнă. Произведенире прозăллă интереслă сценăсем — хуçалăх çинчен калаçнисем, тĕлĕк курнисем, ыйтса пĕлнисем, каласа кăтартнисем — туллиех. Акă Чакка Шупашкартан... сутса таврăнсан çăпатине типтерленĕ май, арăмне ĕçĕ мĕнле ăнни çинчен пĕлтерет:

Тяпукпа Микки мулкачпа пĕрех,
Çав хуçа патне такки кĕмерĕçех.
Вĕсем ялта çех маттур та хаяр;
Вăт эс вĕсене ĕçе шанса яр!
«Эс кĕр те, эс кĕр» тесе тавлашса,
Сехет пуль тăтăмăр. Тăраççĕ хытсах!.

Акă Чакка ывăлĕ Илюш чирлени çинчен сăмах пуçланать. Мĕнрен чир ернĕ? Чакка шăллĕ Ятарин сасартăк чир сăлтавне тупса кăларать: Илюш йĕрĕх ампарĕ çине хăпарнă та хушăк витĕр шалалла пăхса вырттă!

> **Çырлахтăр анчах! Ма эс, ывăлсем,**
> **Хальччен ун çинчен пире каламан?**
> **Пĕлмен пиркиех пĕтетпĕр...**

Çак хыпар пурне те хумхантарса ярать, пурте хăй евĕр пăлханаççĕ: Тайпи ачи сывлăхĕшĕн татах хăраса ÿкет, ватă Итюкка, ĕлĕкхине аса илсе, тĕшмĕш йăлисене çирĕп тытса пымаллине асăрхаттарать. Çамрăк Ятарин, хăй айăпне туйса, кĕскен çеç хуравлать,—Чакка ним калама аптрать. Кашни герой хăйĕн психологине кăшт та пулин палăртса хăварать. Çак чир «историйĕ», тĕп сюжетпа çыхăнсах тăмасть пулин те (ăна юлашки вариантсенче кăларса пăрахнă), историлле фона вакласа, «активлатса» ярать,— самана пĕчĕк коллизисем витĕр шуса пырать. Çапла, историллĕ фон «чĕрпĕкленсе», сюжетланса каять. *«Хĕн-хур айĕнче» нумай сюжетлă роман патне туртăнать.* **Произведенин эпикăллă анлăхĕ те тĕлĕнтерет. Сăвăлла формăпа автор саманана çав тери туллин кăтартма пултарнă. Мĕн-мĕн çинчен çырса паман пуль кунта! Мĕнле геройсем çук-ши!**

Çапах та роман тума событисене анлăн, геройсене нумайăн илни тата тулашĕнчи тĕнчене конкретлăн пĕлни çеç çителĕксĕр. Эпикăлла *анлă та кăткăс характер кирлĕ.* **Хресченсен хусканăвне хăй шухăшкăмăлне «шăнăçтарма» пултаракан герой кирлĕ. Паллах, Чаккана автор çавăн пек герой тума шутланă.**

Чакка пурмис патакне çисе курать, Алапит мăшкăлне тÿсет, чиркÿ сĕмсĕрлĕхне хăй ÿт-тирĕпе туять. Çавăнпа пусмăрçăсем çине ун алли кĕçĕтсе çеç тăрать. «Ых, эсрел çынни! Епле сывалам... пуян çын кулли пулма кăтартам!»—тет те вăл, май килсенех, «тимĕр алсемпе» хăй тăшманĕсене «пăркăçлама», «тачка шăмшака туптама» пуçлать.

Салтакра пулса кăшт уçăлнăскер, çивчĕ чĕлхеллĕ Чакка «вырăсла та пăртакçă чухлать», пуçлăхсемпе сăвар уçса сăмахлама хăять, пуху умне тухса та калаçма пултарать. Апла пулсан, Чаккан халăх пăлханăвне хутшăнтармалăх чылай пултарулăх тата кирлĕ йĕрсем туянтарнă. Çапах та *роман тума* **Чаккан психологилле содержанийĕ çителĕксĕр, сăн-сăпачĕ ун шупкарах. Ун хăтланăвĕсенче хăйне евĕр психологилле вăй вылянине курма çук. Геройăн тăлăх пурнăçĕ те, салтак нуши те ун калаçăвĕнче, кăмăл еккинче конкретлă йĕр хăварайман. Вăл Пахомпа пĕрле çÿрет, анчах ним çинчен те калаçаймасть. Вунă çул каярах пулнă хресчен вăрçине те аса илмест. Тен, хăй те вăл, тăлăх каччă, ун чухне çĕмĕрттерсе çÿренĕ? Ăш-чик пăлханăвĕ те ун час-часах ÿт-тир чĕтренĕ пек çеç тухать.**

> **Усал инкекĕн кăкне курнипе**
> **Тăртаннă Чаккан алли-урисем**
> **Тăрр! туса илчĕç шăнăр туртнипе.**

Кунта Чаккан хăй евĕрлĕхĕ мар, чирлĕ çын вăйсăрлăхĕ кăна туйăнать-ха. «Шăмми-шаккинче пăчăрр! вĕри тар тухать ун тапса», «чĕтреççĕ унăн алли-урисем», «Чакка ăш-чикĕ вăркарĕ темскер», «вут пек пĕçерет Чакка шăм-шакки» т. ыт. те. Çак физиологилле тата «пĕтĕмле» характеристикăсем этем чунĕ пек «çÿхе материе» сăнлама çителĕксĕр.

Паллах, кăткăс та хирĕçÿллĕ туйăм-суйăмсене уçса пама сăвăлла формă та чарса тăрать.

Роман сăвăпа çырасси — питĕ хĕн япала; тен, вăл генииллĕ талантсене кăна алçемми. Тĕнче литературинче те ку жанр пăч-пач çеç курăнкалать... Мĕнле майпа, сăмахран, «Евгений Онегин» роман пулса тăнă-ши? Евгений Онегин интеллектуаллă герой, çавăнпа ăна саманан нумай енĕсемпе çыхăнтарма май пур. Çапах та, Евгений Онегинпа Татьяна (Ленскийпе Ольга çинчен каламăпăр та) хăйсем тĕллĕн повеç тума кăна çителĕклĕ пулнă пулĕччĕç.

Автор сăнарĕ — философ, социолог, лирик, шÿтлевçĕ сăнарĕ — акă кам «пулăшать» «Евгений Онегин» роман тума! Вăл вулакана Петербург обществипе тата ялти пурнăçпа паллаштарать, геройсем хушшинчи «романсене» ăнлантарать. Онегин хăй характерĕпе çеç çав анлă пурнăçа явăçтарма пултараймĕччĕ. Çавăнпа ун валли юлташ панă: автор хăй, калавçă! Ахальтен мар «Евгений Онегин» лирикăллă-философиллĕ роман. Ку романăн форми те ирĕк: шутсăр нумай лирикăллă тухса калани, вулаканпа шÿт туни, шухăша кайни; япаласен, йăласен историйĕ т. ыт. те. Чĕлхе те ун — сăнласа кăтартакан чĕлхе çеç мар, каласа паракан, ăнлантаракан ăс-хакăл сăмахĕ. Çирĕммĕш çулсенче чăваш поэзийĕнче ун пек вăйлă шухăш чĕлхи пулайман-ха.

Геройсен ăс-хакăл вăйĕипе кăмăл туртăмне, кашни çын тĕлĕнтермĕшне, кулăшне, характерне — туллин те курнăçлăн сăнлама питĕ йывăр. «Хĕн-хур айĕнче поэмăн малтанхи вариантĕсенче пĕр кулăш çук. Ун кĕвви пĕрмай хурлăхлă тунсăхлă, йывăр[1]. Эльгер геройĕ, материаллă çыхăнусенчен татăлсан, хăйĕн «психологиллĕ содержанийĕпе» çеç тăрса юлсан, нимех те «калайми» пулать, унăн хевти пĕтет. Сюжетра çавăн чух историлле интерес та йăвашланать. Пăлхавçăсен утаманĕ пулсан та, вăл *событисене сăнаканĕ пек* **çеç тăрса юлать. Вара, сюжета хĕртес тесе, автор приключениллĕ меслетсемпе усă курать.**

Акă Чакка сутнике, суйса, çĕрле алăка уçтарасшăн хăтланать. Алапитпе Итрене тĕлĕнмелле чее меслетпе (çĕлĕкпе алсине туя çине лартса, çын кĕнĕ пек тăвать) урама вăлтса кăларать, хăй хыççăн хăвалаттарать. Чакка тыткăна лекнине те çавăн пек тăсса, çиелти драматизма кăсăклантарса, каласа панă. Çапăçу хыççăн çапăçу пулса иртет, темиçе хутчен Чакка тыткăна лекет, ăнсăртран хăтăлать. Чакка арăмне хăтарни те тĕлĕнмелле çăмăл пулса иртет. Тĕп герой автор нумай çĕре çитерет: вырăс хресченĕсемпе явăçтарать, салтаксемпе офицер хушшисенче кăтартать, бурлака ярать. Анчах сăнар вăйсăррăн аталанать, характер çĕнĕ йĕрсем туянаймасть. Эпикăллă тата психологиллĕ тип çуралса тухаймасть. *Сăвăллă роман пулма пуçланă произведени эпикăллă поэмă кăшăлĕнчен тухса пĕтмест.*

Кунта, поэмăри пек, тулашĕнчи событи пуç пулса тăрать; лиризм вăйлă, пейзажсем нумай. Сюжет романри пек характер логики тăрăх аталанмасть.

Çапах та «Хĕн-хур айĕнче» поэмă роман «валли» чылай япала хатĕрлесе хăварать: литературăна *прозăлла илемлĕх* **кĕртет, улшăнса пыракан** *историе* **искусствă япали тăвать;** *типлă геройсене типлă обстоятельствăсенче* **тупма тăрăшать; романла сюжет йĕрĕсене шырать т. ыт. те.**

Çапла, чăваш романĕ поэзи витĕр çул хыва пуçлать.

(Юлашки пулать).

---

[1] «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна ун юлашки кăларăмĕнче (1960 ç.) çĕкленÿллĕ те хавас çемĕсем чылай кĕртнĕ *(Г. Х)*

Библиографи

Михаил ЮРЬЕВ

Чечек çыххинче чечекĕ ытларах кирлĕ

Пирĕн умра — вулакансем тахçантанпа кĕтнĕ çĕнĕ кĕнеке — «Чăваш поэзийĕн антологийĕ» *. Унта чăвашсен тĕрлĕ вăхăтри поэчĕсем хамăрăн Тăван çĕршывăмăр çинчен, чăваш халăхĕн авалхи асаплă пурнăçĕпе паянхи телейлĕ кун-çулĕ çинчен, ĕçпе кĕрешӳре тӳссе ирттернĕ паллă кунсем çинчен, пĕтĕм этемлĕхе хăйĕн ылханлă пусмăрçисене хирĕç хăюллăн çĕкленме çул кăтартса панă Аслă Октябрь çинчен каласа параççĕ, В. И. Ленин никĕсленĕ аслă партипе совет халăхне мухтаса юрлаççĕ. Талантсем пăхса ӳстерекен чăваш поэзийĕ хăйĕн ĕмĕрĕнче утса тухнă кăткăс та чаплă çул çĕнĕ Антологире куç умне уççăн тухса тăрать.

Кĕнекен пĕрремĕш пайĕ халăх хушшинче темиçе ĕмĕр хушши сăмах вĕççĕн çӳрекен сăвă-юрăсемпе уçăлать. Чăн та, вĕсем нумай мар, анчах халăх хăйĕн шухăшĕмĕтне, савăнăçĕпе хуйхи-суйхине сăвă-юрăри сăнарсемпе ӳкерчĕксем урлă кăтартма пĕлнине лайăх ĕнентереççĕ. Çав сăвă-юрăсенчен эпир тăван халăхăн çултан-çул чечекленсе пыракан иксĕлми пултарулăхĕпе ăс-хакăлне куратпăр.

Чăваш халăхĕн авалхи сăвви-юррисенче пуринче те генĕ пекех ăраскалсăр этем хăйĕн телейне тупайман пирки куççуль юхтарса пăшăрханать.

Хура вăрман çине эп хурт ятăм.
Қамăн йĕс йĕпсе пур, çавă тытĕ,
Манăн йĕс йĕпсе çук, эп тытас çук.

Çеçенхир варрине эп ут ятăм.
Қамăн йĕс йĕвен пур, çавă тытĕ,
Манăн йĕс йĕвен çук, эп тытас çук...

Хамах атте килне камах тытĕ?,
Қамăн ăраскал пур, ай, çав тытĕ,
Ман телейĕм çук, эп тытас çук...

Чăваш халăхĕн кун-çулĕ те, патша Российинчи ытти халăхсен кун-çулĕ пекех, ĕлĕк калама çук йывăр пулнă, этем юнне ĕçсе пурăннă патша тӳри-шарисем унран тĕрлĕ майпа мăшкăлласа кулнă. Унăн чи лайăх ани-çаранĕсемпе вăрманĕсене улпутсемпе чиркӳсем, тĕрлĕ-мерлĕ кантур таврашĕсем туртса илнĕ. Çапла ĕнтĕ, чăваш çынни темĕн чухлĕ тăрăшсан та, хăйĕн ĕçĕпе савăнма, ырлăх курма пултарайман. Çакăн çинчен пире «Удел тырри» юрă та аван каласа парать:

Удел тырри, удел тырри акнă чух,
Вĕт-вĕт çумăр çăвать-çке.
Вĕт çумăр мар, ай, ним те мар,—

Хура халăх куççулĕ.
. . . .
Удельнăйăн, удельнăйăн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă.
Хĕрлĕ сăр мар, ай, ним те мар,—
Хура халăх юнĕ вăл.

Юрăсенчи тĕрĕс те илемлĕ сăнарсем ĕçчен халăхăн авалхи тертлĕ шăпи çинчен çеç мар, тӳрĕ кăмăллă çынсем хăйсен чăн-чăн телейне ĕçре тупма ĕмĕтленни çинчен те каласа параççĕ. «Ирĕксĕрех каяс пулать» юрăра ватă хресчен хăйĕн ваталăх ывăлне «йĕтем çинче чăрăш шăтса ӳссессĕн» пӳрт лартса пама ĕмĕтленет. Старикĕн аслă ывăлĕ те кăмăллă: «урам варринче çăка шăтса ӳссессĕн» шăллĕ валли кĕлет лартса парасшăн. Кĕçĕн хĕрĕ те ваталăх пиччĕшне ырă тăвасшăн, «кăмака çинче йĕтĕн шăтса ӳссессĕн», ун валли ал шăлли туса парасшăн. Анчах йĕтем варинче чăрăш, урам варринче çăка, кăмака çинче йĕтĕн шăтса ӳсес çук. Çавăнпа ĕнтĕ, тахçанхи ырă ĕмĕте манăçа хăварас мар тесе, хресчен ачин сĕм вăрманта чăрăш касса пӳрт лартма, çăка касса кĕлет тума, йĕтĕн акса ал шăлли тĕртме таçти-таçти çĕнĕ çĕре тухса кайма тивнĕ.

Октябрьти революци этемлĕхе темиçе ĕмĕр тискер пусмăрта тытнă капитализм тĕнчине пирĕн çĕршывра яланлăха аркатса тăкрĕ, хĕн-хур тӳссе пурăннă халăхсене ирĕке кăларса, фабрикăсемпе заводсене, чукун çулсемпе банксене тата çĕре халăх харпăрлăхĕ туса хучĕ. тĕнчери чи пысăк çĕршывсенчен пĕрине — Совет государствине ертсе пырассине рабочи класс аллине пачĕ. Кĕскен каласан, этемлĕх генийĕ В. И. Ленин никĕсленĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе çуралнă Аслă Ок-

* «Чăваш поэзийĕн антологийĕ». Чăваш АССР кĕнеке издательстви, Шупашкар — 1962 ç.

тябрь хĕрĕх пилĕк çул каялла тĕнче историйĕнче çĕнĕ самана пуçласа ячĕ. Унтанпа пирĕн халăх тĕлĕнмелле чаплă ĕçсем турĕ. Хăйĕн сад пахчи пек ешерме тытăннă çĕрĕ-шывĕ çине сĕмсĕрленсе кĕнĕ ирсĕр тăшмансене темиçе хут хăюллăн аркатса тăкрĕ. Революциччен çын ури пусман çеçенхирсемпе чăтлăх вăрмансенче темĕн пысăкăш заводсемпе фабрикăсем ÿссе ларчĕç, ĕлĕк хресчен сухапуçне чаваланнă хирсенче мĕн пур ĕçе машинăсемпе тума тытăнчĕç. Çĕршыв сăн-сăпачĕпе пĕрле çыннисем те тĕлĕнмелле çĕнелсе улшăнчĕç. Этемлĕхĕн ĕмĕрхи ĕмĕтне пурнăçласа, халĕ совет çыннисем тĕнче уçлăхне те хăюллăн парăнтараççĕ.

Хăйĕн хуйхи-суйхине çеç мар, савăнăçне те мĕн авалтан илемлĕ сăвă-юрăсенче палăртма хăнăхнă чăваш халăхĕ Аслă Октябрь хыççăнхи тĕлĕнмелле чаплă улшăнусем çинчен ăруран ăрăва куçса пыма тивĕçлĕ сăвă-юрăсем сахал мар хайларĕ. Тĕрĕсрех каласан, унăн чĕринчен халиччен шăранса тухнă тата халĕ шăранса тухакан илемлĕ сăвă-юрăсем, ытти халăхсен сăвви-юррисем пекех, паттăр совет халăхĕн ĕмĕт-шухăшне палăртакан илемлĕ летопиç пек пулса тăчĕç. Халĕ ĕнтĕ чăваш халăхĕн аслă Октябрь хыççăнхи телейлĕ пурнăçне тата совет çыннин пархатарлă ĕçне мухтакан сăвă-юрăсем çеç мар, совет халăхĕ юн тăкса çĕнсе илнĕ ырлăха курайман тăшмансене тарăхса питлекен сăвă-юрăсем те нумай. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче вăл кивĕ самана каяшĕсене — пупсемпе кулаксене питлесе юрларĕ. Ялсенче колхозсем тунă тапхăрта ял пурнăçĕ ешерсе çĕнелнĕшĕн, хирте трактор кĕрлеме тытăннăшăн, пурнăç чăнах та илемленсе пынăшăн савăнса юрларĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче кĕвĕленĕ сăвă-юрăсенче Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă фашистла оккупантсене ылханчĕ, этем чысĕшĕн пынă кĕрешÿре чапа тухнă паттăрсене мухтарĕ. Халĕ вăл, коммунизм патне хăвăртрах çитес тесе чун-чĕререн хавхаланса ĕçленĕ май, этеме ырлăх кÿрекен пархатарлă ĕçпе кĕрешÿве мухтаса юрлать, халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетсе пыма чĕнет.

Çапла, халăх юрлать, кунсерен çĕнĕрен çĕнĕ сăвă-юрăсем кĕвĕлет. Шел, Антологие пичете хатĕрленĕ юлташсем çавна шута илмен: чăваш халăхĕн Октябрьти революци хыççăн сăмах вĕççĕн çÿрекен çĕнĕ сăвви-юррисем унта пачах кĕмесĕр юлнă.

* * *

Малтанах калас пулать: кăçал кăларнă «Чăваш поэзийĕн антологийĕ» халиччченхисенчен чылай енĕпе пуян. Вулакансем кунта литературă ĕçне Н. Шелепипе тата Тайăр Тимккипе пĕр вăхăтра тытăннă поэтсен — Якку Турханпа Г. Кореньков, Т. Кирилловпа Тăван ялсем-Сергей (С. Сорокин) пултарулăхĕсемпе çеç мар, чăвашсен чи пирвайхи писателĕ, этнографĕ тата историкĕ Янтуш Çĕпритунĕ (С. Михайлов) çĕр те вунă çул каялла çырнă «Чăваш эпĕр пултăмăр...» сăвăпа та, чăвашсен пирвайхи паллă композиторĕ-драматургĕ Ф. Павлов 50 çул каялла, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче К. Ивановпа тата Н. Шупуççыннипе пĕрле вĕреннĕ тата ĕçленĕ вăхăтра çырнă «Вĕлле хурчĕ...», «Шет хитре хĕр», «Лăсăркка» сăвăсемпе те паллашаççĕ. Ку произведенисем тăван литературă аталанăвĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ пулин те, ку чухнехи вулакансем вĕсем çинчен тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх çеç пĕлеççĕ.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче пурăннă Хвети Чăваш 1831 çулта кĕвĕленĕ вак-тĕвек сăвăсене шута илмесен, Янтуш Çĕпритунĕ çырнă «Чăваш эпĕр пултăмăр...» сăвва чăваш поэзийĕн чи пирвайхи чечекĕ теме те пулать. Чăваш çĕршывĕнче телей хĕвелĕ ялтăрассине кĕтсе хăйĕн кун-çулне ирттернĕ пирвайхи писатель çĕр çул каяллах тăван халăхĕ тĕттĕмре асапланса пурăннăшăн чĕререн лăшăрханса çырнă. Çав вăхăтрах халăхсем пĕр-пĕринпе туслăн, килĕштерсе пурăнни ăна чĕререн савăнтарнă. Ахальтен мар хăйĕн пĕртен пĕр сăввинче вăл çапла çырнă:

Эпĕр чăваш, тăтăх чăваш;
Тутар пирĕн хурăнташ.

Сакăр вун çул каялла М. Федоров çырнă «Арçури» балладă, чăваш халăхĕн авалхи кун-çулне татах та тарăн сăнласа панăскер, революциччченхи чăваш литератури аталанăвĕнче чăннипех те паллă страницă пулса тăрать. Вăрманта хăрăк турат пуçтарнипе пÿрт ăшăтса пурăнакан Хветĕр çине пăхсан, чăваш халăхĕн ĕлĕкхи телейсĕр шăпи куç умне анлăн тухса тăрать. Хветĕр, Микула, Энтри, Кириле тата Лавраç тÿссе ирттернĕ инкексене пирĕн халăх пĕтĕмпех хăй тÿссе ирттернĕ: çитмен пурнăç пирки ĕмĕр тăршшĕпех çын куçĕнчен пăхнă, «çиме çăкăр çитмесен» пуянсем патне пăтавкка йăтса кайнă, «хырăç-марăç памашкăн» хушпу саклат хывнă, ани-çаранне тара панă, кайран вара, выçса вилес мар тесе, хутаç çакса, ыйткалама тухса кайнă...

1905—1907 çулсенчи революциллĕ кĕрешÿ тапхăрĕнчи — Тайăр Тимккипе Н. Шелепи тăвăл кайăкĕсене мухтаса юрланă вăхăтри чăваш поэзийĕн çĕкленĕвне те Антологире туллин кăтартма тăрăшнă.

Çав тапхăрти поэтсен (Я. Турхан, Г. Кореньков, Тăван ялсем-Сергей) пултарулăхĕнче халăха революци тăвăлне кĕме хăюллăн чĕнни тата пусмăр тĕнчине аркатса тăкмалли майсене уççăн кăтартса пани сисĕнмест пулин те, чăваш литературинче, пурăна-киле, реализм меслечĕ чечекленесси уççăнах сисĕннĕ. Тайăр Тимккипе Н. Шелепи ку енĕпе чăннипех пысăк ĕç тунă. Вĕсен çак тапхăрти пултарулăхĕнче тÿрĕ кăмăллă çынсене хисеплеме чĕнекен идейăсем, хăйĕн чăн-чăн телейне кĕрешÿре çеç тупма пултаракн халăхăн çутă ĕмĕчĕсем вăйлăн палăраççĕ. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăхăтĕнче, халăх хăйĕн пусмăрçисене хирĕç татăклăн çĕкленсе тухма хатĕрленнĕ кунсенче, Тайăр Тимккин хĕрÿллĕ сасси чăваш çĕршывĕнче мăнаçлăн янăраса каять:

Çитĕ пире тертленме!
Пурте пĕрле пухăнар.
Тĕрлĕ харампырсене
Енсе çинчен пăрахар.

Чăваш поэзийĕн Октябрьти социализмлă Аслă революциччченхи тепĕр паллă тапхăрĕ вăл — «Нарспи» поэмă çурални. 1908 çулта, çĕршывра столыпинла реакци урăмсурăм урса кайнă вăхăтра, пĕр-пĕр хура пĕлĕт çине пырса перĕнесрен шикленмесĕр, чăваш поэзийĕн шурăмпуçĕ çуттăн ялтăраса хăпарнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе унăн инспекторĕ И. Яковлев тăрăшнипе кăларнă «Чăваш халлапĕсем» ятлă кĕнекере К. Ивановăн «Нарспийĕ» пичетленсе тухнă. Ку поэмăра вун çичĕ çулхи поэт тăван халăхĕ укçапа мул тĕнчине сĕм авалтан ылханса пурăннине, вăл çĕр çинче этем чысне пысăка хурса хаклакан тĕрĕслĕх пурпĕрех çиеле тухасса кĕтнине, пусмăр тĕнчине хирĕç çĕкленнĕ чăваш хĕрарăмĕн сăнарне кăтартса панă.

Нарспипе Сетнер çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлнипе вĕçленет пулин те, поэмă оптимизмлă произведени. Унăн идейисем пирĕн вăхăтри çынсене те телейлĕ пурнăçшăн кĕрешме хавхалантараççĕ. Нарспипе Сетнер сăнарĕсем кирек кама та çак шухăш патне илсе пыраççĕ: этем телейĕпе савăнăçĕ тата юратăвĕ харпăрлăх туйăмĕнчен ялан çÿлте тăрать, çыннăн çав паха та хаклă енĕсемпе нимĕнле пуянлăх та танлашма пултараймасть.

К. Иванов «Нарспи» поэмипе юмахĕсенче çеç мар, сăввисенче те хăй вăхăтĕнчи пурнăçа туллин сăнланă. Çакăнпа пĕрлех вăл чăваш халăхĕн ĕлĕк патша чиновникĕсем умĕнче чысра пулман чĕлхипе те этем чун-хавалне çунатлантаракан паха произведенисем çырма май пуррине, чăваш чĕлхин малашлăхĕ телейлĕ пулассине уçса кăтартнă.

Хăйĕн вырăпа хăртăнса пурăннă тăван халăхне юратни тата вăл хăйĕн чăн-чăн телейне кĕрешӳре çеç çĕнсе илме пултарни поэтăн «Вăранăр, тапранăр!» сăввинче вăйлă сисĕнет, унта вăл халăха хăйĕн хастарлăхне кăтартма чĕнет:

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран вăрçма эс, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Шел, Антологире çак сăвва вырăн паман. Ку çеç те мар, поэт пултарулăхĕшĕн уйрăмах паллă «Нарспи» поэмă сыпăкĕсем валли те кĕнекере кĕтес тупăнман.

Литературă ĕçне К. Ивановпа пĕр вăхăтра тытăннă поэтсенчен чи палли вăл — Н. Шупуççынни. Унăн произведенийĕсем чăваш литератури кĕрекинче тахçанах чысла вырăн йышăннă. Хăйĕн пултарулăхĕн иккĕмĕш тапхăрĕнче, революци хыççăн çырнă сăвăсенче поэт ĕлĕк чăпта умĕнче тар юхтарнă халăх ирĕке тухнăшăн савăнать, Октябрь тăвăлĕнче çуралнă çĕнĕ самана паллисене саламлать. Çак тапхăрти сăвă-юрăсенчи тĕп сăнар — çĕнĕ самана çынни. Поэтăн чылай сăввисенче аслă Октябрь хĕлхемĕ ĕç тĕнчине илем кӳрекен тĕлĕнмелле хăват пек тухса тăрать. Аслă Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕ тĕнчери мĕн пур чурасене вăратать, вĕсене хăйсен пусмăрçисене хирĕç çĕкленсе тухма чĕнет.

Антологире вара поэтăн совет самани çулĕсенчи пултарулăхĕ пĕрре те паллă мар. Вулакансем унта поэт вĕренмелле çырнă сăвă-юрăсемпе çеç паллашма пултараççĕ.

Кĕнекен малалли страницисем, кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишшинчен пуçласа, чăваш совет поэзийĕ халиччен утса тухнă чаплă çулпа паллаштараççĕ. Хăйĕн тематикипе те, витĕмлĕхĕпе те, илемлĕх формипе те, халăх хушшинче коммунизм идейисене ытларах сарма пулăшакан хăвачĕпе те пирĕн поэзи, тăванла ытти халăхсен поэзийĕ пекех, совет влаçĕ вăхăтĕнче калама çук вăйлăн чечекленсе аталанчĕ. Çĕнĕ саманан çĕнĕ поэчĕ Çеçпĕл Мишши, революци вутĕнче йăл илнĕ тăван поэзие хăвăртрах чĕрĕ вăй-хăват парас тесе пĕтĕм вăйне хунăскер, чăваш сăвви те, вырăс сăвви пек, тĕрлĕ виçепе кĕвĕленме пултарассине, чăваш чĕлхи те «хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă», «çунтаракан çиçĕм», «вĕри вутлă çулăм» пулассине кăтартса панă. «Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ ирĕкпе çĕнелнĕ пурнăçран» тарассине тата хăйĕн телейне революци çĕнтерĕвĕнче тупнă çын чĕринче «тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ» ачашшăн ялкăшса çунассине малтанах çирĕп ĕненсе пурăннă поэт пултарулăхĕ пирĕн вăхăтри чăваш поэзийĕнче историллĕ оптимизмăн чи паха тĕслĕхĕ пулса тăчĕ.

Тăван поэзире Çеçпĕл Мишшипе пĕр вăхăтра сасă панă поэтсен (А. Ахах, Г. Тал-Мăрса, Н.Ваçанкка, С. Элкер, Г. Алендей) пултарулăхĕпе тĕплĕн паллаштарни те Антологире питĕ кăмăллă. Çырас ăсталăха Çеçпĕлтен вĕренсе пырса, вĕсем халăх чун-хавалне илемлĕ сăвă-юрăпа чылай çунатлантарнă, Октябрьте çĕнсе илнĕ ырлăха куç шăрçине сыхланă пек сыхлама чĕннĕ.

Граждан вăрçи хыççăн чăваш халăхĕ, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, вăрçăпа выçлăх вăхăтĕнче юхăннă хуçалăха ура çине тăратма, çĕнĕ пурнăç тума тытăнчĕ. Этем ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен паттăр халăхăн пурнăçпе ĕçĕ-хĕлĕ, çĕршывра социализм тунă тапхăрти хĕрӳ кунсем, ырă кăмăллă ĕçре пархатар курма ĕмĕтленекен совет çыннин ĕçри хастарлăхĕ çав тапхăрта чăваш поэзийĕн тĕп содержанийĕ пулса тăнă. Сăвă-юрă шухăшĕ идейă тĕлĕшпе çирĕп пулни, парти политикине тĕрĕс ăнланни, халăх шухăш-ĕмĕтне тĕрĕс те витĕмлĕ кăтартса пама пĕлни, Тăван çĕршыва чунчĕререн парăнса пурăнма вĕрентни — çаксем пурте чăваш совет поэзийĕн çултан-çул вăй илсе пыракан хăватне кăтартса параççĕ. П. Хусанкай, Я. Ухсай, И. Тукташ, А. Петтоки, В. Митта, Уйăп Мишши, Н. Янгас, А. Эсхель, И. Ивник, С. Шавлы, А. Алга т. ыт. те хамăр вăхăтри çынсен ĕçне тата кĕрешӳри хастарлăхне мухтаса çырнă сăвă-юрăсене вулакансем Антологире хапăл тусах йышăнаççĕ. И. Викторов, И. Курак, Хумма Çеменĕ, В. Паймен, Г. Краснов-Кĕçĕнни, Н. Евстафьев, И. Малгай, М. Хури, Г. Ефимов, А. Афанасьев сăввисем те нумайлăха асра юлаççĕ.

* * *

Чăваш совет поэзийĕ — халăх чысĕпе мухтавĕшĕн пыракан кĕрешӳре кирек хăçан та тĕрĕслĕхшĕн тăма пултаракан поэзи. Ăна чечеклентерес ĕçре сахал мар тăрăшнă чылай поэтсем—И. Викторов, В. Бараев, И. Думилин, М. Ястран, К. Кольцов, В. Васькин, А. Орлов тата ыттисем иртнĕ вăрçă кунĕсенче, халăх телейĕшĕн çапăçса, вăрçă хирне выртса юлчĕç. Хăйĕн «Ывăлăма», «Чăваш хĕрне» тата «Юлташа» ятлă сăввисенче В. Бараев тăванĕсемпе тусĕсене, темле йывăр самантра та, яланхи пек çирĕп те паттăр пулма чĕннĕ. «Юлташа» сăвăра вăл çапăçу хирĕнчен инçетре пурăнакан тусне совет салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен мăнаçлăн каласа кăтартнă:

Анчах ан кулян, юлташăм,
Маншăн ан кулян.
Эпир тухрăмăр çĕршывшăн,—
Тĕп пулĕ тăшман.

Çапăçу хирĕнче «çава тытнă пилсĕр вилĕм чашкăрса çӳренĕ» чухне те поэт совет халăхĕ «садри пек телейлĕ» пурăнма тытăнасси çинчен ĕмĕтленнĕ:

Вăхăт çитĕ, мирлĕх çитĕ,
Савăнĕç çынсем.
Садри кайăк пек телейлĕ
Пурăнĕç вĕсем.

Совет Çарĕ çинчен вăрçăччен чылай çырнă К. Кольцов та хăйĕн «Фронтра» сăввинче Тăван çĕршыв пилне пурнăça кĕртме яланах хатĕрри çинчен калать. Хаяр вăрçăн пирвайхи кунĕсенче, хăй салтак шинелĕ тăхăннă вăхăтра çырнă «Тăван çĕршыв çĕклен, паттăр халăх!» тата «Вилĕм урнă тăшмана» сăвăсенче В. Васькин поэт этем чысне сĕмсĕррĕн вараланакан «тăшмана çиçĕм евĕр çунтарма» чĕнет. Анчах çак поэтăн çепĕç те хаяр сăввисене Антологире шырани усăсăр. А. Орловăнне вара ятне те асăнман.

Çак икĕ хушамат хальхи вулакансемшĕн паллах мар пулин те, вăрçă умĕнхи поэзире вĕсем тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Хăйсен чи лайăх сăввисене вĕсем поэзи хăвачĕ пирĕн пурнăçра мĕнле пулмаллине тĕрĕс ăнланса çырнă. Çакна А. Орловăн «Юрла, акын» сăввинчи йĕркесем те лайăх ĕнентереççĕ. Юрă-сăвă хăвачĕ çинчен вăл, ăна çамрăклах сума сума хăнăхнăскер, çапла çырса хăварнă.

Юрă кĕрешме чĕнет маттуррăн,
Вăл чăрмавсене çĕнме чĕнет!
Аслати пекех, хăватлă юрă
Чĕтретет хаяр тăшмансене.

Антологире кĕтес тупма шăпа тухайман поэтсене вулакансем умĕнче хӳтĕлес тесе, юлашкинчен акă мĕн калас килет: кĕнекен çак кăларăмне хатĕрлекенсем литературăра манăçа тухма тивĕçлĕ мар поэтсенех чылай «сиктерсе» хăварнă. Сăмахран, акă, çамрăклах çĕре кĕнĕ В. Волгин, Г. Шенни, Н. Эхмин поэтсем, питех те чылай çырман пулин те, тăван поэзие чечеклентерес тесе, нумай тăрăшнă. Вĕсен сăвви-юррисенче хăйсен вăхăтĕнче çамрăксен иксĕлми хастарлăхĕ шăнкăртатса юхакан чĕрĕ çăл куç пек тапса тăрать. Хăйсем вăхăтĕнче «шăллă» юптарусемпе такмаксем çырса чапа тухнă Ç. Шăпчăкпа М. Аттай та, граждан вăрçи вăхăтĕнче чăваш салтакĕ-

сем хавхаланса вуланӑ «Колчак» поэмӑ авторӗ И. Тӑхти те, ачасем валли ҫырас тата вырӑссен чаплӑ юптаруҫи И. А. Крылов ҫырнӑ юптарусене чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ Н. Пиктемир та, иртнӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фашистла оккупантсене хаяррӑн питлесе такмакланӑ Кашкӑр Микули те, колхозсем чӑмӑртаннӑ тапхӑрти ҫамрӑксене хавхалантарса юрӑ сӑмахӗсем чылай ҫырнӑ Ехрем Иванӗ те, вилнӗ тесе, манӑҫа тухма тивӗҫлӗ пулман.

«Манса юлнӑ» ятсем пирки каланӑ май, тепӗр автор ҫинчен те аса илтерес килет. Хальхи Тутар республикинчи Сӗвепе Атӑл пӗрлешнӗ ҫӗрти чӑвашсен авалхи тертлӗ пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнӑ «Тахар ял» очерк ҫырнӑ Г. Тимофеев (1877—1938), яланах халӑх хушшинче пурӑннӑскер тата унӑн нушине лайӑх пӗлнӗскер, 60—65 ҫул каяллах халӑх сӑмахлӑхне нумай пухнӑ. Кайран вара ҫав савӑ-юрӑсемпе юмах-халапсенче тата сутмалли юмахсемпе каларӗшсенче революциччен хи чӑваш ҫыннин тӳсме ҫук йывӑр пурнӑҫне сӑнласа кӑтартнӑ. Халӑх хушшинче нумай ҫул хушши сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳренӗ ҫав произведенисемпе усӑ курса, пирӗн прозаиксемпе поэтсем тата композиторсем чӑнах та паха япаласем ҫырнӑ.

Шутласан ӗнтӗ, «Тӑхӑр ял» очерк авторне Г. Тимофеева Антологи тулашӗнче хӑварма сӑлтав та пулман. Пирӗн вӑхӑтри вулакансем халӗ ун ҫинчен М. Сироткин профессор хыйӗн ӗҫӗсенче сӑмах май каланисем тӑрӑх ҫеҫ пӗлкелеҫҫӗ. Поэтӑн 50—60 ҫул каялла ҫырнӑ сӑвви-юррисен тӗслӗхӗсем халӑх хушшине автор ячӗпе сарӑлманпа пӗрех. Кунпа пӗрлех тата ҫакна та асра тытас пулнӑ: Г. Тимофеев ҫуралнӑранпа кӑҫал 85 ҫул тултарчӗ. Литературӑ тӗпчевҫисем ҫакна сисмерӗҫ пулин те, Антологи редколлегийӗн шута илме юранӑ.

Ҫапла вара «Чӑваш поэзийӗн антологине» тепӗр хут кӑларма хатӗрленӗ чух ӑна халӗ манса хӑварнӑ авторсен чи лайӑх произведенийӗсемпе пуянлатасси ҫинчен асра тытни вулакансемшӗн ҫеҫ мар, литература историпе тӗпчесе вӗренекенсемшӗн те усӑллӑ пулӗччӗ.

Пирӗн шутпа, Антологие кӗме тивӗҫлӗ поэтсен сӑввисене суйласа илнӗ чухне «антологи» тенӗ сӑмаха хӑйне те асра тытни кирлӗ. Кӗнекен ҫак кӑларӑмӗ валли ҫырнӑ умстатьяра А. Алга поэт ун пирки тӗрӗс ӑнлантарнӑ: «антологи» сӑмах авалхи грек чӗлхинче «чечек ҫыххи» тенине пӗлтернӗ; авалхи Грецире Римра тӗрлӗ поэтсем ҫырнӑ чи илемлӗ лирикӑллӑ сӑвӑсен пуххине «антологи» тенӗ. Кунтан ӗнтӗ ҫак паллӑ: литературӑра чечек ҫыххи вырӑнне шутланакан кӗнеке валли суйласа илнӗ произведенисем — илемлӗхпе шухӑш тӗлӗшӗнчен вӗсен авторӗсен пултарулӑхне туллин те уҫӑмлӑ кӑтартса паракан япаласем. Ҫав произведенисем тӑрӑх вулакансем те, тӗпчевҫӗсем те поэт хӑҫан тата мӗн ҫырнине ҫеҫ мар, мӗнле ҫырнине те тӗплӗн тавҫӑрса илеҫҫӗ. Ҫак енчен шутласан, Антологи редколлегийӗ чӑваш поэчӗсен произведенийӗсене суйланӑ чухне ӗҫе пур енчен те тӗплӗн тунӑ теме ҫук.

Чӑваш халӑх поэчӗ П. Хусанкай халиччен ҫырнисенчен Антологире вун виҫӗ япала пичетленӗ. Вӗсенчен пӗри, «Ирӗк тимӗрҫӗ» сӑвӑ — поэтӑн пӗрремӗш произведенийӗ; «Пул примерлӑ ленинҫӑ», «Кӗрхи кереке», «Аван-и, Пушкин!»—вӑрҫӑ умӗн, поэтӑн иксӗлми хастарлӑхӗ ҫунат сарнӑ тапхарта ҫырнӑ сӑвӑсем; «Ҫиле хирӗҫ ҫӳрен ут ӳртать», «Поэт тапри ҫинче», «Салампи», «Ах, эп курсаттӑм мӑшӑр куҫ» — Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнӑ япаласем. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра ҫырнисенчен пурӗ те пилӗк сӑвӑ ҫеҫ пичетленнӗ: «Эпир Российӑра пурнатпӑр», «Поэзи пулсан...», «Сӑпка юрри», «Курсам, мӗнле илемлӗ Атӑл!» тата «Ҫуралнӑ ҫӗршывра».

Чӑнах та, Хусанкайӑн Антологире пичетленнӗ сӑввисенче «пӑсӑкки» нимӗн те ҫук. Асталӑх тӗлӗшпе те чылай поэтсем вӗсене ӑмсанма кӑна пултараҫҫӗ. Ҫапах та поэтӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пултарулӑхӗнче «Таня» тата «Аптраман тавраш» поэмисем, «Тӑван ҫӗршыв хӗрӗ», «Аннене», «Тӗлӗк», «Салтак фляги...», «Харсӑр ӑмӑрткайӑк», «Шупашкара ҫитсе пыруҫӑн...» сӑвӑсем паллӑ вырӑн йышӑнни ҫинчен те манмалла пулман. Поэтӑн ҫак поэмисемпе сӑввисем чӑваш литературин ылтӑн фондне яланлӑха кӗрсе юлма тивӗҫ илнӗ.

П. Хусанкай вӑрҫӑ хыҫҫӑн, тӗнчери ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсем совет халӑхӗпе пӗрле мир ялавне нихҫанхинчен те ҫӳле ҫӗкленӗ тапхӑрта ҫырнӑ произведенисем хушшинче чи лайӑххи вӑл — аслӑ Ленин ҫинчен ҫырнӑ «Горкӑри ҫуртра» поэмӑ. Ӑна халӗ хамӑр ҫӗршывра ҫеҫ мар, халӑх демократи ҫӗршывӗсемпе тӗнчери ытти ҫӗршывсенче те юратса вулаҫҫӗ. Апла пулин те, поэзи антологийӗнче ҫав произведени валли вырӑн тупӑнман-мӗн. Ҫав вӑхӑтрах хӑш-пӗр сӑвӑсем авторсен пултарулӑхне уҫҫӑн палӑртаймаҫҫӗ пулин те, кӗнекене хӗсӗнсе кӗнӗ. Тӗслӗхрен, Г. Орловӑн «Ҫӗмӗрт» сӑвви — пӗр-пӗр каччӑ е хӗр альбомӗнче усрамалли япала ҫеҫ. Вулакансем унта сӑвӑ авторӗ пӗр ирхине юр пек шурӑ тумлӑ ҫӗмӗрт пахчинче пӗр-пӗччен йӑпанса ҫӳренине тата кӗтесри вӑрттӑн сак ҫинче каччӑпа хӗр тӗлӗрсе ларнине ҫеҫ кураҫҫӗ. А. Галкин та «Ирхине» ятлӑ сӑввинче, «сывлӑм шывӗпе пит ҫума», «шӑпчӑкпа пӗрле юрлама», «ҫӗмӗрт тумӗпе киленме», «тунсӑхланӑ кӑмӑла уҫма» ирех пахчана тухать. Анчах пирӗн вӑхӑтри ҫынсене сӑвӑ ӑстисем пахчара йӑпанса ҫӳрени, «йӑлтӑркка хӗвел ҫути ҫӗмӗрт тӑррине чуп тунӑ» вӑхӑтра (чипер ҫынсем ку вӑхӑтра ӗҫе каяҫҫӗ!) пахчари вӑрттӑн сак ҫинче тӗлӗрсе ларни ҫеҫ ҫырлахтарма пултараймасть. Ҫавӑнпа та, пирӗн шутпа, ку сӑвӑсене кӗнекене кӗртни вырӑнлах пулман.

* * *

Антологи редколлегийӗн наукӑ тӗлӗшпе ӗҫленӗ членӗсем уйрӑм поэтсен пултарулӑхне хакланӑ чух кӑштах тимсӗр пулни ҫинчен те асӑрхаттарса хӑварас килет. Чӑн та, кӗнекен умстатйине, чӑваш поэзийӗ юлашки ҫӗр аллӑ ҫул хушшинче мӗнле аталанса пынине кӑтартас тӗлӗшпе ҫырнӑскере, хурлама ҫук. Унти ҫитменлӗхсем, тӗпрен илсен, автортан мар, пачах урӑх сӑлтавсенчен килеҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗмпе тенӗ пекех чӑваш литературоведенийӗ халиччен якатса ҫитермен шӑйрӑксене тепӗр хут кун йӗркине тӑратнипе, хамӑр вӑхӑтри вулакансемшӗн паллӑ мар писательсен пултарулӑхӗ пирки ҫӗнӗрен мӗн те пулин калама шикленсе тӑнипе ҫеҫ палӑрса тӑраҫҫӗ. Чӑваш литератури аталанӑвӗн историне ҫырнӑ тата ҫӗнӗрен ҫырма хатӗрленекен юлташсем чылай писательсем пирки хӑйсен сӑмахне халиччен те уҫӑмлӑ калайманни вулакансене пӑшӑрхантарать. Ҫакӑ вӑл тӑван литературӑн авалхи кун-ҫулӗ ҫинчен ҫырма ӗмӗтленекен ҫамрӑкрах тӗпчевҫӗсене тепӗр чухне кирлӗ мар ҫӗртенех вак-тӗвек тата паллӑ мар тӑкӑрлӑксем тӑрӑх тӗлли-паллисӗр сӳтӗлтерсе ҫӳретме пултарать. Ку сӑмахсене эпир умстатья авторӗ пирки ҫеҫ каласшӑн мар. Хӑйӗн статйинче А. Алга поэт, чӑваш литератури хӑҫан мӗнле аталанса пыни ҫинчен ҫӗннине тата вулакансем халиччен пӗлменнине нумаях уҫса кӑтартмасть пулин те, тӑван литературӑн тӗрлӗ тапхӑрти паллӑ произведенийӗсемпе вӗсен авторӗсем ҫинчен тӗплӗн калама тӑрӑшнӑ. Тӑрӑшнӑ, анчах ҫак пархатарлӑ ӗҫе вӗҫнех ҫитереймен.

Паллӑ ӗнтӗ, умстатьяри ҫитменлӗхсене тӗрлӗ тапхӑрти кашни поэтӑн кун-ҫулӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗске справкӑсемпе тӳрлетмелле пулнӑ. Анчах вӗсем пурте некролог евӗрлӗ ҫеҫ пулса тухнӑ. Вулакансемшӗн хӑш поэт хӑҫан тата ӑҫта ҫурални, ӑҫта тата мӗн чухлӗ вӗренни ҫеҫ паллӑ. Тӗрӗсрех каласан, ҫав справкӑсем хрестомати сборникӗсенчи кӗске асӑрхаттарусенчен нимӗнпе те уйрӑм мар. Справкӑсенчен хӑшӗ-пӗринче тӗрӗсех мар каланӑ вырӑнсем те пур. Сӑмахран, акӑ,

1902—1903 çулсенчех çырма тытăннă Т. К. Кириллов çинчен çак сăмахсене вулатпăр: «Тепĕр сăвăç — Тарас Кириллов.— хăш-пĕр сăввисенче чăваш хресченĕсен йывăр пурнăçне кăтартнă пулин те, ыттисенче вăлах унăн ани-хирĕсене, ĕçĕ-хĕлĕсене юри илемлетнĕ, унăннах тата вырăс патшалăх тытăмне хўтĕлесе çырнă вырăнсем, турăран ырлăх кĕтнине пĕлтерекен йĕркесем тĕл пулаççĕ».

Поэтăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă справкăра (78-мĕш страницăра) çакна пĕлетпĕр: литературă ĕçне Т. К. Кириллов хăй Шăхасанта учитель пулнă вăхăтра тытăннă. Унта вăл «Тырă пулнă çул» поэмă çырнă. Поэтăн тата çакăн пек произведенисем пур иккен: «Пулăшăр» (1905), «1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем» (1911), «Хресчен хăйĕн ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» (1912), «Салтак арăмĕ» (1916). Урăх вăра ку поэт çинчен нимĕн те пĕлместпĕр.

Антологире поэтăн икĕ произведенийĕ — «Хресчен хăйĕн ĕçĕ çинчен хунă юрăсем» тата «Салтак арăмĕ» юрă пичетленнĕ. Çаксене вуланă хыççăн вулакансем умстатья авторĕнчен хăюллăнах çапла ыйтма пултараççĕ: Т. Кириллов хресчен ани-çаранĕсене тата унăн ĕçне-хĕлне хăйĕн хăш сăввинче юриех илемлетсе кăтартнă? Вырăс патшалăх тытăмне хўтĕлесе çырнисем, турăран ырлăх кĕтнине пĕлтерекен сăвă йĕркисем поэтăн хăш произведенийĕсенче курăнаççĕ?

Поэт пултарулăхне тĕрĕс хакланă пулин те, А. Алга статйинче те, поэтăн кун-çулĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă справкăра та çав ыйтусем çине уçăмлă ответ парайман. Тĕрĕссипе илсен, поэт чăваш хресченĕсен тертлĕ пурнăçне хăш-пĕр сăвăсенче çеç мар, *пуринче* те кăтартма тăрăшать. Поэтăн *кирек-хăш произведенине* илсен те, вăл хресченсен ани-çаранĕсене ытлашши илемлетсе çырнисем, хăй вăхăтĕнчи патшалăх тытăмне мухтанисем, турăран ырлăх кĕтсе пурăнма чĕннисем куçкĕрет тухса тăраççĕ. «Тырă пулнă çул» поэмăра поэт Хурасанти çĕрме пуянсене — Роман мучипе Упаçырминчи Салтак Петĕрне мухтаса юрлать, вĕсене хăталлă тăвать: Салтак Петĕр хĕрне пуян Роман ывăлĕ, Иван, качча илет. Поэт шучĕпе, кунта та тĕнчери ырлăх пĕтĕмпех турăран килет.

«Пулăшăр» поэмăра та Т. Кириллов, вăрçăра аманнă хресчен нуши çинчен каланă хушăрах, сынсене «сĕр çинчи патша» законĕсене пăхăнса пурăнма, турăран хăрама чĕнет. Çынсене патша законĕсемпе минретнĕ вырăнсем «1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсенче» те тăтăшах тĕл пулаççĕ.

«Хресчен хăйĕн ĕçĕсем çинчен хывнă юрăсем» ятлă сăвă ярăмĕ, вун çичĕ сыпăкран тăраканскер,— поэт пултарулăхĕнче чи лайăххи, чи илемли. Хресчен ани-çаранне тата ĕçне-хĕлне ытлашши илемлетни палăрать пулин те, хресчен хăйĕн ĕçĕпе савăнни, хăйĕн асаплă пурнăçне кăшт та пулин çăмăллатма ĕмĕтленни курăнать. Пурнăç йывăр пулин те, пур-çук ани-çаранĕ çине шанса пурăнаканскер, вăл çынсене пусмăрта тытса усракан çăткăнсен пурлăхне пĕрре те хапсăнмасть. Çакăн çинчен вăл нимĕн шикленмесĕр калать:

Ай мăнтарăн пурнăçĕ,
Услам тума кăмăл çук.

Вырăссемпе тăтăшах хутшăнма тытăнни, вĕсемпе пĕр кăмăллă пулни чăваш çыннисен асаплă пурнăçне çăмăллатма пулăшнине те поэт тавçăрса илнĕ

Çынсем ĕç тума вĕренчĕç
Вырăс хушшине кайса,
Вырăссемпеле пĕрлешрĕç
Пĕр кăмăлтан пурăнса.

Т. Кирилловăн çак произведенийĕ пирки юлашкинчен эпир çакна çеç каласшăн: юрă ярăмĕнче пĕр-икĕ çĕрте:

Мухтав сача, çўлти турă:
Çут çанталăк пит паха.
Килес çул та пултăр тырă,
Тутă усра халăха,—

тесе каланисем пур пулин те, Антологие кĕртнĕ чухне ăна çурри ытла кĕскетни вырăнлă мар. Çакна асра тытас пулать: турра мухтакан сăмахсене кунта поэт мар, пурнăç шапи хĕсĕнсе çитнĕ пирки хăйĕн пурнăçне «ыйтман-чĕнмен çĕре кайса» сўнтерме шутлакан хресчен калать. Поэт пултарулăхĕ çинчен унăн биографийĕнче тата кĕнеке умсăмахĕнче уçăмлăрах каланă пулсан, литературă ĕçне çĕршывра реакци алхасма тытăннă тапхăрта пуçăннă поэт пултарулăхĕ пирки иккĕлентерме пултаракан шухăш мĕлкисем пĕтĕмпех сирĕлнĕ пулĕччĕç. Поэтăн «1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юррисем» те — Антологие кĕртме тивĕçлĕ произведени.

Антологи умсăмахĕпе поэтсен биографийĕсене тĕплĕнрех те уçăмлăрах çырма кирлĕ пулни çинчен каланă май çеç эпир Т. Кириллов пирки ытларах чарăнса тăтăмăр. Пăсăрах систертĕмĕр: Антологири çак çитменлĕх ытти поэтсен биографийĕсене вуланă чухне те чылай пăшăрхантарать.

Акă тата тепĕр тĕслĕх: Г. Тал-Мăрса — çĕршывра Аслă Октябрь çĕнтернĕ хыççăн халăха çĕнĕ пурнăç тума чĕннĕ чи пирвайхи поэтсенчен пĕри. Унăн пултарулăхĕ пирe литературă ĕçне çак тапхăрта тытăннă И. Ахах, Н. Ваçанкка, С. Элкер, Г. Алендей пултарулăхĕ пекех хаклă. Ку çеç те мар, чăваш театрĕн никĕсне хунă çĕрте çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ Тал-Мăрса чăваш драматургийĕн пирвайхи вăрлăхне чĕм кĕртес тĕлĕшпе те пысăк ĕç тунă. Вĕреннĕ хушăрах чăвашсен чи пирвайхи театрĕнче артист, тăлмачă тата режиссер пулса ĕçленĕ вăхăтра (астăвăр: икĕ-виçĕ çул хушинче кăна!) «Кам айăплă?», «Силпи», «Ухатер», «Çĕнĕ пурнăç шурăмпуçĕ», «Вăйлисен айăпĕ», «Телей пĕр мулта кăна мар» ятлă драмăсемпе пьесăсем çырнă. Чăваш халăхче вырăс тата тĕнче драматургийĕн чи лайăх произведенийĕсемпе паллаштарас тесе, вăл «Королевский брадобрей», «Чужое добро в прок не идет», «Плутни Скапена», «В чужом гнезде», «Разбойники», «Спириты», «Игра в интересах», «Боевые соколы», «Горькая судьбина» тата ытти чылай произведенисене чăваш театрĕнче лартма чăвашла куçарчă, çав вăхăтрах чăваш çыннин авалхи асаплă кун-çулĕ çинчен сăвăллă роман çырма хатĕрленнĕ.

Поэтăн кĕске кун-çулĕ пирки Антологире çырнă тăрăх вулакансем çакăн çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ. Мĕншĕн тесен унта, поэт ăçта тата хăçан çуралнине кăтартнисĕр пуçне, урăх нимĕн те каламан.

Вулакансем çак Антологи тăрăх Я. Турхан, Г. Кореньков, С. Сорокин, Н. Шупуççынни, Ф. Павлов, И. Курак, Н. Евдокимов, Хумма Çеменĕ. Н. Ваçанкка, Г. Кели, А. Петтоки, И. Тукташ тата ыттисен пултарулăхĕнчи паллăрах уйрăмлăхсене те питех тавçăрса илме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенчен хăшĕ мĕн çинчен тата мĕнле çырни çинчен, вĕсен ĕçĕнчи ăсталăх меслечĕсем çинчен уçăмлă каланă сăмахсем çукпа пĕрех.

Чăн та, тен. ку ахаль вулакансемшĕн питех кирлĕ те мар пулĕ. Çапах та, Антологи кирек хăш литературăра та наукă ĕçĕ, тĕпчевçĕсене кирлĕ кĕнеке пулнине шута илес пулсан. çав вак-тĕвек шăйрăксем те çуллă шўрпере тăвар каламан пекех туйăнса каяççĕ.

* * *

Юлашкинчен çакна калас килет: пысăк кĕнекери çав пĕчĕк çитменлĕхсем вулакансемпе тĕпчевçĕсен кăмăлне кăштах хуçма пултараççĕ пулин те, Антологие халăх хушшине кăларма хатĕрленĕ юлташсем тăван литературăшăн пархатарлă ĕç тунă. Çакăнта кăтартнă çитменлĕхсем вулакансене йăнăш ориентировкă пама пултаракан çитменлĕхсем Вĕсене кирек хăш вăхăтра та ним иккĕленсе тăмасăрах тўрлетес пулать.

„Тăван Атăл“ альманахра 1962 çулта пичетленнĕ:

Алга Александр. Аслă тĕллевпе ăсталăхшăн. . № 3
Федин Константин. Çĕнĕ тĕнчен аслă идеалĕсем. № 1

РОМАНСЕМ, ПОВЕÇСЕМ, КАЛАВСЕМПЕ ПЬЕСĂСЕМ.

Агаков Леонид. Пулă шăмми пыра ларать. Калав. № 1
Салтак ачисем. Повеç сыпăкĕ. . . . . № 6
Алендей Василий. Хĕвел çĕкленет. Калав. . № 3
Артемьев Александр. Алтăр çăлтăр. Повеç. . № 1
Бурнаевский Валентин. Чапаев çинчен. Калавсем. № 1
Васильев-Уçăм Валентин. Çулсен вĕçĕ çук. Калав. № 1
Вахит Хай. Малтанхи юрату. Лирикăллă комеди. № 5
Збанацкий Юрий. Çĕн Кун аки. «Çеçпĕл» роман сыпăкĕсем. . . . . № 6
Иванов Константин. Ытарайми хĕрача. Комеди. № 1
Игнатьев Ваçлей. Парăм. Калав. . . . № 5
Кибек Мĕтри. Уйăх витĕр çул курнать. Повеç. № 2
Краснов-Кĕçĕнни Г. Исевет. Роман сыпăкĕсем. № 2
Николаева Мария. Хура пĕлĕтсем сирĕлеççĕ. Повеç. . . . . №№ 3—5
Паймен Влас. Хула çулĕ — ял çулĕ. Калав. . № 6
Сайгин Михаил. Улмуççи. Калав. . . . . № 1
Турхан Куçма. Çĕр суранĕ. Роман. . . . №№ 3—6
Яралиев Якуб. Эп çуралнă кун. Калав . . № 1
Яндаш Александр. Пурнăç илемĕ. Калав. . № 3

ПОЭМĂСЕМ, СĂВĂСЕМ, ЮПТАРУСЕМ.

Андреев Арсентий. Çул çинче. Сăвă. . . . № 5
Аслут Александр. Çутă. Сăвă. . . . . № 4
Афанасьев Алексей. Карелире. Сăвăсен ярăмĕ. № 5
Вашават Петĕр. Арăма. Сăвă. . . . . № 2
Волкова Мария. Эс мана чечек çыххи паратăн. Сăвă. . . . . № 2
Воробьев Алексей. Тăвата ят. Сăвă . . . № 1
Хĕвеллĕхре эс пурăнан. Сăвă. . . . . № 4
Сăвăсен ярăмĕ. . . . . № 6
Галкин Александр. Çĕнĕ шăпăр. Попугай. Юптарусем. . . . . № 4
Давыдов-Анатри В. Пирĕн хĕрсем. Сăвă. . № 2
Евстафьев Николай. Вăл халăх чĕринче. Сăвă. № 2
Çĕклерĕç çĕршывăн чапне. Сăвă. . . . № 4
Венерă. Сăвă. . . . . № 5
Ефимов Георгий. Апрель хĕвелĕ. Поэмă. . . № 3
Чернышевский варĕ. Кайăк чĕппи. Сăвăсем № 1
Сывлăш. Сăвă. . . . . № 2
Юлашки номер. Сăвă. . . . . . . № 5
Иванов Анатолий. Çитрĕç ĕмĕтри вăхăтсем. Сăвă. № 5
Каттай Александр. Мускав. Сăвă. . . . № 1
Кăлган Александр. Шур путекпе «хура» Така. Çуйăнпа унăн «репродукторĕсем». Христос ашакĕпе ват сурăх. Юптарусем. . . . № 3
Лиска йытă. Кушакпа Тăмана. Юптарусем № 5
Лукин Аркадий. Ленин ялта. Сăвă. . . . № 2
Çилсем. Сăвă. . . . . № 3
Петров Юрий. Аслă тивĕç. Сăвă. . . . № 1
Прокопьев Николай. Ĕмĕт. Сăвă. . . . . № 5
Савельев Федор. Çĕр пурлăхне шырать пикемĕр. Сăвă. . . . . № 5
Сандров Николай. Тăваттăмĕш страницă. Ят. Сăвăсем. . . . . № 2
Сурков Алексей. Коммунистсен маршĕ. Текех спортсменла. Иртет иккен кун-çул. Кăмакара хаваслăн вут çунать. Çук ĕнтĕ шурă хурăн. Сăвăсем. . . . . № 2
Теветкел Николай. Икĕ сăвă. . . . . № 6
Уйăп Мишши. Ĕмĕт — юрă. Сăвă. . . . № 4
Уçăм Валентин. Аннемĕрсене тав. Сăвă. . № 5
Ухсай Яков. Мухтав! Сăвă. . . . . . № 4
Хаппалаев Юсуп. Сăвăсем. . . . . . № 5
Хусанкай Петĕр. Анне. Сăвă. . . . . № 1
Шавлы Стихван. Канăçсăр чĕре. Сăвă. . . № 3

ОЧЕРКСЕМ, ПУБЛИЦИСТИКĂ.

Атăл паттăрĕ . . . . № 4
Космонавт-4 . . . . № 4
Алга Александр. Ĕçченсем. Очерк. . . . . № 5
В. Г. Короленко. «Çĕнĕ» вырăс çулĕ тăрăх. . № 4
Маркелов И. А. Коммунизм культури. Статья. № 2
В. Я. Яковлев. Коммунизм вăл — халăхсен тăванлăхĕ, туслăхĕ, пĕртанлăхĕ. Статья. . . № 5
Яндаш Александр. Ĕмĕрхи туслăх. Фронтри блокнотран. . . . . № 4

ЛИТЕРАТУРĂ ТЕОРИЙĔПЕ ИСТОРИЙĔ, ИСКУССТВĂ, КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ.

Андреев А. «Хаклă кĕрӳ» . . . . . . № 4
Григорьев А. Пирĕн хĕрарăм-художниксем. . № 3
Давыдов-Анатри В. «Амăрткайăк». . . . № 5
Долгов В. Дмитрий Исаев çырнисене вуласан. № 2
Долгов В. Поэзи пулсан. . . . . . . № 3
Илюхин Ю. Чаплă юрăçă. . . . . . . № 1
Кузьмин А. Çĕр шăпи çинчен хунă юрă. . № 4
Петров К. Вăл шанчăклă юлташ пулнă. Асаилӳсем . . . . № 1
Сандров Н. Юрă сăмахĕсем пирки . . . № 5
Сарри Ф. Пултаруллă режиссер. . . . . № 1
Сироткин М. «Ĕмĕр сакки сарлака» роман пирки. № 2
Хлебников Г. Чăваш романĕн çулĕ. . . . № 6
Юрьев М. Пĕччен сурнипе кӳлĕ тăваймăн. . № 1
Чечек çыххинче чечекĕ ытларах кирлĕ. . № 6

ИРТНĔ ПУРНĂÇРАН, ПИРĔН КАЛЕНДАРЬ, ТĔРЛĔРЕН.

Андреев А. Хула хĕрĕсем. Юрă. . . . . № 3
А. И. Герцен пурнăçĕпе творчестви çинчен. . № 2
Горшков А. Е. 1963 çулта вулăр. . . . . № 6
Григорьев Н. Г. Д. Н. Мамин-Сибиряк. . . № 6
Григорьев П. Г. Халăх çав кунсене манмасть. Бородино патĕнче çапăçнăранпа 150 çул тултарнă май. . . . . № 5
Космос паттăрĕ çуралнă çĕршывра. Фоторепортаж. . . . . № 5
Кузнецов И. Д. Лена шывĕ çинчи рабочисен пăлхавĕнче пулнă янташсем. . . . . № 2
Хаяр çапăçура . . . . № 4
Сорокин В. Хăватлă вăй. . . . . . . № 3
Фандеев Т. Çурт тăвакансен юрри. . . . № 4
Эльгер С. Янка Купала Шупашкарта. . . № 4

Цена 30 коп.